С. П. ГОРСКИЙ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## СИНТАКСИС

ÇИЧĔ ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЛИ ШКУЛПА
ВĂТАМ ШКУЛĂН
VI—VII КЛАСĔСЕМ ВАЛЛИ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар — 1949

С. П. ГОРСКИЙ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## СИНТАКСИС

ÇИЧĔ ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЛИ ШКУЛПА ВĂТАМ ШКУЛĂН VI—VII КЛАСĔСЕМ ВАЛЛИ

5-МĔШ ИЗДАНИ

*Чăваш АССР Çутĕç министерстви çирĕплетнĕ*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ПОСТУПИЛ
Чувашской Книжной Палаты
„19“ августа 1949 г.
№ 145

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1949

## УМСĂМАХ.

Пиллĕкмĕш издание хăш-пĕр выводсене юсаса, çĕнĕ упражненисем кĕртсе улăштарнă, çавăн пирки параграфсен, упражненисен нумерацийĕ улшăннă.

Автор.

## КĔСКЕТСЕ ÇЫРНĂ ХУШАМАТСЕМ, СĂМАХСЕМ.

| | |
|---|---|
| *Агак.* | —Агаков Л. Я. |
| *Алка* | —Алга А. Е. |
| *А. Фад.* | —Фадеев А. Н. |
| *А. Толстой.* | —Толстой А. Н. |
| *Белин.* | —Белинский В. Г. |
| *ВКП(б) ист.* | —ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ |
| *Ворош.* | —Ворошилов К. Е. |
| *Дж.* | —Джамбул Д. |
| *И. Ив.* | —Ивник И. Н. |
| *Кал.* | —Калинин М. И. |
| *К. Ив.* | —Иванов К. В. |
| *Кольц.* | —Кольцов А. В. |
| *Конст.* | —СССР Конституцийĕ. |
| *Лен.* | —Ленин В. И. |
| *Лерм.* | —Лермонтов М. Ю. |
| *Л. Толст.* | —Толстой Л. Н |
| *М. Горьк.* | —Горький А. М. |
| *Мол.* | —Молотов В. М. |
| *М. Труб.* | —Трубина М. Д. |
| *Некр.* | —Некрасов Н. А. |
| *Остр.* | —Островский Н. А. |
| *Пос.* | —Пословица |
| *Пуш.* | —Пушкин А. С. |
| *С. Кир.* | —Киров С. М. |
| *Ст.* | —Сталин И. В. |
| *Çеçп.* | —Çеçпĕл М. К. |
| *Тукт.* | —Тукташ И. С. |
| *Тург.* | —Тургенев И. С. |
| *Успен.* | —Успенский Г. И. |
| *Уйăп* | —Уйăп М. Д. |
| *Ухсай.* | —Ухсай Я. Г. |
| *Фĕд.* | —Фĕдоров М. Ф. |
| *Фур.* | —Фурманов Д. А. |
| *Х. Ç.* | —Хумма Çеменĕ |
| *Чалд.* | —Чалдун М. Н. |
| *Чех.* | —Чехов А. П. |
| *Шав.* | —Шавлы Ст. А. |
| *Шол.* | —Шолохов М. Е. |
| *Элк.* | —Элкер С. В. |
| *Ĕçх.* | —Ĕçхĕл А. А. |

Редактор Ф. Шапошников Технический редактор Н. Степанов

НТ 00893. Подписано к печати 26 VII. 1949 г. Объем 10,25 п/л
Заказ № 1454. Тираж 20000 экз.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров ЧАССР.

Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

# Предложени ҫинчен ӑнлантарса пани.

## 1 §. Предложени.

Пирӗн калаҫу шухӑша пӗлтерет. Шухӑша пӗр сӑмахпа та, ҫыхӑнса тӑракан темиҫе сӑмахпа та каласа пӗлтерме пулать.

*Каҫ пулнӑ. Тӗттӗм. Тӑпах сӗм вӑрман. Пӗр шӑпчӑк анчах янрать сӗмлӗхре. (Элк.)*

Кунта вӗҫленнӗ тӑватӑ шухӑш. Малтанхи шухӑша икӗ сӑмахпа пӗлтернӗ, иккӗмӗшне—пӗр сӑмахпа, виҫҫӗмӗшне—виҫӗ сӑмахпа, тӑваттӑмӗшне пилӗк сӑмахпа пӗлтернӗ. Шухӑша темиҫе сӑмахпа пӗлтернӗ пулсан, сӑмахсем пӗр-пӗринпе майлашса тӑраҫҫӗ.

**Вӗҫленнӗ уйрӑм шухӑша пӗлтерекен пӗр сӑмаха е сӑмахсен майлашӑвне предложени теҫҫӗ.**

Калаҫура предложенисем хушшинче чарӑну (пауза) пулать, вӑл шухӑш вӗҫленнине палӑртать. Ҫырура предложени пӗтнине точка, е ыйту палли, е кӑшкӑру палли лартса паллӑ тӑваҫҫӗ.

**Предложенири мӗнле те пулин ыйтура тӑракан сӑмаха предложени членӗ теҫҫӗ.**

*Ҫуртсем ҫинче хӗрлӗ ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ.* Мӗнсем вӗлкӗшеҫҫӗ?—*Ялавсем.* Ялавсем мӗн тӑваҫҫӗ?—*Вӗлкӗшеҫҫӗ.* Мӗнле ялавсем?—*Хӗрлӗ.* Ӑҫта вӗлкӗшеҫҫӗ?—*Ҫуртсем ҫинче.* Юлашки икӗ сӑмах пӗрле пӗр ыйтура тӑрать, ҫавӑнпа *ҫуртсем ҫинче* пӗр член шутланать.

Предложенин тӗп членсем тата кӗҫӗн членсем пулаҫҫӗ.

Предложенин тӗп членӗсем—подлежащи тата сказуемӑй.

Подлежащи—предложенири шухӑшӑн тӗп япалине пӗлтерекен член. Ҫав япала ҫинчен предложенире мӗн те пулсан калаҫҫӗ. Подлежащи ыйтӑвӗсем—ят падеж ыйтӑвӗсем: ***кам? мӗн? камсем? мӗнсем?***

Сказуемӑй—подлежащи ҫинчен мӗн каланине пӗлтерекен член. Сказуемӑйӑн ыйтӑвӗсем: ***мӗн тӑвать? мӗн тӑваҫҫӗ? мӗнле вӑл? мӗн вӑл? кам вӑл?***

1. *Колхоз хирӗнче* ***трактор*** (подлежащи) ***ӗҫлет*** (сказуемӑй).

2. *Ку* ***трактор*** (подлежащи) ***ҫӗнӗ*** (сказуемӑй).

3. ***Трактор*** (подлежащи)—***машина*** (сказуемăй).

4. ***Пушкин*** (подлежащи)—***вырăссен аслă поэчĕ*** (сказуемăй).

Предложенин ытти членĕсене кĕçĕн членсем теççĕ. Кĕçĕн членсем предложенири ытти членсене ăнлантарса параççĕ.

*Чикĕре сыхă часовой тăрать.* Мĕнле часовой тăрать? — *Сыхă.* Ăçта тăрать?—*Чикĕре.*

**Предложенисем хутсăр тата хутлă пулаççĕ.**

**Пĕр шухăша пĕлтерекен, тĕп членсенчен çеç тăракан предложение ансăр хутсăр предложени теççĕ.**

*Каç пулнă. Тĕттĕм.* (*Элк.*)

**Пĕр шухăша пĕлтерекен тĕп членсемсĕр пусне кĕçĕн членсем те кĕрекен предложение анлă хутсăр предложени теççĕ.**

*Тăрă шывăн ăшĕнче*
*Кăвак пĕлĕт явăнать.*
*Ватă йăмра тайăлса,*
*Тĕсне пăхса савăнать.* (*К. Ив.*)

Уйрăм хутсăр предложенисемпе калана шухăшсене пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса, пĕр хутлă шухăша пĕрлештерме пулать. Ун пек чухне кашни уйрăм хутсăр шухăша пĕлтерекен хутсăр предложенисем те пĕр пĕтĕм хутлă предложение пĕрлешеççĕ. Сăмахран, акă икĕ хутсăр предложени: *Каçхи тĕттĕм сирĕлет. Шупка кун çути кĕрсе пырать.* Çак предложенисене пĕр хутлă предложение пĕрлештерме пулать. *Каçхи тĕттĕм сирĕлет те, шупка кун çути кĕрсе пырать.*

**Икĕ е темиçе хутсăр предложенирен пулнă, пĕр хутлă шухăша пĕлтерекен предложение хутлă предложени теççĕ.**

Хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисене çырура пĕр-пĕринчен чарăну паллисемпе уйăраççĕ.

*Пиçет çĕнĕ ыраш, ылттăн пĕрчĕ тулать, кашни пĕрчиех пирĕн пурлăх пулать.*

*Анчах çамрăк хуçан телей çук паян: улпутсем ирте́ççĕ лавки умĕнчен, пĕри те ун патне лавкине кĕмест.* (*Лерм.*)

*Нумай çил вĕрет, нумай шыв юхать, вăрманлăх çĕрне çапать улшăну.* (*Элк.*)

**1-мĕш упражнени.**

Текста вулăр. Шухăш тăрăх предложенисен вĕçĕсене тупăр. Предложенисене çырса илĕр, предложенисем хыççăн точка лартăр.

Белогорск крепоçĕ Оренбургран хĕрĕх çухрăмраччĕ çул Яик шывĕн чăнкă çыранĕсем хĕррипе пырать çырма шывĕ шăнсах ларайман-ха унăн тăхлан тĕслĕ хумĕсем ытла та пĕр еврĕлĕ куранса выртакан çыранĕсем хушшинче темле кичеммĕн тĕксĕмленсе тăнă вĕсем хыçĕнче киргиз çеçенхирĕсем сарăлса выртаççĕ эпĕ шухăша путрăм гарнизон пурнăçĕнче

илĕртмеллиех, кăмăла килмеллиех маншăн пит те сахал пек туйăнать. (*Пуш.*)

**2-мĕш упражнени.**

Предложенисене çырса илĕр. Подлежащисене аялтан пĕр йĕрпе, сказуемăйсене икĕ йĕрпе туртăр.

1. Хаяррăн улать çил-тăман. Вăрманти арман чўречисем çине вăл юр чăмаккисем перет. Вăрман шикленўллĕн улать. (*Остр.*)

2. Хĕрўллĕ тавлашусем сĕм çĕрлечченех пычĕç. Ревкома арестленĕ тенĕ хыпар пурин чĕри çине те йывăррăн пусрĕ. (*Остр.*)

**3-мĕш упражнени.**

Ансăр предложенисем çумне кĕçĕн членсем хушса, анлă хутсăр предложенисем тăвăр. Вĕсене тетрадьсем çине çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Канаш станцинче пассажирски поезд чарăнчĕ.*

## ПОЕЗД КАЙНИ.

Поезд чарăнчĕ. Пассажирсем кĕтеççĕ. Вĕсем васкаççĕ. Звонок пулчĕ. Гудок илтĕнчĕ. Поезд кайрĕ. Вокзал пушанчĕ. Çынсем кайрĕç.

**4-мĕш упражнени.**

Çак анлă предложенисенчен подлежащипе сказуемăйне уйăрса çырса илĕр. Подлежащине пĕр йĕрпе, сказуемăйне икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

Российăри пусмăрта пурăннă халăхсене Октябрьти Социализмлă Аслă революци кăна çăлăнăç пачĕ. Рабочисемпе хресченсем самодержавие, капиталистсемпе помещиксен влаçне сирпĕтсе антарчĕç. Çĕршывăмăрти ирĕке тухнă халăхсем хăйсен кун-çулне малтанхи хут хăйсен аллине илчĕç. Ĕлĕкхи патша Российĕнчи халăхсем пĕр Союза пĕрлешрĕç. Нацисем пĕрлешсе пĕр кăмăлпа ĕçлеме тытăнчĕç. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне халĕ миçе союзлă республика кĕрет?

**5-мĕш упражнени.**

Çакăнти кашни икĕ предложение пĕрлештерсе, пĕрер хутлă предложени тăвăр.

1. Хĕвел тухрĕ хĕрелсе. Пĕтĕм тĕнче вăранчĕ.
2. Пулă вылять çут шывра. Пулăç ларать вăлтапа.
3. Кĕтў çўрет улăхра. Кĕтўç калать шăхличне.
4. Пиççе çитнĕ çырласем. Часах пиçĕç улмасем.

6-мӗш упражнени.

Текста вулӑр та хутлӑ предложенисене кӑтартса парӑр.

Иккӗмӗш эрне ҫине кайрӗ ӗнтӗ, атте ҫинчен хыпар ҫук. Алӗшка та пӗтӗмпех ҫухалчӗ, ӑҫта кайса кӗчӗ—никам та пӗлмест. Эпир, Артӗмпа иксӗмӗр, ӗҫлетпӗр. Вӑл кӑмрӑк чавать, эпӗ тиесе туртатӑп.

Гудок кашни кун уласа ӗҫе йыхӑрать. Эпӗ вӗреннӗ ӗнтӗ ҫав гудок сассипе ӗҫе ҫӳреме.

Ульяна, ӗлӗкхи пекех, эпӗ ӗҫрен килнӗ ҫӗре апат-ҫимӗҫ пӗҫерсе хурать.

Атте пур чух, апат ҫинӗ хыҫҫӑн, вылямa тухса чупаттӑм, халӗ урама та тухас килмест. Алӗшкӑсӑр мӗн илемӗ пултӑр унта?

Манӑн халӗ вӑйӑ шухӑшӗ мар, урӑх: аттене, е виллине, е чӗррине, шыраса тупас килет. (*Чалд.*)

## 2 §. Калуллӑ, ыйтуллӑ тата кӑшкӑрулла предложенисем.

Предложенисем, вӗсен пӗлтерӗшӗсем тӑрӑх тата вӗсене уйрӑм сасӑпа палӑртса каланӑ тӑрӑх, калуллӑ, ыйтуллӑ тата кӑшкӑруллӑ пулаҫҫӗ.

**1. Предложени мӗн ҫинчен те пулин каласа пӗлтерет пулсан, ун пек предложение калуллӑ предложени теҫҫӗ.**

Калуллӑ предложени вӗҫӗнче сасӑ вӑраххӑн анать: ҫырура калуллӑ предложени хыҫҫӑн точка лартаҫҫӗ.

*Левинсон тайгарах ҫӗр каҫма шутларӗ.* (*Фад.*)

**2. Ыйтса каланӑ предложение ыйтуллӑ предложени теҫҫӗ. Ыйтуллӑ предложени вӗҫӗнче ыйту палли лартаҫҫӗ.**

Ыйтуллӑ предложенире ыйту сӑмахӗсем: **кам? мӗн? епле? мӗнле? ӑҫта? мӗншӗн? миҫе? хӑҫан?** ыт. те пулма пултараҫҫӗ.

1. *Пирӗн ССР Союзӗнче союзлӑ республикӑсем* ***миҫе?*** 2. *Большевиксен партийӗ утса тухнӑ историллӗ ҫулӑн тӗп итогӗсем* ***мӗнле-ха?*** *ВКП(б) историйӗ* ***мӗне*** *вӗрентет?* (*ВКП(б) ист.*) 3. *Сире экскурсие* ***кам*** *ертсе кайрӗ?* 4. *Эсир экскурсире* ***мӗн*** *куртӑр?* 5. *Эсир лагерьтен* ***хӑҫан*** *таврӑнтӑр?* 6. *Ыран ҫумӑр пулать-****ши****?* 7. *Сӗм-сӗм вӑрман, сӗм вӑрман,* ***мӗншӗн*** *хытӑ шавлатӑн?*

8. *Ан упкелешсем, Сетнер,*
***Мӗншӗн*** *ҫынна упкелес?*
***Ӑҫта*** *тарса каяс-****ха***
*Пуян атте-аннерен?* (*К. Ив.*)

Ыйтуллӑ предложенире ыйтӑва кӑтартакан татӑксем: *-и, -ши, -и-мӗн, -им, -и-мӗн-ха* пулма пултараҫҫӗ:

1. Ҫимӗк хӑҫан ҫитӗ-ши?
Епле вӑхӑт иртterес?
Ҫимӗк кунӗ инҫе-ши?
Епле унчченех тӳсес?
(*К. Ив.*)

2. Мӗншӗн, Нарспи, хуйхӑран?
Каччу ытла ватӑ-им?
Парнӳ ытла сахал-им?—
Терӗ арӑм, ҫитрӗ те.
(*К. Ив.*)

3. Эй, пӑх-ха кунталла, Кирибей чурам,
Кирлӗ мар шухӑшсем пуҫӑнта ҫук-и?
Е патша мухтавне ӑмсанатӑн-и?
Е ӗҫре ҫӳреме йӑлӑхтарчӗ-и? (*Лерм.*)

Хӑш-пӗр чухне ыйту ыйтуллӑ интонацире ҫех палӑрать: *Капитан **Мироновӑн** хӗрӗ? Оренбург крепоҫӗсенчен пӗринче комендант пулнин **мар-и**? Эсир **Гринӗва** каҫарма ыйтатӑр?* (*Пуш.*)

Ку предложенисенче сасӑ ***Мироновӑн, мар-и, Гринӗва*** сӑмахсем ҫинче ҫӳле улӑхать.

**Вӑйлӑн хумханса каланине** (тӗлӗннине, хӑранине, ҫиленнине, савӑннине т. ыт. те) **кӑтартакан предложение кӑшкӑруллӑ предложени теҫҫӗ.**

Кашкӑруллӑ предложение кӑшкӑруллӑ интонаципе калаҫҫӗ. Кашкӑруллӑ предложени хыҫҫӑн кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ.

*Сывӑ пултӑр коммунистсен партийӗ!*

*Сывӑ пултӑр пирӗн ҫулпуҫ Сталин юлташ!*

Кӑшкӑруллӑ предложенире междометисем: *ах, эх, ой, ай, уй* т. ыт. те пулма пултараҫҫӗ.

1. *Эй! пулемӗт хатӗрле!* 2. *Эй, ташлӑр, пурте ташлӑр!* (*Х. Ҫ.*) 3. *Ай, ярӑр, ярӑр! Вырттарӑр часрах! Пулмасть утса!* (*Элк.*) 4. *А-а! эсӗ тыткӑна юласшӑн!* (*Элк.*) 5. *И-и! санран пулать-и манпа тан чупасси!* 6. *Эх, вӗҫесчӗ кӑвак сывлӑшалла, кайӑк пек пулса!* (*Элк.*) 7. *Ы-ых, Сетнер, астӑвӑн: манӑн хӗре эс ҫирӗн!* (*К. Ив.*)

1-мӗш асӑрхаттарни. Хӑш чухне каласа пӗтермен предложени ҫырма тивет. Каласа пӗтермен предложени хыҫҫӑн многоточи (...) лартаҫҫӗ.

*Пучахӗсем... Эх, савӑнӑҫ! Кам савмӗ-ши кӑна? Ҫил вӗрнипе кӑшт авӑнӗҫ, пуҫ тайӗҫ жнейкӑна.* (*Уйӑп.*)

2-мӗш асӑрхаттарни. Калуллӑ, ыйтуллӑ, кӑшкӑруллӑ предложенисемсӗр пуҫне тата хуша, ыйтса, пӗр-пӗр ӗҫе тума чарса каланине пӗлтерекен предложенисем—хушуллӑ предложенисем тӗл пулаҫҫӗ. Хушуллӑ предложенисене калуллӑ интонаципе калаҫҫӗ пулсан, предложени хыҫҫӑн точка лартаҫҫӗ; вӗсене кӑшкӑруллӑ интонаципе калаҫҫӗ пулсан, кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ.

*Юлташ, мана кӗнеке пар-ха. Пар мана хӑвӑртрах кӗнеке!*

**7-мӗш упражнени.**

Предложенисене ҫырса илӗр; предложенисем хыҫҫӑн кирлӗ чарӑну паллисем лартӑр.

1. Фӗдорпа Андреев ҫуни ҫинче пӗтӗмпех урӑхла калаҫу пынӑ. Фӗдор ҫамрӑк ямшӑкран ыйтнӑ:

— Эсӗ ху пулнӑ-и, Гриша, унӑн отрядӗнче
— Урана та унтах амантрӑм
— Мӗнле, ҫамрӑк-и вӑл
— Питех ҫамрӑк ҫав: пӗр вӑтӑр ҫулалла ҫитнӗ пулас е ҫук-и
— Кунтисем-и, казак-и Хӑй мӗнлескер-ха
— Мӗн калас-ха ӗнтӗ Пӗр сӑмахпа каласан, паттӑр (*Фурм.*)

II. Ахмет хаяр сасӑпа:
— Стой, руки вверх—тесе кӑшкӑрса ячӗ
Аслати ҫапнӑ пек сасӑ кӗрлесе кайрӗ хӑрушшӑн та тискеррӗн кашласа ларакан тайга тӑрӑх.
Стой Пӑрахӑр пӑшалӑрсене Халех сывлӑша ҫӗклентеретӗп Чакӑр ҫирӗм пилӗк утӑм каялла—команда пачӗ Ахмет. (*И. Тукт.*)

III. Амӑшӗ хӑй хыҫӗнче чупакансен ури сӑссине илтрӗ Пусӑрӑнчӑклӑн пӑлханулла сасӑсем кӑшкӑрни илтӗннӗ
— Саланӑр, ачасем
— Власов, тар
— Каялла, Павлуха
— Ялавне пӑрах, Павел Кӳр кунта, эпӗ пытарӑп
Весовщиков ялав аврине тытрӗ Ялав каялла сулӑнчӗ
— Ан тивӗр—кӑшкӑрчӗ Павел (*Горьк.*)

**8-мӗш упражнени.**

Ҫав сӑвва кирлӗ вырӑнта точка, е кӑшкӑру, е ыйту палли лартса ҫырса илӗр. Тӗрӗс интонаци, чарӑну туса вулама вӗренӗр.

### НАРСПИПЕ СЕТНЕР ВӐРМАНТА.

Сетнер тутлӑ ҫывӑрать
Ҫӳлӗ юман кутӗнче,
Нарспи ларать тӗлӗрсе
Сетнер пуҫӗ вӗҫӗнче ( )

Ӑҫта тартӑн, усал хӗр ( )
Пуҫна ҫийӗп тупӑнсан ( )
Йытӑ ури айӗнче
Шатӑртатать сӗм вӑрман ( )

Нарспи тӗлӗк тӗлленет:
Ашшӗ йытӑ пулнӑ та
Шӑлӗсемпе шаккаса
Сиксе ҫӳрет вӑрманта ( )

Ҫывӑх, ҫывӑх, ак ҫитет,
Нарспи йӑлтах вӑранать ( )
Пӑхать: хӑйӗн патнелле
Виҫ юланут кустарать ( )

Сетнер, Сетнер ( ) Тытрӗҫ-ҫке ( )
Тӑр, тӑр ( ) Тарса хӑтӑлар ( )
Ай, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр,
Ӑҫта тарса пытанар ( )

(*К. Ив.*)

## 3 §. Предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ.

Предложенире сӑмахсем пӗр-пӗринпе шухӑш тӑрӑх ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Сӑмах тепӗр сӑмахпа аффикс йышӑнса та, аффикс йышӑнмасӑр та ҫыхӑнма пултарать. Сӑмахсем хушшинчи

çыхăну икĕ тĕслĕ пулать: сыпăнуллă çыхăну тата пăхăнуллă çыхăну.

Сыпăнуллă çыхăнупа пĕр пек сăмахсем çыхăнаççĕ. Тĕслĕх: *ларать те çырать; карандаш тата ручка; ăшă, анчах нӳрлĕ; е вулать, е çырать.*

Пăхăнуллă çыхăну чухне пĕр сăмахĕ пăхăнтараканни, тепри пăхăнаканни пулать. Пăхăнакан сăмах пăхăнтаракан сăмаха ăнлантарса парать. Сăмахсен çыхăнăвне ыйтусем тăрăх палăртма çăмăл. Хăш сăмах çине ыйту лартатпăр, çав сăмах грамматика тĕлĕшĕнчен ыйту сăмаха пăхăнать. Тĕслĕх: *Паян паха спектакль куртăм. Спектакль* (мĕн?) *куртăм.* (*Спектакль* япала ячĕ, *куртăм* глагола пăхăнса, ăна ăнлантарса парать.) *Паха* (мĕнле?) *спектакль.* (*Паха* паллă ячĕ, *спектакль* япала ятне пăхăнса, ăна ăнлантарса парать.) *Паян* (хăçан?) *куртăм.* (*Паян* наречи, *куртăм* глагола пăхăнса, ăна ăнлантарса парать.) Çапла вара, анлă хутсăр предложенири сăмахсенчен таттисĕр çыхăну пулса тăрать. Çакна эпир çак схема тăрăх тата аванрах курма пултаратпăр.

*Çуллахи ăшă çумăр паян çĕре йĕпетрĕ.*




Сăмахсем хушшинчи пăхăнуллă çыхăну виçĕ тĕслĕ пулать: согласовани, управлени тата примыкани.

1. **Пăхăнакан сăмах пăхăнтаракан сăмахпа хисеп енчен, сăпат енчен килĕшсе çыхăннине согласовани теççĕ.**

| | |
|---|---|
| *Эпĕ пограничник пулатăп.* | *Эпир пограничниксем пулатпăр.* |
| *Эсĕ лётчик пулăн.* | *Эсир лётчиксем пулăр.* |
| *Трактор (вăл) хирте ĕçлерĕ.* | *Тракторсем (вĕсем) хирте ĕçлерĕç.* |

Çак тĕслĕхсенче глагол сказуемăйсем хисеп енчен, сăпат енчен местоимениран е япала ятĕнчен пулнă подлежащисемпе килĕшсе тăраççĕ. Сăмахран: *пулатăп* глагол пĕрреллĕ хисепре, пĕрремĕш сăпатра, *эпĕ* местоимени те пĕрреллĕ хисепре,

пĕрремĕш сăпатра. *Пулатпăр* глагол нумайлă хисепре, пĕрремĕш сăпатра, *эпир* местоимени те нумайлă хисепре, пĕрремĕш сăпатра. Тĕслĕхсенчи ытти глаголсем те местоименисемпе е япала ячĕсемпе çавăн пекех çыхăнаççĕ.

Сăмахсем согласовани йĕркипе çыхăннă чухне пăхăнакан сăмах пăхăнтаракан сăмах улшăннă май улшăнса пырать. Согласовани текен çыхăну предложенири ĕçе мĕнле япала тунине кăтартать.

2. **Пăхăнтаракан сăмах ыйтнипе пăхăнакан сăмах предложенире кирлĕ падежра тăрса çыхăннине управлени теççĕ.**

*Сумăр çĕре йĕпетрĕ. Бригада хирте ĕçлет.*

Кунта *çĕре* япала ячĕ *йĕпетрĕ* глагола ăнлантарса парать. *Йĕпетрĕ* сăмахăн, мĕне йĕпетнине кăтартма, тăву падежĕнчи сăмах пулма кирлĕ, çавăнпа *çĕре* сăмах тăву падежĕнче тăрать. Иккĕмĕш предложенире, *ĕçлет* глагол ыйтнипе, ***хирте*** япала ячĕ вырăн падежĕнче тăрать.

Çапла ку икĕ предложенире те пăхăнтаракан сăмахсем пăхăнакан сăмахсене пĕр-пĕр падежра тытса тăраççĕ. Ку тĕслĕхсенче пăхăнтаракан сăмахсене тытса тăран сăмах теме юрать; вĕсене пăхăнса, пĕр-пĕр падежра тăракан сăмахсене тытăнса тăран сăмах теме юрать. Тытăнса тăран сăмахăн форми тытса тăран сăмах формине улăштарсан та улшăнмасть: ***хирте*** *ĕçлет*, ***хирте*** *ĕçлетĕп*, ***хирте*** *ĕçлерĕм*, ***хирте*** *ĕçлесçĕ*, ***хирте*** *ĕçлекен*, ***хирте*** *ĕçлесе.*

Çапла вара управлени йĕркипе пуринчен ытла глаголсемпе ят мар падежсенчи япала ячĕсем çыхăнса тăраççĕ.

Хыçсăмахлă сăмах майлашăвĕсем те управлени йĕркипех çыхăнса тăраççĕ: *сĕтел çинче выртать, сĕтел çине хуратăп, урама тăрăх ларать, чуречe витĕр курăнать.*

Кун пек управление х ы ç с ă м а х л ă управлени теççĕ.

Управлени çыхăнăвĕ пăхăнакан сăмахпа палăртнă япала пĕр-пĕр ĕçре мĕнле вырăн йышăннине кăтартать: *колхоза илетпĕр, колхозран илетпĕр, колхоз валли илетпĕр.*

3. **Пăхăнакан сăмахпа пăхăнтаракан сăмах килĕшсе тăрса та, тытăнса тăрса та çыхăнмаççĕ пулсан, вĕсен çыхăнăвне примыкани теççĕ.**

*Эпир çĕнĕ пурнăç тăватпăр. Кивĕ йăласене йăлтах пĕтеретпĕр.*

Кунта *çĕнĕ* сăмахпа *пурнăç* сăмах, *кивĕ* сăмахпа *йăласене* сăмах, ***йăлтах*** сăмахпа *пĕтеретпĕр* сăмах çыхăнса тăраççĕ.

Çыхăну йĕрки кунта эпир паллашнă согласовани те, управлени те мар. Кунта *çĕнĕ, кивĕ, йăлтах*—пăхăнакан сăмахсем, вĕсем хăйсем ăнлантарса паракан пăхăнтаракан сăмахсем умĕнче формине улăштармасăр тăраççĕ: ***çĕнĕ*** *пурнăç*, ***çĕнĕ*** *пурнăçра*, ***çĕнĕ*** *пурнăçпа* т. ыт. те.

Примыкани йĕркипе пуринчен ытла паллă ячĕсемпе япала ячĕсем, унтан наречисемпе глаголсем çыхăнса тăраççĕ.

Хисеп ячĕсем, причастисем, хăш-пĕр местоименисем япала ячĕсемпе примыкани йĕркипе çыхăнаççĕ: *виçĕ трактор, иккĕмĕш бригада, вуншар кило, вулакан ача, килнĕ çул, çакă япала, пĕтĕм тĕнче.*

Деепричастисемпе глаголсем те примыкани йĕркипе çыхăнаççĕ: *ларса çыратăп, вĕренме каятăп.*

Хăш-пĕр сăмахсем (палла ячĕ те, наречи те пулаканнисем) примыкани йĕркипе япала ячĕпе те, глаголпа та çыхăнса тăраççĕ. *Иван чăвашла хаçат вулать. Иван чăвашла вулать.*

Малтанхи предложенире *чăвашла* сăмах *хаçат* сăмахпа примыкани йĕркипе çыхăнса тăрать. Вăл хаçат мĕнлине пĕлтерет. Иккĕмĕш предложенире *чăвашла* сăмах *вулать* сăмахпа примыкани йĕркипе çыхăнса тăрать. Вăл вулать текен ĕç (вулани) мĕнле пулнине катартса парать.

**9-мĕш упражнени.**

Çак параграфри тĕслĕх тăрăх предложенисен схемисене тăвăр.

I. Колхоз ача площадки организацилерĕ. Площадка расхочĕсене колхоз хăйĕн сметине кĕртрĕ. Площадкăра примерлă колхозница ĕçлет.

Çуллахи вăхăтра ачасем площадкăра аван канаççĕ. Кунта вĕсем хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетеççĕ.

II. Паян пирĕн колхоза чăваш театрĕн бригади килчĕ. Колхоз клубне колхозниксем туллиех пухăнчĕç. Çутă электричество лампочкисем колхоз клубĕн залне çутатаççĕ. Залăн стенисене паха портретсем илемлетеççĕ.

Пĕчĕк шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Пурте сцена çине пăхрĕç. Артистсем хăйсен ролĕсене хаваслăн выляççĕ.

Ыран колхоз клубĕнче çамрăксен вечерĕ пулать. Шкулти драма кружокĕ çĕнĕ пьеса лартать.

**10-мĕш упражнени.**

Çак примерсене çырса илĕр, пăхăнакан сăмахсене аялтан туртăр: управлени йĕркипе çыхăнаканнисене — пĕр йĕрпе, согласовани йĕркипе çыхăнаканнисене — икĕ йĕрпе, примыкани йĕркипе çыхăнаканнисене — пунктирпа.

Тĕслĕх: 1. Тĕттĕм вăрман. 2. Вăрман *чĕрĕлет*. 3. Тумтир тăхăнать.

1. Тĕттĕм вăрман. 2. Вăрман чĕрĕлет. 3. Ешĕл тумтир. 4. Тумтир тăхăнать. 5. Çеçенхир выртать. 6. Хир ешерет. 7. Илемĕпе мухтанать. 8. Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем. 9. Чечексен шăрши. 10. Ыра шăршă. 11. Шăрши сарăлать. 12. Лайăх юрă. 13. Кайăксен юрри. 14. Юрă янăрать. 15. Хăй кĕтĕвĕ. 16. Кĕтĕвĕ патĕнче калать. 17. Шăхличĕ калать. 18. Ача калать. 19. Çырма юхать. 20. Кĕрлесе юхать. 21. Аслă ял.

**11-мĕш упражнени.**

Малалли предложенисен схемисене тăвăр: согласование икĕ йĕрпе, управление пĕр йĕрпе, примыкание пунктирпа палăртăр.

Т ĕ с л ĕ х:




1. Кочегаркăра ĕçлекен Андрий кăмака çăварне кăмрăк пăрахать.
2. Андрий алăка тимĕр çекĕлпе çаклатрĕ.
3. Вăл ирĕксĕрех унка аллинчен вĕçертрĕ.
4. Урайĕнче вĕри шыв юхать.
5. Кăмрăк шăтăкĕ пăспа тулчĕ.
6. Андрий вĕсен сăмахне хăлхана чикмест. (*Остр.*)

**12-мĕш упражнени.**

Çакăнти предложенисен схемисене тĕслĕхре кăтартнă евĕрлĕ чертĕжпа тăвăр. Согласование, управление, примыкание сăмахпа çырса паллă тăвăр.

1. Анлă Атăл хăйĕн тулăх шывне тинĕсе васкаса хăвалать. 2. Хумлă-хумлă тĕтре витĕр çутă уйăх çул хывать. 3. Паттăр пограничниксем пирĕн аслă çĕршывăн чиккисене кунĕн-çĕрĕн сыхлаççĕ. 4. Совет лĕтчикĕсем хăйсен паттăрлăхне пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕç. 5. Пирĕн маттур боецсем Япони самурайĕсене хăватлăн çĕмĕрсе тăкрĕç. 6. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра пирĕн çĕршыв питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Т ĕ с л ĕ х:



# I. Хутсăр предложенин синтаксисĕ.

## ПРЕДЛОЖЕНИН ТĔП ЧЛЕНĔСЕМ МĔНЛЕ САМАХСЕНЧЕН ПУЛНИ.

### 4 §. Подлежащи мĕнле сăмахсенчен пулни.

Подлежащи пуринчен ытла ят падежĕнчи япала ятĕнчен е ун выранĕнче пулакан ят падежĕнчи местоименирен пулать.

Паллă ячĕсен, хисеп ячĕсен, причастисен вĕçленекен формисен ят падежĕсем те подлежащи пулаççĕ.

Хăш-пĕр междометисем те подлежащи пулаççĕ.

Хăш-пĕр чухне ***ма-ме*** аффикслă деепричасти те подлежащи пулать.

Подлежащи ытларах пĕр сăмахран пулать. Хăш чухне пĕрлелĕх падежĕпе ят падежĕнче тăракан икĕ сăмах подлежащи пулаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х с е м:

а) Ят падежĕнчи япала ячĕ, местоимени.

*Колхоз председателĕ районри совещанире пулчĕ. Унта вăл колхоз ĕçĕсем çинчен доклад турĕ. Доклада пурте хавассăн итлерĕç. Доклад хыççăн хăшĕсем тĕрлĕ сĕнӳсем пачĕç.*

Ку предложенисенче *председателĕ, вăл, пурте, хăшĕсем* подлежащисем пулаççĕ.

ă) Паллă ячĕсен, хисеп ячĕсен, причастисен вĕçленекен формисен ят падежĕсем.

*Манăн виçĕ шăллăмран чи кĕçĕнни те кăçал шкула кайрĕ.*

Кунта *кĕçĕнни* — паллă ячĕ, вăл ят падежĕнче тăрать. *Кĕçĕнни* — подлежащи.

*Çирĕм вуннăран икĕ хут пысăк.* Кунта *çирĕм* шут хисепĕ, вăл ят падежĕнче тăрать. *Çирĕм* — подлежащи.

*Комбайнпа ĕçлекенсем, курс пĕтерсе, МТС-сене кайрĕç.*

Кунта *ĕçлекенсем* — причасти, вăл ят падежĕнче тăрать. *Ĕçлекенсем* — подлежащи.

б) *Ма-ме* аффикслă деепричасти.

*Ĕлĕк шкула çӳреме инçе пулнă, вĕренме йывăр пулнă.*

*Такăр çулпа утма çăмăл.*

Кунта *çӳреме, вĕренме, утма* сăмахсем — подлежащисем.

в) Япала ячĕсен пĕрлелĕх падежĕпе ят падежĕ.

*Иванпа Петĕр пĕр бригадăра ĕçлеççĕ.*

Ку предложенире подлежащисем *Иванпа Петĕр* пулаççĕ, мĕншĕн тесен çак икĕ сăмах ĕç тăваканнисене — предложенири шухăшăн тĕп япалисене пĕлтереççĕ. Икĕ сăмах подлежащи пулнăран, предложенин сказуемăйĕ — *ĕçлеççĕ* нумайлă хисепре тăрать. *Иван Петĕрпе ĕçлет* тесен, *Иван* — подлежащи пулать. *Петĕрпе ĕçлет* глагола ăнлантаракан кĕçĕн член пулать.

г) Хăшпĕр междометисем.

*Ур-р-а! илтĕнчĕ инçетре.*

**13-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр те подлежащисене аялтан туртăр, вĕсем мĕнле пуплев пайне кĕрекен сăмахсем пулнине кăтартăр.

1. Завод сассине пурте итлеççĕ. Пĕлеççĕ вĕсем завод мĕншĕн кăшкăрнине. Ĕçе ту-у-у-ух! — тесе йыхăрать вăл вĕсене. Рабочисем хăвăртрах тăрса ĕçе васкаççĕ. Завод карти алăкĕ таттисĕр уçăлса хупăнать. (*Уйăп.*) 2. Баррикадăна хӳтĕлекенсем, çапăçăва хатĕрленсе, хайсен вырăнĕсене тăнă. Иккĕмĕш пульли Гаврошран инçех те мар, чул сарнă çул çине пырса çапăннă. Виççĕмĕшĕ унăн корзинкине йăвантарса янă. (*В. Гюго.*) 3. Стариксемпе ачасем йăран тăрăх шакăлтатса утаççĕ. (*Тукт.*) 4. Çурçĕре вĕçекенсем мухтава тивĕçлĕ. 5. Хĕрлисем пур фронтра та шуррисене çĕнтерчĕç. 6. Колхозниксем авăн çапаççĕ: пĕрисем кĕлте кӳреççĕ, теприсем тырă турттараççĕ, иккĕшĕ капан тăваççĕ. 7. Халĕ вĕренме аван. 8. Колхозра ĕçлеме савăнăçлă. 9. Аллă вуннăран пилĕк хут пысăк. 10. Ĕçлекен çын çиме тивĕçлĕ. 11. Ĕçлекен выçă лармасть. 12. Такам килет: ура сасси илтĕнчĕ. 13. Хайхисем Канаша вĕренме кĕнĕ. 14. Урра! илтĕнсе кайрĕ таврана. 15. Ах! илтĕнчĕ çенĕкрен. 16. Çав лачакаункине кĕрсен, унтан тухма пит кансĕр. (*Чалд.*)

17. Телейлĕ эпир. Сталин ĕмĕрĕнче
Аван ĕçлеме, пурăнма! (*И. Ив.*)

**14-мĕш упражнени.**

Сăвва вуласа тухăр. Сăвăри предложенисенчи подлежащисене тупăр, вĕсем мĕнле сăмах ушкăнне кĕрекен сăмахсем пулнине кăтартăр.

## ВИÇÇĔН.

Çĕре хăтармашкăн
Тăшман аллинчен
Фронта тухнă ашшĕ
Тăван ялĕнчен.

Фронта тухнӑ ашшӗ
Ик ывӑлӗпе.
Ҫил вӑрканнӑ чалӑшшӑн
Вӗсен ҫулӗпе.

Вӗсем пынӑ виҫҫӗн
Пӗрле, юнашар...
Йӗри-тавра, хыҫҫӑн
Хӗмленнӗ пушар.

Хаяр ҫиҫнӗ ҫиҫӗм
Хура пӗлӗтре.
Вӗсем пынӑ виҫҫӗн
Чи малти ретре.

Виҫҫӗшӗ ҫӗкленӗ
Вӗсем пӗр пашал.
— Вилӗм пултӑр,—тенӗ
Вӗсем,— тӑшмана!

— Ан куртӑр ҫӗршывӑмӑр
Тек мӑшкӑл, нуша!
Вӗсем утнӑ виҫҫӗн
Пӗрле, юнашар.

Вутри Овиедо
Чирки тӑрринчен
Тӑшман пулемӗчӗ
Хӑснӑ пӳлӗнсе.

Хӑснӑ вӑл хыттӑн.
Тӑхлан сирпӗтсе.
Хӗмленнӗ вут хыпнӑн
Хура пӗлӗтсем.

Таврара кӗрленӗ
Вилӗм ташши...
Шеллемен ниме те
Пӑр куҫлӑ тӑшман.

Ҫиҫнӗ тутӑх ҫиҫӗм
Хура пӗлӗтре.
Вӗсем пынӑ виҫҫӗн
Чи малти ретре.

Вӗсем пынӑ тӳррӗн,
Пӗрле, юнашар...
Анчах ашшӗ ӳкнӗ—
Ӳкнӗ пашал.

Куҫсем инҫе пӑхнӑ,
Сӳннӗ хуллен...
Сывпул! теме вӑхӑт
Пулман паттӑрсен.

Асли илчӗ ӳкнӗ
Сулмак пашала.
Вӗсем кайрӗҫ иккӗн
Татах малалла. (*Ӗҫх.*)

**15-мӗш упражнени.**

**Ҫак сӑмахсене кӗртсе предложенисем тӑвӑр; вӗсем предложенире подлежащи пулчӑр.**

Эпӗ, шкул, ачасем, учитель, портретсем, лозунгсем, пурте, никам та, асли, кеҫенни, вӗренме, пиччепе аппа, ҫакӑ, пӗри, тепри, ҫиччӗ, колхоз, ферма, революци, ӳйту, СССР.

## 5 §. Хутсӑр сказуемӑй.

Сказуемӑйсем икӗ тӗрлӗ пулаҫҫӗ: пӗрисем — хутсӑр сказуемӑйсем, теприсем — хутлӑ сказуемӑйсем.

**Глаголӑн пӗр-пӗр сӑпат форминчен пулнӑ сказуемӑя хутсӑр сказуемӑй теҫҫӗ.**

Хутсӑр сказуемӑй глаголӑн кӑтарту, хушу, килӗшӳ, ӗмӗт наклоненийӗсен формисенче пулма пултарать. Вӗсем пурте, курмасӑр иртнӗ вахӑтӑн формисене шутламасан, подлежащипе согласовани йӗркипе хисеп тӑрӑх, сӑпат тӑрӑх килӗшсе тӑраҫҫӗ.

а) Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçенхир те ешерет,
Йлемĕпе мухтанать. (*К. Ив.*)

ă) Карели, эп сана юратрăм,
Эп саврăм сулхăн çурçĕре.
Эс çĕнĕ юрăсем çуратрăн
Ман çамрăк шухă чĕрере. (*Уйăп.*)

б) Саккун тесе, хăпса килетчĕç
Писăрсемпе урядниксем;
Кăкăрсем тулли çиçетчĕç
Ӳпне - çăпан пек тӳмесем. (*Ухсай.*)

в) Саккун тесе, сухапуç хыççăн
Танккана мĕскĕвĕн хресчен. (*Ухсай.*)

г) Тискер çил кашлатăр, сив тинĕс шавлатăр,
Нимрен те шикленмĕ çак хурçă карап. (*Элк.*)

д) Кайăк чунĕ пулсассăн,
Йĕрĕччĕ те кулĕччĕ.
Çуначĕсем пулсассăн,
Вĕçĕччĕ те кайĕччĕ. (*К. Ив.*)

**16-мĕш упражнени.**

Текстран подлежащисемпе сказуемăйсене мăшăррăн-мăшăррăн çырса илĕр. Глагол сказуемăй мĕнле наклоненире, вăхăтра тăнине кăтартăр. Подлежащипе глагол сказуемăй мĕн тăрăх çыхăннине те кăтартăр.

I. 1. Ешĕл курăк хушшинче сап-сарă чечек ӳсет. Аслă Силпи ялĕнче Нарспи ятлă хĕр ӳсет. 2. Явăнаççĕ хыçалта çивĕт вĕçĕ кăтрисем. 3. Хирти сарă чечеке ăшă куçпа кам пăхмĕ? 4. Сасартăках илтĕнчĕ ура сасси пăлтăртан. 5. Пирĕн ялта пĕр карчăк пурăнатчĕ ĕлĕкрех. Пурнăçа çав карчăк çĕмĕрттеретчĕ анчах. (*К. Ив.*)

II. Тискер çил кашлатăр, сив тинĕс шавлатăр,
Нимрен те шикленмĕ çак Хурçă карап!
Манми капитанăн çулне çухатмасăр
Çитес çĕре çитĕ вăл — пулмĕ асап. (*Элк.*)

III. 1. Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вăрман витĕр, сăрт урлă, хирпе
Вĕçтертĕмĕр аслă вăрçа.
Эпир малтисемччĕ; эпир çĕкленсе
Чăмайрăмăр çулăм ăшне,—

Ак çиçрĕ çанталăк, хĕрсе, чĕтренсе,
Çил шăхăрчĕ: хăшĕ-хăшне!..

2. — Эпир никама та халччен парăнман,—
Каларĕ пире командир.
3. Чунра сивĕнми вĕрет ырă хĕрӳ,
Пăшал шăпланмасть алăра.
Çав шанчăклă ĕмĕт, хаяр çĕнтерӳ,
Çӳрет пирĕнпех вăрçăра. (*Алка.*)

## 6 §. Хутлă ят сказуемăй.

Хутлă сказуемăйсем икĕ тĕслĕ пулаççĕ: хутлă ят сказуемăйсем, хутлă глагол сказуемăйсем.

**Пĕр-пĕр ят сăмахпа пулăшу глаголĕнчен пулнă сказуемăя хутлă ят сказуемăй теççĕ.**

Ят сăмах тесе вĕçленекен сăмахсене: япала ячĕсене, паллă ячĕсене, хисеп ячĕсене, местоименисене, причастисене калаççĕ. Ят сăмах сказуемăйăн тĕп пĕлтерĕшне кăтартать, çавăнпа предложенирен вихçан та тухса ӳкмест.

Пулăшу глаголĕ подлежащипе сказуемăй хушшинчи çыхăнăва тата вăхăта, наклонение кăтартать. Хутлă ят сказуемăйра пуринчен ытла пулăшу глаголĕ *пул* тĕл пулать, ытти пулăшу глаголĕсем: *тăр, шутлан* сахал тĕл пулаççĕ. Пулăшу глаголĕ пуринчен ытла кăтарту наклоненийĕн иртнĕ вăхăчĕсенче тата пулас вăхăтĕнче пулать, хальхи вăхăтра пулăшу глаголĕ тухса ӳкет. Хутлă ят сказуемăйсем пурте пекех иртнĕ вăхăтра—*ччĕ* çителĕксĕр глагол хушăннипе пулаççĕ. *Манăн хĕрлĕ карандаш пурччĕ. Миша ударникчĕ.*

Предложенире хутлă ят сказуемăйсем пуринчен ытла çакăн пек сăмахсем пулаççĕ:

а) Ят падежĕнчи япала ячĕ.

*Комбайн — **машина**. Миша—**ударник**.*

Ят сказуемăй — ***машина, ударник***.

ă) Паллă ячĕ, причасти.

*Ĕне **сĕтлĕ** пулчĕ. Сывлăш **уçă** (тăрать). Шыв **тăп-тăрă**. Çуракине вăхăтра **тумалла**. Паян колхозра пуху **тăвас** (пулать).*

Ят сказуемăйсем: ***сĕтлĕ, уçă, тăп-тăрă, тумалла, тăвас.***

Асăрхаттарни. *Пур, çук* сăмахсем те çак ушкăна кĕреççĕ; вĕсем, предложени вĕçĕнче пулсан, сказуемăй пулаççĕ.

*Донбасра çĕр айĕнче çĕр кăмрăк пур. Пушхирте шыв çук.*

ă) *И* аффикслă паллă ячĕсемпе причастисем.

*Эпĕ — **кĕçĕнни**. Бригадир — ĕçре **ертсе пыраканни**. Пирĕн умри задача—**вĕренесси**.*

Сказуемăйсем: ***кĕçĕнни, ертсе пыраканни, вĕренесси.***

б) Ят падежĕнчи хисеп ячĕ.

*Виçĕ хут виççĕ—**тăххăр.*** Сказуемăй—***тăххăр.***

в) Ят падежĕнчи местоимени. *Паян дежурнăй —**эсĕ.*** Сказуемăй — ***эсĕ.***

г) Ят мар падежсенчи сăмахсем, хăш-пĕр наречисем. *Эпĕ **саккăртаччĕ.** Ку бригада—**пирĕн.** Сыхланмасан, шăнса пăсăласси **часах.***

Сказуемăйсем: ***саккăртаччĕ, пирĕн, часах.***

## 7 §. Ят сказуемăйлă предложенисенче чăрăну паллисем лартасси.

**Пулăшу глаголĕ (пулать) çук пулсан, сказуемăй пулакан япала ячĕсем, хисеп ячĕсем, местоименисем, причастисем умĕн тире лартаççĕ.**

1. *Коммунистсен партийĕ—ĕç халăхсен авангарчĕ.*
2. *Сталинла Конституци—историлле пысăк документ.*
3. *Икĕ хут иккĕ—тăваттă.* 4. *Паян дежурнăй—эсĕ.*
5. *Пирĕн умри задача—лайăх вĕренесси.*

I. Асăрхаттарни. Подлежащи хыççăн *вăл* сăмах пулсан, тирене ун хыççăн лартаççĕ: *Конституци вăл—тĕп закон.*

II Асăрхаттарни. Подлежащи е сказуемăй местоимени пулсан, тире лартмасан та юрать: *Эпĕ студент. Ку кĕнеке манăн.*

Сказуемăй паллă ячĕ пулсан, ун умĕн тире лартмаççĕ. *Кун ăшă. Урай тап-таса. Ялав хĕрлĕ.*

**17-мĕш упражнени.**

Ят сказуемăйсене кăтартăр, вĕсем мĕнле сăмах ушкăнĕнчен пулнине калăр. Тире лартнине ăнлантарăр.

1. Ыраш — тырă. 2. Тимĕр — металл. 3. Колхоз уйĕ аслă. 4. Икĕ хут виççĕ — улттă. 5. Пулас учительсем, инженерсем, геройсем — эпир. 6. Манăн пичче — инженер. 7. Эпĕ вăйăра лаши пултăм. 8. Эпĕ учитель. 9. Эпир — çиччĕмĕшĕсем. 10. Паянхи дежурнăй — эсĕ. 11. Эсир вулаканни пулăр. 12. Ку йывăç çўллĕ. 13. Пирĕн шкул таса. 14. Лашапа ĕне — килти выльăхсем. 15. Шăнкăравĕ тан-тан-тан! 16. Манăн атте— колхозник. 17. Кунĕ уяр, хĕвелĕ — савăнăçлă. 18. Совет влаçĕ — тĕнчери чи çирĕп власть. Сталинла Конституци — телейлĕ пурнăçăн никĕсĕ.

**18-мĕш упражнени.**

Чăрăну паллисем лартса çырса илĕр.

1. Давыдов сăмах калама питех ăста пулман. (*Шол.*) 2. Пирĕн кашни утăм çирĕп. 3. Эпĕ Золотарĕвкăран пĕр сакăрвунă километртаччĕ. (*Будённый.*) 4. Ленинизм миллионсен

ялавĕ пулса тăчĕ. 5. Çуркунне хĕвел çутăрах. 6. Мускав ССР Союзĕн столици. 7. Вуннă алларан пĕчĕккĕ. 8. Чи пысăк класс çакă. 9. Пирĕн вожатăй Павлуша. 10. Утмăлтурат хирте час-часах тĕл пулакан çум курăк. 11. Сакăр хут тăххăр çитмĕл иккĕ. 12. Сталинла Конституци Октябрьти Социализмлă Аслă революцин кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕсен итогĕ. 13. Большевикла кадрсем партин тата государствăн ылттăн фончĕ. 14. Пĕтĕм совет çĕрĕ тăван çĕршыв. (*Х. Ç.*) 15. Пирĕн çĕршывăн пурнăçĕ хаваслăхпа тулнă пурнăç.

**19-мĕш упражнени.**

Çак сăмахсене подлежащи туса, хăвăртан хутлă ят сказуемăй хушса çырăр. Кирлĕ çĕре тире лартăр.

Тĕслĕх: *Конституци вăл — тĕп закон.*

1. Конституци. 2. Иосиф Вассарионович Сталин. 3. Совет Çарĕ. 4. Мускав. 5. Колхоз. 6. И. В. Мичурин. 7. Пирĕн шкул. 8. Пирĕн класс. 9. Пирĕн колхоз председателĕ. 10. Комсомол. 11. Январь. 12. Майăн пĕрремĕшĕ. 13. Предложени вăл. 14. Фосфорит. 15. Çĕрулми. 16. Вĕренесси. 17. Çырасси. 18. Вуласси. 19. Манăн йăмăк. 20. Эпĕ. 21. Пирĕн çĕршыв. 22. Сывлăш. 23. Снайпер пуласси.

## 8 §. Хутлă глагол сказуемăй.

**Деепричастипе пулăшу глаголĕнчен пулнă сказуемăя хутлă глагол сказуемăй теççĕ.**

Хутлă глагол сказуемăйра пуринчен ытла *са,-се;-а,-е; -ма,-ме* аффикслă деепричастисем тĕл пулаççĕ. Деепричастисем пулăшу глаголĕсемпе пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен тачă çыхăнса тăраççĕ, çапах та деепричасти сказуемăйăн тĕп пĕлтерĕшне кăтартать, пулăшу глаголĕ подлежащипе сказуемăй хушшинчи çыхăнăва кăтартать тата деепричасти кăтартакан тĕп ĕçе уçса парать.

Хутлă глагол сказуемăйри пулăшу глаголĕсен паллăрах пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсем çаксем пулаççĕ:

а) Тĕп ĕçĕн пуçламăшне *пуçла*, унăн вĕçне *пĕтер* пулăшу глаголĕсем кăтартаççĕ.

1. *Колхоз председателĕ отчĕт тăва пуçларĕ.* 2. *Колхоз председателĕ отчĕт туса пĕтерчĕ.* 3. *Сĕтел хушшинчи сынсем хĕрсех калаçма пуçларĕç.* (*Шол.*)

ă) Тĕп ĕç ăçталла та пулсан сулăннине *улăх, кай, кил, ирт, юл, çӳре* тата ытти пулăшу глаголĕсем те кăтартаççĕ.

1. *Пĕлĕтсен айнелле пытанан çумăр çавăнтах çĕр çине сирпĕнсе анать.* (*Лерм.*)

2. *Тăрса юлчĕ кăлăхах Сетнер çав тер чун савни.* (*К. Ив.*) 3. *Виç юланут вăрманта йĕр йĕрлесе çӳреççĕ.* (*К. Ив.*)

4. *Тăлăх хирте каç пулса килет.* (*Çеçпĕл.*) 5. *Смир-но-о!— команда янăраса кайрĕ урамра.* (*Чалд.*)

б) Тĕп ĕç мĕнле пулса пынине *лар, тăр, вырт* тата ытти пулăшу глаголĕсем те кăтартаççĕ.

1. *Ку ĕçшĕн сан яту пролетари кĕрешĕвĕнче чаплă выртăн йышăнса тăрĕ.* (*Чалд.*) 2. *Ял хыçĕнче вăрман кашласа ларнă.* 3. *Ăна аслă Дунайпа Тисса шывĕсем шăварса выртаççĕ.* (*Элк.*)

в) Тĕп ĕç камшăн пулнине *пăх, кăтарт, кур, пар* тата ытти пулăшу глаголĕсем те кăтартаççĕ.

1. *Вăл сана пĕтĕмпех каласа парать.* (*Ф. Пав.*)

2. *Хор халăх юррисене юрласа кăтартрĕ.*

г) Тĕп ĕçе туса пĕтернине *ӳк, яр, пăрах* тата ытти пулăшу глаголĕсем те кăтартаççĕ.

*Алюна упăшкин сăмахне илтсен,*
*Чĕтренсе кайрĕ, кăвакарчăнăм,*
*Авăс çулçи пек чĕтрене ӳкрĕ,*
*Эрленсе, хурланса макăрса ячĕ,*
*Упăшки умĕнче йăванса кайрĕ.* (*Лерм.*)

**Асăрхаттарни.** Ĕç хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине кăтартнă чух хутлă глагол сказуемăйри деепричасти те, пулăшу глаголĕ те пĕр пек сăпат форминчех пулаççĕ.

1. *Ман имшер урасем хуçăлчĕç анчĕç.* (*Лерм.*) 2. *Сикрĕ тухрĕ çырмаран, пĕкке хуçрĕ çурмаран.* (*М. Фĕд.*) 3. *Пыратăп вăрман хĕррипе. Мана хирĕç вăрмантан мулкач сикет тухать.*

**20-мĕш упражнени.**

Текстран хутлă сказуемăйсене çырса илĕр: хутлă ят сказуемăйсене уйрăм, хутлă глагол сказуемăйсене уйрăм.

I. 1. Ĕç хыççăн юрра яра патăмăр. 2. Хĕл куççулĕ шавласа юхса кайрĕ çырмара. (*К. Ив.*) 3. Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен ырă шăрши сарăлать. 4. Тусем, сăртсем хуп-хура. 5. Урам икĕ айккипе ем-ешĕлех сачĕсем. 6. Ирхи çăлтăр хăларса йăл-йăл кулать тӳпере. 7. Тĕттĕм те пулса çитет. 8. Ăшă сывлăш сивĕнет. 9. Вĕт çăлтăрсем тахçанах пĕлĕт айне хупланчĕç. 10. Вăрман телне хуп-хурах сĕм пĕлĕтсем капланчĕç. 11. Шурăмпуçĕ çап-çутах. 12. Таçта-таçта инçетре тусан кайрĕ çĕкленсе. 13. Ячĕç юрă юрласа сĕм вăрманти кайăксем. 14. Сасартăках çил тухсан, асрĕ кайрĕ сĕм вăрман. (*К. Ив.*)

II. 1. Шырланпуçне тĕтре карса илчĕ. 2. Çурт тăррисенчен шыв тумласа тăчĕ. 3. Çырма хĕрринчи топольсем кĕмĕл тумлă. 4. Йытă сассисем хутор тăрăх чарăнусăр янăраса тăраççĕ. 5. Çĕнĕ юрпа витĕннĕ сăртсем ялтăртатса тăраççĕ. Хутор çинче тăкăскă-йӳçĕ кизяк тĕтĕмĕн шăрши явăнма пуç-

лать. 7. Давыдов ыйхăпа тĕлĕре пуçларĕ. 8. Ыйхă Унтрин тăн-пуçне çаварса иле пуçларĕ. 9. Эпĕ—партизан. 10. Сĕтел хушшинче çынсем хĕрсех калаçма пуçларĕç. 11. Тĕттĕм пулса ларчĕ. 12. Эпĕ ыйхăласа кайрăм, тĕлĕрнипе ларнă çĕртех тирĕнсе кайма тăратап. 13. Эпĕ лашасене тăратрăм. 14. Лашасем пирĕн хăраканскерсемччĕ. 15. Сывлăш пăчă. 16. Сывлăм тумламĕсем шăрçа пек чăп-чăмăррăн çакăнса тăраççĕ.(*Шол.*)

**21-мĕш упражнени.**

Малалли текстран малтан хутсăр сказуемăйсене, унтан хутлă ят сказуемăйсене, юлашкинчен хутлă глагол сказуемăйсене çырса илĕр.

Макар—çурта пек яштака пӳллĕ маттур йĕкĕт. Унăн çавракатулли куç шуррисем çĕр çывăрмасăр çӳренипе сарăхнă. Вĕсем ылттăн тĕслĕ, сап-сарă курăнаççĕ. Питçăмартийĕсем тин пиçсе çитнĕ панулми пек таса, хĕрлĕ. Макар тăваттăмĕш çул ĕнтĕ, пĕр канмасăр, вăрçăра çӳрет. Малтан вăл Германи вăрçинче икĕ çул çӳресе таврăннă. Унтан килсен, пĕр хушă пурăнсанах, ăна Колчак çарне тытса кайнă. Унта нумай çӳремен вăл, Щетинкин отрядне тарса пынă. Партизан отрядĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ Колчакăн карательнăй отрячĕсемпе çапăçать. Партизана кашни сехетре, кашни минутра вилĕм сыхласа çӳрет. Анчах, мĕнле сыхласан та, Макара мăйĕнчен тытса, пусса ӳкерейместт. Макар вилĕме парăнмасть. Вăл паттăр. Çăмăл ĕç мар вăл пуянсемпе çапăçасси, вĕсене çĕнтересси... (*Чалд.*)

**22-мĕш упражнени.**

Текста вуласа тухăр, подлежащисемпе сказуемăйсене палăртăр, вĕсем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине каласа парăр.

## ЛЕНИН АТТЕ.

(*Чăваш халăх юрринчен.*)

Ирĕк, савăк пурăнмашкăн
Советсен çĕршывĕнче.
Халь хисеплĕ халăх эпир
Мĕнпур халăх йышăнче.

Калаçма именесси те
Тăрса юлчĕ ĕлĕке.
Ирĕклĕн, илемлĕн, уççăн
Янăрать пирĕн чĕлхе.

Янăрарĕ аслă Ленин
Тăван халăх чĕлхинче.
Вăл пире чĕнсе çĕклерĕ
Кĕрешӳ кунĕсенче.

Çиçĕм пек çиçсе çутатрĕ
Унăн шухăшĕ пире.
Вăл кӳрсе уçса кăтартрĕ
Çĕнĕ ĕмĕрти ире.

**23-мĕш упражнени.**

Малалла панă сказуемăйсемпе предложенисем тăвăр.

1. Çитрĕ. 2. Хатĕрленме пуçларăм. 3. Чикрĕм. 4. Тăхăнтăм. 5. Тупаймарăм. 6. Шырамалла пулчĕ. 7. Хатĕр. 8. Тухса кайрăм.

**24-мĕш упражнени.**

„Йĕлтĕрпе ярăнни" темăпа малалла панă план тăрăх пуçланă калава çырса пĕтерĕр. Хутсăр предложенисемпе усă курăр. Хутлă ят сказуемăйсене пĕр йĕрпе, хутлă глагол сказуемăйсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

План: I. Çанталăк. II. Хатĕрленни. III. Çул çинче. IV. Йĕлтĕрпе сăрт çинчен ярăнни. V. Таврăнни.

## ЙĔЛТĔРПЕ ЯРĂННИ.

Канмалли кун сивĕтрĕ. Пĕлĕтсем таçта кайса кĕчĕç. Хĕллехи хĕвел çутатать. Сывлăш таса, уçă. Сывлама çăмăл.

9 сехет тĕлне ачасен пухăнмалла...

## ПРЕДЛОЖЕНИН КĔÇĔН ЧЛЕНĔСЕМ.

### 9 §. Дополнени.

**Тĕп пĕлтерĕшне улăштарман, пĕр-пĕр ят мар падежра тăракан сăмаха—предложени кĕçĕн членне дополнени теççĕ.**

Дополненисен ыйтăвĕсем: ***камăн*** (пулать)? ***мĕнĕн*** (пулать)? ***кама***? ***мĕне***? ***мĕн*** (тăвать)? ***кампа***? ***мĕнпе***? ***камра***? ***мĕнре***? ***камран***? ***мĕнрен***?

1. *Хирти сарă* ***чечеке*** *(мĕне?) ăшă* ***куçпа*** *(мĕнпе?) кам пăхмĕ?*

2. *Алла* ***винтовка*** *(мĕн?) тытмалла. (Уйăп.)*

3. *Савăнса* ***хĕвелпе*** *(мĕнпе?) çутăлаççĕ сăнсем,* ***юрăпа*** *(мĕнпе?) çĕкленет-çке чĕрем. (Уйăп.)* 4. *Эпир* ***сана*** *(кама?) çамрăксен* ***коммунистла союзне*** *(мĕне?) организацилеме сĕнетпĕр. (Н. Остр.)*

Чаплă, мухтавлă пул, ирĕк Çĕршывăмăр,
Халăх телейĕн хăвачĕ санра!
Халăх ялавĕпе, совет ялавĕпе
Паттăр утар çĕнтерсе малалла!

Дополнени ят мар падежсенчи япала ятёнчен пулать. Ят мар падежсенчи местоимениред те, паллă ятёнчен те, хисеп ятёнчен те, причастирен те дополнени пулма пултарать.

Хыççăмахлă е служебнăй сăмахсем тата ят сăмахлă япала ячёсем дополненисем пулма пултараççĕ:

1. *Эпĕ* ***Нинăпа юнашар*** *ларатăп.* 2. ***Пиллĕк çумне*** *пиллĕк хушар.*

Дополнени пулакан сăмахсем хăйсем ăнлантаракан сăмахсемпе управлени йĕркипе çыхăнаççĕ.

1. Камăнлăх падежĕнчи дополнени:

Камăн, мĕнĕн пулнине е пулманнине пĕлтерет.

1. ***Пирĕн*** *тăрăшарах вĕренмелле.* 2. ***Кĕркурин*** *паян хулана каймалла.* 3. *Доклад* ***тăваканăн*** *тезиссем хатĕрлемелле.*

2. Пару падежĕнчи дополнени:

а) Кама, мĕне панине, тивнине пĕлтерет.

1. *Малта пыракан* ***колхозсене*** *преми панă.* 2. *Уй-хир ударникĕсен* ***съездне*** *хĕрÿллĕ салам!* 3. ***Мана*** *колхозран çыру килчĕ.* 4. *Шăллăм* ***саккăра*** *кайрĕ.* 5. *Сăвă* ***калакансене*** *алă хытă çупрĕç.*

ă) Кама, мĕне килнине, çитнине пĕлтерет.

1. ***Трактора*** *бензин килĕ.* 2. ***Вĕренекенсене*** *кĕнекесем çителĕклĕ илсе пачĕç.*

3. Тăву падежĕнчи дополнени:

Тунă, е курнă, е илтнĕ япалана пĕлтерет.

1. *Совет Çарĕ пирĕн* ***çĕршыва*** *сыхлать.* 2. *Совет Союзĕ çулран çул çĕнĕ* ***заводсем*** *тăвать.* 3. *Радио çĕнĕ* ***хыпарсем*** *пĕлтерсе тăрать.* 4. *Эпир* ***радио*** *итлерĕмĕр.* 5. ***Мана*** *ĕнерхи собранире президиума суйларĕç.*

4. Пĕрлелĕх падежĕнчи дополнени:

а) Ĕç пĕрле пулнине пĕлтерет.

1. *Эпĕ магазинта* ***карандашпа*** *ручка илтĕм.*
2. *Çемен ĕнер вăрмана* ***Петĕрпе*** *кайрĕ.*
3. *Максим Иванов* ***манпа*** *пĕр бригадăрах ĕçлет.*

ă) Ĕç мĕнле хатĕрпе, е кампа, е мĕнпе пулнине пĕлтерет.

1. *Бациллăсене* ***микроскоппа*** *пăхаççĕ.* 2. *Учитель паян* ***вĕренекенсемпе*** *дисциплина çинчен калаçрĕ.* 3. *Эпир алăсене* ***супăньпе*** *çăватпăр, шăлсене* ***щĕткăпа*** *тасататпăр.*

5. Вырăн падежĕнчи дополнени:

Япала камра, мĕнре тăнине пĕлтерет.

1. *Кирлĕ хутсем колхоз* ***председателĕнче*** *пулчĕç.*
2. ***Санра*** *кĕнекесем нумай.*

6. Туху падежĕнчи дополнени:

а) Камран, мĕнрен илнине, ыйтнине, уйрăлнине пĕлтерет.

1. *Эпĕ* ***председательтен*** *сăмах ыйтрăм.* 2. *Курс пĕтерсен, пĕрле вĕреннĕ* ***юлташсенчен*** *уйрăлтăмăр.* 3. *Ĕçрен йĕрĕнни—ниме юрăхсăр япала.* 4. *Паян учитель* ***манран*** *урок ыйтрĕ.* 5. ***Саккăртан*** *виççĕ кăларсан, пиллĕк юлать.*

ă) Мĕнле материалтан тунине пĕлтерет.

*Суртсене* ***йывăçран, кирпĕчрен, чултан*** *тăваççĕ.*

б) Пĕр япалана тепĕр япалапа танлаштарнине пĕлтерет.

*Аэроплан* ***поездран*** *хăвăрт çӳрет.*

Асăрхаттарни. Кунта тĕрлĕ падежри дополненисен тĕп пĕлтерĕшĕсене çех кăтартса панă. Кунсăр пуçне вĕсем урăх пĕлтерĕшлĕ те пулма пултараççĕ.

**Дополненисен пĕлтерĕшĕсене, ыйтăвĕсене, вĕсем мĕнле падежсенчи сăмахсем пулнине кăтартакан таблица.**

| №№ | Падеж ячĕсем | Пĕлтерĕшĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Камăнлăх пад. | Камăн е мĕнĕн пулни, пурри | Камăн? Камсен? Мĕнĕн? Мĕнсен? | *Иванăн* кĕнекесем пур. *Аэропланăн* çунатсем пур. *Пирĕн* ёлка пулать. |
| 2 | Пару пад. | Кама, мĕне пани тивни, кирли, çитни | Кама? Камсене? Мĕне? Мĕнсене? | *Юлташа* парать. *Мана* кирлĕ. *Завода* кирлĕ. *Шкула* çителĕклĕ. *Сире* пулать. |
| 3 | Тăву пад. | Тунă, е курнă,е илтнĕ япала | Кама? Камсене? Мĕне? Мĕнсене? Мĕн? Мĕнсем? | *Юлташа* куртăм. *Юрă* итлерĕм. *Çыру* çыртăм. *Кĕнекене* патăм. *Юрлакансене* итлерĕм. |
| 4 | Пĕрлелĕх пад. | Пĕрле пулни, мĕнле хатĕрпе ĕçлени | Кампа? Камсемпе? Мĕнпе? Мĕнсемпе? | *Бригадирпа* калаçать. *Кĕнекепе* тетрадь илтĕм. *Машинăсемпе* ĕçлетпĕр. *Иванпа* пĕрле эпĕ шкула кайрăм. |
| 5 | Вырăн пад. | Камра, мĕнре пулни | Камра? Камсенче? Мĕнре? Мĕнсенче? | *Манра* пулчĕ. *Бригадирта* пулчĕ. *Тасалăхра* сывлăх. |
| 6 | Туху падежĕ | Камран, мĕнрен илни, ыйтни, уйрăлни, мĕнле материалтан туни; танлаштаракан япаласенчен пĕри | Камран? Камсенчен? Мĕнрен? Мĕнсенчен? | *Сăрантан* çĕлет. Тимĕр *йывăçран* йывăртарах. *Вĕренекентен* ыйтать. *Юлташсенчен* уйрăлать. *Магазинтан* илет. |

## 11 §. Ма-ме аффикслă деепричастисем дополнени пулни.

Дополнени, подлежащи пекех, **ма-ме** аффикслă деепричастисенчен те пулать. **Ма-ме** аффикслă деепричастирен пулнă дополненин ыйтăвĕ тăву падежĕн ыйтăвĕ пек: *мĕне? мĕн?*

*1. Эпĕ **вулама** юрататăп. 2. Вĕренекенсем йĕлтĕрпе **çÿреме** юратаççĕ. 3. Эпĕ **юрлама** хавас.*

Кун пек дополненисене хутлă сказуемăя кĕрекен **ма-ме** аффикслă деепричастисенчен уйăрма пĕлмелле.

Ма ме аффикслă деепричасти дополнени пулни:

1. *Эсĕ ăна стена хаçачĕ валли статья **çырма** хуш-ха.*
2. *Вĕренекенсем йĕлтĕрпе **çÿреме** юратаççĕ.*

Ма-ме аффикслă деепричасти хутлă сказуемăя кĕрет:

1. *Вăл стена хаçачĕ валли статья **çырма** тытăнчĕ.*
2. *Вĕренекенсем йĕлтĕрпе **çÿреме** пуçларĕç.*
3. *Эпĕ **юрлама** пултаратăп.*

**25-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Дополненисене аялтан туртăр, вĕсем мĕнле сăмах ушкăнне кĕрекен сăмахсенчен пулнине, мĕнле ыйтура тăнине сăмахсем тăрне çырăр.

1. Атте хăрнă улмуççи туратне пăчкăпа касрĕ. 2. Паттăр, хăюллă лётчиксене салам! 3. Çĕр пинтен сахалтарах. 4. Эпĕ ăна хулара куртăм. 5. Эпĕ вулама юрататăп. 6. Учитель хуларан кĕнекесем, карандашсем, перосем илсе килчĕ. 7. Тислĕкрен пысăк тупăш илетпĕр. 8. Эсĕ хурана шурăран уйăрма пĕлетĕн. (*Пос.*) 9. Уйăх çути пас тытнă йывăççене тÿлеккĕн çутатать. (*М. Труб.*) 10. Куçа уçса пăхатăп. Мана носилка çине илсе хураççĕ. Мана, хамăр палатăна илсе пырса, Ильинпа юнашар вырттараççĕ. Утияла сирсе, суран çинелле пăхатăп. (*Элк.*)

**26-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Дополненисене аялтан туртăр, вĕсем хăш падежра тăнине сăмахсем тăрне çырăр.

1. Зала çулпуçĕсен портречĕсемпе, лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнĕ. 2. Пирĕн колхоз государствăна тырă парса татрĕ. 3. Пĕренесевчен сухăр шăрши кĕрет. 4. Чĕкеç хăйĕн çуначĕсемпе лăпкă шыва перĕнчĕ. 5. Павел пиччĕшĕнчен çыру илчĕ. 6. Асту, икĕ куçпа та пăх. Чÿречесене карăр. Хуралта тăраканнисене ху тĕресле. Вăл-ку пуласран, утсемпе çунасене хатĕр тыт. (*Остр.*) 7. Ачана аллинчен тытса тăракан мужик çĕлĕкне хыврĕ. (*А. Фад.*) 8. Чăпта ĕçне Унтри çичĕ çултах хутшăннă. (*Элк.*) 9. Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм: хăçан кăтартăн халăхна ху чĕлхÿне хăват кĕртмешкĕн тĕнчене килнĕ ывăлна. (*Çеçп.*)

**27-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Скобкӑри дополненисене кирлӗ падежсенче лартӑр.

1. Пирӗн (шкул) хаҫатра ырланӑ. 2. Вутта (пӑчкӑ) татаҫҫӗ. 3. Эпӗ ку (пьеса) пӗлтӗр те курнӑччӗ. 4. Пирӗн (колхоз) грузовик пур. 5. Лайӑх ӗҫлекен (колхозсем) районра премипачӗҫ. 6. Манӑн (Петӗр) пӗр кӗнеке илмелле. 7. Ҫакӑ (ача) пурте тӗлӗнеҫҫӗ. 8. Яшкана (кашӑк) ҫиеҫҫӗ. 9. Кӗреҫене (йывӑҫ, тимӗр) тӑваҫҫӗ. 10. Васса (Володя) амӑшӗнчен алкум вӗҫӗнче илсе юлчӗ. Пӳрте кӗнӗ чух Васса (ача) хӑй ҫумне чӑмӑртаса тытрӗ. (*Труб.*) 11. Эпӗ ака (ҫакӑ) тепӗр сӑмах ыйтам. 12. Кунта эпир кӑҫал кӗркунне комсомол (ячейки) уҫнӑ. Эсӗ паян (комсомолец) стена хаҫачӗ кӑларма пулӑшатӑн. (*Ис. М.*) 13. Хӑйӗн аслӑ (хӗр) ашшӗ ыйтать: мӗн мӑнтӑр. (*К. Ив.*) 14. Анлӑ кӑкӑр ҫине (пуҫ) уснӑ вӑл (*Лерм.*) 15. Пӗри ҫеҫ калаҫать, ман ҫине пӑхмасть, чӑпар (шаль-тутӑр) витӗнсе тӑрать. (*Лерм.*)

**28-мӗш упражнени.**

Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Дополненисем кашни мӗнле падежра тӑнине каласа парӑр.

## ПИРӖН КОНСТИТУЦИ.

Ана кӗтнӗ ҫӗршыв, кӗтнӗ ҫутӑ тӗнче,
Ӗмӗт ҫуннӑ пирте шӗл-кӑваррӑн.
Баррикадӑсенче, чул купи хӳттинче
Ана чӗннӗ Париж коммунарӗ.
Пӗр хура кӗркунне ҫулӑмпа ялкӑшса
Уншӑн хыпӑнчӗ вутлӑ Октябрь.
Ҫӗршыв тухрӗ ун чух ӗмӗрхи пусмӑртан,
Пӑшалсем алла илтӗмӗр эпир.
Эпир кӗтӗмӗр ҫӗнӗ чӑн-чӑн ӗмӗре.
Кун-ҫулсем сирӗн пурнӑҫпа тулчӗҫ!
Ҫак вутра, ҫулӑмра, вӑрҫӑри тӗтӗмре
Аталанчӗ пирӗн Конституци.

**29-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Дополненисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Лейтенант Евграфов боецсене дозора кӑларса янӑ. Чи лайӑх боеца, Иван Каратеева, вӑл дозорта асли тунӑ. Каратеев хӑйпе пӗрле дозора Медведева тата Летавина илсе кайнӑ. Весем хыҫҫӑн застава хӑйӗн яланхи ӗҫӗсене туса юлнӑ. Заставӑри пӗртен-пӗр хӗрарӑм, Анна Варламовна, ҫӗлекен машинӑпа красноармеецсем валли шурӑ ҫухависем ҫӗленӗ. Евграфов шинельне тӑхӑннӑ та стройри занятие тухса кайма хатӗрленсе тӑнӑ. Сасартӑк часовой алӑка уҫнӑ. Лейтенант умне Летавин гимнастӗркӑпа тата ҫара уран кӗрсе тӑнӑ.

— Лейтенант юлташ, японецсем чикĕ урлă каçрĕç, юлан-утсемпе те, çурран та,—васкаса калană Летавин.

— Хĕç-пăшалсем илĕр! Утсем çине!—хушу панă лейтенант.

## 11 §. Определени.

**Предложенири япала паллисене кăтартакан, мĕнле? камăн? мĕнĕн? ăçти? хăçанхи? миçе? миçемĕш? хăшĕ? ыйтусемпе ыйтăнакан кĕçĕн членсене определени теççĕ.**

Определени япала мĕнлине, унăн вырăнне, вăхăтне, хисепне, ăна мĕнле материалтан тунине, вăл паллă маррине, паллă пулнине, япала камăннине, мĕнĕннине пĕлтерет.

Определени пулакан сăмахсем яланах япала ячĕсемпе çыхăнса тăраççĕ: камăн? мĕнĕн? ыйтура тăраканнисем управлени йĕркипе, ытти ыйтусенче тăраканнисем примыкани йĕркипе çыхăнса тăраççĕ.

Определенисем çакăн пек пуплев пайĕсенчи сăмахсем пулаççĕ: а) паллă ячĕсем, ă) хисеп ячĕсем, б) местоименисем, в) причастисем, г) япала ячĕсен, местоименисен, причастисен камăнлăх падежĕ.

а) Паллă ячĕсем: 1. ***Сарă*** *хĕвел хавассăн кулса ячĕ.* 2. *Колхоз хирĕнче* ***ударлă*** *ĕç вĕрет.* 3. ***Лăпкă*** *çил ачашшăн çе илĕртет.*

ă) Хисеп ячĕсем: 1. ***Иккĕмĕш*** *бригада ĕçре пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.* 2. *Кăçал колхоз* ***икĕ*** *молотилка илчĕ.*

б) Местоименисем: *Амăшĕпе* ***çак*** *пӳртре Сетнер ача пурăнать.* (*К. Ив.*)

в) Причастисем. *Магазинта* ***вуламалли*** *кĕнекесем илтĕм.*

г) Япала ячĕпе çыхăнакан япала ячĕн, местоименин, причастин камăнлăх падежĕ.

1. ***Пирĕн*** *вутлă хастарлăх вăл—****коммуна*** *чечекĕ.*

2. ***Кашнийĕн*** *чĕри вут-кăварлă.* 3. ***Юрлакансен*** *сасси уççăнах илтĕнет.*

**Определенисен пĕлтерĕшĕсене, ыйтăвĕсене тата вĕсем мĕнле сăмахсем пулнине кăтартакан таблица.**

| Пĕлтерĕшсем | Ыйтăвĕсем | Пуплев пайĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. Япала мĕнли | Мĕнле? | Паллă ячĕ | *Çĕнĕ* кĕнеке. *Савăнăçлă* ĕç. |
| | | Причасти | *Вуламалли* кĕнеке. |
| 2. Япала вырăнĕ | Ăçти? | Паллă ячĕ | *Республикăри* промышленность. |
| 3. Япала вăхăчĕ | Хăçанхи? | Паллă ячĕ | *Паянхи* ĕç. *Çуркуннехи* вăхăт. |

| Пĕлтерĕшсем | Ыйтăвĕсем | Пуплев пайĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 4. Япала шучĕ | Миçе? Мĕн чухлĕ? Миçешер? | Паллă ячĕ Хисеп ячĕ | *Нумай* трактор. *Икĕ* комбайн. *Вуншар* тетрадь. |
| 5. Мĕнле япаларан туни | Мĕнле? | Япала ячĕ | *Сăран* тужурка. *Чул* çурт. |
| 6. Япала йĕрки | Миçемĕш? | Хисеп ячĕ | *Иккĕмĕш* кун. *Улттăмĕш* сехет. |
| 7. Япалана кăтартни | Хăш? | Паллă ячĕ Кăтарту мест. | *Пуçламăш* урок. *Ку* кĕнеке. *Вăл* çын. *Леш* урам. |
| 8. Япала паллă марри | Мĕнле? | Паллă мар мест. | *Темĕнле* машина. *Темиçе* кун. |
| 9. Япала паллă пулни | Мĕн чухлĕ? Мĕнле? | Паллă мест. | *Пур* халăх. *Пĕтĕм* тĕнче. *Кашни* çын. *Урăх* япала. |
| 10. Япала камăнни, мĕнĕнни | Камăн? Мĕнĕн? | Япала ячĕн, местоименин, причастин камăнлăх п. | *Колхоз* уставĕ. *Ĕç* планĕ. *Кашниййĕн* ĕçĕ. *Юрлакансен* сасси. |

**30-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Определенисене аялтан туртăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине сăмахсен тăрне çырса пырăр.

I. 1. Тулли уйăх манăн çĕнĕ çуртăн шурă стенисемпе хăмăшпа витнĕ тăррине çутатса тăрать. Лутрарах чул хӳме çавăрса тунă килкартинче малтанхинчен пĕчĕкрех те кивĕрех пĕр лаç хăяккăн пăхса ларать. Ун стенисем çумĕпе тинĕс çыранĕ чăнкăланса анать, лере вара, аялта, вĕçĕмсĕрех шавласа тăракан тĕксĕм те сенкер хумсем чӳхенеççĕ. Уйăх лăпкăн çутатать, вăл канăçсăр, анчах хăйне пăхăнакан çанталăк вăйĕ çине шăппăн пăхать. Эпĕ ун çуттинче, çырантан инçетре, икĕ карапа куратăп; аякри шупка пĕлĕт çинче вĕсен хура мачтисен урлашкисем, эрешмен карти еверлĕ, пĕр хускалмасăр сăнланса лараççĕ. (*Лерм.*)

II. 1. Пахчари курăксем çурхи хаваслăхпа сывлаççĕ. 2. Колхоз лашисем пуçĕсене ухса кăна утаççĕ. Тепĕр сехет ĕçлесен, лашисене кăнтăрлана тăварчĕç. 3. Çурхи хĕвел пĕр чарăнмасăр çуллать хăйĕн йĕплĕ чĕлхипе юхан шыв питне. 4. Шурă мамăк пек лапсăркка кăтра пĕлĕтсем юхаççĕ тĕпсĕр тӳпе тăрăх. Вунпĕр ретлĕ сеялка ĕçлеме тытăнчĕ.

III. 1. Пирĕн Нарспи сарă хĕр
Çав Сетнере юрататъ,
Çавăнпала сарă хĕр
Туй пуласран хурланать.
2. Килсе тухрĕç вăрмантан
Акă икĕ урапа.
Шăппăн шурĕç ялалла
Парăн-парăн лашапа.
3. Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăрать.
Арман чулĕ айĕнче
Мĕскĕн чĕре çурăлать.
(*К. Ив.*)

IV. 1. Вăл панă кĕнекисене нихăçан та каялла ыйтмастчĕ. (*Пуш.*) 2. Фĕдорпа Чапаев Самара çитиччен тăвату кун кайрĕç. (*Фурм.*) 3. Кăнтăрлахи апат пĕçерессн çинчен пўртĕшпех пуçтарăнса канашланă. Апат шухăшĕ Обломовкăри пурнăçра чăн пысăк шухăш пулнă. (*Гон.*) 4. Тăхăр çулхи Ванька Жуков Аляхин атăçă патĕнче виçĕ уйăх вĕренсе пурăнать. Çырнă хутне Ванька тăваткăлласа хутларĕ те ĕнер пĕр пуса илнĕ конверт ăшне чикрĕ. Ванька, çывăхри почта тĕлне çитсе тăрсанах, хăйĕн хаклă çыруне хушăк витĕр ярса хăварчĕ. (*Чех.*) 6. Темиçе минутран тĕтĕм пĕлĕчĕ сирĕлсе кайнă. 7. Çак каç манăн пурнăç историнче нихçан та манми паллă вăхăт пулса тăчĕ. (*Элк.*)

**31-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Скобкăри ыйтусем ыйтăнне май килекен определенисем тупса çырăр.

Эпир (*мĕнле?*) çулпа пыратпăр. Пирĕн пуç тўпи тĕлĕнче пекех çўлте (*хăçанхи? мĕнле?*) хĕвел йăлтăртататъ. Аякрах мар (*мĕнле?*) вăрман ўсет. Вăрман çуммипе (*мĕнле?*) шыв юхса выртать. Эпир (*ăçти?*) кайăксен сассине итлесе пыратпăр. Эпир пыракан çулпала час-часах (*мĕнле?*) автомобильсем ирте-ирте каяççĕ. Вĕсен (*мĕнле?*) гудокĕсем аякранах пире çул çинчен пăрăнма хушаççĕ. Акă эпир чугун çул хĕррине çитрĕмĕр. Станцире темĕн чухлĕ (*мĕнле?*) çуртсем лараççĕ. Станци варринче (*мĕнле?*) вокзал ларать. Эпир станцие çитсенех, Канашран (*мĕнле?*) поезд килсе çитрĕ.

**32-мĕш упражнени.**

Çак определенисемпе япала ячĕсене кĕртсе предложенисем тăвăр.

1. Çуллахи ăшă çанталăк. 2. Вăрманти тискер кайăксем. 3. Улăхри ешĕл курăк. 4. Паянхи савăнăçлă кун. 5. Ирхи уçă сывлăш. 6. Пысăк чул çуртсем. 7. Илемлĕ, çутă шкул. 8. Кĕрхи вĕт çумăр. 9. Таса, çутă клуб. 10. Пирĕн аслă, çутă класс. 11. Телейлĕ самана. 12. Сталинла Конституци. 13. Хастарлă Совет Çарĕ. 14. Пирĕн аслă çĕршыв.

## 12 §. Приложени.

Приложени вăл—определенисен пĕр ушкăнĕ. Япала мĕнлине ăна тепĕр ят парса кăтартакан определение приложени теççĕ.

***Комсомолец-пограничник** вăрманпа шăппăн пынă.*

***Заочник**-учительсем Шупашкара çуллахи заочнăй сес-сне пухăнчĕç.*

Определени япала мĕнлине кăтартать, приложени текен определени те япала мĕнлине кăтартать, анчах япалана çав вăхăтрах тепĕр ят парать.

Приложени час-часах çыннăн çулне, национальноçне, вăл мĕн ĕçре пураннине т. ыт. те кăтартать.

1. *Ватă **карчăк**-тарçа йыхăрса калать. (Лерм.)*

2. *Осетин-лавçă пĕр чарăнмасăр лашисене хăвалать. (Лерм.)*

3. *Тавтапуç сана, тăванăм, йăмăк, тус, **хĕр**-паттăр. (Хус.)*

4. *Шăп çав самант **салтак**-хуралçă ярса та тытрĕ хыçалтан. (Хус.)*

Приложени час-часах, япала мĕнлине кăтартса, уншăн эпитет пулать.

*Çакнашкал тĕттĕм каç фронтра ыванма пĕлмен **ухта-равçă**-прожектор хыпашласа шырать.*

Кунта приложени прожектора тепĕр ят парать, анчах ***ухтаравçă*** сăмах ***прожектор*** сăмахшăн эпитет пулать.

Приложени вырăнĕнче пайăр ятсем пулма пултараççĕ.

*Паян доклад **Белов** юлташ тăвать.*

Илемлĕ литературăри произведенисен, кĕнекесен, хаçатсен, журналсен, кинокартинăсен ячĕсем те приложени пулаççĕ. Кун пек приложенисене кавычкăсем хушшине илеççĕ, пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

*Эпĕ **„Правда"** хаçата вуласах тăратăп.*

***„Нарспи"** поэма хĕрарăмсен ĕлĕкхи пусмăрлă пурнăçне кăтартать.*

Пайăр мар ятран пулнă приложенисене дефис урлă çыраççĕ. Пайăр ятран пулнă приложенисене уйрăм çыраççĕ.

*Пирĕн шкула **хĕрарăм**-врач килчĕ.*

Ку параграфра пăхса тухнă приложенисем те, ытти определенисем пекех, тепĕр япала ячĕсемпе примыкани йĕркипе çыхăнаççĕ.

Хăш-пĕр приложенисем çумĕнче вĕсемпе çыхăнса тăракан кĕçĕн членсем пулма пултараççĕ.

1. *1939 çулхи çураки Совет Союзĕнчи ĕç çыннисен пурнăçĕнчи пысăк событипе — Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн XVIII-мĕш съезчĕ **усăлнипе** пĕр вăхăтра пулчĕ.*

Кун йышши приложенисем согласовани йĕркипе çыхăнаççĕ. Приложенипе вăл ăнлантаракан сăмах хушшине тире лартаççĕ.

**33-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр, приложенисене аялтан туртăр.

1. Эпĕ хулара вĕренекен хĕр-тантăшсемпе тĕл пулса калаçрăм. 2. Колхозник-ударниксен съездне хĕрӳллĕ салам! 3. Пирĕн колхоз правленийĕнче автомат-телефон пур. 4. Хĕрарăм-лётчиксен шучĕ кашни çулах ӳссе пырать. 5. Эпĕ „Правда" хаçата вуласах тăратăп. 6. Поэт-юлташпа кайса калаçас тесе, Вăрмантрест сарайне кайрăм. (*Ис. М.*) 7. Тĕп пултăр фашизм—ирсĕр çĕлен-калта. (*В. Долг.*)

**34-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр, приложенисемпе япала ячĕсене аялтан туртăр. Кирлĕ çĕре е дефис, е тире, е кавычкăсем лартăр.

1. Пĕри çеç калаçмасть, ман çине пăхмасть, чăпар шальт утăрпа витĕнсе тăрать. (*Лерм.*) 2. Телей уççи ĕмĕр хăвачĕ сикзе кĕрет аллăмăра. (*Ухсай.*) 3. Шухăшăмсем ман аслă Кремльте, унта пирĕн çулпуç кăвар чĕре. (*И. Ив.*) 4. Эпĕ Ялав журнал илсе тăратăп. 5. Манăн хĕр-тантăшсем пурте шкулта вĕренеççĕ. 6. Халĕ пысăк хуласенче автомат телефонсемпе усă кураççĕ. 7. Ĕçе хастаррăн тытăнчĕ комсомолец бригадир. 8. Пăшал тытса тупа эс турăн, вунсаккăрти хĕр партизан. (*Хус.*) 9. Мĕн хăрамалли пур унта? Госпитале илсе кайнă ĕнтĕ ăна,—терĕ хĕр комиссар. 10 Пĕрре колхоз председателĕпе пахчаçă бригадир тĕмсем хушшипе калаçса пыраççĕ. (*Труб.*)

## 13 §. Обстоятельствăсем.

**Предложенири ĕç мĕнле тата мĕнле обстоятельствăсенче (ăçта? хăçан? мĕншĕн? мĕн пирки? т. ыт. те) пулнине кăтартакан кĕçĕн членсене обстоятельствăсем теççĕ.**

Обстоятельство пулакан сăмахсем глаголпа е унран пулнă сăмахсемпе (причастипе, деепричастипе) çыхăнса тăраççĕ. Хăш чухне обстоятельство паллă ячĕпе çыхăнса тăрать: *питĕ пысăк, ытлашши сарлака.* Обстоятельство пулакан сăмахсем ытти сăмахсемпе пуринчен ытла примыкани йĕркипе çыхăнса тăраççĕ. Ăçта? ăçтан? хăçан? ыйтусенче тăракан япала ячĕсем çех управлени йĕркипе çыхăнса тăраççĕ.

1. *Çыран хĕрринчи хăмăш* ***хуллен*** *хумханса ларать.* 2. *Сетнер* ***тутлă*** *сывăрать сӳллĕ* ***юман кутĕнче.*** (*К. Ив.*) 3. *Маттур* ***шăпăрçă паян*** *икĕ пуса каччипе тытса килчĕ* ***вăрмантан*** *Сетнерпеле Нарспие.* (*К. Ив.*) 4. *Хĕр туйĕ те* ***Тукасран хирĕç*** *анать çĕмĕрсе.* (*К. Ив.*) 5. ***Паян отлично*** *вĕренекенсене преми параççĕ.*

Обстоятельствăсем çакăн пек пуплев пайĕсенчи сăмахсенчен пулаççĕ:

а) Наречисенчен: 1. ***Паян*** *пирĕн митинг пулчĕ.* 2. *Ĕç-ре* ***вăйлăн*** *та* ***сатур*** *кĕрешетпĕр.*

ă) Деепричастисенчен: 1. ***Хĕрсе*** *ĕç ĕçлетпĕр,* ***шă-рантарса*** *юрă юрлатпăр.* 2. *Конюх лашасене апат* ***пама*** *тухрĕ.*

б) Ăçта? ăçтан? ыйтусенче тăракан япала ячĕсенчен:

1. *Автобус* ***Канаша*** *каять. Халĕ вăл* ***хуларан*** *тухрĕ те Кукеçелле кайрĕ.* ***Канашран Шупашкара*** *вăл каçпа таврăнать.* 2. *Эпĕ вăтам* ***шкула*** *вĕренме кĕтĕм.* 3. ***Пу-тăксемпе, варсемпе*** *çĕмĕрĕлсе шыв юхать.* (*К. Ив.*) 4. *Пи-рĕн Нарспи ку пӳртре çук-ши* ***тесе*** *килтĕмĕр.* (*К. Ив.*)

г) Хыçсăмахлă е служебнăй ятсăмахлă япала ячĕсем:

1. *Уйăх кукри ярăнса тухрĕ* ***вăрман хыçĕнчен.*** (*К. Ив.*) 2. ***Стенасем çинче*** *портретсем, лозунгсем çакăнса тă-раççĕ.* 3. *Мускав ячĕпе тăракан* ***канал тăрăх*** *пысăк паро-ходсем çӳреççĕ.*

Пĕлтерĕш тăрăх обстоятельствăсем çакăн йышшисем пу-лаççĕ: выран обстоятельстви, вăхăт обстоятельстви, пирке обстоятельстви, тĕллев обстоятельстви, мĕнлелĕх обстоя-тельстви.

**35-мĕш упражнени**

Текста вуласа тухăр, обстоятельствăсене тупăр, вĕсем мĕнле ыйтура тăнине, мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине каласа парăр.

1. Çĕнĕ çул кунĕ каçхине Çавал ялĕнчи комсомол ячейки хуларан килнисемпе пĕрле çамрăксен каçĕ тăвать. Малтан сурхури авалхи йăла иккенне çутатса паракан доклад. Унтан пĕчĕк спектакль. Вара çĕнĕрен организациленĕ хор тухса юрлать. Хорта Лисук тата тăвата хĕр, вĕсем Лисукпа пĕрлех кĕнĕ кружока. Хор сцена çинчен тăван юрăсене шăрантарса пачĕ. Хуларан килнĕ комсомолецсем те хора пулăшма тăнă. Комсомолецсем тунă хор Çавал ялĕнче пирвайхи хут илем-летнĕ чăваш юррисене янăратса ячĕ. (*Ис. М.*)

II. Лисук Шигаевăпа çывăхах туслашса кайнă. Шигаева ăна пĕрмаях пулăшса пынă. Пушă вăхăтра шкула е вула-малли çурта çӳренĕ Лисук. Ячейка ăна отрядра ĕçлеме хушнă. Пионерсем хушшинче вăл ачасен хаваслăхĕпе хавасланнă.

Унiçĕм арăмĕ Лисука комсомола çыrăннишĕн вăрçнă. Унiçĕм хĕрĕ те темтепĕр каласа вăрçнă Лисука. Лисук хирĕç нимĕн те чĕнмен. Комсомола кĕрсе ĕçлеме пуçланăранпа ăна çĕнĕ вăй хутшăннă пек туйăннă. Çав курăнми çĕнĕ вăй ăна нимĕнрен те труках хăраса ӳкме паман. Тем пек йывăр вăхăтсенче те ун пуçĕнче ĕлĕкхи пек тискер шухăшсем çуралман.

## 14 §. Вырăн обстоятельстви.

**Вырăн обстоятельстви ĕç ăçта пулнине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕсем: ăçта? ăçтан? ăçталла?**

1. *Сакă çутă* ***тĕнчере***
*Вăйли çук та этемрен.*
(*К. Ив.*)
2. *Турикасри çак кил-çурт*
***Аякранах*** *курăнать.*
(*К. Ив.*)
3. *Хăй* ***кĕтĕвĕ патĕнче***
*Ача шăхличă калать,*
*Хырăмĕ пит выçнипе*
***Силпи ялнелле*** *пăхать.*
(*К. Ив.*)

36-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Вырăн обстоятельствисене аялтан туртăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине сăмахсем тăрне çырăр.

Юмах юпа тăринче,
Хам урхамах çийĕнче.
Вĕçсе-вĕçсе пытăм та
Килтĕм тухрăм çакăнта
Аслă вăрçă хушшине,
Икĕ халăх вăрçнă çĕре.
Унта пĕр кун пурăнтăм,
Çак ĕçсене эп куртăм:
Асап курать çич ютра
Çичĕ тăван вăрçăра. (*К. Ив.*)

## 15 §. Вăхăт обстоятельстви.

**Вăхăт обстоятельстви ĕç хăçан пулнине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕсем: хăçан? хăçанччен? хăçантанпа?**

1. ***Паян*** *хĕвел хĕртсе пăхать.* 2. *Колхоза* ***килмессерен*** *студентсем доклад тăваççĕ.* 3. *Октябрьти Социализмлă Аслă* ***революциччен*** *ĕç халăх пусмăрта пурăннă.* 4. *Иван* ***ĕнертенпех*** *доклада хатĕрленет.*

37-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Вăхăт обстоятельствисене аялтан туртăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине сăмахсем тăрне çырăр.

1. Паян кунччен асран каймаççĕ
Таса та тăрă куçусем,
Ик çутă çăлтăр пек çунаççĕ,
Паян та ăшă пек вĕсем.
(*Шав.*)

2. Тепĕр кунне ирех читальнăра комсомолецсен пухăвĕ пулчĕ. (*Х. Ç.*) 2. Тăрать шурăмпуçĕпе, ирех хире вăл тухать. (*К. Ив.*) 3. Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм, хĕр кăмăлне татмарăм. (*К. Ив.*) 4. Çуркуннепе çул усал: сулахайра сулнăк пур, сылтăм енче çырма пур. (*М. Фёд.*) 5. Кунĕпе çапла çӳрерĕм, çумма çакрăм виç куян. (*Ĕçх.*) 6. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса (*К. Ив.*)

## 16 §. Пирке обстоятельстви.

**Пирке обстоятельстви ĕç мĕн пирки пулнине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕ: мĕн пирки?**

1. *Савăннипе вăл сиксе илчĕ.* 2. *Ăшăпа пур япала та сарăлать.*

**38-мĕш упражнени.**

Текстран пирке обстоятельстви пур предложенисене çырса илĕр.

1. Савăннипе Сетнерин чĕри кăлт-кăлт сикет-çке. (*К. Ив.*) 2. Шăрăхпа антăранă ĕнесем шыва чĕркуççи таран кĕрсе тăнă.

3. Çĕнĕ хапха айĕнчен
Кĕрсе пĕтмест урапа.
Хапха тăрри шатлатать
Саламатпа çапупа... (*К. Ив.*)

4. Васканипе эпĕ шаккамасăрах юлташ патне кĕтĕм. 5. Ăшăран куракссемпе калчасем часах симĕсленчĕç.

## 17 §. Тĕллев обстоятельстви.

**Тĕллев обстоятельстви ĕçĕн тĕллевне кăтартать. Унăн ыйтăвĕсем: мĕн тума? мĕншĕн?**

1. Эп каятăп чыслăн, çирĕп сыхлама тăван çĕре. (*Уйăп.*) 2. Шăллăм хулана вĕренме кайрĕ.

Асăрхаттарни. Ма-ме аффикслă деепричасти япала куçнине кăтартакан глаголсене ăнлантарнă чухне тĕллеве çеç кăтартать, ыгти чухне унăн урăх пелтерĕш уйрăмлăхĕсем те хутшăнаççĕ: *вĕренме каятăп, ĕçлеме тухрăм.* Танлаштарăр: *вĕренес тесе каятăп; ĕçлес тесе тухрăм.*

**39-мĕш упражнени.**

Текстран тĕллев обстоятельстви пур предложенисене çырса илĕр.

1. Манăн çĕмел тума хире каймалла. 2. Шӳт тума, култарма халь тухман эпĕ, тухрăм эпĕ паян, тăшман ачи-пăчи, хăруша вăрçа, юлашки вăрçа! (*Лерм.*) 3. Вăйя тухма шӳлкеме хулпуççи урла çакать. (*К. Ив.*) 4. Ирех тăрса, тумланса, Сентти тухрĕ вылямa; кĕвентине утланса, чупрĕ инкĕшне курма. (*К. Ив.*) 5. Васюкпа Хветюк колхозниксем патне радио итлеме кайрĕç. (*Труб.*) 6. Вĕренӳ отличникесем лагере канма

кайрӗç. 7. Эпир хулана сыхламашкӑн кӗретпӗр траншея ăшне. (*Алка.*)

8. Пӗр хут мар пире тискеррӗн
Тапӑнса пӑхнӑ тӑшман...
Нихӑçан та çӗршыв пирӗн
Тӑшмансен кулли пулман.

Хӗрлӗ çӑлтӑрлӑ çӗршывшӑн,
Сыхлама ун тивӗçне
Комсомолецсем хастаррӑн
Кайнӑ граждан вӑрçине.

(*М. Яст.*)

9. Выртать вӑл ӑнсӑр пӗр самант.
Тӑна кӗрет... шӑмшак вӗри;
Пит-куç тӑрӑх тумлать чӗр юн.
Хӑварт-хӑварт тапать чӗри.
Çапах тӑма вӑй пур-ха ун.

(*Элк.*)

## 18 §. Мӗнлелӗх обстоятельстви.

Мӗнлелӗх обстоятельстви ӗç мӗнле, мӗн чухлӗ пулнине пӗлтерет. Унӑн ыйтӑвӗсем: мӗнле? мӗн чухлӗ (пулать)? миçе хутчен? миçен?

1. *Силпи чӑваш ялӗнче юр ирӗлчӗ* ***васкаса.*** (*К. Ив.*) 2. *Эпӗ „Хӗрлӗ Гварди" кинокартинӑна* ***икӗ хут*** *куртӑм.* 3. ***Нумай*** *вӑл кӗрешрӗ умри хӗнпеле.* (*Элк.*) 4. *Вӗсем пынӑ* ***виççӗн*** *чи малти ретре.* (*Ӗçх.*)

**40-мӗш упражнени.**

Текста çырса илӗр. Мӗнлелӗх обстоятельствисене, вӗсем ӑнлантаракан сӑмахсене аялтан туртӑр.

1. Пилотка тӑхӑнатӑн меллӗн, чӗн пиçиххи сан пилӗкре. (*Шав*).

2. Йӗплӗ-йӗплӗ пиçене
Татса тӑкӑр тӗппипех.
Асар-писер тӑшмана
Петерӗпӗр пуçӗпех. (*Юрӑ.*)

3. Вӑхӑчӗ иртерех-ха, хӑйӑ та халь анчах çутнӑ. Çавӑнпа юлташсене пӑртак кӗтмелле. (*Х. Ç.*) 4. Пухӑннӑ çамрӑксем пурте пуçӗсене тӳрӗ тытаççӗ, маттур пӑхаççӗ, маттур калаçаççӗ. (*Х. Ç.*) 5. Пӗтӗмпе тата йӗркеллӗн ун çинчен калас тесен, çырмалла яка, илемлӗ кӗнекесем. (*Ухсай.*) 6. Кӗç-вӗçех ешӗл курӑк шӑрт пек тапса тухмалла. Кунта вӗт-шакӑр ачасем урисене салтса пӑрахнӑ та кусналла выляççӗ. (*Ӗçх.*) 7. Пусӑксемпе, варсемпе çӗмӗрелсе шыв юхать. (*К. Ив.*) 8. Кӗвентине утланса, ача вылять лашалла. (*К. Ив.*) 9. Хул айне унтан васкавлӑн пӑшала эп хӗстереп. (*Ӗçх.*)

**Обстоятельствăсен уйрăмĕсене, ыйтăвĕсене тата вĕсем мĕнле сăмахсенчен пулнине кăтартакан таблица.**

| №№ | Уйрăмсем | Ыйтăвĕсем | Пуплев пайĕсем. | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Вырăн обстоятельстви | Ăçта? | Япала яч., вырăн п. | *Хирте* ĕçлет. |
| | | | Яп. яч., пĕрлелĕх п., наречи. | *Урампа* пырать. *Унта* ĕçлет |
| | | | Хыççăмахлă яп. ячĕ. | *Атăл тăрăх* çӳрет. *Сĕтел çинче* выртать. |
| | | Ăçтан? | Яп. ячĕ, тх. п. | *Хиртен* килет. *Унтан* тухать. |
| | | Ăçталла? | Наречи | *Унталла* каять. *Хирелле* каять. |
| 2. | Вăхăт обстоятельстви | Хăçан? | Хис. яч., вырăч п. Наречи Деепричасти | *Иккĕре* поезд каять. *Паян* пулать. *Каймассерен, килмессерен.* |
| | | Хăçанччен? | Наречи | *Ыранччен, революциччен.* |
| | | Хăçантанпа? | Деепричасти Наречи | *Кайиччен, киличчен. Ĕнертенпе, касранпа.* |
| 3. | Пирке (причина) обстоятельстви | Мĕн пирки? | Паллă ячĕ Причасти | Ку тутăра *шурăран* çумарăм. *Савăннипе* ним тăваймасть. |
| 4. | Тĕллев /цель/ | Мĕншĕн? | Деепричасти | Çĕршыва *сыхлама* кайрĕ. *Вĕренме* каять. |
| 5. | обстоятельстви Мĕнлелĕх /ĕç мĕнле пулнин/ обстоятельстви | Мĕн тума? Мĕнле? | Наречи | *Ударлă, паттăр, хастар* ĕçлет. |
| | | | Деепричасти | *Тăрăшса* вĕренет. *Хĕрсе кайса* калаçать. |
| | | Мĕн чухлĕ /пулать?/ | Наречи | *Нумай* вулать. |
| | | Миçе хутчен? | Наречи | *Икĕ хутчен* килет. |
| | | Миçен? | | *Иккĕн* ĕçлеççĕ. |

41-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Обстоятельствăсене аялтан туртăр, вĕсен тăррине вĕсем мĕнле обстоятельство пулнине çырăр.

I. 1. Йĕри-тавра çĕрлехи пек тӳлек пулнă. Лёнька çатан çумне пынă та вишня йывăçĕн çатан урлă ӳкекен сулхăнне ларнă. Таçта аякра пыл хурчĕ нăйлатни илтĕннĕ. (*М. Горьк.*) 2. Лёнька аслашшĕ çине тинкерсе пăхнă. Лёнька хăранипе шартах сикнĕ те аяккалла пăраннă. Лёнька аслашшĕ нимĕн сиккеленмесĕр ларнă. (*М. Горьк.*) 3. Шавласа, кĕрлесе юхать Вăкăр Çырми. Аслă çул шыраса, малаллаваскать, пысăк тинĕселле ыткăнать. (*Тукт.*)

4. Мухтавлă пултăр сан яту та,
Çÿретĕр халăх хушшинче,
Хисеплĕ пултăр, пултăр çутă,
Ан тухтăр халăх асĕнчен.

Вунсаккăрта кăначчĕ эсĕ,
Шкултан та тухнăччĕ кăна,
Сан уçă куллуна илтмесĕр,
Эп ирттерместĕмччĕ куна.
(*Шав.*)

II. 1. Паян çумăр хыта çурĕ. 2. Пирĕн вĕренекенсем халĕ миллионшарăн шутланаççĕ. 3. Ĕнертенпе эпĕ пĕр кĕнеке вуласа тухрăм. 4. Лерен грузовик килет. 5. Эпир чăвашла çыратпăр. 6. Колхозсенче çĕр ĕçне çĕнĕлле ĕçлеççĕ. 7. Эпĕ ĕнер Пятигорска çитрĕм. (*Лерм.*) 8. Çутăсем пур çĕрте те йăлтăртатаççĕ. 9. Васканипе эпĕ ыратнине те туймарăм. 10. Çыран хĕрринчи хăмăш хуллен хумханса ларать. 11. Вĕсем улăха юланутпа кайрĕç. 12. Эпир хăвăрт вулатпăр. 13. Пĕчĕк чухне эпир лашалла выляттăмăр. 14. Алăк майĕпен уçăлчĕ.

III. 1. Эпир çитнĕ çĕре столовăя халăх пухăннă. 2. Хуларан хаçат-журналсем илсе килнĕ. 3. Дежурнăйсем сĕтел çине апат хатĕрлеççĕ. 4. Тепĕр кунне ирхине çичĕ сехетре каякан поездпа Петька Мускава ларса кайнă. 5. Пĕлĕт çинчи çăлтăрсем пытанмалла выляççĕ. 6. Башня çинче сехет вуннă çапнă. 7. Юратнă командирăн сăмахĕсене хавасланса итленĕ. (*Фурм.*) 8. Куçук паян шкултан темшĕн пит хĕпĕртесе, çуталса килчĕ. (*Х. Ç.*)

IV. 1. Хĕвел хĕртет. Сайра-хутран çумăр та пулкалать. Колхоз хирĕсенче тырăсем, машинăпа акнăран, пит тикĕс шăтрĕç. Ниçта çум курăк çук. (*М. Труб.*) 2. Çав вăхăтра сасартăк пирĕн хапха уçăлса хупăннă сасă илтĕнчĕ. 3. Такам пусма картлашкисем тăрăх пит çăмăллăн чупса хăпарчĕ. 4. Эпир ĕлĕк апатне те тăраниччен çимен, канлĕхне те курман. Çак алăри çăкăр татăкне ун чухне хуçаран йăлăнса илнĕ. „Халĕ çăкăр хуçи хамăр",—тет батрак Элеçук. (*Тукт.*) 5. Вăрман хыçĕнчен хуп-хура пĕлĕтсем капланса тухрĕç. (*Тукт.*) 6. Таçтан лерен, пахчасем хыçĕнчен, сасартăк темскер кăмсĕрт туни илтĕнчĕ. (*Тукт.*) 7. Маттуррăн та хăюллăн тыткалаççĕ хăйсене Будкевичпа унăн юлташĕсем. (*Элк.*) 8. Таçта вăйлăн пăшалсемпе шатăртаттарни илтĕнет. 9. Хамăр умри хуралсем те сайран перкелешеççĕ. 10. Кăнтăрлапа австриецсен артиллерийĕ те сасă хушрĕ. 11. Кăнтăрла пирĕн ротăна резерва куçарчĕç. (*Элк.*)

V. 1. Çирĕп япала нумая пырать. 2. Юр вăйлă çурĕ. 3. Каçхи уçă сывлăшра юрă уççăн янăрать. 4. Хĕвелĕ пысăккăн, хĕрлĕн курăнать. 5. Телейлĕ ачалăхшăн тавтапуç Сталин юлташа.

6. Калаçма именесси те
Тăрса юлчĕ ĕлĕке.
Ирĕккĕн, илемлĕн, уççăн
Янăрать пирĕн чĕлхе.

42-мӗш упражнени.

Предложенисем тӑвӑр, вӗсенче ҫак сӑмахсем обстоятельотвӑсем пулччӑр.

Аван, вӑйлӑ, кунӗ-кунӗпе, паян, кӑҫал, пӗлтӗр, ирпе, саванса, хӗрсе, улттӑн, лере, ялта, аякра, хӗлле, ирхине, ударлӑ, хирелле, заводра, каҫчен.

43-мӗш упражнени.

Тӑван литература хрестоматинчен обстоятельствӑллӑ предложенисем вуннӑ тупса ҫырса илӗр.

## 19 §. Сӑмахсем предложенире мӗнле вырӑнта тӑни.

Сӑмахсем предложенире мӗнле вырӑнта тӑнин уйрӑм законӗ пур. Ҫав закон тӑрӑх подлежащие ӑнлантаракан сӑмахсем (подлежащи группине кӗрекен сӑмахсем) ун умӗнче тӑраҫҫӗ, сказуемӑя ӑнлантаракан сӑмахсем (сказуемӑй группинчи сӑмахсем) сказуемӑй умӗнче тӑраҫҫӗ. Чӑваш чӗлхинче подлежащи нимрен ытла предложени пуҫламӑшӗнче, сказуемӑй предложени вӗҫӗнче тӑрать.

Ҫапла вара сӑмахсен предложенири вырӑнне хыҫалтан малалла кӑтартса пырсан, ҫапла йӗрке пулать. Предложени вӗҫӗнче сказуемӑй, ун умӗнче обстоятельствӑсем (деепричасти, наречи); малалла дополненисем (тӑву падежӗнчи тата ытти ят мар падежри сӑмахсем е падеж форминчи обстоятельствӑсем); ят мар падежри дополненисемпе обстоятельствӑсем умӗнче определенисем (паллӑ ячӗ, хисеп ячӗ, местоименисем, причастисем). Малалла подлежащи группи пуҫланать. Ялала ячӗ-подлежащи умӗнче определенисем (паллӑ ячӗ, причасти, вӗҫленекен сӑмахсен камӑнлӑх падежӗ); предложени пуҫламӑшӗнче сказуемӑй группине кӗрекен вӑхӑт обстоятельстви пулма пултарать.

Тӗслӗх:

| | | |
|---|---|---|
| Мест., к. п. (опр.); *Пирӗн* | п.я.(опр.) *паттӑр* | яп. ячӗ. ят.п.(под.); *пограничниксем* |
| нар.(вӑхӑт об.); *кунӗн-ҫӗрӗн* | п.я. (опр.); *тӗрлӗ* | яп. я., тх. п.(доп.); *тӑшмансенчен* |
| яп. ячӗ, тӑв. п. (доп.); *границӑсене* | | гл. (сказуемӑй). *сыхлаҫҫӗ.* |

Асӑрхаттарни. Логикӑллӑ ударени йӗркипе, стиль ыйтӑвӗпе предложенири сӑмахсем час-часах хӑйсен вырӑнне улӑштараҫҫӗ, сӑмахран:

1. *Сывӑ пултӑр ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑ союзӗ!* 2. *Кӑвак тинӗсре шавлакан хумсем урлӑ шӑвать пӗр карап тӑп ҫыран еннелле. (Элк.).*

Предложенири шухăша хăвăрт тата тĕрĕс ăнланма сăмахсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăнине, çыхăнса тăракан сăмахсен уйрăм пĕлтерĕшне те, çыхăнăвĕ пирки вĕсен пĕлтерĕшĕ улшăннине те хăвăрт чухласа илни кирлĕ.

## Каланине схема туса кăтартар.




Асăрхаттарни: Ку схемăра согласование икĕ еннелле тунă стрелкăпа кăтартнă, управление пăхăнакан сăмах енчен пăхăнтаракан сăмах еннелле тунă стрелкăпа кăтартнă, примыкание пĕр йĕр туртса кăтартнă.

Сăмахсем айне вĕсен ыйтăвĕсене панă тата вĕсем предложенин мĕнле членĕ пулнине те кăтартса панă.

**44-мĕш упражнени.**

Çакăнти кашни предложенин схемине çÿлте кăтартнă тĕслĕх тăрăх тăвăр.

1. Урамсенче хаваслă сасăсем илемлĕн янăраççĕ. 2. Пĕчĕк вăрман хыçĕнче металл завочĕ таçтанах сарăлса ларать. 3. Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс пирĕн умра вăйлăн шавлать. 4. Таттисыпписĕр аслати кĕрлет хăватлăн. (*М. Горьк.*) 5. Кăçал çуркунне çеç Хĕрлĕ Сормоварри верфьрен шыв çине антарнă „Комсомолец" ятлă пароход июль пуçламăшĕнчи пĕр ăшă кун Мускав портĕнчен тухрĕ. (*Агак.*) 6. Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă шăвать пĕр карап тăп çыран еннелле. (*Элк.*) 7. Унăн шурă питлĕ сарă арăмĕ кĕмĕл тиркĕ çинче çĕклесе пычĕ пурçăнпа тĕрлевĕ çĕнĕ алшăлли. (*Лерм.*)

## ХУТСĂР ПРЕДЛОЖЕНИ ТИПĔСЕМ.

### 20 §. Тулли мар предложенисем.

**Предложенире пĕр-пĕр член çук пулсан, анчах ăна çăмăллăнах тупса кăтартма пулать пулсан, ун пек предложение тулли мар предложени теççĕ.**

Предложенин членĕсене сиктерсе хăварасси ытларах икĕ çын калаçнинче (диалогра) пулать. Ун пек чухне сиктерсе хăварнă члена малтанхи предложени тăрăх çăмăллăнах тупса кĕртсе лартма пултаратпăр.

Тĕслĕх:

— *Эсĕ ăçта ĕçлетĕн?*
— *Колхозра.*
— *Сирĕн колхоз грузовик илчĕ-и?*
— *Илчĕ.*

Кунта иккĕмĕшпе тăваттăмĕш предложенисем—тулли мар предложенисем. Иккĕмĕш предложенире подлежащипе сказуемăй та çук, обстоятельство анчах. Ку предложенире подлежащи—*эпĕ*, сказуемăй—*ĕçлетĕп*, вĕсене эпир пĕрремĕш предложени тăрăх пĕлетпĕр, çавăнпа иккĕмĕш предложение кĕртместпĕр.

Тăваттăмĕш предложенире подлежащипе дополнени çук, сказуемăй анчах.

Хăш-пĕр чухне тата предложени членне, ĕç условине кура, каламаççĕ, мĕншĕн тесен каламасăр та мĕн çинчен калаçу пыни паллă. Сăмахран, çынсем поезд е автобус кĕтсе тăраççĕ. *Килет!* тесен, итлекенсем пурте калаçу поезд е автобус çинчен пынине ăнланаççĕ.

Тулли мар предложенире час-часах подлежащи е сказуемăй, е вĕсем иккĕшĕ те пулмаççĕ. Предложенири шухăш вĕçленнине кăтартма кĕçĕн члена кăларса пăрахни те тĕл пулать.

— *Эсĕ манăн кĕнекене илмен-и?*
— *Çук, эпĕ илмен.*
— *Эсĕ халĕ библиотекăна каятăн-и?*
— *Çук, эпĕ каймастăп.*

Иккĕмĕш предложени тулли мар: унта подлежащи те, сказуемăй та пур, анчах *кĕнекене* сăмах—дополнени çук. Тăваттăмĕш предложенире *библиотекăна* сăмах—обстоятельство çук, çавăнпа вăл та тулли мар предложени.

Асăрхаттарни: Сăпат местоименийĕсенчен пулнă подлежащи глагол форминченех паллăрать: *Килĕр кунта. Кĕнеке пар. Ăçта каятăн?—Кино курма каятăп.*

**Подлежащи çук пулсан та, анчах вăл глагол форминчен паллăрать пулсан, предложени тулли шутланать.**

45-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Тулли мар предложенисене аялтан туртăр.

1. Ермолай, яланхи пекех, тивретмелле печĕ, эпĕ—çав тери начар. (*Тург.*) 2. Эпĕ хамăн чаплă лашам çине лартăм, Савельич—ырхан та ухсах лаша çине. (*Пушк.*) 3. Эпир чăвашла, вырăсла кĕнекесем илтĕмĕр. Иван—вырăслине анчах. 4. Вăл хĕр енчи вăйăçа пулчĕ, эпĕ—кĕрӳ енчи. (*Х. С.*) 5. Поезд килет-им?—Килет. 6. Чĕлĕм чĕртсен, эпир лартăмăр: эпĕ—кантăк патне, вăл—хутса янă кăмака патне. 7.—Нумаййăн-и?—тесе ыйтрĕ Левинсон...

— Пĕр аллă çын,—терĕ Бакланов.

— Пехота-и?

— Çук, утлăскерсем... (*А. Фад.*)

8. Патша хăраса ӳкрĕ, кăларчĕ манифест: „Вилнисене—ирĕк, чĕррисене—арест". (*ВКП(б) ист.*)

## 21 §. Ят предложени.

**Предложенире пĕр-пĕр япалана кăтартса панă, анчах ун çинчен урăх нимĕн те каламан пулсан, ун пек предложение ят предложени теççĕ.**

*Вунтăваттăмĕш çул. Июль кунĕсем...* (*Элк.*)

Ят предложени сасартăк, хавăрт улшăнакан ĕçсене çырса кăтартнă чухне тĕл пулать.

46-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Ят предложенисене аялтан туртăр.

I. 1. Май уйăхĕн юлашки кунĕсем. Тин çеç хăпаракан хĕвел хĕрӳллĕн пĕçертме тытăнать. 2. Сентябрь кунĕсем. Çанталăкри пăчă сывлăш уçăлать. 3. Хĕвеллĕ ăшă кун. Вунтăваттăмĕш çул. (*Элк.*) 4. Сталинград. Шăрăх. Тусан. Трамвай тусан пĕлĕчĕсем хушшипе сиктерсе пырать. Типĕ çырма. Пĕчĕк çуртсем. Кичем слобода та, çунса типнĕ çеçенхир. Айлăмран çĕнĕ хула хăпарать. Симĕс йывăçсем. Çамрăк йывăçлă аллейăсем. Цветниксем. Клуб. Больница. Шкул. Театр. Çулăн тепĕр енĕпе—завод контори. (*А. Толст.*) 5. Çеремлĕ васан. Сайра йывăçсем. Васан варринче пĕр шывлă çыран. Çыран хĕрринче хăва хуллисем. (*Элк.*)

II. Пĕве. Кĕмĕл пек шыв. Йĕри-тавра пилĕк таран сĕлĕ. Сĕлĕ сапакисем ăшшăн силленсе лараççĕ. Хура уй варринче путене савăнса юрлать. Пĕве хĕрринче чечексемпе витĕннĕ шырлан. Сĕлĕ тăррисем урлă ачасен пуçĕсем курăнса кайрĕç. Хĕвелпе çӳçĕсем шап-шурă пулнă. Пиçен тăрри пек. (*Долг.*)

47-мĕш упражнени.

Ят предложенисемпе усă курса, малалла панă темăсенчен пĕринпе пĕчĕк калав çырса парăр.

Темăсем: 1. Манăн биографи. 2. Колхоз пасарĕ. 3. Хĕллехи вăрман. 4. Çуллахи кун. 5. Кӳлĕ. 6. Колхоз хирĕ.

## 22 §. Подлежащиллӗ предложенисемпе подлежащисӗр предложенисем.

**Предложенире подлежащи пулсан е ӑна тупма пулать пулсан, ун пек предложение подлежащиллӗ предложени теҫҫӗ.**

**Подлежащи пулмасан тата ӑна тупма та ҫук пулсан, ун пек предложение подлежащисӗр предложени теҫҫӗ.**

*Тӗттӗмленет. Колхозниксем хиртен яла таврӑнаҫҫӗ.*

Кунта малтанхи предложенире подлежащи ҫук, анчах ӑна тупма та ҫук, малтанхи текст та ӑна палӑртмасть. *Тӗттӗмленет*—подлежащисӗр предложени. Иккӗмӗш предложени—подлежащиллӗ.

Подлежащисӗр предложени пуринчен ытла подлежащи паллӑ мар пулсан, е ӑна палӑртма кирлӗ те мар пулсан, е темиҫе уҫӑмлӑ мар япаласем ҫинчен калаҫнӑ чухне тӗл пулать.

### Подлежащисӗр предложенисенчи сказуемӑйсен формисем.

Подлежащисӗр предложенисенчи сказуемӑйсем ҫакӑн пек формӑсенче пулма пултараҫҫӗ:

1. Пӗррелле хисепӗн 3-мӗш сӑпатӗнчи хальхи вӑхӑтри глагол.

Кун йышши подлежащисӗр предложени ҫутҫанталӑкри явленисене е ҫыннӑн хӑш-пӗр ӑшри сисӗмӗсене кӑтартать. 1. *Ҫутӑлать*. 2. *Уяртать*. 3. *Ҫӳҫентерет.*

2. Пулмалли причасти.

Кун йышши подлежащисӗр предложенисем тумалли ӗҫе ҫирӗппӗн палӑртнине кӑтартаҫҫӗ.

1. *Выльӑхсене норма тӑрӑх тӑрантармалла*. 2. *Пирӗн паян экскурсие каймалла.*

3. Пулас причасти.

Кун йышши подлежащисӗр предложенисем ӗҫне тӑваканнине палӑртмасӑр каланине кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем тата ӗмӗте кӑтартаҫҫӗ, ун пек чухне пулас причасти *чӗ* аффикс йышӑнать.

*1. Пирӗн килес. 2. Ҫакӑн пек постановлени йышӑнас.*

Ӗҫне тӑваканнине палӑртас пулсан, ҫав предложенисенех ҫапла йӗркелеме юрать: 1. *Эпӗ килтӗм*. 2. *Эпир ҫакӑн пек постановлени йышӑнар.*

4. Ыйту местоименийӗсемпе е наречисемпе ҫыхӑнакан пулас причасти.

Кун йышши подлежащисӗр предложенисем пулас причастипе кӑтартнӑ ӗҫе тӑвасси уҫӑмлӑ маррине кӑтартаҫҫӗ.

1. *Пирӗн мӗн тӑвас?* 2. *Мӗншӗн ахаль ларас?* 3. *Ӑҫта ӑна шырас?*

5. Паллӑ ячӗ те, наречи те пулакан хӑш-пӗр сӑмахсем е вӗсен танлаштару формисем.

1. *Паян сивĕ.* 2. *Ĕнер сивĕрех пулнă.* 3. *Вăрманта ăшăрах.* 4. *Мана сивĕ мар.*

Кун йышши сказуемăйсем ят сказуемăй шутланаççĕ: пулăшу глаголĕ хальхи вăхăтра тĕл пулмасть, ытти формăсенче тухса ÿкмест.

Асăрхаттарни. Паллă ячĕ те, наречи те пулакан хăш-пĕр сăмахсем, ялпала мĕнлине кăтартман чухне, наречи пĕлтерĕшĕпе предложение кĕреççĕ те сказуемăй пулаççĕ. Кун пек наречи-сказуемăйсем подлежащисĕр предложенисенче çеç пулаççĕ.

48-мĕш упражнени.

Çак текстра тĕл пулакан подлежащисĕр предложенисенчи сказуемăйсем мĕнле пуллев пайĕнчен пулнине кăтартăр.

I. Ан ÿпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ÿпкелес?
Ăçта тарса каяс-ха
Пуян атте-аннерен?
Атте-анне ухмах çав,
Мĕн каласа кăнтарас?
Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас?
Тăшман ытла хаяр, тет,
Епле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта каяс, мĕн тăвас?

(*К. Ив.*)

II. Çурçĕр енчен çил вĕрет. Сивĕтет пулмалла. Йĕри-тавра шăп. Майĕпе çутăлать. Пирĕн васкасах дозортан таврăнмалла, анчах „чĕлхе" тытас пулать. Пĕччен чухне вăрманта темĕнле кичем. Ака юлташ мана сигнал пачĕ. Эпир вăл тытнă „чĕлхене" штаба тăратрăмăр.

49-мĕш упражнени.

Подлежащиллĕ предложенисенчен подлежащисĕр предложенисем тăвăр.

Тĕслĕх:

| Подлежащиллĕ предложенисем: | Подлежащисĕр предложенисем: |
|---|---|
| 1. *Çуракине вăхăтра тăвар.* | *Çуракине вăхăтра тумалла.* |
| 2. *Вăрманта сывлăш уçă.* | *Вăрманта уçă.* |
| 3. *Эпир вĕренме каятпăр.* | *Пирĕн вĕренме каяс.* |

1. Çуракине вăхăтра тăвар. 2. Вăрманта сывлăш уçă. 3. Эпир вĕренме каятпăр. 4. Эпир И. В. Мичурин вĕрентĕвне пурнăçлатпăр. 5. Ирхине вăхăтра тăрăр. 6. Приказа пурте итлĕр. 7. Эпĕ лĕтчик пулатăп. 8. Эпир яланах аван ĕçлетпĕр. 9. Вăрманта çĕр нÿрлĕ. 10. Эпĕ отличник.

## 23 §. Паллă мар сăпатлă предложенисем.

Предложени ĕçе тăвакан сăпата паллă мар кăтартать пулсан, ун пек предложение паллă мар сăпатлă предложени теççĕ.

1. *Паян киоскра кĕнеке нумай сутнă.* 2. *Ватă çерçие хывăхпа улталаймăн.* (*Посл.*) 3. *Рудана çĕр айĕнчен кăлараççĕ.*

Паллă мар сăпатлă предложенисенче сказуемăй тăрăх ĕçе тăвакане пур пекех, анчах паллă мар кăтартнă. *Рудана çĕр айĕнчен кăлараççĕ. Кăлараççĕ* сказуемăй тĕрлĕ çыннăн: инженерăн, геологăн, техникăн, рабочин ĕçне кăтартать. Астăвăр: тулли мар предложенисенче ĕçне тăвакан сăпат е япала яланах паллă. *Ачасем мĕн тăваççĕ?—Математика вĕренеççĕ.* Юлашки предложени тулли мар: сказуемăй кăтартакан ĕç ачасем çинчен каланине çеç кăтартать.

Паллă мар сăпатлă предложенисен подлежащийĕ пулмасть, сказуемăйĕ пĕррелле хисепĕн иккĕмĕш сăпат форминче е нумайлă хисепĕн виççĕмĕш сăпат форминче пулать.

**50-мĕш упражнени.**

Çак текстран малтан подлежащисĕр предложенисене, унтан паллă мар подлежащиллĕ предложенисене çырса илĕр. Сказуемăйсем мĕнле пуплев пайне кĕрекен сăмахсем пулнине кăтартăр.

1. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тĕттĕмленет. 2. Мана пĕр майлă çеçенхирте темле кичеммĕн туйăнчĕ. 3. Çанталăк ирччен сивĕтсе пăрахрĕ. 4. Броненосец ăшĕнче шăрăх, пăчă. 5. Кунта шавлама хушмаççĕ. 6. Çав вăхăтра килкартинче пачах тĕттĕмленчĕ. 7. Çынсем чей ĕçме пухăна пуçларĕç. 8. Çанталăк улшăнчĕ. Вăйлă çумăра пулмалла. 9. Тăрăшмасан, пулла та шыврач кăлараймăн. (*Посл.*) 10. Кĕнекене хутран тăваççĕ. 11. Уйра лăпкă. 12. Йăмрана çуркунне лартаççĕ. 13. Манăн çывăрас килмест. 14. Пирĕн çине тăрса вĕренмелле. Эпир халĕ çамрăк. 15. Сивĕре ăшă пӳртрен тухас килмест.

## Хутсăр предложенисем çинчен аса илни.

**51-мĕш упражнени.**

Сăвва вулăр та предложени членĕсем тăрăх разбор тăвăр.

Ман çывăх юлташăмсăм
пурччĕ.
Тăрать вăл умрах, ман асра.
Эй, çамрăк чĕрем, юрă
хурччĕ
Ăна тантăшсем манасран.
Мĕнле пуçласа эп çаврам-ши
Çак чаплă юрра ун çинчен?
Çĕршывĕ ун—Атăл тавраше,
Хăй—лăпкă чăваш ялĕнчен.
Юлташăн йăл çутă пит-куçĕ
Ыр кăмăл сунатчĕ çынна;
Ĕлккен те тирпейлĕ çи-пуçĕ
Маттур сăн кӳретчĕ ăна.
Эпир кĕрсе кайрăмăр харăс
Унпа чи малтан-çке вăрçа.
Пире хăюллатрĕ хаяр ăс,
Чуна тăвăла çавăрса. (*Алка.*)

**52-мĕш упражнени.**

Текста вуласа тухăр та ят парăр. Унтан унăн содержанине хăвăр сăмахпа каласа парăр. Предложени членĕсем тăрăх разбор тăвăр.

Калаçу ăнсах пычĕ. Пĕр сехет хушшинче пĕр-пĕрипе туслашрĕç вĕсем. Митька пĕр вăлтине Мурата тыттарчĕ те,

иккӗшӗ юнашар ларсах шӑкӑлтатма тытӑнчӗҫ. Пулли аван кӗчӗ. Митькӑн котелокӗ часах ҫурри ытла тулчӗ.

Хӗвел кӑнтӑралла хӑпарса ҫитме пуҫларӗ. Ирхине самаях сивӗ пулнӑ шыв лӗпех пулса кайрӗ. Вӗсем кӗпи-йӗмӗсене хывса хучӗҫ те пилӗк таран шыва кӗрсе тӑчӗҫ. Митька тӳрех ишме, чӑмма, чӑмпӑртатма тытӑнчӗ. Мурат пӑртак тытӑнса тӑчӗ. Халь ҫеҫ ҫӗнӗ ӳтпе витӗнме пуҫланӑ суранӗсене сиен кӳресрен хӑрарӗ вӑл. (*Агак.*)

**53-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Предложенири сӑмахсем мӗнле член пулнине кӑтартӑр.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче эпӗ ялти шкулта вӗренеттӗмччӗ. Саккӑрмӗш класа пӗтерсе экзамен пама хатӗрленнӗ вӑхӑтра эпир шкул чӳречи витӗр ял вӗҫӗнчи ҫерем ҫинче самолёт куртӑмӑр. Ун пек сывлӑшри карапа эпир халиччен нихҫан курман та, пурте ял вӗҫне чупрӑмӑр. Пирӗн хыҫран шкулти математик Кузьма Афанасьевичпа колхоз председателӗ те персе ҫитрӗҫ.

Эпӗ шкулта пӗр парта ҫинче хампа юнашар ларакан Люся хулӗнчен ҫатӑртаттарса тытнӑ та шӑтарас пек умри самолёт ҫине пӑхса тӑратӑп. Акӑ унӑн пропеллерӗсем ерипентерех ҫаврӑна пуҫларӗҫ, ҫил те ытлашши хӑватлӑн вӗрми пулчӗ. Самолёт алӑкӗ уҫӑлчӗ те, шалтан комбинезон тӑхӑннӑ ҫын курӑнчӗ. Вӑл пӗшкӗнсе алӑк уратинчен пӗчӗк чикмек ҫакса хучӗ. (*Талв.*)

## ПӖР ЙЫШШИ ЧЛЕНЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

### 24 §. Пӗр йышши членсем.

Пӗр хутсӑр предложенирех темиҫе подлежащи, пӗр сказуемӑй, е темиҫе сказуемӑй, пӗр подлежащи; е пӗр ыйтурах тӑрса, пӗр сӑмахах ӑнлантаракан темиҫе кӗҫӗн член пулма пултараҫҫӗ.

а) Темиҫе подлежащи, пӗр сказуемӑй.

***Тусем, сӑртсем*** *хуп-хура юрӗ кайса пӗтнӗрен.* (*К. Ив.*)

б) Темиҫе сказуемӑй, пӗр подлежащи.

*Вӑрман тата хытӑрах* ***шавлать, йӗрет, ахӑрать.*** (*К. Ив.*)

д) Темиҫе определени, пӗр подлежащи.

*Сывӑ пултӑр* ***рабочисен, хресченсен, интеллигенцин*** *пӗрлӗх фрончӗ.*

г) Темиҫе дополнени, пӗр сказуемӑй.

1) *Эпир шкулта* ***математика, физика, истори, географи,*** *вырӑс* ***чӗлхи,*** *чӑваш* ***чӗлхи, ботаника*** вӗренетпӗр.

Темиҫе подлежащиллӗ, пӗр сказуемăйлă, е темиҫе сказуемăйлă, пӗр подлежащиллӗ, е, пӗр ыйтурах тăрса, пӗр сăмахах ăнлантаракан темиҫе кӗҫен членлă предложение пӗр йышши членлă предложени теҫҫӗ.

**Пӗр ыйтурах тăрса, пӗр сăмахпах ҫыхăнакан предложенири членсене пӗр йышши членсем теҫҫӗ.**




Пӗр йышши членсем хушшине сыпăнтаракан союзсем та, те, тата, е лартма пулать.

1. *Эпир шкулта математика та, физика та, географи те, хими те вӗренетпӗр.*

2. *Тусем тата сăртсем хуп-хура.*

3. *Эпир Шупашкартан Мускава е поездпа, е пароходпа каятпăр.*

**Асăрхаттарни.** Пӗр йышши членсем пӗр-пӗрне пăхăнса тăмаҫҫӗ, вӗсем, пӗр тан пӗлтерӗшлӗ сăмахсем, пӗр пӗринпе сыпăнса тăраҫҫӗ. Пӗр йышши подлежащисем, пӗр-пӗринпе сыпăнса тăрса, ытти сăмахсене те пăхăнмаҫҫӗ. Пӗр йышши сказуемăйсем, пӗр-пӗринпе сыпăнса тăрса, подлежащие согласовани йӗркипе пăхăнса тăраҫҫӗ. Сăмахран: *Шавлать, кашлать сӗм вăрман. (К. Ив.)*

Пӗр йышши кӗҫӗн членсем, пӗр-пӗринпе сыпăнса тăрса, хăйсем ăнлантаракан сăмахпа пӗр пек йӗркепех—е примыкани, е управлени йӗркипе—пăхăнулла ҫыхăнаҫҫӗ. Сăмахран: 1) *Пуtăксемпе, варсемпе ҫӗмӗрӗлсе шыв юхать.* (*К. Ив.*) 2. *Амăшне каларӗ хӗрӗ вăрттăн, ерипен.* (*Хус.*) 3. *Карап шăвăнать пек, канмасăр, хаюллăн ҫӗнтернӗ, вакланнă хумсем ҫийӗпе* (*Элк.*) 4. *Ҫӗрпӳ, Чикме, Етӗрне урлă юрру сассийӗ кайӗ сан.* (*Ҫеҫп.*)

Кашни пӗр йышши члена пӗр пек интонаципе калатпăр, кашни пӗр йышши член хушшинче пӗчӗк чарăну (пауза) пулать. Пӗр йышши член темиҫе пулсан, чарăну аванрах палăрать.

Пӗр йышши членсем ытларах пӗр формăрах тăракан пӗр пек сăмах ушкăнне кӗрекен сăмахсенчен пулаҫҫӗ. Сăмахран, ҫӳлерех пăхса тухнă тӗслӗхсенче пӗр йышши подлежащисем—

ят падежĕнчи, нумайлă хисепри япала ячĕсем, пĕр йышши сказуемăйсем—хальхи вăхăтăн 3-мĕш сăпатри глаголсем, дополненисем—тăву падежĕнчи япала ячĕсем.

Пĕр йышши членсем тĕрлĕ формăра тăракан сăмахсенчен те пулма пултараççĕ, мĕншĕн тесен предложенин пĕр-пĕр членĕ тĕрлĕ сăмах ушкăнĕнчен те пулма пултарать.

*Канцелярие сарлака çамкаллă, кăшт **курпунтарах**, **аманнă** çын пырса кĕчĕ.*

Ку предложенире пĕр йышши определенисем: ***сарлака çамкаллă*** (пал. я.), ***курпунтарах*** (пал. я., танлашт. ф.), ***аманнă*** (прич.).

Предложенири пĕр йышши членсен хăйсен ăнлантару сăмахĕсем пулма пултараççĕ.

*Андрий алăка тимĕр çекĕлпе **çаклатрĕ**, алăк хăлăпĕ айне ломне **чиксе хучĕ**, вара каллех унка **ярса тытрĕ**.* (*Н. Остр.*)

Çак предложени—пĕр йышши членлă предложени. Кунта пĕр подлежащи *Андрий* тата виçĕ сказуемăй: *çаклатрĕ*, *чиксе хучĕ, ярса тытрĕ*. Кунта кашни сказуемăйăн хăйĕн дополненийĕ пур, иккемĕшпе виççĕмĕш сказуемăйăн тата обстоятельствăсем пур (*хăлăпĕ айне, каллех*).

Асăрхаттару. Хăш-пĕр сăмаха, ытларах палăртма, икĕ хут калатпăр, вĕсем пĕр йышши член шутланмаççĕ.

*Касатăп, касатăп—юнĕ тухмасть.*

*Каятăп, каятăп—йĕр юлмасть.* (*Туп. юмах.*)

**54-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Пĕр йышши членсене аялтан туртăр, вĕсен ыйтăвĕсене тата предложенин мĕнле членĕ пулнине сăмахсем тăрне çырса парăр.

1. Ачасем шкулта вулаççĕ, çыраççĕ, шутлаççĕ. 2. Хирте тулă, ыраш, сĕлĕ, пăрçа, йĕтĕн ÿсет. 3. Ивана, Петĕре, Захара редколлегие суйларĕç. 4. Уççăн, ăшшăн, çемçен янăрать иккĕмĕш çава. 5. Лачакаллă, кÿлĕллĕ, шывлă, вăрманлă çурçĕрти Финлянди çĕршывĕнчен килнĕ вăл завода ĕçлеме. (*Уйăп.*) 6. Вăрман, çаран, уй-хир тавралăха илемлетсе тăрать. 7. Пушкин сăвви лапка çанталăкри тинĕс хумĕ пек ачашшăн, кăмăллăн, çемçен шăнкăртатса юхать. (*Белин.*) 8. Вăрман тата хытăрах шавлать, йĕрет, ахăрать. (*К. Ив.*) 9. Тавтапуçах Аслă Сталина савăк, тулăх пурнăç панашăн. (*Фольк.*)

**55-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Ăнлантару сăмахлă пĕр йышши членсене аялтан туртăр.

1. Пуçăма иртнĕ кунсем, иртнĕ çулсем аса килеççĕ. Акă тулли юхамлă Дунайпа Тисса улахĕсенчи сарă тулă уйĕсем, çÿллĕ кукуруза анисем, симĕс клевер çаранĕсем. Аса килеççĕ черепица тăраллă ялсем, çăра сад пахчисем, вĕсенчи шере-

пеллӗ ҫимӗҫсемпе ешерекен виноград, абрикос, слива чӑтлӑхӗсем. (*Элк.*) 2. Тарӑн шухӑша путса, йывӑррӑн кашлаҫҫӗ тайгари вата кедрсем, чӑрӑшсем, пихтӑсем. (*Чалд.*) 3. Ку йывӑҫа хаяр ҫил те тулать, пӑрла ҫумӑр та ҫапать, вӗри хӗвел те ҫунтарать. (*Элк.*)

II. 1. Ҫӳллӗ йывӑҫсем, ҫатӑлти ӑвӑссем, шурӑ хурӑнсем ҫурҫӗртен вӗрекен ҫилпе хумханса лараҫҫӗ. 2. Ҫумӑр ҫывахарса ҫитнипе сарӑ кӗлтесене, выртакан улӑмсене, шӑкӑр-шакӑр япаласене пуха пуҫларӗҫ. 3. Пристане ҫитнӗ май пароход ҫав тери хӑюллӑн, темӗнле мӑн кӑмӑллӑн кӑшкӑртса ячӗ. 4. Шурӑ юр аслӑ вӑрмансене, вӗҫӗ-хӗррисӗр уйсене, ешӗл ҫарансене, йӑмраллӑ ялсене шурӑ ҫитӗпе карса илнӗ. 5. Кайӑк юрри, ҫын сасси ян-ян янрать таврана. (*К. Ив.*)

III. 1. Вӑхӑчӗпе инҫетрен куккуксем куклани, вак кайӑккӗшӗксем чӗвӗлтетни илтӗнсе, чуллӑ сӑртсем ҫинче манми килӗйышӑн савнӑ тӑванӗсемшӗн, ҫуралнӑ ҫӗршывӗшӗн тӗмсӗлсе ларакан салтак чунне йӑпатаҫҫӗ. (*Элк.*) 2. Вӗҫӗ-хӗррисӗр тинӗс татах та ҫуттӑн ялкӑшнӑ, хаяр та шухӑ хумсемпе ҫыран хӗррине кышланӑ. (*М. Горьк.*) 3. Халӑх варринче вӑрӑм кӗпе тӑхӑннӑ, шурӑ ҫӳҫлӗ, аллине туя тытнӑ ҫын калаҫать. (*Ив. Мучи.*)

4. Тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет,
Ешӗл тумтир тӑхӑнать.
Ҫеҫенхир те ешерет,
Йӗлемӗпе мухтанать. (*К. Ив.*)

5. Ав ачисем ҫӳл енче
Шывра ишсе ҫӳреҫҫӗ,
Пулӑ тытан ваттине
Хирӗҫтерме пӗлеҫҫӗ.
(*К. Ив.*)

6. Хӑй кӗтӗвӗ патӗнче
Ача шӑхличӗ калать,
Хырӑмӗ пит выҫнипе
Силпи ялнелле пӑхать. (*К. Ив.*)

**56-мӗш упражнени.**

Ҫак текста кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартса, ҫырса илӗр.

I. 1. Мускав Совет Союзӗн тӗп хули. Мускав революцин чӗри. Мускав кунран кун ӳсет ҫӗнелет. Пур ҫӗрте те ҫӗнӗ ҫуртсем ҫӗнӗ фабрикӑсем ҫӗнӗ заводсем. Трамвайсем автомобильсем автобуссем троллейбуссем урамсем тӑрӑх чупаҫҫӗ. Тротуарсем тӑрӑх вӗҫӗ-хӗррисӗр ҫуран ҫынсем ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем фабрикӑсемпе заводсене учрежденисене магазинсене каяҫҫӗ. Хула ҫинче аэроплансем вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Хула айӗнче метрополитен темиҫе пин ҫынна пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫарса тӑрать.

II. 1. Кулаксем вӗсем чи хаяр чи тискер чи усал эксплуататорсем. (*Лен.*) 2. Кашни каҫ радио тӑрӑх доклад юрӑ музыка шӑранать. (*Ис. М.*) 3. Тӳлеккӗн канлӗн юхать ку тӗлте Сӑрӑ. Хӗсӗк чуллӑ тӑвӑр ҫурӑкран палкаса сирпӗнет

унӑн пуҫламӑш ҫӑлкуҫӗ. 4. Ялти улӑм витнӗ пӳртсен кӗлетсен лаҫсен хуралтӑсен тӑррисене сӗве-сӗве пӑрахрӗ урнӑ ҫил. 5. Ҫӗлӗксем картузсем коммунаркӑсем васкавлӑн вӗлкӗшсе кайрӗҫ. (*Фурм.*) 6. Снаряд юншӑн антӑхан тискер кайӑк пек усаллӑн ӳлет мӗкӗрет шӑхӑрать. 7. Сасартӑк урамра малтан пулемётран унтан пӑшалтан шатӑртаттарни урра кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. (*Элк.*)

## 25 §. Пӗр йышши членсене ҫыхӑнтарса тӑракан союзсем.

Пӗр йышши членсем предложенире союзсӑр та тӑраҫҫӗ, союзсемпе ҫыхӑнса тӑма та пултараҫҫӗ.

*1. Ӳсет, тӗрекленет пирӗн социализмлӑ ҫӗршыв.*

*2. Халӗ ӗнтӗ пирӗн ҫӗршывра ӗлӗкхи пек пусмӑрлӑх та, эксплуатаци те, ӗҫсӗрлӗх те ҫук.*

Пӗр йышши членсем хушшинче тӑракан союзсем тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ пулаҫҫӗ.

I. Сыпӑнтаракан союзсем:

а) Тата союз шутласа тухнине, пӗтерсе каланине кӑтартать. *Ӳкерчӗксем тума хура, хӗрлӗ, симӗс* ***тата*** *кӑвак карандашсем илтӗм.*

Пӗр йышши членсене (япалана, ӗҫе, япала паллине т. ыт. те) пурне те каласа пӗтерни курӑнмасть пулсан, ***тата*** союза лартмаҫҫӗ: *Карандаш хура, симӗс, хӗрлӗ, сарӑ пулать.*

ӑ) Та-те союз пӗр ӗҫ тепӗр ӗҫ хыҫҫӑн пулнине кӑтартать. *Эпӗ библиотекӑра кӗнеке илтӗм* ***те*** *ҫав каҫах вуласа тухрӑм.*

Та-те союз, пур пӗр йышши член хыҫҫӑн та пулать пулсан, вайлатса каланине кӑтартать: *Завода вутӑ* ***та****, кӑмрӑк* ***та****, тимӗр* ***те*** *кирлӗ.*

II. Уйӑракан союзсем:

а) Е союз уйӑрса каланине, темиҫерен пӗрин ҫинче чарӑнса тӑмалливе кӑтартать: *Кӑҫал каникулта экскурсие* ***е*** *Ленинграда,* ***е*** *Донбаса каятпӑр.*

ӑ) Те союз, кашни пӗр йышши член умӗн тӑрать пулсан, пӗр йышши япаласенчен хӑшӗ ҫинче чарӑнса тӑмалли уҫӑ маррине, иккӗлевӳллине кӑтартать. ***Те*** *паян,* ***те*** *ыран пуху пуҫтарас.*

б) Пӗрре-тепре союз тӗрлӗ майлине кӑтартать. *Эпир окопра выртнӑ вӑхӑтра тӗрлӗ оруди сасси* ***пӗрре*** *вӑрӑммӑн ҫӗмӗрӗлсе тӑрать,* ***тепре*** *лӑпланса каять.* (*Элк.*) *2. Шыври пулӑсем* ***пӗрре*** *ҫӳлелле хӑпараҫҫӗ,* ***тепре*** *шалалла тараҫҫӗ.*

в) Пӗр-пӗр союз икӗ ӗҫ пӗр пек ылмашса пырса пулнине кӑтартать. *Сӳс хӳреллӗ хурҫӑ йытӑ* ***пӗр*** *кӗрет* ***те пӗр*** *ту-*

*хать.* (*К. Ив.*) *2. Тухать Якур пуҫа усса, пӗр хӗрелсе, пӗр шуралса.* (*Шав.*)

III. Хирӗҫлекен союзсем:

г) Анчах, ҫапах союзсем хирӗҫленине, тепӗр майлӑ пулнине кӑтартаҫҫӗ: *1. Уйӑх ҫутатать,* ***анчах*** *ӑшӑтмасть. 2. Васкаса утрӑмӑр,* ***ҫапах*** *поезда вӑхӑтра ҫитеймерӗмӗр.*

**57-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Пӗр йышши членсене (вӗсене ӑнлантаракан мӗнпур сӑмахсемпе пӗрле, аялтан пӗрре туртӑр, пӗр йышши членсене ҫыхӑнтаракан союзсене иккӗ туртӑр.

I. 1. Чапаев е пулемётсем патне, е снарядсем патне, е полк командирӗ патне ҫынсем ярать. (*Фурм.*) 2. Хумсем ҫырана пӗрре килсе ҫапаҫҫӗ, тепре каялла тинӗсе чакса каяҫҫӗ. 3. Пӗлӗт пӗрре кӑвакарса, тепре хуралса килет. 4. Пӗр аллӑ ҫула ҫитнӗ ҫынна Пугачёв ҫине-ҫинех е граф, е Тимофеич, е мучи тесе чӗнет. (*Пушк.*) 5. Праски инкӗшне сассинчен те, уттинчен те палларӗ. (*М. Труб.*) 6. Унтри ашшӗн хытанка сӑн-пичӗ тарӑхнипе пӗрре хӗрелсе, тепре кӑвакарса каять. (*Элк.*) 7. Вӑрӑм чӑпӑрккипе вӗтлӗхри утсене айлӑмалла хӳтерсе антарать те каллех паҫӑр ларнӑ вырӑнах сӑхманне сарса пӑрахать. (*Х. Ҫ.*)

II. 1. Нарспи шывне ӑсрӗ те
Килне утрӗ хуйхӑрса.
Килне ҫитрӗ, йӗрсе ячӗ,
Сетнерӗшӗн хурланса.
(*К. Ив.*)

2. Акӑ хӗвел ҫутийӗ
Шуса-шуса пычӗ те
Сиксе ларчӗ старикӗн
Кӑвак ҫӳҫлӗ пуҫ ҫине.
(*К. Ив.*)

3. Мӑкӑртатса, мӑшлатса,
Ҫапатине сапласа
Ларнӑ ҫӗрте сисмен те,
Ҫын килнине пӗлмен те.
(*К. Ив.*)

4. Карчӑк вӗҫсе тухрӗ те
Ҫӳҫрен яврӗ Нарспине.
Старик чупса тухрӗ те
Чышкӑ пачӗ Сетнерне.
(*К. Ив.*)

## 26. §. Пӗр йышши членлӑ предложенисенче запятой лартасси.

а) Икӗ е темиҫе пӗр йышши член союзсӑр тӑрсан, пӗр йышши членсене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑраҫҫӗ.

1. *Урамра* ***трамвайсем, автомобильсем, грузовиксем*** *чупаҫҫӗ. 2.* ***Ӳсет, тӗрекленет*** *пирӗн социализмлӑ ҫӗршыв. 3.* ***Кайӑк юрри, ҫын сасси*** *ян ян ярать таврана.* (*К. Ив.*)

Пӗр йышши членсенчен пӗрне запятойпа уйӑрнӑ пулсан та, анлӑ пӗр йышши членсене точкӑпа запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

Сӑмахран:

*Сивӗ, хаяр хӗл иртет,*
*Каять йӗрсе, хурланса;*
*Сивӗ куҫҫульпе йӗрет,*
*Иртнӗ куншӑн хуйхӑрса.* (*К. Ив.*)

а) Кашни пӗр йышши член умӗн пӗр союзах тӑрать пулсан, ун пек членсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

1. *Петӗр хирелле васкасах каять: пӗрре чупать, тепре утать.* 2. *Комбайн тырра выратъ те, ҫапать те.* 3. *„Е пурнӑҫ, е вилӗм“, — терӗ Максим.* (*Кинокарт.*)

б) **Анчах, ҫапах** союзсем умӗн запятой лартаҫҫӗ.

1. *Аттем ватӑ, ҫапах ӗҫре хастар.* 2. *Ашшӗ темӗнле шикленнӗ пек пулса каять, анчах сасартӑках ним калама та аптӑрать.* (*Х. Ҫ.*)

**Та-те, те, е, тата** союзсем пӗр йышши членсем хушшинче пӗр хут пулаҫҫӗ пулсан, вӗсем умӗн запятой лартмаҫҫӗ. Икӗ хут е ытларах пулаҫҫӗ пулсан, пӗр йышши членсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

1. *Партизансем лашисем ҫинчен сике-сике анчӗҫ те лашисене курӑк ҫиме ячӗҫ.* (*Чалд.*) 2. *Хаяр ҫил юрри е тискер хумсен шавӗ тӑраҫҫӗ пурне те унта хӑратса.* (*Элк.*) 3. *Пирӗн чаплӑ ҫӗршывра пурте ҫителӗклӗ: ҫӗр кӑмрӑк та, нефть те, тимӗр те, ылттӑн та, кӗмӗл те т. ыт. те.*

г) **Тата** союз, шутласа тухнине пӗлтерсе, юлашки пӗр йышши член умӗн тӑрать пулсан е икӗ пӗр йышши член хушшинче тӑрать пулсан, тата союз умӗн запятой лартмаҫҫӗ.

*Колхоз пахчинче хӑяр, кавӑн, арбуз тата дыня ӳсеҫҫӗ.*
*Паян эпир физика, истори тата географи вӗрентӗмӗр.*

**58-мӗш упражнени.**

Текста вуласа тухӑр. Пӗр йышши членсене палӑртӑр, вӗсем хушшине запятой е точкӑпа запятой лартнине ӑнлантарӑр.

1. Самолӗт алӑкӗ хупӑнас умӗн эпӗ тантӑшсем ҫине пӑхса тепӗр хут ала сулса илетӗп те ҫемҫе кресло ҫине ларатӑп. Ҫерем тӑрах чупакан самолӗт ҫав-ҫавах ҫӗкленсе каймасть-ха. Эпӗ хулан кантӑклӑ пӗчӗк чӳрече витӗр пӑхатӑп: самолӗт ҫуртсенчен те, йамраран та, телефон юписенчен те ҫӳлте пырать. Самолӗт уйсем, тӗксӗм вӑрмансем, кӑн-кӑвак юхан шывсем урлӑ сывлӑша янратса вӗҫет. Сывлӑшра те нумай пытӑмӑр, те сахал — ӑна та асӑрхаса юлаймарӑм. (*Талв.*)

II. Ирех тӑрать, тумланать,
Нарспи ӗҫе тытӑнать:
Е пурҫӑн ҫип илет те
Юрла-юрла тӗр тӑвать;

Е ҫӗлеме ларать те,
Ҫӗвви шӑрҫа пек пулать:
Сӳс хӳреллӗ хурҫӑ йытӑ
Пер кӗрет те пӗр тухать;

Е пир тӗртме ларать те
Вылянтарать ӑсине;
Е хултӑрчӑ тытать те
Ҫипне тирет ҫӗррине. (*К. Ив.*)

III. Кайӑк чунӗ пулсассӑн,
Йӗрӗччӗ те кулӗччӗ;
Ҫуначӗсем пулсассӑн,
Вӗҫӗччӗ те кайӗччӗ. (*К. Ив.*)

IV. Вара старик тӑчӗ те,
Хӑйӗн ӗҫне пӑрахса,
Хупса хучӗ алӑкне
Турчӑкипе ҫаклатса;
Ҫӗнӗ кӗрӗк тӑхӑнса,
Ҫӗлӗк тытрӗ хул айне;
Ури айне шӑрт хурса,
Укҫа хучӗ хӑй умне;
Унтан шурӑ сухалне,
Кӑвак ҫӳҫне якатса,
Укҫа ҫине, суккӑрскер,
Пӑхрӗ куҫне чакӑртса.

(*К. Ив.*)

**59-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Пӗр йышши членсене аялтан туртӑр, кирлӗ ҫӗре запятойсем лартӑр.

1. Джамбул хӑйне ҫуратса ӳстернӗ халӑх ячӗпе унӑн чунӗпе кӑмӑлӗпе юрлать. 2. Балтика тинӗс ҫыранӗсенчен пуҫласа Лӑпкӑ океан ҫыранӗсене ҫити пысӑк хуласенче те пӗчӗккисенче те совет халӑхӗ суйлав кунӗсене савӑнӑҫлӑн кӗтсе илчӗ. 3. Ҫилли тулса ҫитнипе Максим пӗрре шӑлне шатӑрт ҫыртать тепре ҫав тери йӑвашланса каять. 4. Бригадӑсенче звеносенче хӗрӳллӗ ӗҫ пырать. 5. Вӗсен йышӗ пысӑк пулман: Унтри ашшӗ тата ашшӗн шӑллӗ — Ехрем. (*Элк.*) 6. Унтри ашшӗн хытанка сӑн-пичӗ тарӑхнипе пӗрре хӗрелсе тепре кӑвакарса каять. (*Элк.*) 7. Пирӗн заводсем ют ҫӗршывсенчи чи лайӑх заводсенчен те лайӑхрах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. (*Мол.*) 8. Халӗ вӑл лӗтчик пулса ӗҫлет тӑван ҫӗршывӑн чиккине сыхлать. 9. Сулхӑн та витӗр касакан типӗ ҫил кунта тарӑн вара та килкелесе пӑхать-мӗн. (*Остр.*) 10. Лаша хӑлхине малалла чӑнк тӑратрӗ те ҫиле хирӗҫ вӗҫнӗ пек ывтӑнчӗ. (*Ӗҫх.*) 11. Ҫуллахи ӑшӑ ҫумӑр хыҫҫӑн курӑксем те тырпулсем те симӗсленчӗҫ. 12. Арманов хӑй пӳлӗмӗнчен тухрӗ те тӳрех Михаля патне утса пычӗ. (*М. Труб.*) 13. Симӗс улӑхсем те хурҫӑ улӑп заводсем те ылттӑн ӗнчӗ шахтӑсем те пирӗн. (*Дж.*) 14. Темшӗн кӑшт хӗрелсе кайнӑ пек пулать те пупа хапхаран кӗме чарать лартать. (*Х. Ҫ.*) 15. Ҫаплa ахлатса шӑхӑрса уласа тӑракан шав ӑшӗнче тупӑсем пенипе ҫивӗчленнӗ цепьсем харсӑррӑн куҫса пынӑ. (*А. Фад.*) 16. Хӗллехи шартлама сивӗре те ҫуллахи шӑрӑхра та кӗрхи-ҫурхи йӗпе-сапара та Унтри хӑйӗн хурал сехечӗсене пӗр ӳпкевсӗр тӑрса irттерет. (*Элк.*) 17. Ҫын пӗрре хыҫалалла тепре йӗри-тавра пӑхать те каллех малаллаваскать. (*Чалд.*) 18. Яштак чиесем ҫӗмӗрт йываҫҫисем ҫатрака туратлӑ улмуҫҫисем пурте шап-шур ҫӑра тумпа витӗннӗ. (*Агак.*) 19. Пӗр савӑннипе пӗр хумханнипе Ахмет ҫак самантра нимӗн тума аптӑраса тӑчӗ. (*Тукт.*) 20. Ни хурлӑхлӑ сас ни куҫҫуль ни

юн нимскер хускатмасть шыҫмак пуҫсене. (*Элк.*) 21. Пит ӗҫчен тӑрӑшакан тирпейлӗ ҫынсем пулнӑ вӗсем ҫавӑнпа та вӗсен хуҫалӑхӗ те килӗ-ҫурчӗ те пурте йӗркеллӗ пулнӑ. (*Агак.*) 22. Каҫхине выртсан та ирхине тӑрсан та ҫав шухӑш ҫав кӑмӑл шӗкӗлченӗ Ахметӑн чӗрине. (*Тукт.*)

**60-мӗш упражнени.**

**Ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗрте чарӑну паллисем лартӑр.**

1. Ленин ҫапла каланӑ совет ҫыннисен чи кирлӗ пахалӑхӗ вӑл паттӑрлӑх хастарлӑх кӗрешӳре хӑрама пӗлменни пирӗн тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене хирӗҫ халӑхпа пӗрле ҫапӑҫма хатӗр тӑни пулать тенӗ. (*И. Ст.*) 2. Коммунизма вӗренес тата этемлӗх туса тултарнӑ пӗлӳсен суммине алла илес нур ӗҫре те пур ҫӗрте те коммунизмшӑн ленинизм тасалӑхӗшӗн пӗтӗм тӗнчипе революци тӑвассишӗн йӗркеллӗн кӗрешекенсем пулас ҫапла хальхи вӑхӑтра комсомол умӗнче тӑракан тӗп задача. (*С. Кир.*) 3. Вӗреннӗ хушӑра опытсем туса кӑтартасси лабораторилле ӗҫсем тутарасси экскурсисем туса ирттересси ял хуҫалӑх машинисемпе паллаштарасси вӗренекенсене тӗрлӗрен техника кружокӗсен ӗҫӗсене явӑҫтарасси ҫаксем пурте вӗренӳ материалне практикӑпа ҫыхӑнтарма май параҫҫӗ. 4. Тинӗс вӑйлӑраххӑн хӑвӑртраххӑн ҫӑмӑлраххӑн чул пулсан хӑватлӑраххӑн хыҫҫӑн-хыҫҫӑн хум хумла. (*Ҫеҫпӗл.*) 5. Хура хаяр кӑвак пӗлӗтсем темрен тарнӑ пек чупнӑ пек ирте-ирте каяҫҫӗ. (*Х. С*). 6. Унтрин темӗнле аслӑ тӗнче ҫинчен хуласем ҫинчен анлӑ та илемлӗ тулӑх пурнӑҫ ҫинчен калаҫас килет. (*Элк.*) 7. Ку вунӑ ҫул хушшинче вӑл пекарьсен групкомӗнче те ӗҫленӗ тата ирӗклӗ ӗҫ инспекторӗ те пулнӑ. (*Элк*).

**61-мӗш упражнени.**

**Текста ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗрте запятойсем лартӑр.**

Мурат каллех вӑрман хӗррине тӑсӑлакан канав ҫине тухрӗ те хӑй паҫӑрах катаран курнӑ ял патнелле вӗҫтерчӗ. Часах вӑл юханшыв патне ҫитсе тухрӗ шыв урлӑ шӑмпӑртаттарса каҫрӗ те яла кӗчӗ. Мурат пӗр харӑсах икӗ ӗҫ туса ычӗ: хӑйсен отрячӗ валли мӗн кирлине пӗлме тӑрӑшрӗ тата Акулина Петровнӑн килне шырарӗ.

„Ҫакӑ пулӗ-ха вӗсен шкулӗ? — шухӑшларӗ те вӑл ҫав самантрах ҫуртӑн крыльци умӗнче хӑяккӑн выртакан симӗс тимӗр листине курчӗ. Кунта ҫитиччен тӗрӗсех килнине чухласа илсе, Мурат тӳрех шкулпа юнашар килкартине кӗрсе кайрӗ. Шаккарӗ. Алӑка ерипен уҫрӗҫ. Мурат умне хура тум тӑхӑннӑ ҫав тери кӑмӑллӑ карчӑк тухса тӑчӗ. „Мана сирӗн пата пӗр ҫын ячӗ... Эпӗ канав хӗррипе утаттӑм та йывӑҫсем хушшинче ҫын йынӑшнине илтсе ун патне пытӑм"...

Мурат калаҫнӑҫемӗн карчӑкӑн сӑнӗ улшӑнса пычӗ. Унӑн алли-урисем те пӗркеленчӗк тутисем те чӗтреме тытӑнчӗҫ. (*Агак.*)

## 27 §. Пӗр йышши тата пӗр йышши мар определенисем.

Пӗр япала ячӗ мӗнлине кӑтартакан темиҫе определени хаш чухне пӗр йышши член пулмасть, ҫавӑнпа ун пек чух определенисене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑрмаҫҫӗ.

Япала паллине тӗрлӗ майпа тата тӗрлӗ енчен кӑтартакан определенисене пӗр йышши мар определенисем теҫҫӗ.

1. ***Хӗллехи сивӗ кунсем иртрӗҫ. Ҫуркуннехи ӑшӑ кунсем ҫитрӗҫ.***

Ҫак тӗслӗхсенче кашнинчех икшер определени, анчах кашни определени кунсем мӗнлине тӗрлӗ енчен кӑтартать. *Хӗллехи, ҫуркуннехи* определенисем кунсем хӑҫанхине кӑтартаҫҫӗ, *хӑҫанхи?* ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ; *сивӗ, ӑшӑ* определенисем кунсем мӗнлине кӑтартаҫҫӗ, *мӗнле?* ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ. *Хӗллехи* тата *сивӗ* определенисем — пӗр йышши мар определенисем. Ҫавӑн пекех *ҫуркуннехи* тата *ӑшӑ* определенисем те пӗр йышши мар определенисем пулаҫҫӗ.

***Вӑрманти чӑпар куккуксем авӑтма чарӑнчӗҫ.***
***Шыври шултӑра пулӑсем вӑлчӑ сапса пӗтернӗ.***

Ку тӗслӗхсенче те икшер определени, анчах кашни предложенири определенисем япалан паллине тӗрлӗ майпа, тӗрлӗ енчен кӑтартаҫҫӗ, тӗрлӗ ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ. *Вӑрманти, шыври* определенисем япалан вырӑнне кӑтартаҫҫӗ, *ӑҫти?* ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ. *Чӑпар, шултра* определенисем япала мӗнлине кӑтартаҫҫӗ, *мӗнле?* ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ. *Вӑрманти* тата *чӑпар*, *шыври* тата *шултра* — пӗр йышши мар определенисем. Вӗсене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑрма юрамасть.

3. ***Шултӑра сарӑ мӑйӑр хутаҫа тулчӗ.***
***Шӑрпене пысӑк кӗмӗл кашӑкпа ӑсса илтӗм.***

Ку тӗслӗхсенче те икшер определени, анчах пӗр определение тепӗринчен запятойпа уйӑрман, мӗншӗн тесен вӗсем кашниех япалан тӗрлӗ паллисене кӑтартаҫҫӗ. *Шултра, пысӑк* определенисем япалан пысӑкӑшне кӑтартаҫҫӗ, *сарӑ* япалан тӗсне кӑтартать, *кӗмӗл* япалана мӗнтен тунине кӑтартать.

*Шултӑра* тата *сарӑ, пысӑк* тата *кӗмӗл* пӗр ыйтурах тӑрса пӗр сӑмахпах ҫыхӑнаҫҫӗ, анчах пӗр йышши мар определенисем пулаҫҫӗ.

Пӗр йышши мар определенисем хушшине сыпӑнтаракан е уйӑракан союз кӗртсе лартма ҫук: *пысӑк тата кӗмӗл кашӑк шултра е сарӑ мӑйӑр* теме пултараймастпӑр.

**62-мӗш упражнени.**

Предложенисене ҫырса илӗр. Определенисене пурне те аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр. Чӑрӑну паллисем лартнине ӑнлантарӑр.

1. Пирӗн ҫӗршыв тӑрӑх сарлака, анлӑ Атӑл юхса выртать. 2 Чӗрӗ, нӳрлӗ ҫӗр ҫинче калчасем часах шӑтса тухрӗҫ.

3. Пухăва халăх нумай пухăнна: шурă, сарă, кăвак, чăпар кĕпесем; хĕрлĕ, симĕс, сарă, хăмăр лентăсем; хура, сарă çӳçсем курăнаççĕ. 4. Хастарлă, вăйла, çирĕп Совет Çарĕ тăшмансемпе паттăррăн çапăçать. 5. Пĕр çамрăк кăтра нуçлă ача пире фермăна çул кăтартса ячĕ.

**63-мĕш упражнени.**

Сăвăсен сыпăкĕсене вуласа тухăр. Пĕр йышши мар определенисене çырса илĕр.

1. Джамбул вăл куна манас çук виличчен, —
Курса эп çӳрерĕм кăмăл туличчен,
Курса эп çӳрерĕм çĕршывăм тавра
Хăватлă та вутлă маттур утпала. (*Дж.*)

2. Илтетĕп: шавлаççĕ ем-ешĕл садсем,
Курап: йăлкăшаççĕ çап-çут кӳлĕсем,
Кермен пек илемлĕ те чаплă çуртсем,
Çĕр айĕн чупаççĕ метро-вагонсем. (*Дж.*)

3. Хĕллехи кичем çул тăрăх
Чăрсăр тройка кустарать,
Пĕр пек саслă шăнкăравĕ
Сассипе йăлăхтарать. (*Пушк.*)

4. Паттăр хурçă кайăксем
Вĕçеççĕ тӳпере;
Маттур, хастар çамрăксем
Тăраççĕ чикĕре.

5. Хирти сарă тулăсем
Пулса çитнĕ, — вырмалла.
Колхозри ĕçчен çынсем
Хатĕрленеç тул вырма.

**64-мĕш упражнени.**

Çакăнти пĕр йышши мар определенисене панă япала ячĕсемпе пĕрле кĕртсе предложенисем тăвăр.

Çуллахи ăшă çумăр. Ирхи тăрă сывлăм. Пĕлĕтри çутă çăлтăрсем. Улăхри сарă чечексем. Хирти кăвак утмăлтуратсем. Пысăк хура пĕлĕтсем. Çĕнĕ тимĕр витре.

Çĕршыври хастарлă патриотсем. Колхозри çамрăк ĕçчен ударниксем. Тинĕсри пысăк карапсем. Сывлăшри хурçă кайăксем. Хулари пысăк чул çуртсем. Октябрьти Социализмлă Аслă революци.

**65-мĕш упражнени.**

Текстран малтан пĕр йышши определенисене вĕсем ăнлантаракан сăмахсемпе пĕрле, унтан пĕр йышши мар определенисене вĕсем ăнлантаракан сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр. Кирлĕ çĕрте запятой лартăр.

1. Пĕр тĕттĕм начар пӳртре ача макăрни илтĕнет. (*В. Ан.*) 2. Сивĕ хаяр хĕл иртет. (*К. Ив*). 3. Эй, комсомоли! Эс мана

хастарлă çĕнĕ вăй патăн. (*Уйăп.*) 4. Тулта ăшă тӳлек çутă каç. (*Агак.*) 5. Аслă мухтавлă хăватлă чаплă Владимир Ильич Ульянов — Ленин хĕвел çути пек çутă ят пултăр, çутăлса тăтăр, ĕмĕр сыв пултăр! (*Шел.*) 6. Эс шутланă: çук тек урăх Мускав-шыв хĕрринчи пек сăн-сăпатлă хӳхĕм тулăх çутçанталăк тĕнчипе. (*Хус.*)

**66-мĕш упражнени.**

Текста пĕлтерĕшĕ тăрăх юрăхлă союзсене кĕртсе лартса çырса илĕр. Кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Унтан старик чарăнса шухăшласа тăчĕ... кĕрĕкпеле çĕлĕкне сакки çине хучĕ... çапла татах каларĕ, карчăк енне çаврăнса. (*К. Ив.*) 2. ...те тĕрĕс калать Микуль... тĕрĕс мар. (*Талв.*) 3. Тăванăм, ... юлăпăр сывă ... пулăпăр çулăм айне! (*Алка.*) 4. Типографийĕ... хаçачĕ... сăвăçи... хăйĕн, колхозăн. (*Шел.*) 5. ...герой пулса эп килĕп каялла киле... герой пулса эп вилĕп. (*Хус.*) 6. Шăллăм шкула çӳремест-ха... манăн букваре вулать. 7. Левентей... тĕлĕннипе... хăранипе офицер çине чĕнмесĕр пăхса илчĕ. (*Чалд.*) 8. Çил урнă пек тулашать; ... вăйлă çумăр... те пăр çумалла. (*Чалд.*)

## 28 §. Пĕр йышши членлă предложенисенчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ.

Пĕр йышши членсем умĕн е хыççăн пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пулма пултараççĕ.

***Пур çĕрте те:*** *хулара та, ялта та, заводра та, колхозра та хĕрӳллĕ ĕç вĕрет.*

*Хулара та, ялта та, заводра та, колхозра та —* ***пур çĕрте те*** *хĕрӳллĕ ĕç вĕрет.*

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пĕр йышши членсен ыйтăвĕнчех тăраççĕ. Вĕсен хушшинчи уйрăмлăх вĕсен пĕлтерĕшĕнче. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем тĕлĕшĕнчен сарлака ăнланăвпа палăрать, пĕр йышши членсем пĕр ăнланăвпа, ансăр ăнланăвпа палăраççĕ: *Пирĕн вăрмансенче çакăн тĕслĕ* ***йывăççем*** *ӳсеççĕ: юман, хыр, чăрăш, çăка, вĕрене.* Çак предложенире ***йывăççем*** — пĕтĕмлетӳ сăмахĕ; ***юман, хыр, чăрăш, çăка, вĕрене*** пĕр йышши членсем, вĕсем пĕр ăнланăва палăртаççĕ.

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ сăмахсен çаврăнăшĕнчен те, пĕр сăмахран та пулать: 1. *Çакăн тĕслĕ йывăççем: юман, хыр, чăрăш.* 2. *Хуласем: Мускав, Ленинград, Сталинград, Киев.*

Час-часах пĕтĕмлетӳ сăмахĕ местоименисенчен е наречисенчен пулать. Ытларах тĕл пулакан местоменисем: ***çаксем, пурте, вĕсем пурте, пурте вĕсем.*** Ытларах тĕл пулакан наречисем: ***таçта та, ниçта та, нихçан та.***

1. *Горький, Шупашкар, Ульяновск, Куйбышев, Саратов —* ***пурте вĕсем*** *Атăл хĕрринче лараççĕ.*

2. *Колхозниксем хире* ***тĕрлĕ тырпул:*** ***ыраш, сĕлĕ,*** *тулă, пăрçа акаççĕ.*

3. *Ыраш, сĕлĕ, тулă, пăрçа —* ***çаксем пурте пирĕн*** *колхоз хирĕнче пур.*

4. *Кандидатсене тăратас право общество организацийĕсемпе* ***ĕç çыннисен обществисене:*** *коммунистла парти организацийĕсене, профессиллĕ союзсене, кооперативсене, çамрăксен организацийĕсене, культурăллă обществăсене тивĕçлĕ.* (Конст.)

5. *Совет Союзĕн Геройĕ Орлов* ***таçта та вĕçнĕ:*** *пăрланнă çурçĕре, Кавказа, Балтикăран Инçетри Тухăçа, Эстоние, Латвие, Литвана.*

## 29 §. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пулсан, чарăну паллисем лартасси.

1. Предложенире пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем умĕн пулсан, ун хыççăн двоеточи лартаççĕ.

1. *Читальнăна тĕрлĕрен хаçатсем килеççĕ: „Правда", „Известия", „Красная Чувашия", „Чăваш Коммуни".* 2. *Карандашсем тĕрлĕ тĕслĕ пулаççĕ: хĕрлĕ те, хура та, симĕс те, кăвак та.*

2. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем хыççăн пулсан, пĕр йышши членсен юлашки сăмахĕ хыççăн тире лартаççĕ.

*Ĕçе тĕрĕс организацилени, ĕç дисциплинине çирĕплетни тата техникăна вĕренессине лайăх организацилени —* ***çаксем пурте промфинплана тултарма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме*** *кирлĕ условисем пулса тăраççĕ.*

3. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ çук пулсан, пĕр йышши членсем умĕн двоеточи, вĕсем хыççăн тире лартмаççĕ.

1. *Колхозниксем хире ыраш, сĕлĕ, тулă, пăрçа акаççĕ.*

2. *Хулара та, ялта та социализмлă пурнăç палăрать.*

Хăш-пĕр чухне пĕтĕмлетӳ сăмахĕ çук пулсан та, малалла хисеплесе каламаллине кăтартма пысăкрах чарăну тăваççĕ пулсан, пĕр йышши членсем умĕн двоеточи лартаççĕ.

1. *Президиумра: Иванова, Виноградов тата Антонов.*

2. *Собрани йышăнчĕ:*

а) *драмкружок ĕçĕсене ырлас;*

ă) *драмкружокра аван ĕçленисене премилес;*

б) *драмкружока çывăхри колхозсенче спектакльсем лартма хушас.*

4. Предложени пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе пуçлансан, малалла пĕр йышши членсем, вĕсем хыççăн предложенин ытти членĕсем тăраççĕ. Ун пек чухне пĕр йышши членсем умĕн икĕ точка, хыççăн тире лартаççĕ.

***Çакăн тĕслĕ йывăççем:*** *юман, хыр, чăрăш, вĕрене, хурăн —* ***пирĕн вăрманта ӳсеççĕ.***

**67-мӗш упражнени.**

Панӑ сӑмахсем пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсем пулччӑр.

*Тӗслӗх*: *Тавар*: *спичка, сахӑр, супӑнь.*

1. Тавар. 2. Тырпул. 3. Журналсем. 4. Тумтир. 5. Выльӑх-чӗрлӗх. 6. Йывӑҫсем. 7. Вӗҫен кайӑксем. 8. Писательсем.

**68-мӗш упражнени.**

Панӑ сӑмахсем пӗр йышши членсем пулччӑр. Вӗсем умӗн пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ тупса ҫырӑр, унтан двоеточи лартӑр, малалла панӑ сӑмахсене ҫырӑр.

*Тӗслӗх*: *Ҫумкурӑксем*: *утмӑлтурат, пиҫен, йытпырши.*

1. Утмӑлтурат, пиҫен, йытпырши. 2. Кӑшман, ҫарӑк, кишӗр. 3. Днепр, Дон, Атӑл, Урал. 4. Вите, лаҫ, сарай, амбар. 5. Шӑна, ӳпре, вӑрӑ, вӑрӑмтуна. 6. Вырӑс, украинец, киргиз, грузин, тутар, узбек. 7. „Чӑваш Коммуни", „Правда", „Известия".

**69-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Пӗр йышши членсене пӗр йӗрпе, пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр. Двоеточи, тире лартнисене ӑнлантарӑр.

1. Иван, Петӗр, Нина, Валя, Антонина — пурте шкула ҫӳреҫҫӗ. 2. Паян эпӗ ҫак ӗҫсене турӑм: задача шутларӑм, ҫыртӑм, вуларӑм. 3. Карандаш, ручка, тетрадь, хут, кӗнеке — пурте вӗренекенсене кирлӗ япаласем. 5. Редколлеги ҫак юлташсене суйларӗҫ: Петрова, Васильева, Захаровӑна. 5. Итрен, вата Текей, Илюш — виҫҫӗн тан анаҫҫӗ утса ҫыран хӗррине. (*Элк.*) Пӳртре тӗрлӗ япаласем пулнӑ: саксем, сӗтел, кантра ҫинче ҫаканса тӑракан рукомойник, пӑта ҫинче алшӑлли, кӗтесри турчка, кӑмака аничи чӳлмексем. (*Пуш.*) 7. Пӳртсем, лупассем, ҫатансем, йывӑҫсем — пурте шап-шурӑ пӑс айӗнче. (*Шол.*) 8. Сӗтел хушшинче вӗсем тӑваттӑн лараҫҫӗ: Фрол хӑй, унӑн арӑмӗ, ывӑлӗ Тимахви тата хӗрӗ, ҫитӗнсе ҫитнӗскер.

**70-мӗш упражнени.**

Текста вулӑр, ӑҫта мӗнле чарӑну палли лартмаллине ӑнлантарӑр.

## ПЛАН ТӐРӐХ ӖҪЛЕТПӖР.

Эпир хамӑр хуҫалӑха план тӑрӑх тӑватпӑр. Пирӗн фабрикасем те заводсем те ял хуҫалӑхӗ те план тӑрӑх ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакӑ план пятилетка. Капитализмлӑ патшалӑхсенче кризис пырать, продукци туса кӑларасси чаксах тӑрать. Пирӗн хуҫалӑх ҫулран ҫул ӳсет. Пирӗн фабрикӑсемпе заводсем тӗрлӗ машинӑсем тимӗр хурҫӑ тӗрлӗ металл кӑларас плана тултарсах пыраҫҫӗ. Фабрикӑсемпе заводсем валли пирӗн ҫӗр кӑмрак та нефть те ҫителӗклӗ. Социализм строительствинче металлурги тӗп никӗс пулса тӑрать. Металсӑр машинӑсем те электростанцисем те тракторсемпе комбайнсем те пулмаҫҫӗ. Металсӑр

ҫӗршыва индустрилесси пулмасть. Индустри колхозсене совхозсене машинӑсем парать. Колхозсем совхозсем хуласене тырпул сӗт-ҫу аш-какай параҫҫӗ.

**71-мӗш упражнени.**

Малалли предложенисене ҫырса илнӗ чухне пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсене сиктерсе хӑварӑр та предложенири сӑмахсене кирлӗ вырӑна лартӑр, кирлӗ пек ҫыхӑнтарӑр. Двоеточи е тире лартма кирлӗ е кирлӗ маррине шута илӗр.

1. Хулара, ялта, уй-хирте, вӑрмансенче, улӑхра — пур ҫӗрте те социализмлӑ пурнӑҫ паларать. 2. Атӑл, Дон, Днепр — пурте кӑнтӑралла юхаҫҫӗ. 3. Мулкача тытма пурте юратаҫҫӗ: ҫынсем те, йытӑсем те, кашкӑрсем те, тилӗсем те. 4. Музыка инструменчӗсем: рояль, скрипка, гитара, балалайка — пурте пирӗн шкулта пур. 5. Крымра та, Кавказра та, Уралра та, Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнче те — пур ҫӗрте те вӑл пулнӑ. 6. Хайхи виҫӗ ҫын: Петӗр, Михаля, Элеҫук — ман хваттере пычӗҫ. 7. Эпӗ виҫӗ хаҫат: „Правда", „Чӑваш Коммуни", „Красная Чувашия" — ҫырӑнса илетӗп.

**72-мӗш упражнени.**

Ҫак текста чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.

I. 1. Андрийӗн хӗлӗх пек карӑннӑ сасси вӑл чӳхенни хӗрӳленнипе пӑлханакан лучӑрканнӑ сӑн-пичӗ ҫаксем ун ҫине пурне те йӑлтах урӑхла пӑхтарчӗҫ. (*Н. Остр.*) 2. Уйӑх ҫутатать анчах ӑшӑтмасть. 3. Эпир паян е хулана е вӑрмана каятпӑр. 4. Артист организатор политикӑлла работник пропагандист тата агитатор комиссар ҫаксем пурте пӗр ӑнланава боец сӑмаха пӗрлешнӗ. (*Фурм.*) 5. Лутра ҫуртсем хӑмӑр хӳмесем ванса пӗтнӗ ҫулсем пурте хула хӗрри иккенне пӗлтереҫҫӗ. (*Фурм.*) 6. Ҫырансем сӑрт тайлӑкӗсем пӗтӗмпех симӗс йывӑҫ-курӑксем айне путнӑ. (*Гонч.*) 7. Йывӑҫсенчен тӗмсенчен ҫӳллӗ утӑ капанӗсенчен пуринчен те вӑрӑм мӗлкесем чупса кайрӗҫ. (*Тург.*) 8. Тӑваттӑмӗш кавалери полкӗнче тӗрлӗ националноҫсем пулнӑ нимӗҫсем мадьярсем киргизсем китаецсем текинецсем. (*Фурм.*) 9. Колхоз лайӑх пуян ҫутӑ культурӑллӑ пурнӑҫ патне малалла илсе пынине хресченсем питӗ лайӑх пӗлеҫҫӗ. (*Ворош.*) 10. Кун ҫав тери уяр лӑпкӑ шӑрӑх пулнӑ. (*Л. Толст.*) 11. Пульӑсем ӳленӗ йынӑшнӑ тата янӑранӑ. (*Фурм.*)

II. 1. Мӗн пурӗ виҫӗ звено ӗҫлет сухалакансем сӳрелекенсем тата акакансем. (*Тукт.*) 2. Давыдовпа Нагульнов Любишкин Щукарь тата виҫӗ казак ял Советӗнчен тухрӗҫ. (*Шол.*) 3. Суйлав ҫурчӗсене лозунгсемпе плакатсемпе чечексемпе илемлетнӗ. 4. Ҫырма патне ҫывхарнӑ чух эпӗ аякранах шавланине ҫухрашнине тата Савельич сассине илтрӗм. (*Пуш.*) 5. Истори пилӗк тӗслӗ тӗп производствӑллӑ отношенисем пӗлет первобытно-общинӑллӑ рабовладельчески феодальнӑй капитализмла социализмлӑ отношенисем. (*ВКП(б) ист.*) 6. Штабра хамӑрӑн вӑйсемпе тӑшман ҫарӗсен хисепӗ ҫинчен

калакан цифрăсене илтсе юлни картă тăрăх шывсемпе çулсене вăрмансене сăртсене пурне те пăхса тухни çаксем пурте Чапаев пусĕнче питĕ уççăн вырнаçса юлнă. (*Фурм.*)

**73-мĕш упражнени.**

Çак текста чарăну паллисем лартса çырса илĕр. Пĕр йышши членсене аялтан туртăр, тăрне мĕнле предложени членĕ пулнине çырăр.

I. 1. Кавказра Уралта Çĕпĕрте комсомолăн ывăнмасть аллийĕ. Вĕренет ĕçлет вăл хĕпĕртет. (*Уйăп.*) 2. Тарас ирех тăчĕ кĕпине хывса пилĕк таран çăвăнчĕ алшăллипе ӳчĕ хĕреличченех лутăркаса шăлчĕ унтан çенĕк алăкĕ умне тухса тăчĕ. (*Агак.*) 3. Аслă тус, телей ялавĕ, сана, аслă çулпуçне, пуç таять кашни пучахĕ кашни ешерен çеçке пуç таяççĕ ачасем те аннесем хĕрарăмсем заводсем те колхозсем те пирĕн улăх-вăрмансем. (*Ухс.*) 4. Хĕвел тухать улăхать çӳллĕ тусем тăррине хăй çуттипе ăшăтать таçти-таçти çĕрсене. (*К. Ив.*) 5. Кăнтăртан та çурçĕртен те анăçран та тухăçран пĕрре мар килсе хур пулнă пирĕн çĕр çинче тăшман. Халь те малашне те хатĕр ун валли вут-çиçĕм шĕл-кăвар. (*И. Ив.*) 6. Хăрамарăм шарт сикмерĕм ват сунарçă чунĕпе пăшала кăштах çĕклерĕм тухса тăтăм çын умне. (*Ĕçх.*) 7. Паттăр та турă та патша та пире никам та çăлас çук. 8. Тем те пулнă унта хĕçпăшал та боеприпассем те ĕçмелли-çимелли те тумтир тавраш те. (*Агак.*)

II. Фронта почта кун сиктерсе пырса тăрать. Почта килнĕ кун пуриншĕн те савăнăçлă хăшĕсем çĕнĕ хаçать вуласа çĕнĕ хыпар-хăнар пĕлеççĕ çырусем урлă çемйисен тăванĕсен тусĕсен пурнăçĕсемпе паллашаççĕ. Почтальон кашни блиндажа кĕрсе кашни красноармееца командира политработника мĕн те пулин парса хăварать.

Акă паян та почтальон хаçатсем çырусем салатса тухрĕ. Иван Кузьмич килĕнчен çыру илчĕ конвертне тирпейлĕн уçрĕ те вулама тытăнчĕ. Пĕр хут вуласа тухрĕ унтан тепĕр хут. (*Чалд.*)

**74-мĕш упражнени.**

Пĕр йышши членсемпе, пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе усă курса, пĕчĕк калав çырăр. Калавăн темисем: Пирĕн класс. Экскурси. Демонстраци. Колхоз пасарĕ.

## ПРЕДЛОЖЕНИРИ ÇЫХĂНУСĂР СĂМАХСЕМ.

### 30 §. Çыхăнусăр сăмахсем çинчен кĕскен калани.

Предложенире, тĕп членсемпе кĕçĕн членсемсĕр пуçне, нимĕнле сăмахпа та çыхăнса тăман сăмахсем, предложени членĕ пулман сăмахсем пулма пултараççĕ. Ун пек сăмахсен шутне çаксем кĕреççĕ: а) обращени, ă) вводнăй сăмах, б) междомети.

1. ***Çук***, *йывăрлăхсенчен хăраса тăма юрамасть, **юлташсем! Эх**, лайăх-çке колхозра пĕрлешсе ĕçлеме! **Паллах**, тăрăшса ĕçлесен, ĕç ăнать.*

Кунта çыхăнса тăман сăмахсем çаксем: ***çук, юлташсем, эх, паллах***. Вĕсем предложени членĕ пулмаççĕ.

## 31 §. Обращени.

Кама та пулсан чĕннĕ е унпа калаçнă чухне, çав çын асăрхатăр тесе, эпир ăна ятран калатпăр.

1. ***Эй, пиччесем***, *тăрăр-ха, урлă-пирлĕ пăхăр-ха!* (*К. Ив.*)

2. ***Сетнер***, *таврăн хăвăртрах, шыва анать пĕр арăм...* (*К. Ив.*)

**Чĕннĕ е калаçнă чухне ятран асăннă сăмаха обращени теççĕ.**

Обращени ят падежĕнчи япала ятĕнчен пулать.

***Сетнер***, *кала-ха: ăçта каяс, мĕн тăвас?* (*К. Ив.*)

Илемлĕ литературăра çутçанталăкри япала ячĕсем те обращени пулма пултараççĕ.

*Чупсам, **чуп, хурçă ут**, илсе кай малалла.* (*Уйăп М.*)

***Сĕм-сĕм вăрман***, *сĕм вăрман, мĕншĕн хытă шавлатăн?* (*К. Ив.*)

***Хура лаша***, *ан хартлат, хурамаран ма хăран?* (*М. Фĕд.*)

2-мĕш сăпат **местоименийĕсем эсĕ, эсир** нихăçан та обращени пулмаççĕ.

***Уй-хир***, *çĕнел эс, улшăн, машинăпа кĕрле!* Кунта ***уй-хир*** обращени, *эс* сăмах—подлежащи.

**Обращенин хайĕн ăнлантару сăмахĕсем пулма пултараççĕ. Ун пек обращение анлă обращени теççĕ.**

***Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем***, *пĕрлешĕр!*

Обращени предложени пуçламăшĕнче те, предложени варринче те, предложени вĕçĕнче те пулма пултарать.

*Астăвăр, **юлташсем**, çивĕчрех пулăр!* (*Н. Остр.*)

***Юлташсем***, *астăвăр, çивĕчрех пулăр!*

*Астăвăр, çивĕчрех пулăр, **юлташсем**!*

**75-мĕш упражнени.**

Çавва çырса илĕр. Обращенисене аялтан туртăр.

Çĕршыв, янăра çурхи май юррипе!
Вĕçсем, май юрри, Советсен çĕрĕне!
Çĕн пурнăç хĕвел пек çиçсе улăхать.
Çĕршыв ман тулăххăн сарăлса выртать.
Ешер, ман хĕвеллĕ çĕршывăм, ялан!
Юрла, шăпчăк, уççăн çĕршыв садĕнче!
Кам халь чĕрипе, чунĕпе те пуян,
Шăпчăк пек юрла эс çамрăклăх çинчен.

Хĕвелĕм, валеç эс телей талккишпех,
Пирĕн юрра эс юхтар тĕнчипех.
Вĕри çуттупа эс çунтар тăшмана,
Çиттĕр пур çĕре те пирĕн хĕрлĕ май. (*Дж.*)

## 32 §. Обращени кĕрекен предложенисенчи чарăну паллисем.

1. Обращение ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ. Обращени предложени варривче пулсан, ăна икĕ енчен те запятойсемпе уйăраççĕ.

1. ***Нарспи хĕрĕм,*** *пил сана!* (*К. Ив.*) 2. *Ан йĕр,* ***инкем,*** ***ан йĕрсем,*** *тутăрупа шăл куçна!* (*К. Ив.*)
3. *Мухтав сана,* ***хăватлă аслă Сталин!***

2. Предложени пуçламăшĕнче тăракан обращение сасса вăйлатса калаççе пулсан, ун хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ. Кăшкăру палли хыççăн тăракан сăмаха пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

***Юлташсем!*** *Пролетари çарĕ хулана тытса илчĕ!* (*Н. Остр.*)

3. Обращени предложени вĕçĕнче пулсан, ун хыççăн интонаци тăрăх точка, е кăшкăру палли, е ыйту палли лартаççĕ, ун умĕн запятой лартаççĕ.

1. *Салам сире,* ***паттăр коммунарсем!*** 2. *Ăçта кайăпăр,* ***Ванюк?***

**76-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Обращенисене аялтан туртăр тата кирлĕ чарăну паллисем лартăр.

I. 1. Андрей эсĕ сăмавар ларт-ха, эпĕ нÿхрепрен аш илсе килем. (*Элк.*) 2. Юлташсем пурте тăрăшса ĕçлĕр! 3. Андрей эсĕ нимĕн те манса хăвармарăн-и? 4. Эсĕ Иван Петрович манăн çырăва илтĕн-и? 5. Ма шăплантăн кинемейçĕм эсĕ кантăк умĕнче? 6. Выльăрах ачасем ирекре ÿссе çитĕнĕр! 7. Анне темĕскер çинчен калаçатăн эсĕ, эпĕ ăнланаймастăп. 8. Сивĕ мар-и сана хĕрĕм? 9. Айта вată карчăкăм каяр ĕнтĕ килелле. (*К. Ив.*) 10. Çывăр ачам çывăрах ыйху тутлă пултăрах. (*К. Ив.*) 11. Ачам эй ачам килсе кĕчĕ-и кунта Хĕрлĕ Çар е çук и? (*Фурм.*)

II. 1. Сывă-и палламан та çамрăк ăру! (*Пушк.*) 2. Эсĕ ху пулнă-и Гриша унăн отрядĕнче? (*Фурм.*)

3. Çитĕ карчăк туллашма.
Хĕр сăмахне итлер-ха! (*К. Ив.*)
4. Ăçта тартăн усал хĕр? (*К. Ив.*)
5. Хура вăрман сĕм вăрман
Мĕншĕн хытă шавлатăн? (*К. Ив.*)

6. Ыра тусăм пулăшсам! (*Крыл.*) 7. Ытарайми аннем мĕнле пурăнатăн ха. (*Хус.*) 8. Ака мĕн Савельич халĕ эсĕ мана çуррине пар та, ыттине хăвах ил. (*Пушк.*) 9. „Миките пичче урусене юсаса сырас пулатчĕ, аттусем шăтăк",—тенĕ кухарка. (*Л. Толст.*) 10. Эпĕ мучи пулемĕтчик пулнă. (*Шол.*) 11. Чуп-чуп лашам. 12. Ку кĕнеке юлташсем „Овод" ятла. (*Н. Остр.*) 13. Ухтеркке каçармастăн-и эсĕ кинўне? (*Ф. Пав.*) 14. Юх эс юрă паян уçăрах янăра! (*Уйăп.*) 55. Тавтапуç юратнă Сталин тавтапуç сана мухтав. (*И. Ив.*) 16. Савнă çĕрĕм-шывăм ман тăван çĕршывăм иртнĕ хурлăхушăн çитрĕ ырлăху. (*Алка.*) 17. Карели эп сана юратрăм эп саврăм сулхăн çурçĕре. (*Уйăп.*)

III. 1. Эс Ленинград мухтавлă Петĕр вăй-хавалĕ лартса ўстернĕ пуç хула... Ленин—Сталинăн ăс-халĕ тĕпрен çĕнетнĕ мăн хула... (*Элк.*) 2. Кашни каçах кантăк умне анне ан лар макăрса йĕке тытса çиппў çине ан тумлатсам куççульне! (*Х. Ç.*) 3. Ырă кун тăван аннемĕр тавтапуç сире пиртен! (*Уйăп.*) 4. Чăваш ачи сассуна пар! (*Çеçп.*) 5. Кур Гастелло эпир тусăм саншăн çутрăмăр çав çут çулăмсене. (*Ĕçх.*) 6. Эх тăван çĕршыв аннемĕр шан пире ĕнен пире! (*Ухсай.*) 7. Шура-шурă кăвакарчăн ма вĕçетĕн пĕр пĕччен. (*Юрă.*) 8. Тинĕс тинĕс эс хаяррăн сăвăçăн юнне-чунне вăйлă хумлă юрăпа кĕрешме чĕнен саспа вишлĕхĕсенчен тасат. (*Çеçп.*)

**77-мĕш упражнени.**

Подлежащисенчен обращени туса, çак предложенисене кирлĕ пек улăштарса çырса илĕр. Кирлĕ чăрăну паллисем лартăр.

Тĕслĕх: *Ачасем, уçăлма тухăр.*

1. Ачасем уçăлма тухрĕç. 2. Павăл кĕнеке вулать. 3. Драмкружок членĕсем çичĕ сехетре клуба пухăнаççĕ. 4. Атте кĕнеке илсе парать. 5. Петров спектакльре мĕншĕн вылямасть? 6. Иванов кунта килет. 7. Пичче мана картина ўкерсе парать. 8. Вĕренекенсем пурте тăрăшса вĕренеççĕ. 9. Паттăр пограничниксем пĕр тăшмана та граница урлă каçармаççĕ. 10. Иван Мускава каять.

## 33 §. Вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисем.

1. Предложени членĕ пулмасăр, калаканĕ шухăша мĕненчен те пулин хăйпе çыхăнтарнине кăтартакан самахсене вводнăй сăмахсем теççĕ.

Ытларах тĕл пулакан вводнăй сăмахсем çаксем: *паллах, чăнах та, ара, çук, тет, теççĕ, эппин, тен, çапла, вара, сăмахран, ман шутпа, эс калашле, пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, юлашкинчен* т. ыт. те.

Вводнӑй сӑмахсен паллӑрах пӗлтерӗшӗсем.

а) *Паллах, чӑнах та, ҫук* ҫирӗплетсе каланине пӗлтереҫҫӗ.

1. ***Паллах,*** *машинӑсемпе ӗҫлени ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерет.*

2. ***Чӑнах та,*** *агротехникӑпа усӑ курни тырпул тухӑҫне нумай ӳстерчӗ.*

3. ***Ҫук,*** *кӗрешӳре илнӗ ирӗке эпир никама та памастпӑр.*

ӑ) *Ара, хӑш-пӗр чухне, ҫук* вводнӑй сӑмахсем килӗшнине килӗшменнине пӗлтереҫҫӗ.

1. ***Ара,*** *вӑл выртнӑ та ҫывӑрса кайнӑ.* 2. ***Ҫук,*** *эсир мана тӗрӗс ӑнланман.*

б) *Тен* вводнӑй сӑмах калакан шухӑш мӗн чухлӗ шанчӑклӑ е шанчӑклӑ маррине кӑтартаҫҫӗ.

*Хӑвӑр ӗҫӗре каласа парсамӑр,* ***тен,*** *эпӗ сире пулӑшма пултарӑп.* (*Пушк.*)

Асӑрхаттарни. *Пулӗ, пулать, пулас, пулмалла* пулӑшу глаголӗсем те, *иккен* татӑк та пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен вводнӑй сӑмахсене ҫывӑх тӑраҫҫӗ. Анчах кунта уйрӑмлӑхсем те пур. Ку сӑмахсем предложенири шухӑш шанчӑклине е шанчӑклӑ маррине мар, нимрен ытларах сказуемӑй хыҫӗнче тӑрса, унӑн пӗлтерӗшӗ уҫӑмлӑ маррине кӑтартаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем, ытти вводнӑй сӑмахсем пек, предложенири вырӑнне те улӑштармаҫҫӗ, уйрӑм интонаципе те палӑрмаҫҫӗ, чарӑну палли лартас енчен те урӑхла вырӑн йышӑнаҫҫӗ.

1. *Утӑсене пуҫтарас пулӗ, ҫумӑр ҫӑвать пулмалла.*

2. *Ку кӗнеке интереслӗ иккен.*

в) *Эппин, ҫапла, ҫапла вара, ҫапла ӗнтӗ, сӑмахран, йӑлтах урӑхла* вводнӑй сӑмахсем калакан шухӑш малтан каланисемпе ҫыхӑнса тӑнине, вӗсен результачӗ пулнине, малтан каланине хирӗҫленине кӑтартаҫҫӗ.

1. *Сирӗн колхоз,* ***эппин,*** *грузовик илчӗ?* 2. ***Ҫапла ӗнтӗ,*** *ӗҫ тухӑҫлӑхӗ тӑрӑшса, ӑмӑртуллӑ, стахановла ӗҫленинчен килет.* 3. *Ун чухне парти поражени те тӳсмен, ӑна сӗмӗрсе те пӑрахман,* ***йӑлтах урӑхла,*** *вӑл хӑй граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче интервентсемпе белогвардеецсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.* (ВКП(б) *ист.*)

г) *Пӗрремӗшӗнчен, иккӗмӗшӗнчен, виҫҫӗмӗшӗнчен, юлашкинчен* вводнӑй сӑмахсем шухӑшсен йӗркине кӑтартаҫҫӗ.

1. *Эпӗ ку пухура ҫак ыйтусем ҫинче чарӑнса тӑратӑп:* ***пӗрремӗшӗнчен,*** *ҫураки хатӗрӗсем ҫинчен;* ***иккӗмӗшӗнчен,*** *вӑрлӑх пирки;* ***виҫҫӗмӗшӗнчен,*** *лашасем пирки;* ***юлашкинчен,*** *правлени ҫинчен.*

д) *Тет, теҫҫӗ, ман шутпа, сан шутпа, эс калашле, ун сӑмахӗ тӑрӑх* тата ытти вводнӑй сӑмахсем калакан шухӑш камӑннине кӑтартаҫҫӗ.

1. *Хӗҫлӗ, пӑшаллӑ,* ***тет,*** *пурте хӑйсем.* (*Элк.*) 2. ***Ман шутпа,*** *пирӗн экскурсие паянах каймалла.* 3. *Ыран,* ***ман шутпа,*** *вӑйлӑ ҫумӑр пулать.*

е) *Тархасшӑн* вводнӑй сӑмах ӳкӗтленине е йӑлӑннине пӗлтерет.

*Асатте, юмах каласа пар-ха, **тархасшӑн.***

Асӑрхаттарни. Кунта кӑтартнӑ сӑмахсем предложени членӗсемпе ҫыхӑнман чухне ҫеҫ вводнӑй сӑмахсем пулаҫҫӗ, ытти чухне вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем предложени членӗ (сказуемӑй, обстоятельство) пулма пултараҫҫӗ.

1. ***Паллах,*** *эпир поезда вӑхӑтра ҫитетпӗр.*
2. ***Ҫук,*** *пирӗн класри дисциплинӑна ҫирӗплетмелле.*
3. *...**юлашкинчен,** правлени ҫинчен.*
1. *Поезд вӑхӑтра ҫитесси **паллах.** (сказ.)*
2. *Пирӗн класӑн прогулсем **ҫук.** (сказ.)*
3. *Эпӗ правлени ҫинчен **юлашкинчен** (вӑх. обст.) каласшӑн.*

**II. Предложенире уйрӑм вводнӑй сӑмахсем ҫеҫ мар, вводнӑй сӑмах майлашӑвӗсем те, вводнӑй предложенисем те пулма пултараҫҫӗ.**

Вӗсем те предложенипе грамматика тӗлӗшӗнчен ҫыхӑнмаҫҫӗ, анчах тӗп предложенири шухӑша ӑнлантарса параҫҫӗ.

1. *Паян эпир, **бригадир каланӑ тӑрӑх,** ӗҫ нормине 110 процент тултарнӑ.* 2. *Пӗрре вӑл манпа пӗрле ӗҫлекен хӗрпе ман ҫинчен калаҫнӑ (**хӑй вӑл рабфакра вӗренетчӗ.**)* (*Ис. М.*) 3. *Коновалов (**ҫапла чӗнетчӗҫ ҫӗнӗ пекаре**) чӗнмесӗр малалла ута пуҫларӗ.* (*М. Горьк.*) 4. *Ман юлташ (**секретра вӑл асличчӗ**) пӳрнисемпе паллӑ туса кӑтартрӗ.*

## 34 §. Вводнӑй сӑмахсене, предложенисене чарӑну паллисемпе уйӑрасси.

1. Вводнӑй сӑмахсене, предложенисене запятойпа уйӑраҫҫӗ.

***Паллах,*** *Пугачёв ҫынни пулнӑран курасшӑн пурте хӗм чунлӑ ҫынна.* (*Элк.*)

2. Вводнӑй сӑмах майлашӑвӗсене, вводнӑй предложенисене скобкӑсем е тиресем лартса та уйӑраҫҫӗ.

1. *Коновалов (**ҫапла чӗнетчӗҫ ҫӗнӗ пекаре**) чӗнмесӗр малалла ута пуҫларӗ.* (*М. Горьк.*) 2. *Хамӑр соцобязательствӑсене пурнӑҫа кӗртесси—**пирӗн вӗсене тем тесен те пурнӑҫа кӗртмеллех**—мӗнпур коллектив тата хастарлӑрах, тата ҫыхӑнуллӑрах ӗҫленинчен килет.*

3. Калани мӗн чухлӗ шанчӑклӑ е шанчӑклӑ маррине кӑтартакан вводнӑй сӑмахсене (иккен, пулас т. ыт. те) запятойпа уйӑрмасӑрах ҫыраҫҫӗ.

1. *Хӑрушӑ **иккен** салтак пулькисем!* (*Элк*). 2. *Директор командировкӑран таврӑннӑ **пулас.***

**78-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Вводнӑй сӑмахсене аялтан туртӑр, вӗсен пӗлтерӗшне калӑр.

1. Вӑл, паллах, аван вӗренет. 2. Кунашкал ҫил-тӑман, ҫеҫенхир ҫыннисен сӑмахӗ тӑрӑх, темиҫе ҫул та пулман. (*Фурм.*) 3. Пирӗн ҫӗршыв халӑхӗ вӑрҫӑсемпе тертленсе ҫитнӗ пулнӑ. Паллах, халӑх миршӗн хыпса ҫуннӑ. 4. Вӑй тӑкмасӑр иртме пултарнӑ-и эпир? Паллах, пултарайман, юлташсем. 5. Ӗлӗк ҫак вырансенче сӗм вӑрман пулнӑ, тет. 6. Хире кайиччен, апат ҫитеретӗн пулӗ, анне. 7. Ыран, барометр кӑтартнӑ тӑрӑх, ҫумӑр пулмалла. 8. Орловски ялӗсем (эпир Орловски кӗпӗрнин хӗвелтухӑҫ пайӗ ҫинчен калатпӑр) сухаласа пӑрахнӑ уйсем хушшинче сапаланса лараҫҫӗ. (*Тург.*) 9. Тракторсем, вӗсемпе ҫӗр ӗҫлессине те халӗ сдельщина ҫине куҫарнӑ, коммуна ҫӗрне часах сухаласа пӑрахрӗҫ. 10. Тен, ӑҫтан пӗлен, вӗсем те ахалех хӑтланмаҫҫӗ пулӗ. (*Х. Ҫ.*) 11. Чӑнах та, пире ҫул кӑтартнӑ ҫын Пугачӗвпа пӗр сӑнлахчӗ. (*Пушк.*)

**79-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

1. Ара епле вырнаҫтарӑпӑр вара вӗсене? Кунта ахаль те ҫаврӑнкалама ҫук. (*Н. Остр.*) 2. Ман шухӑшпа ҫак тӗлсӗр тавлашӑва пӗтерес пулать. 3. Эсир ахӑртнех нимӗн те ҫимен пулас-ха? (*Н. Остр.*) 4. Ҫав минутра тӳрех калатӑп кулас шухӑш аса та килмен ман пуҫа. (*Тург.*) 4. Алексей вулакан палларӗ ӗнтӗ ӑна ҫав вӑхӑтра ҫамрӑк хресчен хӗре ҫине тинкерсе пӑхса тӑнӑ. (*Пушк.*) 6. Каҫалапа ҫумӑр пулать пулмалла. 7. Ҫав вӑрман патне ман шутпа кунтан сакӑр километр пулать. 8. Вун-вуник ҫул каялла эпӗ астӑватӑп ҫак вырӑнта мӑянсемпе хытхурасем ҫеҫ кашласа ларатчӗҫ. Халӗ колхозӑн ыраш пусси тинӗс пек хумханса ларать. 9. Пӗрре каҫпала вӑл 1773 ҫулта октябрӗн пуҫламӑшӗнче пулнӑ эпӗ кӗрхи ҫил уланине итлесе ларатӑп. (*Пушк.*) 10. Пугачӗв тавра ыттисем пухӑнчӗҫ вӑл хушнипе пулмалла тӑватташӗ те уйрӑлчӗҫ те сиккипех крепость патнелле килчӗҫ. (*Пушк.*) 11. Мана хӑвӑрах пӗлетӗр пуринчен ытла музыка интереслентерет. (*Х. Ҫ.*) 12. Чӑнах та Алӗшка вӑл вӑхӑтра партизансен отрячӗсем ҫинчен лайӑх пӗлнӗ пулас. (*Чалд.*) 13. Ҫӳрет тет автан вӑрманта. Татӑлса анчӗ тет пӗр йӗкел автан пуҫӗ ҫине. Автан тара пачӗ тет ҫулпала. (*Юмахран.*) 14. Ара ӑҫта каятӑн эсӗ капла ывӑлӑм? (*Элк.*) 15. Пухӑва чӑнах та Куҫук амӑшӗ калашле пӗр ҫирӗм ачана яхӑн пухӑннӑ. (*Х. Ҫ.*)

## 35 §. Междометисен предложенири вырӑнӗ.

Междометисем шухӑша мӗнле кӑмӑлпа каланине кӑтартаҫҫӗ. Вводнӑй сӑмахсем пекех междометисем те предложенин членӗ пулмаҫҫӗ.

Междометисен евĕрлев сăмахĕсем текен пайĕ предложенире уйрăм член—обстоятельство пулать, çавăнпа чарăну паллисем лартас енчен кунта уйрăмлăхсем пур.

1. Междомети предложени пуçламăшĕнче тăрсан, ун хыççăн запятой лартаççĕ. Ăна сасăпа хытă палăртса каласан, ун хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ. Малалли сăмаха пĕчĕк саспаллипех пуçласа çыраççĕ.

*Ну, айтăр-ха, ачасем, агитбригада киличчен хытăрах ĕçлер! Эй! пăрăн çул çинчен! Грузовик айне пулатăн!*

2. Междомети предложени варринче те пулма пултарать, ун пек чух ăна икĕ енчен те запятойпа уйăраççĕ. Сасăпа хытă палăртса каланă чухне ун умĕн запятой, хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ.

1. *Килеççĕ, эх, килеççĕ-çке çуллахи кунсем!*
2. *Колхозăн, эх, тырă мĕн тĕрлĕ ыра пулчĕ.* (*М. Труб.*)

3. Междометисен евĕрлев сăмахĕ текен пайне запятойпа уйăрмаççĕ. Ăна сасăпа хытă палăртса каласан, ун хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ. Малалли сăмаха пĕчĕк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

*Ăшă çил вăш-вăш вĕрсе тăрать. Чаштăрт! тутарса мулкач пĕрхĕнет.*

**80-мĕш упражнени.**

Текста вулăр. Чарăну паллисене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

1. Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, Сетнерпеле пехиллĕр. (*К. Ив.*) 2. Эй,аслă патша, эй, Иван ĕмпу! Сан çинчен эпир юрă хутăмăр. (*Лерм.*) 3. „Эх, мĕнле хăватлă ывăлăм пур!"—тесе мухтан, çĕршыв. (*Ухс.*) 4. Анчах тепĕр эрнинче, пĕрре уяр ырă каç... (Чим-ха, кăна калама вăхăтсăрах юрамасть). (*К. Ив.*) 5. Хĕвел ансан, Хĕветĕр (эсир ăна пĕлетĕр) хĕвне çăкăр чикрĕ те, лаша кӳлсе ларчĕ те тухрĕ кайрĕ вăрмана хăрăк турат пуçтарма (*М. Фёд.*). 6. Анчах, инкеке, пытанчăк ялсем часах мĕн тухнă „тĕнче" куç умне. (*Элк.*) 7. Çав шанчăклă ĕмĕт—хаяр çĕнтерӳ çӳрет пирĕнпех вăрçăра. (*Алка.*). 8. Хĕçлĕ-пăшаллă, тет, пурте хăйсем, выртаç, тет, канса ĕшне варринче. (*Элк.*) 9. Ан кулян, Тарье аппа, вырсарникун хамăр кайса вырса парăпăр. (*Ис. М.*)

**81-мĕш упражнени.**

Çак предложенисене чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

1. Ну Кĕркури пичче эсĕ те пирĕнпе итлесе лар. (*Х. С.*) 2. Ай пашалпа переççĕ. (*Чалд.*) 3. Ах телейĕм çук-тăр çав. (*К. Ив.*) 4. Ой вĕлле хурчĕ сахрĕ. 5. Ах Нарспийĕ çавăнта тухса каять тӳсеймест. (*К. Ив.*) 6. Кĕрст ӳкрĕ темскер çывăхрах. 7. Ы-ых Сетнер астăвăн: манăн хĕре эс çирĕн. (*К. Ив.*) 8. Эй пăрăн, мĕн çул çунче юпа пек хытса тăратăн, таптаса

каятӑп вӗт. (*Чалд.*) 9. Каласам пире эй аслӑ пичче мӗскер пулчӗ капла мӗнле ӗҫ пулчӗ. (*Лерм.*)

82-мӗш упражнени.

Междометиллӗ тата евӗрлев сӑмахлӑ предложенисем ултӑ предложени тупса ҫырӑр.

## 36 §. Предложенири ҫыхӑнусӑр сӑмахсене аса илмелли упражненисем.

83-мӗш упражнени.

Сӑвва вулӑр. Ҫырса илӗр, сиктерсе хӑварнӑ чарӑну паллисене лартӑр, обращенисене аялтан туртӑр.

Пӗлтер мана тӑван ҫӗршывӑм:
Хӑҫан кӑтартӑн халӑхна
Ху чӗлхӳне хӑват кӗртмешкӗн
Тӗнчене килнӗ ывӑлна.
Кӑвар чӗре кӑвар чӗлхеллӗ
Чӑваш ачи сассуна пар!
Тухсам кунта, сана кӗтеҫҫӗ!
Килсем! Килсем! Эс пур,—ҫук мар!
Часрах килсе хӑватлӑх кӗртчӗ
Чӑвашӑн капӑр чӗлхине.

Ҫунтартӑр ҫулӑмлӑ кӑварлӑ
Чӗлхӳ ҫынсен чӗрисене.
Ӗмӗрлӗхе яту сан юлӗ,
Шупашкартан Кавал таран
Ҫӗрпӳ Чикме Етӗрне урлӑ
Юрру сассийӗ кайӗ сан.
Чӑваш чӗлхи ӑсти кӑварлӑ
Чӗрӳ сан сисӗ чӗннине.
Шанатӑп. Ӗмӗте усратӑп:
Эс килӗн! Килӗн тӗнчене.
(*Ҫеҫп.*)

84-мӗш упражнени.

Текстран обращениллӗ, вводнӑй сӑмахлӑ, междометиллӗ предложенисене уйрӑммӑн-уйрӑммӑн ҫырса илӗр

1. Шӗвик! шӑхӑрать ҫын пекех, мӑкӑл-мӑкӑл юмахлать, шӑтӑр-шатӑр тутарать. (*М. Фёд.*) 2. Ҫапла калаҫса тӑнӑ вӑхӑтра шик! шик! шӑхӑртрӗҫ малти урамра. (*Элк.*) 3. Ан йӗр лӑплан, анне. (*И. Тук.*) 4. Ҫемен, эс кунта-ҫке, паян сана шыраса ман тӗнке тухнӑ. (*Ис. М.*) 4. Ей! бригадирсем, ӗҫе! (*Труб.*) 5. Чӑнах, кантурпа чиркӳ пусмӑрне йӑвашшӑн чӑтма нимле те май ҫук. (*Элк.*) 6. Ну, Иван Мучи, купӑс каласа пар-ха. (*Ис. М.*) 7. Чим-ха, каласа пӗтерем. (*Ф. Пав.*) 8. Эс кала, кала-ха, ырӑ карчӑкӑм, ӑҫталла ҫухалчӗ тӗттӗме кура, ӑҫталла пытанчӗ Алюна манӑн? (*Лерм.*)

85-мӗш упражнени.

Текста ҫырса илӗр. Кирлӗ ҫӗрте чарӑну паллисем лартӑр.

1. Эй кӗрӳҫӗм Тӑхтаман санра ӳпкев ҫук пиртен. (*К. Ив.*) 2. Ара мӗнле ӑс ҫитрӗ сирӗн ватӑ ҫынна пулӑшма? (*Ис. М.*), 3. Ваҫук Ваҫук халӑх ӗҫӗшӗн пуҫна ҫухатрӑн-ҫке эс тусӑмҫӑм... (*И. Тук.*) 4. Ҫук яман ӑҫтине те пӗлместӗп. Тен мӗнле те пулсан аслӑ шкулта вӗренет пулӗ ӗнтӗ халӗ. (*Ис. М.*) 5. И-и ун ҫинчен шухӑшламалли пулнӑ-и пирӗн? (*Ис. М.*)

6. Ара пуҫтаранкаласам ҫак хăвна ху пăртак. (*Ис. М.*) 7. Ухтеркке эсĕ кинўпе ан пупле пире кала. (*Ф. Пав.*) 8. Пухăва чăнах та Куҫук амăшĕ калашле пĕр ҫирĕм ачана яхăн пухăннă. (*Х. Ҫ.*)

## Вĕреннĕ правилăсенчи чарăну паллисене лартма пĕлнине тĕрĕслемелли упражненисем.

**86-мĕш упражнени.**

Текста вулăр. Вĕреннĕ правилăсенче тĕл пулакан чарăну паллисене ăнлантарăр.

Призыв пункчĕ. Тап-таса пӳлĕмсене праҫникри пек илемлетнĕ. Стенасем ҫинче йĕри-тавра картинăсем, портретсем, картăсем. Симĕс пустав витнĕ сĕтелсем ҫинче хаҫат-журналсем, вырăсла, чăвашла кĕнекесем. Кунта кĕтсе, анасласа лармалла мар,—вула, вĕрен. Ыйтса пĕлес килет пулсан, ыйт, пĕл. Выляс килет пулсан, юнашар пӳлĕме анчах кĕр. Унта мĕнмĕн ҫук-ши? Биллиард, шахматсем, шашкăсем, домино,—выляя, савăнăҫлă кан! Пăхатăп та тĕлĕнетĕп: мĕнле патшалăхра, хăш самантра салтак ачисене ҫавăн пек кĕтсе илнĕ-ши? Ҫук, ниҫта та кĕтсе илмен, ниҫта та ун пекки пулман. Ҫавăнпа та пирĕн хальхи ҫамрăксем Совет Ҫарне савăнсах, хĕпĕртесех каяҫҫĕ. (*Долг.*)

**87-мĕш упражнени.**

Текста вĕреннĕ правилăсемпе тĕл пулакан чарăну паллисене лартса ҫырса илĕр.

Тен ăҫтан пĕлен вĕсем те ахалех хăтланмаҫҫĕ пулĕ. Вĕсем хут пĕлеҫҫĕ мĕн ҫырнине пурне те вулаҫҫĕ. Ҫавăнпа суйипе чăннине те уйăраҫҫĕ пуль ҫав. Эпир мĕн пĕлетпĕр пĕр сăмахне те ăнланаймастпăр. Пирĕншĕн пулсан хуть ҫырнă хут пултăр хуть ахаль сăмах,—иккĕшĕ те пĕрех. Вулаччăр ҫӳретччĕр хăйсен ирĕкĕ. Ах ма ятларăм-ши эпĕ Куҫука ниме кирлĕ мар кĕнекешĕн эпĕ шарламан пулсан, ним те пулас ҫукчĕ. Ах ухмах. Ма шарларăм-ши вара. Вулатăр куртăр пулатчĕ картинисене. (*Х. Ҫ.*)

**88-мĕш упражнени.**

Текста вĕреннĕ правилăсенчи чарăну паллисене лартса ҫырса илĕр.

1. Ленинград эс пирĕн чап
   Пирĕн пĕрлĕх вăй-хăват.
   Сахал мар эс хĕн асап
   Курнă тӳснĕ Ленинград
   Тӳснĕ ҫĕннĕ пур хĕне
   Чăтнă йывăр кунсенче. (*Элк.*)

2. Хир-хир урлă ял-ял урлă ярăн пирĕн юрăмăр. (*Юрă.*) 3. Е ҫивĕч хĕҫпе е хĕрӳллĕ вутпа тăшман йăванчĕ кашни хă-

лаҫра. (*Алка.*) 4. Пĕр-ик кушет улт-ҫич пукан лараҫҫĕ тикĕс килĕшӳллĕн стена хĕррипеле кунта. (*Элк.*). 5. Эпир халĕ ҫиҫĕм вутлă ҫавра ҫил пирĕн хальхи кĕввĕмĕр хаяр аслати. (*Васян.*) 6. Карап шăвăнать тек канмасăр хăюллăн ҫĕнтернĕ вакланнă хумсем ҫиййĕпе. (*Элк.*) 7. Шатăр чăмăртать ик селĕм чышка тухать те утать Тевенеш патне. (*Элк.*) 8. Шăпчăк юрлама тытăнсан, купăста лартма вăхăт теҫҫĕ. (*Ис. М.*)

89-мĕш упражнени.

Сиктерсе хăварнă чарăну паллисене, дефиссене, кавычкăсене лартса, текста ҫырса илĕр.

Виҫĕ талăка яхăн ҫапăҫса тăшмана питĕ нумай сиен кӳнĕ хыҫҫăн партизансем сасартăк нимĕҫсен куҫĕнчен ҫухалчĕҫ.

Тепĕр эрнерен ҫĕнĕ вырăнта каллех малтанхи пек лагерь пулса тăчĕ. Тарăн ҫырмара ҫĕр пӳртсем алтрĕҫ вĕсене ытамласа илмелле мар пысăк юман пĕренесемпе темиҫешер хут витрĕҫ чăтлăх вырăна кухня турĕҫ лашасене ĕнесене йывăҫсем айне лупассем туса пытарчĕҫ. Самолĕт разведчик кунĕпе вĕҫсе сăнаса ҫӳресен те асăрхама пултарас ҫук. Ҫӳлтен пăхсан, кунта сип-симĕс вăрман ҫеҫ, анчах та йывăҫсем айĕнче пурнăҫ вĕресе тăрать.

Кашни кун тенĕ пекех отрядран штаб хушнипе разведчиксем тĕрлĕ вырăнсене кайса ҫӳренĕ. Вĕсем хыҫҫăн вара партизансен пысăках мар ушкăнĕсем унта та кунта ҫулсем ҫине кĕперсем айне минăсем лартнă. Час-часах вĕсем нимĕҫсен обозĕсене тапăннă, вара отряда тĕрлĕ трофейăсем апат-ҫимĕҫ пăшал боеприпассем выльăх-чĕрлĕх илсе пынă хăш чухне тата чĕлхесем те ҫаклаткаланă. Ун пек чухне вара отряд штабĕ вырнаҫнă ҫĕр пӳрт умне яланах партизансем пурте тенĕ пекех пухăннă.

Ванюшка хăвăрт сывалса пычĕ. Фĕдор Иванович ун парки: „Ача тĕреклĕ-ха аптăрас ҫук“, —тесе чăн калавă-мĕн. Пĕр-ик эрнерен вăл чиперех ура ҫине тăчĕ ҫĕр пӳртрен тухса ҫӳрекен пулчĕ унтан ерипен кухньăна апат илме кайма пуҫларĕ. Апатне вăл яланах виҫĕ ҫын валли илсе пычĕ, мĕншĕн тесен вĕсем виҫҫĕн пурăнатчĕҫ Фĕдор Иванович хăй, Ванюшка тата пĕркун ҫапăҫу вăхăтĕнче урaран аманнă хĕр Тоня. (*Агак.*)

# II. Хутлă предложенин синтаксисĕ.

## 37 §. Хутлă предложенисем çинчен пĕтĕмĕшле сведенисем.

Хутлă предложенири хутсăр предложенисем епле пĕрлешнине шухăш мĕнле çыхăнни енчен пăхсан, хутлă предложенисем сыпăнуллă е пăхăнуллă пулнине куратпăр. Хăш-пĕр хутлă предложенире эпир пĕр шухăш хыççăн тепĕр шухăш сыпăнтарса (сочинить туса) пыратпăр. Ун пек хутсăр предложенисем пĕр-пĕрне пăхăнмасăр тăраççĕ. Вĕсем предложенири пĕр йышши членсем евĕрлĕ çыхăнса тăраççĕ, пĕрин хыççăн тепри сыпăнса пыраççĕ. Танлаштарăр:

1. *Демонстрацире рабочисем, служащисем, красноармеецсем, вĕренекенсем пулчĕç.*

Ку пĕр йышши членлă предложени. Кунта подлежащисене пĕрин хыççăн теприне сыпăнтарса пынă.

2. *Хĕл иртрĕ, çуркунне пулчĕ, колхозниксем хирти ĕçсене тытăнчĕç.*

Ку хутлă предложени. Кунта хутсăр предложенисене пĕрин хыççăн теприне сыпăнтарса пынă.

**Пĕр-пĕрне пăхăнмасăр тăракан, пĕртан шухăшлă хутсăр предложенисенчен пулнă хутлă предложение сыпăнуллă хутлă предложени теççĕ.**

1. *Каçхи тĕттĕм сирĕлчĕ, хĕвел тухрĕ хĕрелсе.* 2. *Лапка-лапка юр çăвать, мулкач сикет, йĕр тăвать.* (*М. Фĕд.*)

Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕрин хыççăн тепри сыпăнса тăраççĕ.

Сыпăнуллă хутлă предложени союзлă та, союзсăр та пулма пултарать.

**Хутлă предложенири пĕр хутсăр предложени, тепĕр хутсăр предложение ăнлантарса парса, ăна пăхăнса тăрать пулсан, ун пек хутлă предложение пăхăнуллă хутлă предложени теççĕ.**

*Кам тăрăшса ĕçлет, унăн ĕçĕ ăнать.* Ку хутлă предложенире малтанхи хутсăр предложени *кам тăрăшса ĕçлет* тепĕр предложенири *унăн* сăмаха ăнлантарса парать, *унăн* сăмах урлă иккĕмĕш предложение пăхăнса тăрать.

Çапла пăхăнуллă хутлă предложени пăхăнакан хутсăр предложенири тата пăхăнман хутсăр предложенирен (тĕп предложенирен) пулса тăрать.

**Тепĕр предложение ăнлантарса, ăна пăхăнса тăракан предложение пăхăнуллă предложени теççĕ.**

Пăхăнуллă предложени тĕп предложенин пĕр-пĕр сăмахне ăнлантарса парать, çав сăмах ыйтăвĕнчех тăрать.

**Пăхăнуллă предложение пăхăнтаракан, хăй нимĕнле предложение те пăхăнман предложение тĕп предложени теççĕ.**

Хутлă предложенири хутсăр предложенисем икĕ тĕслĕ пĕрлешсе тăраççĕ: 1) союзсемпе, 2) союзсăр.

**Хутсăр предложенисенчен союзпа çыхăнмасăр пулнă хутлă предложенисене союзсăр хутлă предложенисем теççĕ.**

Союзсăр предложенире хутсăр предложенисем пĕрлешнине интонаци анчах кăтартать.

*1. Тăрă шывăн ăшĕнче кăвак пĕлĕт явăнать, вата йăмра тайăлса тĕсне пăхса савăнать.* (*К. Ив.*) 2. *Акана тухрĕç — тракторсем кĕмсĕртете пуçларĕç.*

**Хутсăр предложенинчен союзпа çыхăнса пулнă хутлă предложенисене союзлă хутлă предложенисем теççĕ.**

*1. Дежурнăй саланма команда пачĕ те, полк шкулĕнче вĕренекен курсантсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе хăвасем çумĕнчи çерем çине, хӳтлĕхе кайса йăванчĕç.* (*Ис. М.*) 2. *Эх, анне, шухăшусем те ху пекех вата та, çапах сана юратнă пек урăх кама юратăп-ши эпĕ!* (*Ис. М.*)

**90-мĕш упражнени.**

Малтан сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Унтан пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр те вĕсенчи тĕп предложенисене аялтан туртăр.

I. 1. Сеялкăпа пĕр гектар пек тулă акрăмăр та, вăрлăх мĕнчул кайнине шутласа пăхрăм. (*Ĕçх.*) 2. Аставăр, хĕрсем, ав Таиспа Сăпани мĕн чухлĕ çумласа тасатнă. (*Ĕçх.*) 3 Шанкăртатса шыв юхать çӳллĕ валак пуçĕнче, кĕмĕл пекех ялтăрать шывĕ хĕвел çуттинче. (*К. Ив.*) 4. Палтăртан илтĕнчĕ: алăк шарт! хупрĕç. (*Перм.*) 5. Автан автать, тул çутăлать, Праскав инке çăнăх алать. (*М. Фёд.*) 6. Мĕнле тăшман килет, çавна аркатнă вырăс çыннисем. (*И. Ив.*) 7. Умра хӳхĕм хĕвелтухăçĕ çунать, кун пуçланчĕ хавас юрă-кĕвĕре. (*Уйăп*) 8. Пурăнмашкăн пурнăç тулăх, юрлама та пит аван. (*И. Ив.*)

9. Çĕмрен пек çулпуçĕ хăй вилчĕ пулсан та,
Ун пысăк карапĕ ишет мал еннех;
Хаяр хумсемпе пăр тусем хупласан та,
Пырать вăл пурне те ватса çĕнтерсех!

(*Элк.*)

II. 1. Вырнаçкалăпăр, пирĕн пурпĕрех кунтан каймалла пулать. Хăвах пĕлетĕн, хула тăрăх лешсем йăртлаттарса çӳреççĕ. Пирĕн тĕрлĕ çĕрелле саланас пулать пурăнма. Эпĕ халлĕхе Ковалло патĕнче пулатăп, анну Марцелина аппу патĕнче пулĕ, эсĕ хăвăн пĕр-пĕр юлташу патĕнче... (*Н. Остр.*) 2. Атте забойра кăмрăк чавать, эпĕ вăл чавнине вагонетка çине тиетĕп. Еç йывăр, çĕр айĕнче сывлăш чĕрĕ. Каçхине киле çитнĕ çĕре куç-пуç алчăраса çитет, хамăр пурăнакан барак иккĕллĕ-виççĕллĕ курăнать. (*Чалд.*) 3. Кам революциччен шахтăра ĕçленĕ, вăл ку ĕç йывăррине хăй çурăмĕ çинче чăтса курнă. 4. Кам унпа паллашнă, вăл ăна час манман. (*Некр.*)

**91-мĕш упражнени.**

Текстран союзлă тата союзсăр хутлă предложенисене уйрăм çырса илĕр.

## КУКАÇЕЙ ШКУЛĔ.

Астăватăп: пĕр лăпкă каç эпир кукамайпа кукаçей пӳлĕмĕнче чей ĕçсе лараттăмăр. Кукаçей сывах мар, вырăн çинче кĕпесĕр, хулпуççийĕсене вăрăм алшăллипе витсе ларать. Унăн симĕс куçĕсем пăтранчăк, пичĕ-куçĕ тăртаннă, хĕрелнĕ, пĕчĕк шĕвĕр хăлхисем йăмăх-хĕрлĕ курăнаççĕ.

— Мĕншĕн мана сахăр памастăн?

— Пылпа ĕç, вăл сана лайăхрах пулать...

Сасартăк кукаçей таçтан вĕр-çĕнĕ кĕнеке туртса кăларчĕ те хавассăн мана чĕнсе илчĕ... Вăл мана вĕри тарлă аллипе майран ыталаса илнĕ те, пӳрнипе хăй ман хулпуççи урлă кĕнеке çинчи саспаллисене тĕллет.

— Земля! Люди!

Ку сăмахсемпе эпĕ унчченех паллашнă, анчах славян саспаллийĕсем вăл сăмахсемпе пĕртте килĕшмен пек. (*М. Горьк.*)

## СЫПĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

### 38 §. Союзлă сыпăнуллă хутла предложенисем.

Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе союзпа çыхăнса тăма пултараççĕ. Сыпăнуллă хутлă предложенире пĕр йышши членлă предложенире пулакан союзсемех тата урăх союзсем те пулаççĕ.

Сыпăнуллă хутлă предложенире пулакан союзсенчен паллăраххисем çаксем.

I. Сыпӑнтӑракан союзсем.

а) **Тата**—пӗр вӑхӑтра е пӗр вырӑнта пулакан явленисем ҫинчен калакан предложенисене ҫыхӑнтарса тӑрать.

1. *Ҫуркунне юхан шывсем сарӑлса кайрӗҫ,* ***тата*** *вӑрманти ҫулсем вӑхӑтлӑха ҫуремелле мар пулчӗҫ.*

2. *Пӗлӗтре ҫӑлтӑрсем йӑлтӑртатаççӗ,* ***тата*** *ҫӗнӗ уйӑх ҫурла пек курӑнса тӑрать.*

ӑ) **Та-те, вара**—пӗр ӗҫ теприн хыҫҫӑн пулнине пӗлтерекен предложенисене пӗрлештерет.

1. *Ёнер юр ҫунӑ* ***та****, паян хирсем шап-шуррӑн курӑнса выртаççӗ.*

2. *Пӗвесем шӑнса ларчӗҫ* ***те****, ачасем пӑр ҫинче конькисемпе ярӑнма пуҫларӗҫ.* 3. *Юлташсем чӗнчӗҫ* ***те****, кайрӑм.* (*Ис. М.*)

3. *Сакльӑра пӑчӑ пулчӗ,* ***вара*** *эпӗ уҫӑ сывлӑша уҫӑлма тухрӑм.* (*Лерм.*)

II. Уйӑракан союзсем:

а) **Те**—иккӗленнине, паллӑ маррине пӗлтерет. ***Те*** *сывлӑм вӑйлӑ укнӗ,* ***те*** *ҫумӑр ҫуса кайнӑ.*

ӑ) **Е**—уйӑрса каланине, темиҫерен пӗрин ҫинче чарӑнса тӑнине пӗлтерет.

*Муму ҫинҫе сассине нихӑҫан та пӗр сӑлтавсӑр илтеймӗн:* ***е*** *ют ҫын хӳме патне ҫывхарнӑ,* ***е*** *ӑҫтан та пулсан шанчӑклах мар шав,* ***е*** *сасӑ-чӗвӗ илтӗннӗ.* (*Тур.*)

б) **Пӗрре-тепре**—ӗҫсем тӗрлӗ майлине пӗлтерет.

***Пӗрре*** *хӗвел йӑлтӑр пӑхса илет,* ***тепре*** *ҫумӑр ҫуса каять.*

III. Хирӗҫлекен союзсем:

5. **Анчах, ҫапах**—пӗр предложенири ӗҫ тепӗр предложенири ӗҫе хирӗҫленине, тепӗр майлӑ пулнине пӗлтерет.

1. *Хӗвел аннӑ,* ***анчах*** *хулара ҫутӑ.* 2. *Хӗвел ӑшшӑн пӑхать,* ***ҫапах*** *вӑрманта юр ирӗлсе пӗтмен-ха.*

**92-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр, подлежащисемпе сказуемӑйсене аялтан туртӑр, хутлӑ предложенири союзсене палӑртӑр, вӗсен пӗлтерӗшӗсене кӑтартӑр.

1. Ир пулнӑ та, каҫ пулнӑ; хӗл иртнӗ те, ҫу ҫитнӗ. (*Чалд.*) 2. Нумай та тӑмасть, Кушлавӑш ҫинчен унтан та кунтан сӑр сӗрӗм пӑлкать. (*Элк.*) 3. Паян клубра е спектакль пулать, е кино кӑтартаççӗ. 4. Те завод труби кӑшкӑртрӗ, те пароход килчӗ. 5. Ҫил вӗрмест, анчах ҫумӑр пӗлӗчӗсем хӗвеланӑҫ енчен шӑваççӗ. 6. Гудок пулчӗ те, вӑрантӑм. 7. Пахчара ҫӗмӗрт ҫурӑлнӑ, улмуҫҫисем шап-шурӑ чечексемпе витӗннӗ тата сирень тӗмӗсем шупка-кӗрен тум тӑхӑннӑ. 8. Кӗркунне уй-хирсем пушанчӗҫ, хура вӑрман та саралчӗ. 9. Аслӑ улӑхра

тĕрлĕ кайăксен илемлĕ юрри шăраннă, тата инçетре çĕлен пек авкаланса юхса выртакан шыв хĕвел çутипе йăлтăртатнă.

**93-мĕш упражнени.**

Текста çырса илнĕ чухне пĕлтерĕш тăрăх юрăхлă союзсене кĕртсе лартăр.

1. Тарас вырăн çинчен вăштах сиксе тăрса пăхрĕ..., кантăк витĕр Варукăн калама çук пăлханса кайнă сăнне курчĕ. (*Агак.*) 2. Тупрĕ пуян упăшка атте-анне хăй хĕрне, ... унта мĕн усси, юратмасан пĕр-пĕрне. (*К. Ив.*) 3. Куçĕ-пуçĕ пит йăваш, çын савăнса тăмалла,... карчăк юратмасть, ухмах тесех шухăшлăн. (*К. Ив.*) Хĕвел аннă,... вăрманта çутă. 5. Е çĕлеме ларать..., çĕвви шăрça пек пулать. (*К. Ив.*)

## 39 §. Союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чăрăну паллисем лартасси.

Союзлă сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен яланах запятой лартса уйăраççĕ.

а) Запятой **тата, анчах, çапах, вара** союзсем умĕн пулать.

1. *Çил тухнипе кантăк хупписем халтлатаççĕ, тата çӳллĕ йывăççем хумханса шавлаççĕ.* 2. *Çул икĕ айккипе лайăх маяксем лартса тухнă, анчах вăл çул таврарах.* 3. *Ир çывхарса килнĕ, çапах никам та çывăрман-ха.* 4. *Çил-тăман лăпланĕ те, пĕлĕт çуталĕ, вара çула çăлтăрсем тăрăх тупăпăр.* (*Пушк.*)

ă) Запятоя **та, те** союзсем хыççăн лартаççĕ.

1. *Ăна пулĕм панă та, вăл крепоçа вырнаçнă.* (*Лерм.*) 2. *Лисук хăй аманнине пĕлтерчĕ те, ăна çавăнтах пулăшу пачĕç.*

Асăрхаттарни. Та-те союзпа çыхăнакан сыпăнуллă хутлă предложенисене пĕр йышши членлă предложенисенчен уйăрма пĕлмелле. Та-те союзпа çыхăнакан пĕр йышши члена, вăл темĕн чухлĕ анлă пулсан та, запятойпа уйăрмаççĕ.

*Вăл ларчăк çине ларнă та лашине пĕрмай çурăмĕ тăрăх тиверткелесе пырать.* (*Чех.*)

б) **Те, е** союзсем кашни хутсăр предложениех кĕме пултараççĕ. Запятой çав союзсем умĕн пулать.

1. *Те сывлăм укнĕ, те çумăр çуса кайнă.* 2. *Е уйра пушене авăтни илтĕнет, е вăрманта шăпчăк юрлани кăмăла çĕклентерсе ярать.* (*Ĕçх.*)

**94-мĕш упражнени.**

Çакă **та, те, тата** союзсем кĕрекен предложенисенче мĕншĕн пĕрисенче запятой лартнине, теприсенче лартманнине ăнлантарса парăр.

1. Нарспи шывне ăсрĕ те килне утрĕ хуйхăрса. (*К. Ив.*) 2. Çитрĕ ĕнтĕ çимĕк те, хĕрен туйне тумалла. (*К. Ив.*)

3. Хӗрсе допрос тунӑ вӑхӑтра алӑк хуллен уҫӑлчӗ те пӗр пысӑк та сехӗрленнӗ куҫлӑ ҫӑмламас пуҫ пӳлӗмелле кӗрсе тӑчӗ. (*К. Ив.*) 4. Горький урамӗсем тӑрӑх автомобильсем, грузовиксем тата трамвайсем вӗҫӗ-хӗррисӗр чупаҫҫӗ. 5. Ака хӗвел ҫуттийӗ шуса-шуса пычӗ те сиксе ларчӗ старикӗн кӑвак ҫӳҫлӗ пуҫ ҫине. (*К. Ив.*) 6. Кӗрхи вӗтӗ ҫумӑр ҫуса тӑнӑ, тата вӑхӑчӗпе юр та ӳккеленӗ, анчах вӑл ирӗлсех пынӑ. 7. Зурин ҫывӑх тус пек алӑ парса уйӑрӑлчӗ те, мана урапа ҫине илсе тухса лартрӗҫ. (*Пуш.*)

**95-мӗш упражнени.**

Ҫак текстран малтан пӗр йышши членлӑ предложенисене, унтан сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисене ҫырса илӗр; кирлӗ ҫӗрте чарӑну паллисем лартӑр; подлежащисене пӗр йӗрпе, сказуемӑйсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

1. Пахчаҫӑ тухать ирпеле пахчана кашни папканах асӑрхать вӑл сӑнать. (*К. Ив.*) 2. Нарспи кайрӗ ют яла Сетнер утрӗ хӑй килне. (*К. Ив.*) 3. Хӗвел анать те каҫ пулать. (*Алка.*) 4. Пӗрре пӗр ҫын килчӗ те Тӑхтаманпа калаҫрӗҫ. (*К. Ив.*) 5. Ҫак каҫхине Тарас вырӑн ҫине выртсанах ҫывӑрса кайрӗ те ирччене пит лӑпкӑн ҫывӑрчӗ. (*Агак*). 6. Энтри вӑйне пухрӗ те пысӑк йывӑр чукмарпа вирлӗн ҫапрӗ упана. Упа пуҫӗ саланчӗ унӑн ӗмри татӑлчӗ. (*И. Ив.*) 7. Тарас ҫемҫен кулса илчӗ те алӑк патӗнче ура салтса ларакан Микуль еннелле ҫаврӑнчӗ. (*Агак.*) 8. Пуху халӑхӗ кӑштах хумханса илчӗ ҫапах та ҫӑвар уҫса пӗр сӑмах калани те илтӗнмерӗ. (*Тукт.*) 9. Алӑка тӗксе пӑхрӗ питӗрнӗ. (*Тукт.*)

**96-мӗш упражнени.**

Текста кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.

1. Давыдов сӑмах калама ӑста мар анчах ӑна чи лайӑх халапҫӑ сӑмахне итленинчен те лайӑхрах итлерӗҫ. (*Шол.*) 2. Ҫил-тӑман лӑпланӗ те пӗлӗт ҫуталӗ вара ҫула ҫӑлтӑрсем тӑрӑх тупӑпӑр. (*Пушк.*) 3. Унӑн чӗркуҫҫийӗсем ҫинче кӗнеке уҫӑлсах выртнӑ анчах вӑл ӑна вуламан. (*Гарш.*) 4. Юрӗ ҫунаран ҫӳллӗ тултарса лартнӑ анчах туртисем ҫине ҫакнӑ тутӑрӗ курӑнса тӑнӑ. (*Л. Толст.*) 5. Пит ҫумалли кӑкшӑмран шыв патлатса тумлать тата пӗчӗк ача ӗмчӗк лачлаттарни илтӗнет. (*Успен.*) 6. Пур ҫӗрте те ҫӳреме май пулнӑ анчах хӑш-хӑш ҫӗрте юр чӗркуҫҫи таран пулнӑ та Микитан атти ашне кӗре-кӗре тулнӑ. (*Л. Толст.*) 7. Тепӗр куннех эпӗ генерала ырӑ сунса уйӑрӑлтӑм та хама службӑна кайма хушнӑ вырӑна тухса кайрӑм. (*Пушк.*) 8. Манӑн кӳршӗ ҫинҫе те салхуллӑ сасӑпа бурлак юррине тӑсса ячӗ те пурте харӑссӑн янӑратма пуҫларӗҫ. (*Пушк.*) 9. Халӑх шӑпланчӗ те саланчӗ килхушши пушанса юлчӗ. (*Пушк.*) 10. Пугачӗвӗ хутне илчӗ те чылайччен ун ҫине пӑхса тӑчӗ. (*Пушк.*) 11. Тӗлӗрсе пынӑ пек ларса пыракан Праски тӑлӑп ҫухине уҫрӗ те уй хапхи патӗнче ларакан йӑмрасене курах кайрӗ. (*Труб.*) 12. Лавҫӑ

лашине ҫемҫен турткаласа ҫул ҫине каларчӗ те ҫуна анаталла ҫамаллан шурӗ. (*М. Труб.*) 13. Варук ачана тытса сапкана хурать те каллех сиктерме пуҫлать. Вал вырантан хускалать те хавартрах чупма тарашать. (*Чех.*) 14. Юр ҫултен такана тата хаш чух аялтан та вӗҫнӗ. (*Л. Толст.*)

97-мӗш упражнени.

Малалла пана примерсенчен та, те союзсемпе сыпантарса малтан пӗр йышши член хушантарса хутсар предложени тавар, унтан хутсар предложени хушантарса сыпанулла хутла предложени тавар. Кирлӗ ҫӗрте чарану паллисем лартар.

Тӗслӗх: *Атал шывӗ саралса кайрӗ.*

а) *Атал шывӗ саралса кайрӗ те ҫыран хӗрринчи пӗчӗк йываҫсене, катасене шыв айне турӗ.*

а) *Атал шывӗ саралса кайрӗ те ҫыран хӗрринчи пӗчӗк йываҫсем, катасем шыв айне пулчӗҫ.*

1. Учитель класа кӗчӗ. 2. Эпир грамматика вӗрентӗмӗр. 3. Звонок янараса кайрӗ. 4. Пулаҫа валтине туртрӗ. 5. Пирӗн шкул спектакль хатӗрлерӗ. 6. Эпир занавес уҫрамар. 7. Шофёр грузовикне чарчӗ. 8. Колхозниксем ыраш ҫапрӗҫ.

98-мӗш упражнени.

Анчах, ҫапах союзсемпе сыпантарса малалла пана примерсенчен, хутсар предложенисем хушса, сыпанулла хутла предложенисем тавар. Кирлӗ ҫӗрте чарану паллисем лартар.

Тӗслӗх: *Юр ирӗлсе пӗтрӗ.*

*Юр ирӗлсе пӗтрӗ, анчах йываҫсем сулҫа каларман-ха.*

1. Юр ирӗлсе пӗтрӗ. 2. Эсир разведкана каятар. 3. Паян ҫанталак питӗ сивӗ. 4. Кӗр питӗ йӗпе пулчӗ. 5. Эпир экскурсие кайрамар. 6. Хӗвел тахҫанах анса ларна. 7. Ҫумар ҫителӗклӗ ҫумарӗ. 8. Ҫыварма вахат ҫитнӗ. 9. Автобус хаварт илсе кайрӗ. 10. Кӗрхи сивӗсем пуҫланчӗҫ.

99-мӗш упражнени.

Малалла пана самахсене подлежащи туса, сыпанулла хутла предложенисем тавар.

Тӗслӗх: *Бригадир—колхозниксем. Бригадир ӗҫе чӗнчӗ те, колхозниксем васкасах тыра вырма тухрӗҫ.*

1. Звонок—студентсем. 2. Гудок—рабочисем. 3. Сунарҫа—мулкача. 4. Лавҫа—лаша. 5. Тимӗрҫӗ—тимӗр. 6. Пахчаҫа—улмуҫҫисем. 7. Колхоз—тырпул. 8. Тӗтре—хӗвел.

## 40 §. Союзсар сыпанулла хутла предложенисем.

Хутсар предложенисем сыпанулла хутла предложенире хаш чухне союзсарах ҫыханса тама пултараҫҫӗ. Калаҫна чухне предложенисем ҫыханнине интонаци кататартать.

*Хӗвел анса пытанать, Силпи ялӗ лапланать.* (*К. Ив.*)

Союзсӑр хутлӑ предложенисем пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен акӑ мӗне пӗлтереҫҫӗ:

1) Вӗсем пӗр вӑхӑтри ӗҫе пӗлтереҫҫӗ.

1. *Ҫил лӑпланчӗ, ҫумӑр та пӗрӗхме чарӑнчӗ.* (*Чалд.*) 2. *Ҫумӑр ҫӑвать, шыв юхать, хура вӑрман кӗр кӗрлет* (*К. Ив.*)

2) Пӗр ӗҫ теприн хыҫҫӑн пулнине пӗлтереҫҫӗ.

1. *Ҫу пулнӑ, кӗр пулнӑ, хӗл тапранса кайнӑ.* 2. *Электричество ҫутрӗҫ, пурте вулама тытӑнчӗҫ.* 3. *Горизонтра ирхи хӗвел курӑнчӗ, занавеска витӗр пӳрте ҫутӑ кӗчӗ.*

3. Пӗр ӗҫ хыҫҫӑн тепӗр ӗҫ хӑвӑрт е кӗтмен ҫӗртен пулнине кӑтартаҫҫӗ.

1. Максим патне юлташӗсем пычӗҫ—полици персе те ҫитрӗ. (*Кинокартинӑран.*) 2. *Ампарне уҫать Энтри—тырӑ-пулӑ куҫ тулли.* (*И. Ив.*)

4) Ӗҫ тепӗр майлӑ е хирӗҫле пулнине кӑтартаҫҫӗ. *Вутта каяс тенӗччӗ—ҫил-тӑман чарчӗ.*

## 41 §. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси.

1. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложение кӗрекен хутсӑр предложенисем пӗр ӗҫ хыҫҫӑн тепӗр ӗҫ пулнине кӑтартсан, е темиҫе ӗҫ пӗр вӑхӑтра пулнине кӑтартсан, вӗсене запятойсемпе уйӑраҫҫӗ.

1. *Хӗл иртрӗ, ҫуркунне ҫитрӗ, колхозниксем хирти ӗҫсене тытӑнчӗҫ.* 2. *Кайӑксем юрлаҫҫӗ, чечексем ӳсеҫҫӗ, сывлӑш таса.*

2. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисен ӑшӗнче запятойсем пулсан, вӗсене (хутсӑр предложенисене) хӑш чухне пӗр-пӗринчен точкӑпа запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

1. *Сивӗ шывпа ҫӑвӑнсан, питне-куҫне тӗс кӗтӗр; авантарах апатлан, ака тума вӑй кӗтӗр.* (*К. Ив.*) 2. *Ҫитнӗ кантуртан пурмиспа тиек, килнӗ тиесе ял тулли инкек; иккӗш те вӗсем калӑпсӑр мӑнтӑр, пичӗ-куҫӗсем шыҫмак та сӑнсӑр.* (*Элк.*)

3. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисем пӗр ӗҫ хыҫҫӑн тепӗр ӗҫ хӑвӑрт е кӗтмен ҫӗртен пулнине кӑтартсан, хутсӑр предложенисем хушшине тире лартаҫҫӗ.

*Кондуктор свисток пачӗ—поезд тапранса та кайрӗ.*

4. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени икӗ ӗҫ пысӑккӑн хирӗҫле пулнине кӑтартать пулсан, хутсӑр предложенисем хушшине тире лартаҫҫӗ.

*Вӑхӑт пӗлесшӗн пулчӗ—сехечӗ ҫӳремест.* (*Талв.*)

**Асăрхаттарни.** Сыпăнуллă хутлă предложение икĕ ĕç пĕчĕккĕн хирĕçле пулнине кăтартать пулсан, запятой лартаççĕ.

*Ĕç тăрантарать, ӳркенӳ пăсать.* (*Посл.*)

**100-мĕш упражнени.**

Текста вулăр, чарăну паллисем лартнине ăнлантарăр.

1. Вăл тĕртрĕ, алăкĕ уçăлмарĕ. 2. Лĕнькăн пĕрре те калаçасси килмен, вăл аслашшĕне хирĕç нимĕн те шарламан. (*М. Горьк.*) 3. Халăх шăплавчĕ те саланчĕ, кил хушши пушанса юлчĕ. (*Пушк.*) 4. Ямшăк чуптарма пуçларĕ, хăй çаплах хĕвелтухăçнелле пăхкалать. (*Пушк.*) 6. Çыру тытнă казакĕ сулăнса кайрĕ те лаша çинчен ӳкрĕ, ыттисем каялла кустарчĕç. (*Пушк.*) 7. Мартăн вуннăмĕшĕнче, каçхине, Шырланпуçне тĕтре карса илчĕ; çурт тăррисенчен ирчченех шыв тумласа тăчĕ; кăнтăр енчен, çеçенхир çийĕпе, тапхăр-тапхăр ăшă та нӳрлĕ çил вĕрсе тăчĕ. (*Шол.*) 8. Тимĕрçĕн лаççинче тĕттĕм пуличченех сарлака хырăмлă вĕркĕç хашлатать, мăлатук айĕнчен ылттăн хĕм пĕрчисем сирпĕнеççĕ, сунталĕ те юрă кĕввипе янăрать. (*Шол.*) 9. Пугачĕв ларнă çĕртех ыйхăласа кайрĕ, унăн юлташĕсем тăчĕç те мана тухса кайма каларĕç. (*Пушк.*)

**101-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Кирлĕ чарăну паллисене лартăр.

1. Нумай та вăхăт иртмерĕ инçе те мар пăшал сасси кĕрлесе кайрĕ. (*Чалд.*) 2. Питĕрне çăра шăлтăртатса илчĕ алăк уçăлчĕ те земски пуçĕ курăнса кайрĕ. ((*Пушк.*) 3. Пиçет çĕнĕ ыраш ылттăн пĕрчĕ тулать кашни пĕрчиех пирĕн пурлăх пулать. 4. Йĕри-тавра пăхать никам та курăнмасть. (*Чалд.*) 5. Савельич кăмака çине хĕсĕнме шут тытрĕ кил хуçи урайне выртрĕ. Часах пĕтĕм çурт харлаттара пуçларĕ эпĕ те вилнĕ пекех çывăрса кайнă. (*Пушк.*) 6. Юланутсем чăл-пар саланса сиккипе вĕçтерсе куçран çухалчĕç çеçенхир пушанса юлчĕ. (*Пушк.*) 7. Праски çуна çинче пĕр тапранмасăр ларчĕ тĕлĕнсе хытса кайнă пек, умри çурт çине пăхать. (*М. Труб.*) 8. Пур еннелле те малтан тухнă отрядсем сапаланса кайрĕç юланутлă разведка малалла вĕçтерсе кайса часах куç умĕнчен çухалчĕ. (*Фурм.*) 9. Хĕвелтухăç хĕрелет ыр çанталăк пăсăлать. (*М. Фĕд*).

10. „Мундирĕ английски
Погонĕ французски
Табакĕ японски
Правителĕ Омски.

Мундирĕ çĕтĕлсе пĕтрĕ
Погонĕ татăлса ӳкрĕ
Табакĕ çунса пĕтрĕ
Правителĕ тухса шурĕ“.

(*ВКП(б) ист.*)

**102-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Кирлĕ чарăну паллисене лартса тухăр.

Мăнаçлăн лараççĕ Кремль хӳмисем
Çап-çут йăлкăшаççĕ ылттăн çăлтăрсем.
Çĕрчăмăр чĕрийĕ—гранит мавзолей

Пур ĕç халăхсем те килеççĕ вăл тĕле.
Килеççĕ: афганецĕ персĕ араб
Пуриншĕн те Ленин—хурçă карап.
Эп хам та кĕретĕп вĕсемпе пĕрлех
Салхуллăн пăхатăп çулпуçĕ çине.
Савса пуç таяççĕ ăна ялавсем
Савса пуç таяççĕ ăна халăхсем.
Анчах та илтмест вăл выртать шăпăртах
Чĕри те тапмасть ун текех кăкăрта.
Хавасла тапать ман телейлĕ чĕрем:
Эп Сталина куртăм тăван Кремльте.
Ăсĕпе вăл çӳллĕ Памир тăвĕнчен
Ун кăмăлĕ кашни этем чĕринчех. (*Дж.*)

**103-мĕш упражнени.**

**Сиктерсе хăварнă чарăну паллисене лартса текста çырса илĕр.**

1. Пирĕн çине вунă патшалăх ытла тапăнчĕç эпир пурĕпĕр хăваласа ятăмăр вĕсене. Пуриншĕн те рабочишĕн те хресченшĕн те пит йывăр пулчĕ вăл. Эпир те фронтра сахал мар нуша куртăмăр. Мĕн тăвас тетĕн? Камăн ĕлĕкхине тавăрас килтĕр камăн каллех урядникпа полицейски нухайккине çиесси килтĕр? Чăнах та ĕлĕк ĕç çыннисен ĕнси çинче ларса пурăннисем вăл пурнăçа тем пекех тавăрасшăн пулчĕç анчах та сирпĕнчĕç вĕсем. Мĕн ĕнтĕ халь малалла? Хамăра тапăннă тăшмансенчен тасалтăмăр вăрçă пĕтрĕ халь пурнăçа юсаса ямалла çеç. Çак выçлăх питĕ кансĕрлет те-ха пире анчах ăна тӳсесси те нумаях юлмарĕ. Хуласенче заводсене йĕркене кĕртеççĕ, эпир тыра ытларах тăватпăр. (*Агак.*)

II. Ирхине ирех, тухăç хĕреле пуçласан, Серёга пуртă илчĕ те ращана утрĕ.

Пур çĕрте те халĕ те ӳкекен сивĕ шупка сывлăм выртать. Хĕвелтухăçĕ ерипен çуталса пырать ун вăйсăр çути çӳхе çумăр пĕлĕчĕсемпе каркаланнă тӳпене çутатать. Çĕрте пĕр курăк та йывăçăн çӳлти турачĕ çинче пĕр çулçă та хускалмасть. Йывăç чăтлăхĕнче сайра-хутран кăна кайăк вĕçнĕ сасă илтĕнсе каять е çĕр çумне сĕртĕнен çулçă чăштăртатса илет урăх нимĕнле сасă та хускатмасть вăрман шăплăхне. Сасартăк темĕнле çутçанталăкшăн ют сасă илтĕнсе кайрĕ те вăрман хĕррине çитсе шăпланчĕ. Анчах çав сасă каллех çинеçинех илтĕнчĕ ялан пĕр кĕвĕллĕн янăраса тăчĕ вăл аялта пур йывăç кутĕнче те илтĕнет. Йывăç тăррисенчен пĕри темĕнле чĕтренсе илчĕ сĕткенлĕ çулçисем унăн темскер пăшăлтатрĕç.

Аялтан илтĕнекен пуртă сасси уçăмсăртарах янăрама пуçларĕ сывлăмлă курăк çине сĕткенлĕ шурă турпассем сирпĕнеççĕ пуртă сассипе хутăшах йывăç хуллен çатăртатни илтĕнчĕ. Йывăç пĕтĕм пĕвĕпе чĕтренсе илчĕ аванчĕ ӳкесрен хăранă пек тайкаланса илсе, хăвăрт тӳрленсе ларчĕ. Самантлăха шăп пулчĕ анчах йывăç каллех аванчĕ каллех шатăртат-

нă сасă илтĕнчĕ вара вăл тураттисене хуçа-хуçа çаписене авса тăррине çĕрелле туса нўрлĕ çĕр çине хаплатса ўкрĕ. Пуртă сасси те çын утнă сасă та текех илтĕнмерĕ. (*Л. Толст.*)

**104-мĕш упражнени.**

Çакăнта панă темăсенчен пĕрне суйласа илсе сочинени çырăр. Çырнă чухне союзлă тата союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисемпе усă курăр.

Т е м ă с е м: 1. Кĕркуннехи вăрман. 2. Хĕллехи ир. 3. Хĕвел тухни. 4. Колхоз ферминче. 5. Тырă вырни.

## ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

### 42 §. Пăхăнуллă хутлă предложенисем мĕнле пулни тата вĕсен союзĕсем.

Пăхăнуллă хутлă предложенисем икĕ пайран: тĕп предложенирен тата пăхăнуллă предложенирен пулаççĕ.

Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе пăхăнтаракан союзсемпе е союзла сăмахсем урлă çыхăнса тăрать.

I. Пĕр тĕслĕ пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенисемпе **кам, камăн, мĕн, ăçта, хăçан, мĕн чухлĕ** союзла сăмахсемпе çыхăнса тăраççĕ.

Пăхăнуллă предложенири кунта кăтартнă союзла сăмахсем мăшăррăн тĕп предложенире местоименисем е наречисем пулаççĕ.

**Кам—вăл** (мест.), **кам—çавă** (мест.), **камăн—унăн** (мест.), **мĕне—çавна** (мест.), **ăçта—çавăнта** (нар.), **хăçан—çавăн чухне** (нар.), **мĕн чухлĕ—çавăн чухлĕ** (нар.) т. ыт. те.

***Кам*** *ĕçлет,* ***çавă*** *çиме тивĕçлĕ.* 2. ***Хăçан*** *пăр каять,* ***çавăн чухне*** *пароходсем çўреме пуçлаççĕ.*

II. Хăш-пĕр пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенисемпе çакăн пек союзла сăмахсемпе çыхăнаççĕ: **тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те.**

*1. Тырă аван пултăр* ***тесе****, çĕре минерал çăнăхĕсемпе çемçетеççĕ.* 2. *Хĕвел анчĕ* ***тесенех****, ачасем килĕсене саланчĕç.* 3. *Дисциплина аван* ***пулсан****, ĕç те аван пырать.* 4. *Каç пулнă* ***пулин те****, тĕттĕм мар-ха.*

III. Пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенисемпе ытларах çак союзсем урлă çыхăнаççĕ: **мĕншĕн тесен, çавăнпа, вара.**

1. *Çăлра шыв таса,* ***мĕншĕн тесен*** *вăл хăйăр сийĕсем витĕр сăрхăнса тухать.* 2. *Çĕре минерал çăнăхĕсемпе çĕнетрĕмĕр,* ***çавăнпа*** *тырă лайăх пулчĕ.* 3. *Яланах тăрăшса вĕрен,* ***вара*** *санăн çирĕп пĕлў пулĕ.*

Пăхăнуллă предложени ытларах тĕп предложени умĕн тăрать, анчах вăл тĕп предложени варринче те, тĕп предложени хыççăн та тăма пултарать.

1. ***Мĕн акатăн,*** *çавна пуçтаратăн. (Посл.)*

2. *Ĕнене,* ***вăл сĕт нумай патăр*** *тесе, эпир белоклă апат ытларах паратпăр.*

3. *Сывлăха сыхлас пулать,* ***мĕншĕн тесен этемшĕн вăл чи хакли.***

## 43 §. Пăхăнуллă предложенисен тĕпĕсем.

Пăхăнуллă предложенисем кĕçĕн членсен ыйтăвĕсенчех пулаççĕ. Вĕсем тĕп предложенишĕн пĕр анлă член пек пулса тăраççĕ.

Тепĕр чухне вĕсем тĕп предложенири местоимение (подлежащие, дополнение) е наречие (обстоятельствăсене) ăнлантарса параççĕ.

Пĕлтерĕшĕпе ыйтăвĕсем тăрăх пăхăнуллă предложенисем подлежащи, дополнени, определени, обстоятельство пулаççĕ.

***Мĕн акатăн,*** *çавна пуçтаратăн. (Посл.)* Кунта тĕп предложени *çавна пуçтаратăн.* Пăхăнуллă предложени—*мĕн акатăн.* Мĕне пуçтаратăн? — *Çавна* (акнине) пуçтаратăн. *Мĕн акатăн*—дополнени пулакан пăхăнуллă предложени.

***Кам ĕçлет,*** *çавă çиме тивĕçлĕ.*

Кунта пăхăнуллă предложени **кам?** ыйтура тăрать. Кам çиме тивĕçлĕ?—*кам ĕçлет* çавă (ĕçлекен) çиме тивĕçлĕ. *Кам ĕçлет*—подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени.

## 44 §. Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложенисем.

Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени тĕп предложенин подлежащине—местоимение ăнлантарать е тĕп предложенишĕн подлежащи пулса тăрать. Унăн ыйтăвĕ: кам? мĕн?

1. *Кам тăрăшать, вăл пур ĕçе те вĕренме пултарать.*

2. *Кам каласшăн—калатăр.*

Малтанхи предложенире *вăл пур ĕçе те вĕренме пултарать* тени тĕп предложени пулать, *кам тăрăшать* тени пăхăнуллă предложени пулать. Кунта пăхăнуллă предложени тĕп предложенин подлежащине—*вăл* сăмаха ăнлантарса парать, кам? ыйтура тăрать, çавăнпа ăна подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени тетпĕр.

Пăхăнулла предложени подлежащи пулни иккĕмĕш предложенире авантарах палăрать. Кам калатăр?—*Кам каласшăн* (калас текенни) *калатăр.*

**105-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложенисене аялтан пĕр йĕрпе туртăр, вĕсем ăнлантаракан тĕп предложенин членне аялтан икĕ йĕрпе туртăр.

1. Кам тăрăшса вĕренет, вăл лайăх пĕлет. 2. Кам нумай ĕçлет, вăл нумай илет. 3. Кам утать юрăпа пурнăç тăрăх, вăл ниçта та, нихçан та çухалмасть. (*Юрă*). 4. Кам нумай пурăннă, çав нумай курнă. 5. Кам ĕç халăх телейĕшĕн тăрăшать, вăл халăх тăшманĕсемпе хаяррăн кĕрешет. 6. Тĕрĕслерĕç ят, камăн пур—пачĕç. (*Элк*). 7. Кам çук тет, хирĕçет, вăл çемçе, юлхав. (*Элк.*)

# 45 §. Дополнени пулакан пăхăнулла предложенисем.

Дополнени пулакан пăхăнулла предложени, дополнени пекех, ят мар падежсен ыйтавĕнче пулать.

1. ***Кам шахмат турнирĕнче пĕрремĕш вырăна тухать,*** *ăна премии параççĕ.* 2. ***Кам-кам параймасть***—*тытса хăварчĕç.* (*Элк.*)

Кунта пĕрремĕш предложенире *кам шахмат турнирĕнче пĕрремĕш вырăна тухать*—пăхăнулла предложени, вăл предложенири *ăна* сăмаха ăнлантарать. Пăхăнулла предложени кама? ыйтура тăрать, çавăнпа вăл тĕп предложенишĕн дополнени пулать.

Иккĕмĕш предложенире те *кам-кам параймасть*—дополнени пулакан пăхăнулла предложени, тĕп предложенири сиктерсе хăварнă *вĕсене* сăмаха ăнлантарать, камсене? ыйтура тăрать.

**106-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Дополнени пулакан пăхăнулла предложенисене аялтан пĕр йĕрпе туртăр. вĕсем ăнлантаракан тĕп предложенири члена икĕ йĕрпе туртăр.

1. Кам паян памасть—текех каçармасп. (*Элк.*) 2. Мĕн тума хушнă, ăна вăхăтра тумалла. 3. Мĕн акнă, çавна выратăн. (*Пос.*) 4. Кам тăрăшса ĕçлет, ăна кирек мĕнле ĕç те парăнать. 5. Катмар йывăççем хăйсен ĕмĕрне, мĕскер вăл пуртă, курман та пĕлмен. (*Элк.*) 6. Мĕн тупнă—йăлтах параççĕ ăна. (*Элк.*) 7. Сирĕнтен хăшĕ те хăшĕ çут хĕвел патне малтан çитсе килĕ, манăн пиллĕхĕм—çавна пулĕ. (*Юмах.*) 8. Афонька хусах, çăмăллăн сиксе, тытать те силлет, кам макрать, ăна. (*Элк.*)

## 46 §. Определени пулакан пăхăнуллă предложенисем.

Определени пулакан пăхăнуллă предложени тĕп предложенири определение ăнлантарас майпа, тĕп предложенири япалана анлăрах ăнлантарса парать. Унăн ыйтăвĕ мĕнле? камăн? кам? хăш?

1. *Кам тăрăшса ĕçлет, унăн ĕçĕ ăнать.*

2. *Эсир мĕнле çулпа хулана килтĕр, эпир те çав çулпах килтĕмĕр.*

Малтанхи предложенире пăхăнуллă предложени—*кам тăрăшса ĕçлет.* Вăл, *унăн* определение ăнлантарнă майпа, *ĕç*, сăмаха тата татăклăрах ăнлантарса парать. Кунта пăхăнуллă предложени камăн? ыйтура тăрать, определени пулать.

Иккĕмĕш предложенире пăхăнуллă предложени тĕп предложенири *çав* определение ăнлангарать, хăй те определени пулать.

**107-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Определени пулакан пăхăнуллă предложенисене аялтан пĕр йĕрпе, вĕсем ăнлантаракан предложенин членне икĕ йĕрпе туртăр.

1. Хăш кин юнлă кашăклă, пĕтнĕ унăн упăшки. (*К. Ив.*) 2. Камăн прогулсем пулман, унăн вĕренӳ паллисем те паха. 3. Пичче мĕнле институтра вĕренет, эпĕ те çав институтах вĕренме кĕрес тетĕп. 4. Паян эсир мĕнле кинокартина куртăр, çав картинăнах ыран сирĕн юлташсем те курма пултарççĕ. 5. Атте, эсĕ хăш хулара пурăнатăн, эпир те çав хуларах пурăнатпăр. (*Чалд.*)

## 47 §. Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем.

Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенири ĕçĕн вырăнне, вăхăтне, мĕнлелĕхне, тĕллевне, пиркине, сăлтавне пĕлтereççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсем: ăçта? ăçтан? хăçан? мĕнле? мĕншĕн? мĕн пирки? мĕнле сăлтавпа?

Пĕлтерĕшĕ тăрăх обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем çакăн тĕрлĕ пулаççĕ: 1) вырăна пĕлтерекеннисем, 2) вăхата пĕлтерекеннисем, 3) мĕнлелĕхе пĕлтерекеннисем, 4) тĕллеве пĕлтерекеннисем, 5) тĕллевпе условие пĕлтерекеннисем, 6) условие пĕлтерекеннисем, 7) хирĕçлĕве пĕлтерекеннисем, 8) пиркене пĕлтерекеннисем, 9) следствие пĕлтерекеннисем.

## 48 §. Вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенири ĕç ăçта пулнине, ăçтан е ăçта сулăннине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕсем: ăçта? ăçтан? ăçталла?

Вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенипе ăçта, ăçтан, ăçталла союзла сăмахсем урлă çыхăнса тăраççĕ.

Çак союзла сăмахсемпе мăшăрлăн тĕп предложенире çавăнта, çавăнтан, çавăнталла, унта, унтан, унталла наречисем пулаççĕ.

1. ***Ăçтан çил вĕрет***, *çавăнтан çумăр килет.*

2. ***Шыв ăçта тарăн***, *çавăнта вăл час пăтранмасть.*

3. ***Ăçта йĕрке çирĕп***, *унта ĕç те ăнса пырать.*

4. ***Ăçта майлăрах***, *çавăнтан пуçласа яр.*

5. ***Кашкăр ăçталла кайнă***, *çавăнталла сунарçă йĕр тăрăх утрĕ.*

**108-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Вырăн обстоятельстви пулакан пăхăнуллă предложенисене аялтан пĕр йĕрпе, вĕсем ăнлантарса паракан предложени членне икĕ йĕрпе туртăр.

1. Пĕлĕт айĕ тăрăх çил ăçта вĕрет, çумăр пĕлĕчĕ те унталлах шăвать. (*Лерм.*) 2. Ăçта ирĕкрех, эпир те унта. (*Элк.*) 3. Ăçта ирĕк пур—шырап ирĕке. (*Элк.*) 4. Ăçта пăхнă—сĕтĕреççĕ çунашка çул тăрăх. (*Хус.*)

## 49 §. Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенири ĕçĕн вăхăтне кăтартать. Унăн ыйтăвĕ хăçан?

Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе хăçан? союзла сăмахпа çыхăнса тăрать.

Хăçан союзла сăмахпа мăшăрлăн тĕп предложенире çавăн чухне, ун чухне наречисем пулаççĕ.

***Хăçан çанталăк ăшăтать***, *çавăн чухне ачасем шыва кĕреççĕ.*

**109-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Вăхăт обстоятельстви пулакан пăхăнуллă предложенисене аялтан пĕр йĕрпе, вĕсем ăнлантарса паракан тĕп предложени членне икĕ йĕрпе туртăр.

1. Хăçан хĕвелтухăç хĕрелет, çавăн чухне çумăр пулать, теççĕ. 2. Хăçан кирлĕ пулать, çавăн чухне ку кĕнекене килсе ил. 3. Хăçан театрта „Нарспи" драмăна лартаççĕ, çавăн чухне

эпир ăна кайса курăпăр. 4. Хăçан вăхăт пулать, ун чухне ку драмăна мĕнле лартнине, вылянине сӳтсе явăпăр. 5. Хăçан тăхăр сехет çитет, ун чухне пирĕн уроксем пуçланаççĕ.

## 50 §. Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенири ĕç мĕнле пулнине кăтартать. Унăн ыйтăвĕсем: **мĕнле** (пулать)? **мĕн чухлĕ?**

Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенипе **мĕнле, мĕн чухлĕ** союзла сăмахсем урлă çыхăнса тăраççĕ.

Çак союзла сăмахсемпе мăшăрлăн тĕп предложенире **çапла, çавăн чухлĕ, çавăн пек** наречисем пулаççĕ.

1. ***Мĕнле каларăр***, *çапла турăмăр.*
2. ***Мĕн чухлĕ ĕçлет***, *çавăн чухлĕ илет.*
3. ***Мĕнле васкаса килчĕ***, *çавăн пекех хăвăрт тухса кайрĕ.*

**110-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Мĕнлелĕх обстоятельстви пулакан пăхăнуллă предложенисене аялтан пĕр йĕрпе, вĕсем ăнлантарса паракан предложени членне икĕ йĕрпе туртăр.

1. Аслатиллĕ хаяр çумăр мĕнле хăвăрт çитрĕ, çавăн пекех хăвăрт иртсе кайрĕ. (*Чалд.*) 2. Ку ĕçе мĕнле тума хушатăр, çавăн пекех тума тăрăшăпăр. 3. Мĕн чухлĕ кĕнеке нумай вулатăн, çавăн чухлĕ пирĕн пĕлӳ ӳссех пырать. 4. Тăшман мĕн чухлĕ хаяр, çавăн чухлĕ пирĕн курайманлăх ӳссе пырать.

Хăш чухне тĕп предложенин подлежащийĕпе обстоятельствăллă пăхăнуллă предложенин подлежащийĕ пĕр сăмахах пулма пултараççĕ. Çавăн пек чух çав подлежащие хутлă предложенире пĕрре анчах калаççĕ, тата кун пек чух пăхăнуллă предложени (халĕ ĕнтĕ кĕскелнĕ пăхăнуллă предложени) предложени варринче пулма пултарать.

*Эпир хут çине япаласене, **мĕнле куратпăр**, çапла ӳкеретпĕр. Туристсем, **хĕвел аннă çĕре ăçта çитнĕ**, çавăнтах çĕр каçнă.*

Кунта малтанхи предложенире пăхăнуллă предложени *мĕнле куратпăр* тени пулать. Иккĕмĕш предложенире *хĕвел аннă çĕре ăçта çитнĕ* тени пулать. Çак пăхăнуллă предложенисен подлежащийĕсем тĕп предложенире подлежащи пулакан сăмахсем (*эпир, туристсем*). Çавăнпа çав подлежащи пулакан сăмаха пĕтĕм предложенире пĕрре анчах калană. Икĕ пăхăнуллă предложенийĕ те обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем.

**111-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр. Пӑхӑнуллӑ предложенисене аялтан туртӑр, ҫине кӗскен ҫырса мӗнле обстоятельство пулнине кӑтартӑр.

1. Совет Союзӗнче ӑҫта ҫӗр айӗнчи пурлӑх нумай, ҫавӑнта ҫӗнӗ фабрикӑсемпе заводсем ӳссех пыраҫҫӗ. 2. Кам нумай ӗҫлет, вӑл нумай илет. 3. Аслатиллӗ ҫумӑр мӗнле хӑвӑрт ҫитнӗ, ҫавӑн пекех хӑвӑрт иртсе кайнӑ. (*Чалд.*) 4. Ӑҫта ҫултаӑкӗпех ӑшӑ ҫанталӑк тӑрать, унта ӗмӗр симӗс йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ. 5. Ҫил ӑҫталла вӗрет, ҫумӑр пӗлӗчӗ те ҫавӑнталла шӑвать. 6. Ӑҫта пӑхатӑн, пур ҫӗрте те ҫӑра ыраш. 7. Юханшыв мӗн чухлӗ тарӑн, ҫавӑн чухлӗ пароходсене ҫӳреме ирӗк.

## 51 §. Пӑхӑнуллӑ предложенисене причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗсемпе ылмаштарни.

Подлежащи, дополнени, определени пулакан пӑхӑнуллӑ предложенисем тата вӑхӑта, вырӑна, мӗнлелӗхе кӑтартакан пӑхӑнулла предложенисем пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен причасти е причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗсене ҫывӑх тӑраҫҫӗ.

Ҫавӑн пирки пӗр шухӑшах икӗ тӗслӗ калама пулать:

1) Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенипе—*Кам ӗҫлет, вӑл ҫиме тивӗҫлӗ. Кам тӑрӑшса ӗҫлет, унӑн ӗҫӗ ӑнать.*

2) Причасти е причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗ кӗрекен хутсӑр предложенипе—*Ӗҫлекен ҫиме тивӗҫлӗ. Тӑрӑшса ӗҫлекенӗн ӗҫӗ ӑнать.*

Пӑхӑнуллӑ предложени туса калани те, причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗ туса калани те пӗр шухӑшах пӗлтерет, анчах кунта уйрӑмлӑх та пур. Сӑмахсен майлашӑвне пӑхӑнуллӑ предложениллӗ тусан, эпир шухӑша вӑйлӑрах, асӑрхавлӑрах калатпӑр; причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗпе тусан, шухӑша лӑпкӑрах калатпӑр.

Ҫапла вара, пӑхӑнуллӑ предложенисене причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗсемпе, причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗсене пӑхӑнуллӑ предложенисемпе ылмаштарма пӗлни кирлӗ.

Ылмаштару акӑ мӗнле йӗркепе пулать. Пӑхӑнуллӑ предложени ӑнлантаракан тӗп предложенири сӑмах вырӑнне унӑн форминчех пӑхӑнуллӑ предложенири глаголтан тунӑ причастие е причастиллӗ сӑмах майлашӑвне лартмалла. Ун пек чухне пӑхӑнуллӑ предложенири союзла сӑмах тухса ӳкет те причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗнче тӗл пулмасть. Причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗнче причасти ҫумне вӑхӑта, вырӑна, мӗнлелӗхе кӑтартакан сӑмахсем (*ҫӗртен, енчен, вӑхӑта, ҫӗре* т. ыт. те) пулма пултараҫҫӗ. Сӑмахран, пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени илер: *Ӑҫтан ҫил вӗрет, унтан ҫумӑр килет. Ӑҫтан ҫил вӗрет* пӑхӑнуллӑ предложени тӗп предложенири *ҫавӑнтан* сӑмаха ӑнлантарать. Ҫакӑ пӑхӑнуллӑ предложенирен причастиллӗ сӑмах майлашӑвӗ ҫапла пулать: *ҫил вӗрнӗ*

*çĕртенех* (*енченех*). Ку причастиллĕ сăмах майлашăвне *çавăнтан* сăмах вырăнне лартатпăр, *ăçтан* союзла сăмаха пăрахатпăр, предложенири ытти сăмахсене çав йĕркепех çырса лартатпăр. Вара причастиллĕ сăмах майлашăвĕ кĕрекен хутсăр предложени пулать: *çил вĕрнĕ çĕртенех çумăр килет.*

Тĕслĕхсем:

| Пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Причасти е причастиллĕ сăмах майлашăвĕ кĕрекен хутсăр предложени. |
|---|---|
| 1. ***Кам тăрăшать****, вăл пур ĕçе те вĕренме пултарать.* | 1) ***Тăрăшакан*** *пур çĕрте те вĕренме пултарать.* |
| 2. ***Кам-кам параймасть****— тытса хăварчĕç.* (*Элк.*) | 2) ***Парайманнисене*** *тытса хăварчĕç.* |
| 3. *Атте, эсĕ* ***хăш хулара пурăнатăн****, эпир те çав хуларах пурăнатпăр.* (*Чалд.*) | 3) *Атте, эпир те эсĕ* ***пурăнакан хуларах*** *пурăнатпăр.* |
| 4. ***Ăçта йĕрке çирĕп****, унта ĕç те ăнса пырать.* | 4) ***Йĕрке çирĕп çĕрте*** *ĕç те ăнса пырать.* |
| 5. ***Хăçан тăхăр сехет çитет****, ун чухне пирĕн уроксем пуçланаççĕ.* | 5) ***Тăхăр сехет çитнĕ çĕре*** *пирĕн уроксем пуçланаççĕ.* |

Кунта сулахай енчи хулăн саспаллипе пичетленĕ сăмахсем пăхăнуллă предложенисем пулаççĕ, сылтăм енчи хулăм саспаллипе пичетленĕ сăмахсем причастисем е причастиллĕ сăмах майлашăвĕсем пулаççĕ.

Пăхăнуллă предложени туса калани те, причастиллĕ сăмах майлашăвĕ туса калани те пĕр шухăшах пĕлтерет, анчах кунта уйрăмлăх та пур.

Сăмах майлашăвне пăхăнуллă предложениллĕ тусан, эпир шухăша вăйларах, асăрхавларах калатпăр; причастиллĕ тусан, шухăша лăпкăнрах калатпăр.

**112-мĕш упражнени.**

Пăхăнуллă хутлă предложенисенчен причастиллĕ сăмах майлашăвĕ кĕрекен хутсăр предложенисем тăвăр.

1. Кам паян памасть—текех каçармастăп. (*Элк.*)

2. Кам тăрăшса ĕçлет, ăна кирек мĕнле ĕç те парăнать. 3. Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă—ăна пур те хатĕрччĕ. (*К. Ив.*) 4. Ăçта çулталăкĕпех ăшă çанталăк тăрать, унта ĕмĕр симĕс йывăççем ÿсеççĕ. 5. Хăш кин ювлă кашăклă, пĕтнĕ унăн упăшки. (*К. Ив.*) 6. Атте, эсĕ хăш хулара пурăнатăн, эпир те çав хуларах пурăнатпăр. (*Чалд.*)

## 52 §. Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенире калакан ĕçе мĕншĕн тунине, унăн сунăмне, тĕллевве кăтартса парăççĕ.

Кун йышши пăхăнуллă предложенисене эпир пăхăнакан предложени çумне тесе сăмах хушăнтарнипе тăватпăр. Тĕллеве пĕлтертĕр тесен, кун йышши пăхăнуллă предложени тума, тесе сăмаха хушу наклоненинчи 1-мĕшпе 3-мĕш сăпатри сказуемăй çумне е пулас причасти форминчи сказуемăй çумне хушас пулать.

Анчах кунта çакна астăвас пулать: тесе сăмаха пулас причасти форминчи сказуемăй çумне хушнипе пулнă пăхăнуллă предложени подлежащисĕр предложени пулать.

1. ***Тырă аван пултăр тесе,*** *çĕре минерал çăнăхĕпе çĕнетеççĕ.* 2. *Ĕнене,* ***вăл сĕт нумай патăр тесе,*** *белоклă апат ытларах çитереççĕ.* 3. *Эпир,* ***тĕнчери хыпарсене пĕлсе тăрас тесе,*** *хаçатсем вулатпăр.*

**Асăрхаттарни.** *Тесе* сăмаха урăх формăсем хыççăн калаççĕ пулсан, ун пек сăмах майлашăвĕсем тĕллеве анчах мар, пиркене те пĕлтереççĕ.

***Эпир, ыран çумăр пулас çук тесе, утта пуçтармарăмăр.***

**113-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисене аялтан туртăр.

1. Эпĕ, Мария Ивановнăна курас тесе, пуп çуртне кайма васкарăм. (*Пуш.*) 2. Систермесĕр килсе ан кĕччĕр тесе, вăл чÿречерен вĕçĕмсĕрех кăмрăк сирпĕтет. (*Н. Остр.*) 3. Тепре периччен тарса хăтăлас тесе, Андрий кăмрăк шăтăкĕ патне чупрĕ. (*Н. Остр.*) 4. Сывлăх аван пултăр тесен, физкультура çинчен ан ман. 5. Хыпăнса ÿкнĕ Олеся, унран мĕн те пулин тĕпчесе пĕлес тесе, тем пек тăрăшрĕ, анчах кăлăхах пулчĕ. (*Н. Остр.*) 6. Çумăр шывĕ ан кайтăр тесе, сторож хăй çине вакидка, урисене резина атă тăхăннă. 7. Хаçат-журналсене вăхăтра вуласа тăрас тесе, эпир читальнăна яланах çÿретпĕр. (*М. Труб.*) 8. Йывăççем лайăх çитĕнччĕр тесе, пахчаçă вĕсене час-часах шăварать. 9. Палашкăна, эпир калаçнине ан илттĕр тесе, чăлана хупса лартнă. (*Пушк.*)

## 53 §. Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Тĕллеве анчах пĕлтерекен пăхăнуллă предложение тесе сăмах хутшăнтарнипе тунине куртăмăр. Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп

предложенири ӗҫӗн тӗллевне кӑна мар, условие те кӑтартаҫҫӗ. Вӗсене тума пӑхӑнакан предложени ҫумне тесе сӑмах мар, тесен сӑмах хушаҫҫӗ.

1. ***Тырӑ аван пултӑр тесен,*** *ҫӗре минерал ҫӑнӑхӗпе ҫӗнетмелле.* 2. ***Ӗне сӗт нумай патӑр тесен,*** *ӑна белоклӑ апат ытларах ҫитермелле.* 3. ***Тӗнчери хыпарсене пӗлсе тӑрас тесен,*** *хаҫатсем вула.*

Тӗллевпе условие пӗлтерме тесен сӑмаха хушу наклоненийӗн 1-мӗшпе 3-мӗш сӑпатӗнчи сказуемӑй ҫумне е пулас причастири сказуемӑй ҫумне хушмалла.

**Асӑрхаттарни.** *Тесен* сӑмаха урӑх формӑсем хыҫҫӑн каласҫӗ пулсан, ун пек сӑмах майлашӑвӗсем вӑхӑта пӗлтереҫҫӗ; вӗсем урӑх ҫын сӑмахлӑ предложенисене ҫывӑх тӑраҫҫӗ.

*Тӑхӑр сехет ҫитет тесенех, вӗренекенсем классене пухӑнчӗҫ.*

**114-мӗш упражнени.**

Предложенисене ҫырса илӗр. Тӗллевпе условие пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисене аялтан туртӑр.

1. Ӗҫ ӑнтӑр тесен, ӗҫӗн майӗсене лайӑх пӗлмелле. 2. Нумай пӗлес тесен, нумай вӗренмелле. 3. Пирӗн ҫӗршыв ҫине нимӗнле тӑшман та ӑнсӑртран тапӑнма ан пултартӑр тесен, пирӗн сывлӑх тӗрекне ҫирӗплетмелле. 4. Ҫӗнӗ техника хӑйӗн результачӗсене патӑр тесен, тата ҫынсем кирлӗ, техника пуҫӗнче тӑрса ӑна малалла яма пултаракан рабочисемпе работницӑсен кадрӗсем пулмалла. (*Ст.*) Лайӑх та хаваслӑ пурӑнас тесен, политикӑлла ирӗклӗх ырлӑхӗсем ҫумне пурлӑх ырлӑхӗсем хутшӑнни кирлӗ. (*Ст.*) 6. Тӗрӗс тата хӑвӑрт вулама вӗренес тесен, кӗнекесем нумайрах вуламалла.

## 54 §. Условие пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем.

Кун пек пӑхӑнуллӑ предложенисем хутсӑр предложени ҫумне пулсан, пулсассӑн сӑмах хутшӑннипе пулаҫҫӗ. **Условие пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем** тӗп предложенири ӗҫ хӑҫан, мӗнле условисенче пулнине ӑнлантарса параҫҫӗ. Пулсан сӑмах умӗнче хальхи вӑхӑтри е иртнӗ вӑхӑтри глагол сказуемӑйсем пулаҫҫӗ.

1. ***Ҫуракине вӑхӑтра тӑваҫҫӗ (турӗҫ-тунӑ) пулсан,*** *тырӑ аван пулать.* 2. ***Эпир хамӑрӑн ҫӑмӑл промышленноҫпа хамӑрӑн ҫимӗҫ промышленноҫне малалла илсе пырас тетпӗр пулсан,*** *пирӗн техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвассине ӳстернӗҫемӗн ӳстерсе пымалла.* (*Ст.*)

Кунта тӗп предложени *тырӑ аван пулать. Ҫуракине вӑхӑтра тӑваҫҫӗ пулсан* пӑхӑнуллӑ предложени пулать. Вӑл тырӑ аван пулни мӗнрен, мӗнле условирен килнине ӑнлантарса парать. Иккӗмӗш хутлӑ предложенин тӗп предло-

женийĕ—*пирĕн техникăллă культурăсем акса тăвассине ÿстернĕçемĕн ÿстерсе пымалла.* Тĕп предложенири шухăша тăвасси мĕнле условипе çыхăннине малтанхи пăхăнуллă предложени кăтартса парать.

Сказуемăй япала ятĕнчев е паллă ятĕнчен пулсан, ун пек предложенисем те, пулсан сăмах йышăнса, условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пулма пултараççĕ.

*1. Ку чул* ***колчедан пулсан,*** *вăл йывăр туртмалла.*

*2.* ***Октябрьти аслă революциччен Чăваш республикинчи хресченсем ял хуçалăх машинисене курман пулсан,*** *халĕ кашни колхозник колхозра мĕнпур çĕр ĕçĕсенче машинăсемпе усă курать.*

**115-мĕш упражнени.**

Текстран малтан тĕллевпе условие, унтан условие çеç пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложенисене пĕр йĕрпе, вĕсене çыхăнтаракан союзла сăмахсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

1. Кĕртместĕн пулсан, эп вăйпах кĕреп. (*Элк.*) 2. Апшур командин аллине лексен, каçарĕç тесе, ан кĕт, ан ĕнен! (*Элк.*) 3. Чакка, хăвăртрах пытанас тесе, çырма еннелле çавăрать лашине. 4. Эпĕ, паллакан чăваш салтакĕсене курас тесе, кăшт çĕкленсе, хамăн икĕ енне пăхрăм. (*Элк.*) 5. Хĕпĕртеççĕ çăлтăрсем уйăх тухнă чух, çутăра выляма лайăхрах тесе. (*Лерм.*) 6. „Пирĕн анне колхоза кĕнĕ пулсан, эпир те çав колхоз ачисемпе пĕрлех пулăттăмăрччĕ",—тет Хветюк, чĕререн кăмăлсăрланса. (*Труб.*) 7. Эпир мирлĕ пурнăçăн ырлăхĕсемпе усă куратпăр пулсан, вăл пирĕн питĕ лайăх хĕçпăшаллă вăйсемпе, социализмлă лайăх хуçалăх пуррипе пулчĕ. (*Ворош.*)

## 55 §. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Кун пек пăхăнуллă предложенисем пулсан та, пулин те сăмахсем хушăннипе пулаççĕ. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенире калакан ĕç тепĕр майлă пулнине, ăна хирĕçленине пĕлтереççĕ.

*Каç пулчĕ пулсан, вулама тĕттĕм пулĕ.* Çапла каласан, тĕп предложенипе пăхăнуллă предложенире каланисем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăраççĕ. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пулсан, çакăн пек килĕшĕве курмастпăр: *Каç пулчĕ пулсан та, вулама тĕттĕм мар-ха.* Кунта пăхăнуллă предложенире калани тĕп предложенире каланипе килĕшмест. Кунта икĕ предложенири шухăш хирĕçÿллĕ пулса тăраççĕ.

Условиллĕ пăхăнуллă предложенирен хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени та, те татăк хушăнтарнипе пулать.

1. ***Çĕр тĕттĕм пулин те,*** *ял пĕтĕмпех курăнатчĕ.* 2. ***Çанталăк кĕркунне енне сулăннă пулсан та,*** *хĕвел ăшшăн пăхса ачашлать.* (*Чалд.*)

**116-мĕш упражнени.**

Çакӑнти хирĕçлеве пĕлтерекен пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене суйласа çырса илĕр, союзла сӑмахсене аялтан туртӑр.

1. Çил те, юр та вӑйлансах кайнӑ пулин те, маяксем курӑнса пынӑ. (*Л. Толст.*) 2. Чĕррĕн юлнисем тупӑсем патĕнчен татӑлма пĕлмесĕр кускаласа çӳренĕ пулсан та, пересси кӑштах лӑпланнӑ. (*Н. Остр.*) Стахановецсем техникӑллӑ нормӑсене пилĕк хут, ултӑ хут хӑпартрĕç пулсан, ку ĕнтĕ вĕсем пĕтĕмпех, йӑлтах çĕнĕ техника çине тайӑнса ĕçленине пĕлтерет. (*Ст.*) 4. Сӑнĕ-пичĕ салху пулсан та, хӑй час-часах шӳтлĕ сӑмахсемпе выляткалани те пулать. (*Элк.*) 5. Большевиксем йывӑрлӑхсене çĕнтерме вĕренмен пулсан, капитализма хирĕç кĕрешес ĕçре тахçанах пĕтсе ларнӑ пулĕччĕç. (*Ст.*) 6. Комсомол йывӑрлӑхсенчен хӑранӑ пулсан, вӑл комсомол та пулман пулĕччĕ. (*Ст.*) 7. Пирĕн çĕршыв васкарах малалла уттӑр тетĕр пулсан, эсир хӑвӑрӑн пултарулла вӑйӑрсене пĕр чарӑнмасӑр сарса пырӑр. (*Кал.*). 8. Левинсон, темĕнле хытӑ çывӑрнӑ пулин те, çавӑнтах куçне уçса тӑрса ларчĕ. (*Фад.*) 9. Юр çунӑ пулсан та, никам та çуна кӳлсе тухман-ха. 10. Хӑйĕн арӑмне тем пек хисеплетчĕ пулин те, Иван Кузьмич служба йĕркипе хӑйне шанса панӑ вӑрттӑн хыпара тем парсан та каласа кӑтартас çукчĕ. (*Пушк.*)

## 56 §. Пиркене пĕлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем.

Пиркене пĕлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем тĕп предложенири ĕç мĕнрен килнине, мĕн пирки пулнине ӑнлантарса параççĕ. Кун йышши пӑхӑнуллӑ предложенисем тĕп предложенипе **мĕншĕн тесен** союзпа, хӑш-пĕр чухне **тесе** союзлӑ сӑмахпа çыхӑнса тӑраççĕ. Кун пек хутлӑ предложенисенче тĕп предложени малта тӑрать, **мĕншĕн тесен** союз пӑхӑнуллӑ предложенин пуçламӑшĕнче тӑрать.

1. *Шуррисен штабне пĕр пӑшал сассисĕр çавӑрса илтĕмĕр,* ***мĕншĕн тесен хуралта тӑракан салтаксем пурте пирĕн майлӑ пулчĕç.*** (*Чалд.*) 2. *Чул шывра пулать,* ***мĕншĕн тесен вӑл шывран йывӑр.***

**117-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Пӑхӑнуллӑ предложенисене аялтан туртӑр, мĕнле пӑхӑнуллӑ предложени пулнине кӑскен çырӑр.

1. Гудок çĕнĕрен уласа ячĕ, анчах халь ĕнтĕ татӑкӑн-татӑкӑн мар, мĕншĕн тесен Птаха ӑна пиçиххипе карӑнтарса çыхсах хунӑ. (*Н. Остр.*) 2. Пилĕк сехет хушшинче çирĕм çухрӑм та каяймарӑмӑр, мĕншĕн тесен çулĕ япӑхчĕ. (*М. Горьк.*) 3. Макçӑм Нарымĕнчен юлас мар тесе, йĕлтĕрсене васкатса шутарать. (*Чалд.*) 4. Василиса Егоровна хӑйпе пĕрле Машӑна та,

ăна пĕччене кичем ан пултăр тесе, илсе кайнă. (*Пуш.*) 5. Анне те, пир кумас тесе, кăшкарсем йăтса кĕчĕ. (*Ис. М.*) 6. Батальон тăрса хускаличчен каллех çывăрса илес тесе, васкасах палаткăна чăмрăм. (*Элк.*) 7. Ĕçсенчен пушансан, чей вĕретме шыв ăсас тесе, эпĕ хыçалти улăха антăм. (*Элк.*) 8. Лайăх вĕренес тесе, эпир пур учебниксене те хатĕрлерĕмĕр. 9. Эпир хаçатсене яланах вуласа тăратпăр, мĕншĕн тесен тĕнчери çĕнĕ хыпарсене вĕсемсĕр пĕлме йывăр. 10. Яла кĕнĕ чух, унта нимĕçсем пытанса тăнă пулĕ тесе, пит те асăрханса пытăмăр. (*Элк.*) 11. Окопа çитсе кĕрес тесе, татах ик-виç хут ярса пусатăп. (*Элк,*)

## 57 §. Ĕç хыççăн мĕн пулнине (следствие) пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем.

Ĕç хыççăн мĕн пулнине пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенири ĕç хыççăн пулакан ĕçе, урăхларах каласан, тĕп предложенири ĕçĕн результатне, следствине кăтартаççĕ.

Кун йышши пăхăнуллă предложенисене çавăнпа, вара союзсем çыхăнтараççĕ. Пăхăнуллă предложени иккĕмĕш вырăнта, союз унăн умĕнче тăрать.

1. *Çĕре минерал çăнăхĕсемпе çĕнетрĕмĕр,* ***çавăнпа тырă лайăх пулчĕ.*** 2. *Ялан тăрăшса вĕрен,* ***вара санăн çирĕп пĕлӳ пулĕ.***

**118-мĕш упражнени.**

Ĕç хыççăн мĕн пулнине (следствие) пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисене çырса илĕр. Пăхăнуллă предложение çыхăнтаракан союзсене пĕр йĕрпе, пăхăнуллă предложенисене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

1. Эпир дисциплинăна çирĕплетрĕмĕр, вара прогулсем пĕтрĕç. 2. Пирĕн патра шартлама сивĕсем пулчĕç, çавăнпа вырăнĕ-вырăнĕпе улмуççисем хăрчĕç. 3. Эпир яланах тасалăхшăн кĕрешетпĕр, сывлăха çирĕплететпĕр, çавăнпа чирчĕртен хăтăлатпăр. 4. Каçхине ман пата кил, вара кино курма кайăпăр. 5. Петĕр килчĕ, çавăнпа хурала кайăр. 6. Каç пулчĕ, вара электричество çутрăмăр.

## 58 §. Союзсемпе е союзла сăмахсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене запятойпа уйăрасси.

1. Союзлă е союзла сăмахлă пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенисенчен яланах запятойпа уйăраççĕ.

1. *Ĕçе мĕн кансĕрлет, çавсене пурне те сирсе ямалла.* 2. *Кам хамăр тăван çĕршыв малашне те хăватлă, культурăллă, ирĕклĕ социализмлă держава пултăр тесе тă-*

*рӑшать, вӑл коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑлать.* 3. *Пилӗк сехет хушшинче ҫирӗм ҫухрӑм та каяймарӑмӑр, мӗншӗн тесен ҫулӗ япӑхчӗ.* (*М. Горьк.*)

2. Хӑш-пӗр обстоятельствӑсене кӑтартакан пӑхӑнуллӑ предложенисем тӗп предложени варрине кӗрсе ларма пултараҫҫӗ. Ун пек чухне вӗсене яланах икӗ енчен те запятойпа уйӑраҫҫӗ.

1. *Эпир, тӗнчери хыпарсене пӗлсе тӑрас тесе, хаҫатсем вулатпӑр.* 2. *Ҫӗре, вӑйлӑ тырпул илес тетпӗр пулсан, удобрени нумайрах памалла.* 2. *Туристсем, хӗвел аннӑ ҫӗре ӑҫта ҫитнӗ, ҫавӑнтах ҫӗр каҫнӑ.*

3. Предложенире союзла сӑмахпа мӑшӑрлӑ местоимени е наречи пулмасан, пӑхӑнуллӑ предложенипе тӗп предложени хушшине тире лартаҫҫӗ.

1. *Кам каласшӑн—калатӑр.* 2. *Савнӑ хӗрӗр мӗн ыйтнӑ—ӑна пурте хатӗрччӗ.* (*К. Ив.*)

**119-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр, пӑхӑнуллӑ предложенисене аялтан туртӑр, кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр. Мӗнле пӑхӑнуллӑ предложени пулнине кӑтартӑр.

I. 1. Кам ҫын ӗнси ҫинче ӗҫлемесӗр пурӑнас тет ҫавӑн валли пирӗн ҫӗршывра вырӑн ҫук. 2. Ҫынсем пурнӑҫа илемлӗрех тӑвас тесе патефон велосипед купӑс туянаҫҫӗ. 3. Хама тем пекех йывӑр айӑп хупласа тӑрать пулин те эпӗ тӗпӗ-йӗрӗпех пур тӗрӗсне таса чӗререн каласа патӑм. (*Пуш.*) 4. Эсӗ мана чӑннипех ырӑ тӑвасшӑн пулсан Оренбурга тухса кайма ирӗк пар. (*Пуш.*) 5. Уйӑх хӑпарман пулсан та ҫапах кӑшт курма пулать. (*В. Короленко.*) 6. Техникӑна ӑна алла ҫавӑрса илнӗ ҫынсем ертсе тытса пыраҫҫӗ пулсан тӗлӗнмелле хӑватлӑ ӗҫсем тума пултарать тума та тивӗҫлӗ. (*Ст.*) 7. Хӗвел аннӑ пулин те таса уйра ҫухрӑма яхӑнран мӗн-мӗн ҫӳрени аванах палӑрать-ха. (*Элк.*) 8. Кун каҫиччен ӗшенсе ҫӳренӗ пулсан та Иванӑн вӑйя тухас килнӗ.

II. 1. Ҫул чиперех пулмин те чун шикленми пулчӗ ӗнтӗ. (*М. Фёд.*) 2. Тул ҫутӑлнӑ чух тин выртнӑ пулин те Тарас ирех тӑчӗ. (*Агак.*) 3. Амӑшӗпе шӑллӗне вӑратас мар тесе Тарас хуллен сӗтел хушшине ларчӗ. (*Агак.*) 4. Кӑмала лӑплантарас тесе Ульяна пӗрер ҫавра мӗнле те пулин юрӑ юрлама шикленчӗ анчах нимӗнле кӗвӗ те килмерӗ ун чӗлхи ҫине. (*Тукт.*) 5. Сывалса ҫитнӗ пулин те усал синкеке Чакка манаймасть. (*Элк.*) 7. Кам ялтан каять Униҫӗм пурне те ӑсатать. (*Ис. М.*) 8. Тем илет тем сутать пасарта Мучар тем тума каять пасара ӑна никам та пӗлмест. (*Труб.*) 9. Эй, аттеҫӗм, аннеҫӗм, Сетнерпеле пехиллӗр ҫавӑн чухне тин вара ӗмӗр пӗрле пулӑпӑр. (*К. Ив.*)

## 59 §. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисем.

Хутсăр предложенисем пĕр пăхăнуллă хутлă предложение союзсăр та пĕрлешме пултараççĕ. Хутсăр предложенисем хутлă предложение пĕрлешнине калаçура интонаци кăтартать, çырура çакнах чарăну паллисем лартни кăтартать. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисем хутсăр предложенисем хушшинчи шухăшсем пĕр-пĕрин тĕлĕшĕнчен çапла тăма пултараççĕ.

1. Пĕрремĕш предложени иккĕмĕш предложенири ĕçĕн условине е вăхăтне кăтартать, ăна шухăш енчен пăхăнса тăрать.

*1. Çĕре удобрени хыв—вăл нумай тухăçлă тырпул парĕ.* Ку предложенири шухăша союзлă пăхăнуллă хутлă предложенипе калама пулать. *Çĕре удобрени хыврăр* ***пулсан,*** *вăл нумай тухăçлă тырпул парĕ.*

*2. Пирĕннисем килеççĕ—вĕсем хăтараççĕ. (Н. Остр.) (Пирĕннисем хăçан килеççĕ,* ***çавăн чухне*** *вĕсем хăтараççĕ.)*

2. Иккĕмĕш предложени пĕрремĕш предложенири ĕç мĕн пирки пулнине е пулманнине кăтартать.

*1 Эпĕ иртнĕ собранире пулаймарăм: мана командировкăна ячĕç. (Эпĕ иртнĕ собранире пулаймарăм,* ***мĕншĕн тесен*** *мана командировкăна ячĕç.)*

3. Иккĕмĕш предложени пĕрремĕш предложенири шухăша уçса ăнлантарса парать е уншăн дополнени пулать.

*1. Пĕр япаларан çеç шикленетĕп хам: çул çинче тытса чаракан ан пултăрччĕ. (Пуш.) 2. Хăра-хăрах кÿмерен сиксе антăм та куратăп: крыльца çинче анне тăра парать. (Пуш.) 3. Куртăн-и, охранниксем унталла чупса кайрĕç. (Н. Остр.) 4. Астăватăп пĕр лăпкă каç эпир кукамайпа кукаçей пÿлĕмĕнче чей ĕçсе лараттăмăр. (М. Горьк.)*

## 60 §. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.

1. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенире пĕрремĕш предложени вăхăта, условие кăтартсан, предложенисем хушшинче тире лартаççĕ.

*1. Хĕвел тухрĕ—хире кайăпăр. 2. Тасалăхшăн кĕреш—чир ермĕ.*

Асăрхаттарни. Тĕп ĕç хыççăн пĕр-пĕр ĕç пулнине (следствие) кăтартакан хăш-пĕр пăхăнуллă предложенисенче çапах, вара союзсем пулмасан, калаканĕ иккĕмĕш предложенири ĕç тĕп предложенири ĕç пулнипе çеç çыхăнтарать пулсан, тĕп предложенипе следствие кăтартакан пăхăнуллă предложени хушшине тире лартаççĕ.

*Качча пачĕç ирĕксĕр—пулмарĕ-çке ырлăха. (К. Ив.)*

2. Иккĕмĕш предложени пĕрремĕш предложенири ĕç мĕн пирки пулнине кăтартать пулсан, е пĕрремĕш предложенири шухăша уçса, ăнлантарса парать пулсан, предложенисем хушшине двоеточи лартаççĕ.

*Çăла ан сур: хăвăнах шыв ĕçесси килĕ.* (*Посл.*)

**120-мĕш упражнени.**

Тĕслĕхсене вулăр. Предложенири шухăшсем хушшинчи çыхăнăва кăтартăр. Чарăну паллисене ăнлантарса парăр.

1. Кăнтăрла çитсе те тăнă иккен: сынсем, кĕлтесем йăтса, апат çимелли вырăн хатĕрлеççĕ. 2. Пурте васкаççĕ: демонстрацие вăхăта çитесшĕн. 3. Укçа пар — кĕвеке илĕп. 4. Дисциплина пултăр — прогулсем пулмаççĕ. 5. Фёдор Чапаева шăтаракан куçпа хăвăрт-хăвăрт хыпашласа çаврăнчĕ: хăвăртрах пăхса илсе, ăна пĕтĕмпех курса, пĕтĕмпех ăнланса илес килчĕ. (*Фурм.*) 6. Коопераци пекарнинче Унтри хăйне хăй хуçа пек туять, ирĕклĕн сывлать: ăна никам та пусмăрламасть. (*Элк.*) 7. Атя, Нарспи, ан хуйхăр: санăн аçу пур вĕтха. (*К. Ив.*)

**121-мĕш упражнени.**

Çак предложенисене кирлĕ çĕре чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

1. Лавçă лашине пиллĕкмĕш хапха умне тăратрĕ çав киле кĕме калана вĕт-ха ăна. (*М. Труб.*) 2. Миките шутлани тĕрĕс пулнă вăл вăрман пулман йĕркипе ларакан çӳллĕ хăвасем пулнă. (*Л. Толст.*) 3. Вăл тĕлĕк курса вырăнă мĕн хуçа çăнăхĕпе армантан таврăнать пек çырма урлă каçнă чух вăл кĕпер айккине кайнă та унăн урапи путса ларнă пек. (*Л. Толст.*) 4. Кăмпи пултăр кунтăкĕ тупăнĕ. 5. Çанталăкĕ мĕнле çултан пăрăнса кайма часах. (*Пуш.*) 6. Ашшĕ хăраса кайрĕ çав тери нумай маттур ачасен умĕнче ăна хăйнех лайăх мар пек туйăнчĕ. (*Х. С.*) 7. Атăл шывĕ ăшăнĕ шыва кĕрĕпĕр. 8. Ниепле те ăна шывпа кайма май килмен Атăл пăртан тасалса çитмен.

9. Каласа кăтартăп тăвансем сире
Тискер ĕç пулчĕ çав манпала паян. (*Лерм.*)

10. Нарспи тĕлĕк тĕлленет
Ашшĕ йытă пулнă та
Шăлĕсемпе шаккаса
Сиксе çӳрет вăрманта. (*К. Ив.*)

**122-мĕш упражнени.**

Малалла панă икшер предложенисенчен май килнĕ таран, нумай тĕслĕ сыпăнуллă хутлă предложенипе пăхăнуллă хутлă предложени тăвăр. Вĕсем союзлă та, союзсăр та пулма пултараççĕ. Мĕнле хутлă предложени пулнине скобкăра çырса парăр.

Тĕслĕх:

*Капитан команда пачĕ те, машинист машинăна чарчĕ.*

Союзсемпе, союзла сăмахсемпе:

1. *Капитан команда пачĕ. Машинист машинăна чарчĕ.* (Сып. хутлă предл.)

2. *Хăçан капитан команда парать, ун чухне машинист машинăна чарать.* (Вăх. кăт. пăх. хут. предл.)

3. *Машинист машинăна чарчĕ, мĕншĕн тесен капитан команда пачĕ.* (Пир. кат. хут. предл.)

4. *Капитан команда пачĕ, çавăнпа машинист машинăна чарчĕ.* (След. кăт. пăх. хутлă предл.)

5. *Машинист машинăна чартăр тесе, капитан команда пачĕ.* (Тĕл. кăт. пăх. предл.)

Союзсăр:

1. *Капитан команда пачĕ—машинист машинăна чарчĕ.* (Сып. хут. предл.; пĕр ĕç хыççан тепĕр ĕç хăвăрт пулни; хăвăрт пулмасан, запятой та лартаççĕ.)

2. *Машинист машинăна чарчĕ: капитан* (ăна) *команда пачĕ.* (Пиркене кăт. пăх. хут. предл.)

1. Милиционер свисток пачĕ. Трамвай чарăнчĕ.
2. Звонок пулчĕ. Ачасем класа пуçтарăнчĕç.
3. Эпир дисциплинăна çирĕплетрĕмĕр. Прогулсем пĕтрĕç.

**123-мĕш упражнени.**

Чарăну паллисем лартса, текста çырса илĕр. Вĕсене мĕншĕн лартмаллине ăнлантарăр.

Микола пичче Хрискăна уринчен пуçласа пуç тӳпине çитиех пăхса илчĕ. Унтан вăл пĕр хушă шухăша кайса ларчĕ те ачасем çине çав тери ăшшăн пăхса илчĕ.

„Çапах та вилес марччĕ-ха. Эпĕ хуть пурăнса курнă çын анчах эсир çамрăк сирĕн пурнăçăр малта. Пуççене усма кирлĕ мар. Хуть те мĕнле хурлăх пулсан та парăнма юрамасть. Парăнман çын вăл юлашкинчен пурĕпĕр çĕнтерет. Çĕнтерет те тата лайăхрах пурăнма пуçлать мĕншĕн тесен пурнăçăн хакне ытларах пĕлекен пулать. Вăл калама чарăнса тата тепĕр минут пек тем çинчен шухăшларĕ. Ан хăрăр эпир пурĕпĕр тарса хăтăлатпăр. Каймастпăр эпир неметчинăна. Курăр акă. Анчах эсир манран пĕр шит те ан уйăрлăр эпĕ хушнисене пурне те тĕп-тĕрĕс туса пырăр. Ăнлантăр-и?"

Микола пичче çав тери ĕнентермелле каларĕ. Ачасен чĕрисенче тыткăнран çăлăнас шанчăк çуралчĕ. (*Агак.*)

### Хутлă предложенисем çинчен вĕреннисене аса илмелли упражненисем.

**124-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Кирлĕ çĕре чарăну паллисем лартăр. Вĕсене мĕншĕн лартмаллине ăнлантарăр.

## СИЛПИ ЯЛЁНЧЕ.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса
Тусем сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен
Сивĕ хаяр хĕл иртет
Каять йĕрсе хурланса

Сивĕ куççульпе йĕрет
Иртнĕ куншăн хуйхăрса
Путăксемпе варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет
Анчах мĕнле йĕрсен те
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет
Хĕл куççулĕ шавласа
Юхса кайрĕ çырмара
Ачи-пăчи выляса
Чупса çӳрет урамра (*К. Ив.*)

**125-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Кирлĕ çĕре чăрăну паллисем лартăр. Вĕсене мĕншĕн лартмаллине ăнлантарăр.

Пурне те пултаракан Петька çăкăр тупрĕ котелокпа шыв вĕретсе хатĕрлерĕ ултă катăк сахăр тупса килчĕ ĕмсе пĕтерне вараланчăк катăксем. Пурте савăнăçлăн кĕрлесе кайрĕç. Пӳртре калама çук вăйлă шав кĕрлесе тăчĕ. Ку таранччен йывăр ыйхăпа çывăрнă краснормеецсем те тĕлĕне-тĕлĕне вăранса кайреç хăшĕ кăшкăрнăран хăшĕ урасемпе пыра-пыра тапнăран пичĕсем тăрăх атăсемпе винтовкăсемпе шинельсемпе мĕнле пырса лекнĕ унпа сăтăра-сăтара илнĕрен. Кашниех хăйĕн савăтне йăтса хыпаланма пуçларĕ. Тепĕр пилĕк минутран сĕтеле пӳрт варрине сиктерсе лартрĕç ун йĕри-тавра йĕнерсем çине хăмасем çине вутă пуленкисем çине хĕсĕнкелесе ларчĕç хăшĕсем тата урайнех чĕркуçленкелесе ларчĕç. Сарă çурта питĕ тĕксĕммĕн çуннă çавăнпа пӳртре питсем вырăнне хура мĕлкесем анчах курăнса тăна.

Фĕдор пӳртрен тухрĕ те хирелле кайма тăчĕ анчах пӳртре юрласа янине илтрĕ.

**126-мĕш упражнени.**

Кирлĕ çĕрте чăрăну паллисем лартса, текста çырса илĕр.

Улемпин аслă ачи Петруш тетчĕç ăна вунпилĕк çулсене çитнĕ çĕре сĕрме купăс калама вĕреннĕ. Таçта вĕреннĕ ăна вăл темле вĕреннĕ пĕлместĕп анчах та тĕрлĕрен тĕрлĕ çемĕсем калатчĕ. Тĕлĕнмелле хитре калатчĕ. Хăй музыкăна шкулта-мĕнте вĕренменскер хут çине пăхса мар ахалех калатчĕ те ĕнтĕ çапах та лайăхах кăларатчĕ. Унăн музыкине пурте юрататчĕç. Хăй те каçсах каятчĕ ĕнтĕ музыкăшăн. Сĕрме купăспа вăхăт нумай irттернĕ пирки амăшĕ тем пекех вăрçнă пулсан та пăрахмастчĕ ăна кăшт май килсенех алла тытатчĕ. Тепĕр чухне каç-каç унăн тантăшĕсем урамра тĕрлĕрен вăйăсем вылятчĕç вăл халăхран аяккарах е ял хыçĕнчиката хĕррине е арман пĕви хĕррине кайса ларатчĕ те таттисĕр макăртатчĕ хăйĕн кивĕ сĕрме купăсне. (*Агак.*)

**127-мěш упражнени.**

Кирлě çěрте чарăну паллисем. лартса текста çырса илěр.

## КОМСОМОЛ ÇУЛĚ.

Çěре хыпса илнěччě çулăм
Асрах-ха вунсаккăрмěш çул
Çуралтăн вутра комсомолăм
Сана тěрěслерě кун-çул.
Эс партипе утрăн ялан
Çěклерěн çěршывăн ятне.
Мала комсомолăм мала!
Пěр çул коммунизм патне!
Эп паттăр йышпа кар
çěклентěм
Тăрса çěнě стройка умне.
Çěршывăм сад пек чечекленчě
Йăлтах улăштарчě сăнне.

Кашларě вăрманě уй-хирě
Çěршыв çине çурě тăхлан
Эс тухрăн вут-çулăма хирěç
Арканчě тěп пулчě тăшман.
Çулпуçăмăр Сталин мухтавлăн
Пур чух та ертсе пынипе
Унтан эс хăюллăн хăватлăн
Аттемěр Ильич çулěпе.
Эпир малта пынă ялан
Çěкленě Çěршывăн чапне.
Мала комсомолăм мала!
Пур çул коммунизм патне!
(*Урташ.*)

# Предложенилле членсем.

## 61 §. Предложенилле членсем çинчен кĕскен калани.

Ку таранччен вĕреннĕ предложени членĕсем: подлежащи, сказуемăй, определени, обстоятельство, дополнени — çаксем пурте пекех пĕр сăмахран тăратчĕç. Икĕ сăмахран тăракан членсенчен эпир хыççăмахлă членсемпе тата хутлă сказуемăйпа паллашрăмăр. Кунсăр пуçне тата эпир подлежащи те, сказуемăй та, определени те, обстоятельство та, дополнени те темиçе сăмахран (предложенирен) пулнине куратпăр.

Тĕслĕхсем:

| | |
|---|---|
| 1. *Вăхăтра çумăр çурĕ. Вăл тырăсене усăллă пулчĕ.* | ***Вăхăтра çумăр çуни тырăсене усăллă пулчĕ.*** |
| 2. *Эпир вĕренетпĕр. Шкул çĕнĕ.* | ***Эпир вĕренекен шкул çĕнĕ.*** |
| 3. *Радио çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет. Эпĕ ăна кашни кун итлетĕп.* | ***Радио çĕнĕ хыпарсем пĕлтернине** эпĕ кашни кун итлетĕп.* |
| 4. *Хĕвел анчĕ. Эпĕ киле çитрĕм.* | ***Хĕвел ансан,** эпĕ киле çитрĕм.* |

Кунта сулахай енче икшер предложени парса пынă. Икĕ предложени кăтартакан шухăшсене сылтăм енче пĕр предложенипех кăтартса панă.

Сылтăм енчи предложенисене разбор тунă чухне эпир акă мĕн куратпăр. Кунта предложенисенче хулăн саспаллипе пичетленĕ сăмах майлашăвĕсем пĕр ыйтура тăраççĕ, пĕр член пулаççĕ: 1) мĕн?—*вăхăтра çумăр çуни*; 2) мĕнле?—*эпир вĕренекен*; 3) мĕне?—*радио çĕнĕ хыпарсем пĕлтернине*; 4) хăçан?—*хĕвел ансан*. Малтанхи предложенире темиçе сăмах майлашăвĕ подлежащи пулать, иккĕмĕшĕнче—определени, виççĕмĕшĕнче—дополнени, тăваттăмĕшĕнче обстоятельство пулать.

Сылтăм енчи темиçе сăмахлă предложени членĕсене сулахай енчи предложенисемпе танлаштарсан, вĕсем предложе-

ни евĕрлине куратпăр: предложени, хăйĕн глагол сказуемăйне причасти е деепричасти формипе улăштарса, предложение пĕр член пулса кĕрет.

**Предложени евĕрлĕ членсене предложенилле членсем теççĕ.**

Çапла вара, предложенире предложенилле подлежащи, предложенилле определени, предложенилле дополнени, предложенилле обстоятельство пулнине куртăмăр.

Вĕсен пĕлтерĕшĕ те, ыйтăвĕсем те пĕр сăмахлă предложени членĕсен пекех, анчах кунта уйрăмлăхсем те пур. Пĕр сăмахлă предложени членĕ пĕр япалана е унăн паллине, пĕр ĕçе е унăн паллине кăтартать.

Предложенилле член та çавнах кăтартать, анчах сарлакарах, тарăнрах, мĕншĕн тесен предложенилле член майлашăвне кĕрекен сăмахсем хăйсен уйрăм çыхăнăвĕсене çухатмаççĕ.

Предложенилле членсен ыйтăвĕсем предложенин пĕр сăмахлă членĕсен тĕп ыйтăвĕсемех пулаççĕ, анчах уйрăмлăхсем те пур. Сăмахран, предложенилле определенин ыйтăвĕ яланах мĕнле? Ытти ыйтусем: ăçти? хăçанхи? миçе? т. ыт. кунта пулмаççĕ.

Предложенилле членсене анализ тусан, акă мĕн куратпăр. Вĕсем уйрăм пуçламăш предложенирен пулаççĕ, анчах пур предложенирен те мар. Сказуемăй глагол, причасти, паллă ячĕ пулсан, вĕсенчен предложенилле член ялан пекех пулма пултарать.

Тĕслĕх:

| | |
|---|---|
| 1. *Паян шкулта доклад пулать.* | Паян шкулта доклад пулнăран эпир хамăр класс собранине тепĕр куна куçартăмăр. |
| 2. *Доклад итлеме каяс.* | Пурте доклад итлеме каяссăн васкатпăр. |
| 3. *Доклад аван.* | Доклад аванни часах паларчĕ. |

Предложенилле членсен подлежащийĕ пулать, ăнлантару сăмахĕсем пулма пултараççĕ, анчах сказуемăй нихăçан та пулмасть. Сказуемăй вырăнне причасти, е деепричасти, е ят сăмах (япала ячĕ, хисеп ячĕ) пулать.

Предложенилле член текен темăна подлежащи те, сказуемăй пулакан сăмах çумĕнчи сăмах çаврăнăшĕ те кĕрет, анчах вĕсем пĕр сăмахлă член таран кĕскелме пултараççĕ. Сăмахран: *Çулла ачасем лагерьте канни вĕсен сывлăхне çирĕплетрĕ* предложенирен кĕскелсе: *Канни сывлăха çирĕплетрĕ* юлма пултарать.

*Сулла ачасем лагерьте канни,* хӑй тӗллӗн илсен, — ят предложени. Кунта панӑ предложени составӗнче вӑл подлежащи ҫеҫ, анчах анлӑ, предложенилле подлежащи.

Ытти предложенилле членсем е сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем те кӗскелме пултараҫҫӗ. *Вӑл, вӑрманта ӗҫлесе ӗшеннипе, часах ҫывӑрса кайрӗ. Вӑл, ӗшеннипе, часах ҫывӑрса кайрӗ.*

Ҫапла вара, предложенилле членӑн подлежащийӗ пур чухне шухӑша кӑтартас тӗлӗшрен предложенилле член кӗрекен предложенисем хутлӑ предложенисене ҫывӑх тӑраҫҫӗ, анчах вӗсене предложенилле членлӑ предложени теҫҫӗ.

Предложенилле член, хӑйӗн подлежащине тата ытти членсене пӑрахса кӗскелсен, сӑмахсен ҫаврӑнӑшӗ (оборот) ҫеҫ пулса тӑрать. Ун пек предложенисене предложенилле член та, сӑмах ҫаврӑнӑшӗ теме те юрать.

*- Са, - се; - а,- е* аффикслӑ деепричастипе ҫыхӑнакан сӑмахсен подлежащийӗ пулмасть, ҫавӑнпа вӗсене деепричастиллӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ (оборот) теҫҫӗ.

Пӗр предложенилле членра тепӗр предложенилле член пулма пултарать.

***Ҫынсем** (ҫиҫӗм ҫиҫнине) **ӑнланса илни** хӑй вӑхӑтӗнче пысӑк ҫитӗнӳ пулнӑ.*

Кунта *ҫынсем ҫиҫӗм ҫиҫнине ӑнланса илни* предложенилле член — подлежащи пулать. Ҫак предложенилле члена *ҫиҫӗм ҫиҫнине* предложенилле член (дополнени) кӗрет.




Предложенилле членсем пӗр йышши членсем пулма пултараҫҫӗ. *Иккӗмӗш пятилеткӑпа ҫыхӑнса тӑракан йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пыни, хуҫалӑхпа политикӑллӑ ӗҫсем енчен питӗ пысӑк та ҫӗнӗ задачӑсем кӑларса, вӗсене татса пани, троцкистла-бухаринла, фашистла агентурӑна хирӗҫ хаяррӑн кӗрешни, ӑна тӑрӑ шыв ҫине*

*кăларса çĕмĕрсе тăкни—çаксем пурте парти речĕсене пиçĕхтерчĕç, большевиксене çĕнĕ вăйсем пачĕç.* („*Правда*" *5/III—39 ç.*)

**128-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Предложенилле членсене аялтан туртăр, тăрне вĕсен ыйтăвĕсене лартăр.

1. Тусем, сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен;
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.
(*К. Ив.*)

2. Хĕвел анса ларсанах,
Питне çăвать, шăлăнать.
(*К. Ив.*)

3. Атте-анне ăссăртан
Пулчĕ асапăм анчах.
(*К. Ив.*)

4. Атте-анне ăссăри
Ырлăха мар хурлăха. (*К. Ив.*)

5. Вăрман хĕсĕк çулĕпе
Ăш çуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек,
Пырать Сетнер юрласа. (*К. Ив.*)

6. Шурă юр шăтăртатнă пек туйăнчĕ. (*Лерм.*)

7. Пĕлĕтсем айнелле пытанакан çăлтăр
Çавăнтах çĕр çине сирпĕнсе анать. (*Лерм.*)

## 62 §. Предложенилле определенисем.

Предложенилле определени япала мĕнлине ĕç тăрăх кăтартать, çав вăхăтрах ĕçне кам тунине те палăртса хурать. Унăн ыйтăвĕ яланах **мĕнле?** пулать. Ытти ыйтусем пулмаççĕ.

*1. **Бригада ĕçе тухас** вăхăт çитрĕ. 2. **Эпир физика вĕренекен** кабинета çĕнĕ приборсем килнĕ. 3. **Тырпул тухăçлăхне ўстермелли** майсене кашни колхозникăн пĕлес пулать.*

Çак предложенисенчи предложенилле определенисене хулăн саспаллисемпе палăртнă. Вĕсен пурин те ыйтăвĕ **мĕнле?** Пĕрремĕш предложенире вĕсем подлежащи мĕнлине, иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕнче дополнени мĕнлине кăтартаççĕ.

Предложенилле определенисен пĕлтерĕшĕ пĕр сăмахлă определенисен пĕлтерĕшĕнчен таранрахха курăнать, çакна иккĕмĕш предложенире асăрхăр. Мĕнле кабинета?—***Вĕренекен** кабинета.* Анчах пур вĕренекен кабинета та мар, ***физика вĕренекен** кабинета.* Физика вĕренекен пур кабинета та мар, ***эпир физика вĕренекен** кабинета.*

Предложенилле определенисен юлашки сӑмахӗ — хальхи, иртнӗ, пулас, пулмалли причастисем, ҫавӑнпа вӗсем япала мӗнлине вӑхӑт енчен тата япала мӗне кирли енчен те палӑртаҫҫӗ.

Пуҫламӑш предложенирен предложенилле член тунӑ чухне пуҫламӑш предложенири сӑмахсен йӗрки улшӑнмасть. Ҫак йӗрке предложенилле определени тунӑ чухне те палӑрать. *Эпӗ хулана каятӑп. Автобус килнӗ.* ***Эпӗ хулана каякан*** *автобус килнӗ.*

Анчах кунта пӗр уйрӑмлӑх пур. Предложенилле определени тӑвакан пуҫламӑш предложенири подлежащи, дополнени, обстоятельство пулакан сӑмахах тӗп предложение кӗрет пулсан, предложенилле определени тӑвакан пуҫламӑш предложенири сӑмахсен йӗрки улшӑнать.

*Автобус хулана каять. Вӑл килчӗ.* ***Хулана каякан*** *автобус килчӗ.*

*Автобус хулана каять. Ӑна эпӗ куртӑм.* ***Хулана каякан*** *автобуса эпӗ куртӑм.*

*Эпӗ лаша кӳлнӗ. Вӑл урамра тӑрать. Эпӗ кӳлнӗ лаша урамра тӑрать.*

*Эпӗ вӑрмана каятӑп. Вӑл 4 километрта.*

*Эпӗ каякан вӑрман 4 километрта.*

**129-мӗш упражнени.**

Ҫырса илӗр, предложенилле определенисене аялтан туртӑр. Вӗсем мӗнле члена ӑнлантарнине кӑтартӑр.

I. 1. Майӑн пӗрремӗш праҫникне уявласа иртерме чӗнекен листовкӑсене рабочисем кашни каҫах хӳмесем ҫине ҫыпӑҫтара-ҫыпӑҫтара тухнӑ. (*М. Горьк.*) 2. Пӳртумне таптанса ларнӑ юр унӑн ҫӑматтисем айӗнче кӑчӑртатнӑ. (*Л. Толст.*) 3. Аслашшӗн хӑйӑлтатса тухакан сасси Лӗнькӑн чӗрине ыраттарнӑ. (*М. Горьк.*) 4. Таврара тӗллӗн-тӗллӗн сӑртсемпе ҫырма-ҫатра татса каҫнӑ салхуллӑ кичем пушхирсем сарӑлса выртаҫҫӗ. (*Пушк.*) 5. Пилӗк минутран эпир ҫап-ҫутӑ ҫутӑлса ларакан пӗчӗк пӳрт патне ҫитрӗмӗр. (*Пушк.*) 6. Вичкӗн хӗвеланӑҫ ҫилӗ, Дунай урлӑ вашлаттарса, пирӗн хула хӗрринче ларакан бараксене тустарать. (*Элк.*) Имшеррӗн ҫутатаҫҫӗ сарӑ хӑмаран тунӑ барак ӑшчикне сӗтелсем ҫине ҫутса лартнӑ краҫҫын ламписем. (*Элк.*) 7. Кӑнтӑрла тӗлӗнче пирӗн барак алӑкӗ умне мӑшӑр лаша кӳлнӗ пысӑк карета ҫитсе тӑчӗ. (*Элк.*) 8. Юханшывӑн икӗ айӑккипе те тӑсӑлса выртакан чуллӑ урамсем электричество ҫутипе ҫиҫсе ялкӑшаҫҫӗ. (*Элк.*) 9. Лагерь ҫумӗнчех мӑкланса ларнӑ авалхи крепость ишӗлсе ларать. (*Элк.*)

II. 1. Ку ялсенчи тӗрлӗ тӗслӗ черепицӑпа ылмаштарса витнӗ тӑваткӑл ҫурт ҫийӗсем илемлӗн улаланса курӑнаҫҫӗ. (*Элк.*) 2. Кухньӑри ӗҫсем пӗтсен, Мария Ивановна хӑйӗн тин ҫех утма вӗреннӗ Миша ятлӑ ачине манна пӑтти ҫитерет.

(*Элк.*) 3. Район центрне тăлăп тăхăннă çынна лартнă ямшăк çуни пырса кĕчĕ. (*Пайр.*) 4. Хĕвел кĕрхи уçă сывлăшпа саралнă çăка тăррисене çутатнă. (*Пушк.*)

## 63 §. Предложенилле подлежащи.

Предложенилле подлежащи глагол сказуемăллă е паллă ячĕ сказуемăллă пуçламăш предложенирен акă мĕнле майпа пулать: пуçламăш предложенири глаголран е паллă ятĕнчен пулнă сказуемăй выранне и, скер аффикс йышăннă причасти е и аффикс йышăннă паллă ячĕ пулать, предложенири ытти сăмахсем çаплипех юлаççĕ: вĕсен йĕрки те, форми те улшăнмасть.

Предложенилле подлежащи кам? мĕн? ыйтусенче пулать.

*1. Пире ĕçре **хамăр хуçа пулса тăни** кирлĕ.* (*Сталин.*) 2. ***Массăсемпе çыхăнса тăни, çав çыхăнăва çирĕплетсе пыни, массăсен сассине итлеме хатĕр пулни** — акă мĕнре большевикла ертсе пырассин вăйĕпе çĕнтерейми хăвачĕ.* (*Сталин.*)

Кунта икĕ предложенири предложенилле подлежащисене хулăн саспаллисемпе палăртнă. Иккĕмĕш предложенире предложенилле подлежащисем — пĕр йышши членсем, çавăнпа вĕсене запятойпа уйăрнă. Юлашки предложенин „пулать" пулăшу глаголĕ çук, çавăнпа юлашки предложенилле подлежащипе предложенилле сказуемăй хушшине тире лартнă.

Ку тĕслĕхсенчи кашни предложенилле подлежащи глагол сказуемăллă предложенирен глагола и аффикс йышăннă причастипе ылмашнипе пулнă. Предложенилле членăн юлашки сăмахĕ кунта ят падежĕнче тăрать.

1. *Пирĕн колхоз председателĕнче **Совет Çарĕнчен килнĕскер** ĕçлет.*

2. ***Холмогор ĕнисем сĕтли** колхоз фермине пысăк усă пачĕ.*

Кунти пĕрремĕш предложенири предложенилле подлежащи глагол сказуемăйран причастие тухнă ***килнĕ*** сăмах çумне ***скер*** аффикс хушнипе пулнă (***килнĕскер***). Иккĕмĕш предложенири предложенилле подлежащи паллă ячĕ сказуемăй и аффикс йышăннипе пулнă. Ку сăмахсем иккĕшĕ те ят падежĕнче тăраççĕ.

**130-мĕш упражнени.**

Çак предложенисенчен предложенилле подлежащи тăвăр, кирлĕ членсене хушса, предложени тăвăр, вара тетрадьсем çине çырăр.

1. Çумăр вăйлă çурĕ. 2. Хĕлле юр нумай çурĕ. 3. Поезд вăрман витĕр тухрĕ. 4. Пирĕн дисциплина çирĕп. 5. Эпир спектакль лартрăмăр. 6. Çулла ачасем колхозра ĕçлеççĕ.

7. Атăл шывĕ сарăлса выртать. 8. Эпĕ вăтам шкула вĕренме кĕтĕм. 9. Çулсем такăр. 10. Канашпа Шупашкар хушшинче поезд çӳреме пуçларĕ.

131-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. Предложенилле подлежащисене аялтан туртăр.

1. ССР Союзĕнче социализм çĕнтерни ленинизм идейисене пурнăçа кĕртсе пынипе пулчĕ.

2. Зоя çав тери хăюллăн калаçни сухаллă çынна тĕлĕнтерчĕ пулмалла. (*Агак.*) 3. Аннене эпĕ вĕренме кĕни питĕ хĕпĕртеттерчĕ. 4. Атăл шывĕ пăрпа витĕнсе çитейменни мана леш енне каçма чарчĕ. 5. Эпир разведкăна кайни ăнăçлă пулчĕ. 6. Çав вăхăтрах çĕртен нӳрлĕх çĕкленни сисĕнет. Таврара çав тери лăпкă, шăп, унта-кунта кайăксем юрлани çеç илтĕнет. (*Агак.*) 7. Темиçе утăмранах хыçалта тĕмĕсем чаштăртатни, такамсем, çĕре йывăррăн пусса, ура айĕнчи типĕ туратсене шăтăртаттарса утса килни илтĕнчĕ. (*Агак.*)

## 64 §. Предложенилле дополнени.

Предложенилле подлежащи пулакан предложенилле членсемех, ят мар падежсенче пулсан, **предложенилле дополнениcем** пулаççĕ. Предложенилле дополнениcен пĕлтерĕшĕ пĕр сăмахлă дополнениcен пĕлтерĕшĕнчен сарлакарах, ыйтăвĕсем пĕр пекех.

***1. Совет Союзĕн Геройĕсем Çурçĕр полюсĕнче пулса пысăк çитĕнӳсем тунине** капитализмла государствасем те йышăнаççĕ.*

*2. Колхозниксем **Совет Союзĕн Геройĕсем Çурçĕр полюсĕнче наука тĕлĕшĕпе пысăк çитĕнӳсем туни çинчен** доклад итлерĕç.*

Кунти тĕслĕхсенче предложенилле дополнениcене хулăн саспаллипе палăртнă. Предложенилле дополнени, пĕр сăмахлă дополнени пекех, хыççăмахлă пулма пултарать, çакна иккĕмĕш предложени кăтартать.

132-мĕш упражнени.

Çырса илĕр. Предложенилле подлежащисене пĕр йĕрпе, предложенилле дополнениcене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

1. Вăхăт иртни сисĕнмест савăнăçлă кунсенче. (*К. Ив.*) 2. Çав тери персе тăнине хирĕç баррикада чăтса тăрайман. (*В. Гюго.*) 3. Хăвăрттăн утса пыни çынсăр урамăн шăплăхне хускатнă. (*В. Гюго.*) 4. Мотоциклет Шупашкар еннелле иртсе кайнине эпир патĕнченех куртăмăр. 5. Тимĕр витнĕ пӳрт çийĕ кĕмсĕртетни лаша таканĕсен сасси пек туйăннă. (*Шол.*) 6. Коммунизмшăн кĕрешесси—акă пирĕн задача. 7. Çурхи çилпе çĕр каçах уçăла-уçăла хупăнакан чӳрече хуппиcем

чĕриклетни Макара тĕлĕкре те музыка кĕвви пек илтĕннĕ. (*Шол.*) 8. Баррикадăсем çинчен пăшалсемпе харăссăн пени хăрушăлла илтĕнсе кайнă. (*В. Гюго.*) 9. Вĕтĕ хăва катинчен тухсанах, Самарка шывĕ сарăлса выртни курăнчĕ. (*Ис. М.*) 10. Çав вăхăтра инçех те мар йытăсем вĕрни илтĕнсе кайнă. (*Агак.*) 11. Темиçе кунтанах отрядри разведчиксем тĕрлĕ çĕртен нимĕçсем ку еннелле пур йышши çарсене те йышлăн куçарма тытăннине пĕлсе килнĕ. (*Агак.*) 12. Паллах, Якур хăйĕн амăшĕ çинчен каланине тӳрех ăнланма çук. Анчах председатель Якурăн шухăшĕ мĕн çинчен пынине ăнланчĕ, мĕншĕн тесен Якур ăна хăйĕн амăшĕ куштансем çине тарăхни çинчен пĕрре кăна мар каласа панă. (*Долг.*)

13. Нумай кĕрешни, вăй хуни çухалмарĕ,
Ахаль çухатмарĕ нумай юн тăкни.
Ак çитрĕ вăл, çитрĕ, хĕвелĕм çутатрĕ
Эпир кĕтнĕ вăхăт, эпир шутлани. (*Элк.*)

## 65 §. Предложенилле сказуемăйсем.

Ят падежĕнчи япала ячĕсем подлежащи те, сказуемăй та пулма пултараççĕ. Çавăн пекех предложенилле ятран предложенилле подлежащи анчах мар, предложенилле сказуемăй та пулма пултарать.

Предложенилле сказуемăй форми енчен ят предложени евĕрлĕ, пĕлтерĕшĕ те унăн пĕр сăмахлă сказуемăй пĕлтерĕшĕнчен чылай анлăрах.

*1. СССР гражданинĕн чи таса тивĕçĕ—**тăван çĕршыва сыхласси**. 2. Пирĕн тĕп задача—**наука никĕсне çавăрса илесси**. 3. Пирĕн задача—**çак командир кадрĕсен идеологиллĕ тăрăвне тата вĕсен политикăлла пиçĕхлĕхне хăпартасси, çав кадрсен хушшине пысăкрах ĕç парасса кĕтсе тăракан çĕнĕ вăйсене кĕртесси, çапла майпа вара ертсе пыракан кадрсене йышлăлатасси**.*

Кунти виçĕ предложенири предложенилле сказуемăйсене хулăн саспаллипе палăртнă. Подлежащипе предложенилле сказуемăй хушшине тире лартнă, мĕншĕн тесен сказуемăйăн „пулать" пулăшу глаголĕ çук. Виççĕмĕш предложенире пĕр йышши предложенилле сказуемăйсене запятойпа уйăрнă.

**133-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Предложенилле сказуемăйсене аялтан туртăр.

1. Иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн тĕп задачисенчен пĕри—капитализм юлашкисене экономикăра та, çынсен ăс-тăнĕнче те пĕтересси. 2. Ман çывăх юлташăм минăсем хураканниччĕ. 3. Пирĕн пĕрремĕш задача—гитлерла государствăна тата ăна хавхалантарса пыракансене пĕтерсе тăкасси пулать те ĕнтĕ. (*Тăвăллăн алă çупаççĕ.*) Пирĕн иккĕмĕш задача—гитлерла

çарпа унăн руководителĕсене пĕтерсе тăкасси пулать те ĕнтĕ. (*Тăвăллăн алă çупаççĕ.*) Пирĕн виççĕмĕш задача—„Европăри çĕнĕ йĕркене", вара ылханлă йĕркене çĕмĕрсе тăкасси тата ăна тăвакансене ответ тыттарасси пулса тăрать. (*Ст.*) 4. Чаккан пĕр айăп—вăл хăй чухăнни. (*Элк.*)

## 66 §. Предложенилле подлежащи, е сказуемăй, е определени, е дополнени кĕрекен предложенисенче чарăну палли лартасси.

1. Предложенилле подлежащи и аффикс йышăннă причастирен, унăн сказуемăйĕ ят падежĕнчи япала ятĕнчен тăрать пулсан, подлежащипе сказуемăй хушшине, предложенире пулать пулăшу глаголĕ пулмасан, тире лартаççĕ.

*Ленинизм идейисене пурнăça кĕртсе пырасси—пирĕн тĕп задача.*

2. Предложенилле сказуемăй и аффикс йышăннă причастирен, унăн подлежащийĕ ят падежĕнчи япала ятĕнчен тăрать пулсан, подлежащипе сказуемăй хушшине, предложенире пулать пулăшу глаголĕ пулмасан, тире лартаççĕ.

*Нимĕçсем 1942 çулта пирĕн фронтра тунă тактикăллă ăнăçусен тĕп сăлтавĕ—Европăра иккĕмĕш фронт пулманни...* (*Ст.*)

Асăрхаттарни. Сказуемăй группи питĕ анлă пулсан, предложенире *пулать* пулăшу глаголĕ пулсан та, тире лартаççĕ.

*Пирĕн пĕрремĕш задача — гитлерла государствăна тата ăна хавхалантарса пыракансене пĕтерсе тăкасси пулать те ĕнтĕ.* (*Ст.*)

3. Предложенилле определение, дополнение, подлежащие, пĕр сăмахлă кун йышши членсем пекех, предложенири ытти членсенчен чарăну паллисемпе уйăрмаççĕ.

1. *Фашистла Германи пакта ултавлă майпа пăсни тата ССР Союзне тапăнни ăна мĕнле усă пачĕ-ха тата хăш енчен сиенлĕ пулчĕ?* (*Ст.*) 2. *Çав самант курасчĕ эсир хăвăр ывăл вăрçнине.* (*Уйăп.*) 3. *Аннене çырса пĕлтерĕр эп епле вилни çинчен.* (*Уйăп.*) 4. *Сыв пултăр тăван халăхсем çитĕнтернĕ пĕр йышлă, хăватлă Советлă Союз!* (*Гимнран.*)

**134-мĕш упражнени.**

Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса, текста çырса илĕр. Мĕншĕн запятой е тире лартмаллине каласа парăр. Предложенилле членсене аялтан туртăр, тăрне вĕсем мĕнле член пулнине çырса пĕлтерĕр.

1. Пирĕн пурнăç юсаннă аталаннă вăхăтра Гитлер кашкăрла ăмсаннă ыр курмашкăн ямăтра. (*Уйăп.*) 2. Ял хуçалăх продукчĕсене ытлашшипех тăвасси вăл вăрçă хыççăнхи сталинла

пилӗкçуллăхăн тӗп задачисенчен пӗри. 3. Пушхирлӗ тата пушхирпе вăрманлă районсенче уй-хире уяр çанталăкран сыхлама вăрман лартасси государственнăй пысăк ӗç. 4. Пирӗн халӗ малашне мӗн тăвасси çинчен шухăшламалла. (*Агак.*) 5. Ванюшка пӳрт алăкне çаклатнине çенӗк алăкне тӗкеленине çав тери ерипен пӗр сасăсăр уçса тула тухнă. (*Агак.*) 7. Пӗтрӗ апла Февралӗв... Уншăн пирӗн тăшмана тавăрмалли çеç юлать. (*Элк.*)

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВĂСЕМ.

### 67 §. Предложенилле обстоятельствăсен пӗлтерӗшӗ, пулăвӗ.

Предложенилле обстоятельствăсем вăхăта, тӗллеве, пиркене (ӗç мӗн пирки пулнине), мӗнлелӗхе (ӗç мӗнле пулнине), условие, танлаштарăва кăтартаççӗ.

Предложенилле обстоятельствăсем ытти предложенилле членсенчен нумай енӗпе уйрăмрах тăраççӗ.

Пулăвӗ енчен предложенилле обстоятельствăсем: а) деепричастиллӗ, б) хыççăмахлă, в) падеж аффикслӗ пулаççӗ.

### 68 §. Деепричастиллӗ предложенилле обстоятельствăсем.

1. ***Октябрьти Социализмлă Аслă революци пуличчен*** *ӗç халăхӗ пусмăрта пурăннă.* 2 ***Çумăр çусан****, сывлăш тусанран тасалчӗ.* 3. ***Колхоза каймассерен*** *студентсем доклад туса килеççӗ.* 4. ***Пӗччен хуçалăх йӗркипе ӗçлесе, виçӗ пусăпа пурăнса,*** *чухăнпа вăтам хресченсем ӗлӗк выльăх апачӗ çителӗклӗ тăваймастчӗç, тырăллă та пулаймастчӗç.* 5. *Колхозниксем,* ***агротехникăна вӗрене-вӗрене****, тырпул тухăçне нумай ӳстерчӗç.*

Ку тӗслӗхсенчи деепричастиллӗ обстоятельствăсене хулăн саспаллисемпе паллă тунă. Вӗсем пӗрремӗш, иккӗмӗш, виççӗмӗш предложенисенче вăхăта кăтартаççӗ. Тăваттăмӗш предложенири предложенилле обстоятельствăсем иккӗшӗ те, пиллӗкмӗш предложенири обстоятельство та мӗнлелӗхе кăтартаççӗ.

**135-мӗш упражнени.**

Çырса илӗр. Деепричастиллӗ предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр.

1. Кăмака, кашни пулька пырса çапăнмассерен, вутлăнхӗмлӗн шăтăртатса сирпӗнет. (*Элк.*) 2. Кайăк чунӗ пулсассăн, йӗрӗччӗ те кулӗччӗ; çуначӗсем пулсассăн, вӗçӗччӗ те кайӗч-

чĕ. (*К. Ив.*) 3. Уйра тăри юрласан, килет уйăн илемĕ; эпир ĕçе тытăнсан, килет ĕçĕн хăвачĕ. 4. Историллĕ япаласене курма эпир музее экскурсие кайса килтĕмĕр. 5. Экскурсие кайиччен истори преподавателĕ калаçу туса ирттерчĕ. 6. Вара эпĕ, ыратнине туймасăр, юлашки пур-çук вăй-хала хурса, пулемёт çине диск хыççăн диск лартса, тăшман çинелле вĕçĕмсĕр персе тăтăм.

## 69 §. Хыççăмахлă предложенилле обстоятельствăсем.

1. ***Съезд уçăлас умĕн*** *кашни делегата мандат пачĕç.* 2. ***Нӳрĕк çителĕклĕ пирки*** *тырăсем час шăтрĕç.* 3. ***Вĕренӳ пахалăхне вăйлатасшăн*** *вĕренекенсем социализмлă обязательствăсем йышăнчĕç.*

Ку тĕслĕхсенчи хыççăмахлă предложенилле обстоятельствăсем ака мĕне пĕлтереççĕ: пĕрремĕш предложенире—вăхăта, иккĕмĕш предложенире—пиркене, виççĕмĕш предложенире—тĕллеве.

Хыççăмахлă предложенилле обстоятельствăсем çапла пулаççĕ. Предложенилле членсен юлашки сăмахĕ иртнĕ причасти, е пулас причасти, е пулмалли причасти, е паллă ячĕ пулсан, вĕсем çумне хыççăмахсенчен пĕри: **умĕн, хыççăн, тăрăх, пирки, пек, май, чухне, чухлĕ, çемĕн** хушăнать, е асăннă формăсемпе пĕрлешекен шăн-шĕн хыççăмах хушăнать.

**136-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Хыççăмахлă предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр.

I. 1. Улт-çич хут харăссăн персе янă хыççăн урам хушши куç курми тĕттĕмленсе килнĕ. (*В. Гюго.*) 2. Митинг пĕтнĕ хыççăнах колхозниксем ĕçе тытăнчĕç. (*Тукт.*) 3. Çак мужик пурнăçĕ мана та интереслентернĕ пирки эпĕ те калаçăва хутшăнтăм. (*М. Горьк.*) 4. Плошадьпе иртсе пынă чух пушкăртсем вилĕм юписем патĕнче кĕпĕрленсе тăнине куртăм. (*Пушк.*) 5. Комендант çурчĕ патне çитнĕ çĕре тĕттĕм пула пуçларĕ. (*Пушк.*) 6. Шăпах çичĕ уйăх пĕр тапранмасăр выртнă хыççăн эпĕ тин çеç утма вĕренекен ача пек çĕнĕрен утма тытăнатăп. (*Элк.*)

II. 1. Çичĕ çул хушши Павăл патĕнче тарçăра пурăннă хыççăн Кахвунăн ят тухнă, салтака каймалла пулнă. 2. Канав тăрăх шума кансĕр пирки хăш-пĕр тĕлте шоссе çулĕпе кайма хăтланатăп. (*Элк.*) 3. Малалла шуса пынă май кĕçех çав шапасен шурлăхне кĕрсе путассăн туйăнать. (*Элк.*)

## 70 §. Падеж аффикслă предложенилле обстоятельствăсем.

1. *Хĕвел* **тухаспа** *кĕтӳ улăха тухрĕ.* 2. ***Çанталăк ăшăран*** *ачасем кĕпе вĕççĕн çӳреççĕ.* 3. ***Ыран вăрмана каймалларан*** *паян лашасене кантарас терĕмĕр-ха.* 4. ***Вăйлă çил вĕрнипе*** *йывăççем хумханса лараççĕ.*

Ку тĕслĕхсенчи падеж аффикслĕ предложенилле обстоятельствăсем пĕрремĕш предложенире в ă х ă т а, ытти предложенисенче п и р к е н е пĕлтереççĕ.

Тĕслĕхсенчи предложенилле обстоятельствăсене хулăн саспаллисемпе палăртнă. Весем тĕрлĕ аффикс хушăннипе пулнине куратпăр. Предложенилле членăн юлашки сăмахĕ иртнĕ причасти, пулас причасти, пулмалли причасти, паллă ячĕ пулсан **ран** аффикс хушăнать, **па** аффикс пулас причасти çумне çех хушăнать, **ранпа** аффикс иртнĕ причасти çумне çех хушăнать.

**137-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Падеж аффикслĕ предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр.

1. Апат хатĕр хăнашăн алли-ури çăмăлран. (*К. Ив.*) 2. Кантăкран пĕр пылчăклă тăкăрлăк еннелле пăхса тунсăхлаеа çитнипе эпĕ трактирти мĕнпур пӳлĕмсем тарăх çӳреме пуçларăм. (*Пушк.*) 3. Каçхи тĕттĕм сăнĕ çапнипе çурт кĕлетки аран палăрать. (*Элк.*) 4. Кашни вагона 60—70 çын лартса тултарнипе çурри ытла ура çинчех тăрса пыраççĕ. (*Элк.*) 5. Тухать курăк çап-çăра хĕвел хытă хĕртнĕрен. (*К. Ив.*) Ирхи шуçăм килеспе хайхи çуртсем патне çитсе перĕнтĕм. (*Элк.*) Те шăпчăк юрри ачашланăран, те ĕнер ытла утса ывăннăран хуралçă салтаксем шăпах та тăпах. (*Элк.*) 7. Ĕнтĕ çул çине тухнăранпа сехет ытла иртрĕ. 8. Хĕвел анаспа эпир яла çитрĕмĕр.

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВĂСЕН ПĔЛТЕРĔШĔСЕМ.

## 71 §. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем.

1. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем вăхăта пĕлтерекен деепричастисемпе пулаççĕ.

а) **Иччен** аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельство хăй кăтартакан тапхăрччен пĕр-пĕр ĕç пулса пынине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçанччен?**

***Каç пуличченех*** *колхоз хирĕнче машинăсен сасси янăрать, хĕрӳллĕ ĕç вĕрет.*

а) **Сан-сен, сассăн-сессĕн** аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельство пĕр-пĕр ĕç хăй кăтартакан тапхăр хыççăн пулнине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçан?**

***Вăл партие кĕме заявлени парсан,*** *парти членĕсем уншăн пурте хавассăн алă çĕклерĕç пухура.* (*Ис. М.*)

б) **Массерен-мессерен** аффикслă деепричастисемпе пулнă предложенилле обстоятельство хăй кăтартакан ĕç пулса пынă май кашнинчех тепĕр ĕç пулнине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçан?**

***Почта килмессерен*** *эпир çĕнĕ хаçатсем, журналсем илетпĕр.*

Асăрхаттарни. **Иччен** аффикслă деепричастиллĕ предложенилле член яланах вăхăта кăтартмасть, хăш-пĕр чухне икĕ ĕçрен пĕрне ырланине, уйăрса кăтартнине пĕлтерет.

***Пароходпа кайиччен*** *поездпах кай: хăвăртрах çитетĕн.*

2. Вăхăта пĕлтерекен хăш-пĕр предложенилле обстоятельствăсем предложенилле членсен юлашки сăмахĕ çумне **чух, чухне, çĕре, умĕн, хыççăн, çемĕн** сăмахсем хушăннипе пулаççĕ. Вĕсем акă мĕне пĕлтереççĕ:

а) **Чух, чухне** хыççăмахлă предложенилле обстоятельство тĕп ĕç пулнă вахăта е тапхăра кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçан?**

***Утса-утса пынă чух*** *шăнкăртатать тенкисем.* (*К. Ив.*)

ă) **Умĕн** хыççăмахлă предложенилле обстоятельство пĕр-пĕр хăй кăтартакан вăхăтчен е тапхăрччен пулнине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçан?**

***Митинг пуçланас умĕн*** *оркестр Совет Союзĕн Гимне вылярĕ.*

б) **Хыççăн** хыççăмахлă предложенилле обстоятельство пĕр-пĕр ĕç хăй кăтартакан вăхăт е тапхăр хыççăн пулнине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăçан?**

***Конференци хупăннă хыççăн*** *делегатсем районсене саланчĕç.*

в) **Çĕре** хыççăмахлă предложенилле обстоятельство хăй кăтартакан ĕç пуçланас вăхăт тĕлне тепĕр ĕç пулнине, пулма пултарнине е пултарманнине кăтартать, унăн ыйтăвĕсем: **хăçан? хăш вăхăтра? хăш вăхăт тĕлне?**

***Конференци пуçтарăннă çĕре*** *пурте хатĕр пулнă: докладсем те, тезиссем те.*

г) **Çемĕн** хыççăмахлă предложенилле обстоятельство хăй кăтартакан ĕç вăйланса е чакса пынă вăхăтра тепĕр ĕç çав майпах пулса пынине кăтартать, унăн ыйтăвĕ **хăш вăхăтра?**

*Çуркунне, çĕр йăшăнса пынăçемĕн, садра тĕрлĕ ӳсентăрансем, чĕрчунсем йышланма пуçларĕç.*

3. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем предложенилле членсенчи иртнĕ причасти -ранпа, -ренпе аффикс йышăннипе е пулас причасти -па, -пе аффикс йышăннипе пулаççĕ.

а) *-па, -пе* аффикслă причастипе пулнă предложенилле обстоятельство пĕр-пĕр ĕçĕн вăхăтне е тапхăрне уçăмлă мар кăтартать, вăл тапхăр чылай вăхăт тăсăлать, унăн ыйтăвĕ хăш вăхăтра?

*Кĕтӳ яраспа вуннăн та ытла пулĕ (леш Степан Иванчăн Хусанта вĕренекен хĕрĕ те пурччĕ унта) килчĕç.* (*Ис. М.*)

ă) -ранпа, -ренпе аффикслă причастипе пулнă предложенилле обстоятельство хăй кăтартакан вăхăт е тапхăр пуçланнăранпа тепĕр ĕç пулнине е пулманнине кăтартать, унăн ыйтăвĕ хăçантанпа?

*Эпĕ, **хулана вĕренме килнĕренпе**, ялта пĕрре те пулман-ха.*

**138-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр. Вĕсем мĕнле сăмах хушăннипе пулнă, çав сăмаха аялтан икĕ йĕрпе туртăр.

1. Каç пулнăранпа юр çуса тăчĕ, çурçĕр çитнĕ çĕре вăл чарăнчĕ. 2. Ахăлтатса кулнă чух çирĕп çын ку темелле. Вăйă саланичченех савăнтарать сассипе. (*К. Ив.*) 3. Çырма патне çывхарнă чух эпĕ аякранах шавланине, çухăрашнине тата Савельич сассине илтрĕм. (*Пушк.*) 4. Тăхăр сехет çитсен, пирĕн урок пуçланать. 5. Уроксем пĕтнĕ хыççăн пирĕн отряд сборĕ пулать. 6. Лайăх вĕренсе пырсан, эпир специалистсем пулатпăрах. 7. Хĕвел тухса йывăç çӳллĕш хăпарсан, Викторпа Валя Усов отрядне шыраса тупрĕç. 8. Пирĕн шкула тунăранпа виçĕ çул иртрĕ. 9. Кăнтăрлахи апат çинĕ хыççăн колхозниксем канма выртрĕç. 10. Тырă вырма тухиччен эпир жнейкăсене хатĕрлесе çитертĕмĕр. 11. Çак кĕнекене вуласа тухсан, эпĕ ярăнма каятăп.

## 72 §. Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем.

Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем пулас причасти -шăн, -шĕн хыççăмах йышăннипе е -ма, -ме аффикслă деепричастипе пулаççĕ.

Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельство пĕр-пĕр ĕçĕн тĕллевне кăтартать, унăн ыйтăвĕсем: мĕншĕн? мĕн тума?

Тĕллевре кăтартнă ĕç—ĕмĕрти ĕç, ăна пурнăçлама тăвакан ĕç—чăн-чăн пулнă, е пулакан, е пулас ĕç.

1. *Кунĕн-çĕрĕн ĕçleme*
*Икĕ вăйлă алли пур.*
*Тăшман пуçне пĕтерме*
*Вĕри вут пек çилли пур.* (*К. Ив.*)

2. *Ютсен çул-йĕрне татасшăн*
*Çĕклентĕмĕр çапăçăва.* (*Алка.*)

**139-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр.

1. Дунай тăрăх ишмешкĕн
Çирĕп пароход кирлĕ,
Фашистсене çĕнмешкĕн
Фронт çирĕп пулни кирлĕ.

Çил вĕрнипе хумханмашкăн
Йывăç тăрри мар эпир.
Урнă тăшмантан хăрамашкăн
Вăйсăр çынсем мар эпир.
(*Юрă.*)

2. Мĕн кĕçĕнтен ӳстертĕм питне пăхса савăнма. (*К. Ив.*) 3. Тепĕр çур сехетрен Хветуç кил-йышĕ чей ĕçме ларчĕ. (*Агак.*) 4. Тăшман полкне тĕп тăвасшăн урра! янăратнă. (*Алка.*) 5. Карчăк хăйĕн ывăлне тăшманпала кĕрешме пилленĕ вăй-хал. (*И. Ив.*) 6. Хура-шур анчах курмашкăн кам çуралса ӳснĕ? (*Çеçп.*)

## 73 §. Пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем.

Пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем тепĕр ĕç мĕнрен килнине, мĕншĕн е мĕн пирки пулнине ăнлантарса параççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсем: **мĕншĕн? мĕн пирки?**

Вĕсем предложенилле членăн сказуемăй вырăнĕнчи иртнĕ причасти **пирки**, **тăрăх** хыççăмахсене, е **-ран, -рен, -пе** аффикссене йышăннипе, палла ячĕ **-ран, -рен** аффикссене йышăннипе пулаççĕ.

1. *Çанталăк йĕпе тăнă пирки кăçал пĕвере шыв туллиех тăчĕ.* 2. *Ял Совечĕ кăтартнă тăрăх эпир ишĕлекен çырансене йывăçсем лартрăмăр.* 3. *Ачасем хытă тăрăшнăран вĕренӳ ĕçĕ аван пырать.* 4. *Çĕр нӳрлĕрен тырăсем часах шăтрĕç.* 5. *Чĕлĕм туртнипе пӳртре сывлăш йывăрланчĕ.*

**140-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр. Пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр. Вĕсем мĕнле сăмах хушнипе пулнă, çав сăмаха икĕ йĕрпе туртăр.

1. Çӳллĕ чăрăшсем, хырсем çил вĕрнипе кашласа лараççĕ. 2. Спектакль кăмăла кайнă пирки пурте нумайччен алă çуп-

рĕç. 3. Тухать курăк çăп-çăра хĕвел хытă хĕртнĕрен. (*К. Ив.*) 4. Кас пулнипе çăлтăрсем палăра пуçларĕç. 5. Хĕлле юр нумай çунăран çуркунне Атăл шывĕ сарлака сарăлчĕ. 6. Эпир, командир приказ панă тăрăх, васкаса вăрманалла шăвăнтăмăр. (*Элк.*)

## 74 §. Мĕнлелĕхе (ĕç мĕнле пулнине) пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем.

Предложенилле членсен юлашки сăмахĕ **-са, -се**; -а, -е аффикслă деепричасти пулсан е **пек**, **чухлĕ** сăмахсем йышăннă иртнĕ причасти пулсан, предложенилле обстоятельство мĕнлелĕхе кăтартать. Кун пек предложенилле члена мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельство теççĕ. Вĕсен ыйтăвĕ **мĕнле?**

1. *Алăран алă тытса, рабочисемпе хресченсем çĕнĕ пурнăç тăваççĕ.* 2. *Агротехникăна вĕрене-вĕрене, колхозниксем тырпул тухăçне нумай ӳстерчĕç.*

**Пек, чухлĕ** сăмахсем хутшăнтарнă иртнĕ причастирен пулнă предложенилле обстоятельствăсем мĕнлелĕхе танлаштаруллă кăтартаççĕ.

1. *Йытăсем, хăйсем хăраса ӳкнĕ пек, йăвашшăн хăрлатакан сассисемпе ăна вĕрсе ăсатрĕç.* 2. *Паллах, колхозник машинăсемпе ĕçленĕ чухлĕ единоличник ĕлĕкхи ĕç хатĕрсемпе нихăçан та ĕçлеймен.*

Асăрхаттарни. -Са, -се аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельствăсем, мĕнлелĕхе кăтартнисĕр пуçне, тата пĕр-пĕр ĕç мĕн пирки пулнине кăтартаççĕ: *Савнă хĕршĕн тăрăшса, пичĕ тăрăх тар юхать.* (*К. Ив.*)

Вĕсемех тата иккĕмĕшле ĕçе кăтартаççĕ: *Ирхи çăлтăр хăпарса йăл-йăл кулать тӳпере.* (*К. Ив*)

141-мĕш упражнени.

Текста çырса илĕр. -Са, -се; -а, -е аффикслă предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр, вĕсен тăрне мĕне пĕлтернине çырăр.

I. 1. Ача-пăча, çунасене чупса çитсе, хыçалтан усăнма хăтланать. (*Х. Ç.*) 2. Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс çыр хĕррине ачашлать, унăн хумĕсем, кăвайт хĕррине ăшăнма ярăр тесе йăпаннă пекех, ачашшăн-ачашшăн шĕпĕлтетеççĕ. (*М. Горьк.*) 3. Вăрман шавне хуплас пек, пырать Сетнер юрласа. (*К. Ив.*) 4. Садсем çине кăпăшка ăшă юр çуса лартнă пекех туйăнать. (*Агак.*) 5. Хĕр çуммисем юрласа, унăн сасси илтĕнмест. (*К. Ив.*)

6. Тăшмана сахал мар йĕрлерĕм,
Çĕршыв тĕрекĕшĕн тăрса.
Нумай эп юрă кĕвĕлерĕм,

Чĕрене уншăн çунтарса.
Уншăн кунне-çĕрне пĕлмесĕр,
Тăратпăр эпир вахтăра. (*Уйăп.*)

II. 1. Пўлĕмĕн тепĕр вĕçĕнче, аллисене сарса пăрахса, тарăннăн сывласа, ывăлĕ хыттăн çывăрать. (*Н. Остр.*) 2. Темиçе минут хушши, тата пăшал сасси пуласса кĕтсе, пурте чĕнмесĕр тăчĕç. (*Н. Остр.*) 4. Хăйне викам та итлеменнине кура, механик гудок клапанне уçмалли канат вĕçĕнчи унка хăй ярса тытрĕ те аялалла туртрĕ. Гудокăн хăватлă сассине илтсе, Андрий сасартăках хытса кайрĕ. (*Н. Остр.*)

## 75 §. Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем.

-Сан, -сен (-сассăн, -сессĕн) аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельствăсем вăхăта пĕлтернисĕр пуçне, тата условие пĕлтерме пултараççĕ. Весен ыйтăвĕ мĕнле майпа? Кунта эпир -сан, -сен аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельство тепĕр пĕлтерĕш йышăннине куратпăр.

*Çумăр çусан, сывлăш тусанран тасалать. Автобус аван пырсан, эпир поезд çине ĕлкĕретпĕр.*

Асăрхаттарни. Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельство çумне-та -те татăк хушсан, ун пек предложени хирĕçлеве—ĕç тепĕр майлине пĕлтерекен пулать.

1. *Автобус аван пырсан та, эпир поезда ĕлкĕрес çук.* 2. *Тырпул пулмасан та, ĕçчен Итапай малтан хăйне хăй пурăннă самай.* (*Элк.*) 3. *Эпир тем пек сыхлансан та, Пугачĕв килес хыпар крепоçе сарăлчĕ.* (*Пушк.*)

**142-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. -Сан, -сен аффикслă деепричастипе пулнă предложенилле обстоятельствăсене аялтан туртăр: а) условие кăтартаканнисене—пĕр йĕрпе; ă) вăхăта кăтартаканнисене—икĕ йĕрпе; б) хирĕçлеве кăтартаканнисене—кукăр-макăр йĕрпе.

1. Стахановла ĕçлесен, пур колхозник савăнать. (*Юрă.*) 2. Атăл хĕрне ансассăн, пул тытатпăр пулмалла; вăйăç çумне тăрсассăн, пултаратпăр пулмалла. (*Юрă.*) 3. Хĕвелтухăç хĕрелсен, хĕвелне те кĕтсех тăр; пĕтĕм халăх çекленсен, çĕнтерессе пĕлсех тăр. (*Юрă.*) 4. Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен, шăп лăпланчĕ сĕм вăрман. (*К. Ив.*) 5. Чечек сада каç тĕксĕмĕ ансассăн, сасартăк çичĕ купăс вăранать. (*Ĕçх.*) 6. Ман юлташсем, ирпе тăрсассăн, хаваслă юрă юрлама, пурте пĕр хăрăссăн тухаççĕ ем-ешĕл аэродрома. (*Ĕçх.*) 7. Мен тери асап пулин те, чунна ан амант. (*Хус.*) 8. Анчах мĕнле йĕрсен те, хĕвел хĕртнĕçем хĕртет. (*К. Ив.*)

**143-мӗш упражнени.**

Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Скобкӑри предложенисенчен предложенилле членсем туса ҫырӑр. Предложенилле членсене аялтан туртӑр, ҫине кӗскен ҫырса, вӗсем мӗнле член пулнине кӑтартӑр.

1. Эпир (машина яла кӗрет) пурте куртӑмӑр. 2. Ачасем (хӗвел аннӑ вӑхӑт) волейболла выляҫҫӗ. 3. (Колхозра трактор ӗҫлет) ӗҫе часрах тума пулӑшать. 4. Эпӗ (кӗнеке вулатӑп) пурте итлесе ларчӗҫ. 5. (Хутла пӗлменнине пӗтертӗмӗр) культура революцин тӗп ӗҫӗ пулса тӑрать. 6. (Пирӗн ҫӗршыв тӗрекленчӗ) тӑшмансене тарӑхтарать. 7. (Таҫтанах сарӑлса выртать) колхоз уйӗ тинӗс пек хумханать. 8. (Эпӗ шкула кайма пуҫланӑ) ултӑ ҫул ҫитрӗ.

**144-мӗш упражнени.**

Ҫакӑнти мӑшӑр предложенисенчен предложенилле членлӑ предложенисем тӑвӑр. Предложенилле членсене аялтан туртӑр, ҫине кӗскен ҫырса, вӗсем мӗнле член пулнине кӑтартӑр.

Тӗслӗх: *Поезд вӑрман витӗр тухрӗ. Вӑл аякран курӑнчӗ.* ***Поезд вӑрман витӗр тухни аякранах курӑнчӗ.***

1. Ӗлӗкхи пурнӑҫ йывӑр пулнӑ. Ӗҫ ҫыннисем лайӑх пӗлеҫҫӗ. 2. Колхозниксем утӑ ҫулаҫҫӗ. Ҫырласем пиҫсе ҫитеҫҫӗ. 3. Пухӑва йӗркеллӗ ирттерет. Вӑл председатель ӗҫӗ. 4. Сехет ҫиччӗ ҫапрӗ. Эпир спектакль курма кайрӑмӑр. 5. Иван картинка ӳкерет. Эпӗ ӑна пӑхса лартӑм. 6. Хӗвел хӗрелсе тухрӗ. Лагерьте авӑн куртӑмӑр. 7. Ачасем хулана каяҫҫӗ. Эпӗ курса юлтӑм. 8. Пуху пӗтрӗ. Колхозниксем килӗсене саланчӗҫ.

**145-мӗш упражнени.**

Ҫырса илӗр. Предложенилле членсене аялтан туртӑр, вӗсем мӗнле член пулнине, ыйтӑвӗсене кӑтартӑр.

I. 1. Кӑвак чултан тунӑ стена тӑрӑх выртса тухнӑ стрелоксем те, урам кӗтессинче пухӑнса тӑракан салтаксем те тӗтӗм айӗнче темӗскер чаваланни ҫине пӗрне пӗри тӗллесе кӑтартнӑ. Ҫав самантрах патронташсене пушатса ларакан Гаврош умӗнчи сержантӑн вилли ҫине пӗр пуля пырса лекнӗ. (*В. Гюго.*) 2. Стена ҫинче ҫакӑнса тӑракан сехет вӗҫӗмсӗр шакканине итлесе выртатӑп. 3. Эпӗ тӳрех комендант ҫурчӗ патне илсе кайма хушрӑм та, тепӗр минутран кӳме йывӑҫ чиркӳ ҫывӑхӗнчи ҫӳллӗ вырӑнта ларакан пӗр йывӑҫ пӳрт умне пырса чарӑнчӗ. (*Пуш.*) 4. Эпӗ хам ӗҫпе кайнӑ чухне унӑн ҫыннисем мана тытса чарни ҫинчен каласа патӑм. (*Пуш.*) 5. Халиччен сиввӗн курӑннӑ доктор кӗтмен ҫӗртенех ӑшӑ кӑмӑлпа калаҫни мана ҫав тери хавасlантарса ячӗ. (*Элк.*) 6. Ҫырма урлӑ каҫса, яла кӗтӗмӗр. (*Пуш.*) 7. Мӗкӗрет вӑл, ӑсран кайнӑ пек. (*Некр.*) 8. Пурне те, эпӗ хушнӑ пек, вӑл парӗ ҫийӗнчех. (*Некр.*) 9. Эпӗ унӑн ятне каласан, комисси ӑна та чӗнтерӗ. (*Пуш.*) 10. Мӗн кӗҫенрен ӳстертӗм ҫак тарана ҫитерме. (*К. Ив.*) 11. Пӑртак тӑрсан, вӑл кайсан, тулчӗ пӳрте

тулли çын. (*К. Ив.*) 12. Эсĕ çапла пулнипе ырă кунăм пă-сăлчĕ. (*К. Ив.*) 13. Ӳсрĕ, пулчĕ сарă хĕр атте-анне пăхнипе. (*К. Ив.*) 14. Вăл хăйне çапла хăраса хыпăнса ӳкмесĕр тытка-лани мана чылаях çĕклентерчĕ. (*Пуш.*) 15. Тултан ашшĕ кĕчĕ, вăл пĕрре Тарас çине, тепре хĕрĕ çине пăхса, вĕсене куçĕпе виççе илчĕ. (*Агак.*) 16. Çут Октябрь, хаяр вутлă тăвăл пулса, ĕмĕрхи пусмăра ишсе тăкрĕ тĕпрен. (*Уйăп.*) 17. Тăшман умĕнче чакасси—пире ют. (*Уйăп.*) 18. Çак сăмахсем тăнлава çитсе çапăнсанах, Уляна сасартăк, хăрушă тĕлĕкрен вăранса кайнă пек пулса, шартах сиксе ӳкрĕ. (*Тукт.*) 19. Тăшман умĕнче ӳкмерĕм, ват мучи пулса, халран. (*Ĕçх.*)

20. Хĕвел анса пытанать,
Силпи ялĕ лăпланать.
Тĕттĕм пулса çитеспе
Пирĕн туй та саланать. (*К. Ив.*)

II. 1. Йăкăш-йăкăш шуçкалама яка хăма кирлĕ. (*Юрă.*) 2. Ăшшăн-ăшшăн хĕвел пăхсан, хурăн тăрăх сухăр юхать. (*Юрă.*) 3. Çӳллĕ тусем çине улăхнă чух чĕн хăмăт пăявĕсем татăлчĕç. (*Юрă.*) 4. Уттари-чуптари çӳремешкĕн пирĕн кӳлнĕ утсем начар мар. (*Юрă.*) 5. Хула çулне пĕлнипе эпĕ кайрăм хулана, Ленин çулне пĕлнипе эпĕ кĕтĕм колхоза. (*Юрă.*) 6. Çерем çĕрне ватмашкăн тимĕр сӳре кирлĕ-мĕн, тĕреклĕ колхоз тумашкăн ударниксем кирлĕ-мĕн. (*Юрă.*) 7. Пыл хур-чĕсем пыл пухнине кам пур колхозра курманни, чугун çул тунин уссине кам пур-ха халь пĕлменни. (*Юрă.*) 8. Чечек пуххи илемлĕ тĕрлĕ тĕслĕ пулнăран, Конституци питĕ паха пур ӳсĕме çырнăран. (*Юрă.*) 9. ССР Союзĕнчи халăхсен исто-рийĕпе паллашма истори музейне кайса куртăмăр. 10. Пĕчĕк тути йĕрсен те, йăваш тути кулать çав. (*К. Ив.*) 11. Вĕсем тахçан Тăхтаман хаяррине пĕлеççĕ. (*К. Ив.*)

## 76 §. Предложенилле обстоятельствăсене чарăну паллисемпе уйăрасси.

Предложенилле обстоятельствăсем кĕрекен предложени-сенче чарăну палли лартасси те, тĕпрен илсен, ахаль пред-ложенири пекех, анчах кунта уйрăмлăхсем те куратпăр.

Предложенилле обстоятельствăсем вăхăта, тĕллеве, пир-кене, мĕнлелĕхе, условие кăтартса, обстоятельство сăмахĕсем пекех, сказуемăйпа çыхăнса, унăн умĕнче тăраççĕ. Вĕсене каланă чухне чарăну та палăрмасть. Хăш-пĕр обстоятельствă-сем сказуемăй группинчех, çыхăнăвĕнчех тăраççĕ, теприсем (сăмахран, вăхăт обстоятельстви) предложени пуçламăшĕнче, подлежащи урлă тăраççĕ.

Обстоятельство сăмахĕ е предложенилле обстоятельство хăй вырăнĕнче тăнă чухне, вĕсене запятойпа уйăрмасăрах, эпир предложение тĕрĕс ăнланатпăр.

1. ***Хӗвел аниччен*** *хирте хӗрӳллӗ ӗҫ пырать.*
2. *Эпир экскурсие вӗренӳ* ***ҫулӗ пӗтсен*** *каятпӑр.*

Анчах предложенилле обстоятельствӑсем логикӑллӑ ударени йӗркипе, стиль майӗпе час-часах хӑйсен вырӑнӗнчен урӑх вырӑна куҫса лараҫҫӗ.

1. ***Шкула кайиччен*** *экӗ кӗнекесене, тетрадьсене пуҫтартӑм.* 2. *Эпӗ* ***шкула кайиччен*** *анне апат хатӗрлерӗ.* 3. *Эпӗ,* ***шкула кайиччен,*** *аннене ӗҫре пулӑшрӑм.* 4. *Эпӗ аннене ӗҫре* ***шкула кайиччен*** *пулӑшрӑм.* 5. *Тухать курӑк ҫӑп-ҫӑра* ***хӗвел хытӑ хӗртнӗрен.*** *(К. Ив.)* 6. *Ҫырласене,* ***эпир кайиччен,*** *вӑрманта йӑлтах татса пӗтернӗ.*

Ку предложенисенче предложенилле обстоятельствӑсем тӗрлӗ вырӑнта тӑраҫҫӗ: 1) пӗрремӗшпе иккӗмӗш предложенире—пуҫламӑшӗнче, 2) тӑваттӑмӗшӗнче—сказуемӑй умӗнче, 3) пиллӗкмӗшӗнче—предложени вӗҫӗнче, 4) виҫҫӗмӗш, улттӑмӗш предложенисенче—предложени варринче.

Ҫак предложенилле обстоятельствӑсене пӗлтерӗшӗ, сыхӑнӑвӗ, интонацийӗ енчен пӑхса тухсан, акӑ мӗн куратпӗр.

Предложенилле обстоятельство, хӑй вырӑнне улӑштарсa, предложени варрине кӗрсе ларсан, е подлежащие сказуемӑй сӑмахӗсенчен, е дополнение сказуемӑй сӑмахӗсенчен, е обстоятельствӑна сказуемӑй сӑмахӗсенчен уйӑрса тӑрать. Вӗсем уйрӑлса тӑни интонацире те хытӑ палӑрать. Кирек мӗнле предложенилле обстоятельство кӗрсен те, вӗсем уйрӑлса тӑни паллӑ. Ҫапла вара, ун пек чухне предложениллӗ обстоятельствӑна икӗ енчен те запятойпа уйӑрни ҫырнине ӑнланма пулӑшать.

Предложенилле обстоятельство предложени пуҫламӑшӗнче е предложени вӗҫӗнче, е предложени варринче, анчах сказуемӑй ҫумӗнче тӑрать пулсан, вӗсене эпир, ытти ҫыхӑнса таракан членсене каланӑ пекех, паузӑпа уйӑрмасӑр калатпӑр. Танлаштарар: *Паян каҫпа уроксем хатӗрлерӗм.* ***Шкула кайиччен*** *уроксем хатӗрлерӗм.* Кунта интонаци тӗлӗшӗнчен нимӗнле уйрӑмлӑх та ҫук. Предложенилле обстоятельство сказуемӑй умӗнче е предложени вӗҫӗнче тӑнӑ чухне те ҫакӑн пекех. Ҫавӑнпа предложенилле обстоятельствӑсем предложени пуҫламӑшӗнче, вӗҫӗнче, предложени варринче, анчах сказуемӑй умӗнче тӑнӑ чухне запятой лартмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен запятой лартни кунта вуланине ӑнланма пулӑшмасть.

Предложенилле обстоятельствӑсене чарӑну паллисемпе ҫакӑн пек уйӑраҫҫӗ.

1. Предложенилле обстоятельствӑсене, вӗсем предложени варринче пулса, предложенин пӗр членне (подлежащие, е дополнение, е обстоятельствӑна) ытти членӗсенчен уйӑрса тӑраҫҫӗ пулсан, запятойсемпе уйӑраҫҫӗ.

1. *Амăшĕ, ывăлĕ апла каласанах, шарт сиксе, хăранă пек пулчĕ.* (*Х. Ç.*) 2. *Çут Октябрь, хаяр вутлă тăвăл пулса, ĕмĕрхи пусмăра ишсе тăкрĕ тĕпрен.* (*Уйăп.*) 3. *Колхозниксем, агротехникăна вĕрене-вĕрене, тырпул тухăçне нумай ÿстерчĕç.* 4. *Делегатсем, каçхи заседани пулнă хыççăн, театрта „Нарспи" драма курчĕç.* 5. *Çурт кĕлетки, каçхи тĕттĕм сăнĕ çапнипе, аран палăрать.* (*Ĕçх.*)

2. Предложенилле обстоятельствăсене, вĕсем, предложени варринче пулса, сказуемăй çумĕнче тăраççĕ пулсан, запятойсемпе уйăрмаççĕ.

1. *Ĕç хыççăн ташă, юрă тĕттĕм пуличченех пычĕ.* 2. *Метелица çулнă улăхпа хресченсен пахчисем патне çитичченех утрĕ.* (*А. Фад.*)

3. Предложенилле обстоятельствăсене, вĕсем предложени пуçламăшĕнче е вĕçĕнче тăнă чухне, запятойпа уйăрмаççĕ.

1. *Ахăлтатса кулнă чух çирĕп çын ку темелле.* (*К. Ив.*) 2. *Комендант çурчĕ патне çитнĕ çĕре тĕттĕм пула пуçларĕ.* (*Пуш.*) 3. *Метелица тĕттĕмре куранми пуличченех ача ун çине хуйхăллăн пăхса тăрса юлчĕ.* (*А. Фад.*) 4. *Аван иртрĕ пурнăç херĕн çулĕ туличчен.* (*К. Ив.*)

1. Асăрхаттарни. -Сан, -сен; -са, -се; -а, -е аффикслă деепричастипе е весен çуклă формипе пулнă предложенилле обстоятельствăсене, вĕсем предложени пуçламăшĕнче е вĕçĕнче тăнă чухне те, запятойпа уйăраççĕ.

1. *Тăвăл тухсан, çĕнетпĕрех шывра, çĕрте те сывлăшра!* (*Уйăп.*) 2. *Вăл пăшăрханнине кура, хăраса ÿкнĕ анне ун умĕнче макăрма та хăяйман.* (*Пуш.*) 3. *Вата каччине курса, Нарспи хытă хурланать.* (*К. Ив.*) 4. *Çапла хуллен калаçса тăраççĕ икĕ хĕр, юланутлă çынсене палласшăн пулса.* (*Чалд.*) 5. *„Куратăн-и, тигр ами хăй çурине мĕнле çуса тасатрĕ?"—тесе ыйтрĕ манран атте, тигрсем кайсан.* (*Р. Ролл.*)

Асăрхаттарни. -Сан, -сен; -са, -се; -а, -е аффикслă пĕр сăмахлă обстоятельствăсене, çак аффиксла предложенилле обстоятельствăсем пекех, предложени пуçламăшĕнче, вĕçĕнче, варринче, сказуемăйпа юнашар мар чухне, запятойпа уйăраççĕ.

1. *Кĕçĕн кинин, каласан, ячĕ унăн Чĕкеçчĕ* (*К. Ив.*) 2. *Пÿрт хыçĕнче, шавласа, ача-пăча выляççĕ.* (*К. Ив.*) 3. *Çырам терĕм шур хута, хуратса.* (*Хус.*)

## 77 §. Темиçе предложенилле членлă предложени.

Пĕр предложенире час-часах темиçе предложенилле член пулать. Вĕсем виçе тĕслĕ пулаççĕ.

1. Темиçе предложенилле членсем, пĕр ыйтура тăрса, пĕр предложенинех е унăн пĕр членнех ăнлантараççĕ. Вĕсене пĕр йышши предложенилле членсем теççĕ.

1. *Йытă урипе утиччен,*
*Сивĕре шăнса çӳриччен,*
*Лаша кӳлсе ларас та,*
*Ним хуйхи те пулас мар.* (*М. Фĕд.*)

2. *Кăмăллă пăхса, патша хăй хушать*
*Ылттăнлă куркине туллирен тулли*
*Хаклă йышши тутлă эрехсем яма,*
*Сыхлавçисене ĕçтерсе тухма.* (*Лерм.*)

2. Темиçе предложенилле член предложение е предложенин пĕр-пĕр членне тĕрлĕ енчен ăнлантараççĕ.

*Çӳлти самолĕта курсассăн,*
*Вăл хăйне пĕчĕк аллипе*
*Кăчăк туртайрĕ пит хавассăн,*
*Пуканилле вылянă пек.* (*Ĕçх.*)

3. Предложенилле член тепĕр предложенилле член составне кĕрет.

*Халиччен сиввĕн курăннă доктор кĕтмен çĕртенех ăшă кăмăлпа калаçни мана çав тери хавхалантарса ячĕ.* (*Элк.*)

## 78 §. Темиçе предложенилле членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.

Темиçе предложенилле членлă предложенисенче чарăну паллисем çак йĕркепе лартаççĕ:

1. Пĕр йышши предложенилле членсене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăраççĕ.

1. *Хресченсем колхозсене массăллăн кĕни, вĕсем колхоза кĕресси 1929—1930 çулсенче анлăн сарăлса кайнă.* (*ВКП(б) ист.*) 3. *Те шăпчăк юрри ачашланăран, те ĕнер ытла утса ывăннăран хуралçă салтаксем шăпах та тăпах.* (*Элк.*)

2. Предложенире темиçе пĕр йышши мар предложенилле член пулсан, кашни предложенилле члена уйăрасси хăйĕн правилине пăхăнать.

1. *Хĕвел тухиччен, çавасем йăтса, колхозниксем улăха анчĕç.* 2. *Амăшĕ, ывăлĕ апла каласанах, шарт сиксе, хăрана пек пулчĕ.* (*Х. Ç.*)

3. Пĕр предложенилле член тепĕр предложенилле член составне кĕрет пулсан, вĕсене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăрмаççĕ. Пĕрлешне предложенилле членсене предложенин ытти членĕсенчен уйăрасси пĕрлешне предложени членĕн пулăвĕнчен килет.

*Ултавлăн тата кĕтмен çĕртен тапăннă пирки еăрçăн малтанхи уйăхĕсенче пулнă усăллă енсем нимĕçсен текех çук ĕнтĕ.* (*Ст.*)

Асăрхаттарни. -Сан, -сен; -са, -се; -а, -е аффикслă деепричастисемпе пулнă предложенилле член тепĕр предложенилле член составне кĕрсен, пăр е пĕлтерĕшĕпе палăрсан çеç ăна запятойпа уйăрассĕ.

*Уншăн никам кĕтмен çĕртен ялт сиксе тухни, контролĕрсен умĕнчен çăп-çăмăл çеç шăвăнса иртнĕ пек пулса, кочегарсене тĕлĕнтерни питĕ те кăмăла килнĕ.* (*Н. Ост.*)

**146-мĕш упражнени.**

Темиçе предложенилле членлă предложенисенче чарăну паллисем лартса текста çырса илĕр.

1. Площадьпе иртсе пынă чух ачасем пахчара вылянине куртăм. 2. Паттăр утăм çине утланса ларса Мускав шывĕ çине чуптарса кайсан хам пурçăн пиçиххи пилĕке çыхса хупхура сăсар çĕлĕке эпĕ пуç тăрне тăхăнса чалăшрах лартсан хăмапа çаптарнă аласем умне яр тухаççĕ çĕнĕ çынсем, сар хĕрсем. (*Лерм.*) 3. Пăхса тăчĕ-тăчĕ те шур сухалне якатса каларĕ вăл ерипе карчăк енне çаврăнса. (*К. Ив.*) 4. Салтакăн пит йывăр-çке çулĕ çӳл урлă терт выртрĕ пулсан таван халăхушăн куççулĕ Тăван Çĕршывра хăварсан. (*Алка.*) 5. Аван иртрĕ пурнăç херĕн çулĕ туличчен ашшĕ килне хăтана çичĕ ютран киличчен. (*К. Ив.*) 6. Рабочисем массăллă политикăллă стачкăсемпе демонстрацисем çине кусни хресченсен движенийĕ вăйланни халăх хĕç-пăшалланса-полицине тата войскăсемпе тытăçни юлашкинчен Хура тинĕс флотĕнчи восстани çаксене пурте халăхăн хĕç-пăшаллă восстанине тума кирлĕ условисем çитĕнсе пыни çинчен калана. (*ВКП(б) ист.*)

**147-мĕш упражнени.**

Çак текста вулăр. Чарăну паллисем лартнине ăнлантарса парăр.

Василĕк, сменăна килнĕ рабочисен малти ушкăнĕпе ермешсе, завода кĕрсе кайрĕ. Вăл хăйсен кӳршине—Çерук мучие мĕнле вĕлерни çинчен пиччĕшне епле те пулин никамран малтан каласа парасшăн.

Василĕк, рабочисен хушшине хурăн пуçлă çĕлен евĕр шăвăнкаласа, хуралçăсен тĕлне пуласран асăрханса, хăйĕн пиччĕшĕ патне вăл ĕçленĕ çĕрех сахал мар кĕркеленĕ. Часчасах вăл мĕн смена пĕтичченех пиччĕшĕпе пĕрле пăс хуранĕсен пӳлĕмĕнче иртгернĕ, пиччĕшне мĕнпе те пулин усăллă пуласчĕ тесе тăрăшнă.

Пĕррехинче Василĕк пан Струмилин куçĕсем тĕлне те лексе пăхнă, анчах, кочегарсем унăн хутне кĕнĕ пирки, механик аллине çех сулнă. Ача кочегарсене кăмрăк вагонĕсене пушатма пулăшнă, пăс хуранĕсен пӳлĕмне ăçтан кĕрсе çӳремеллисене пĕлсе тăнă. Вăл часах хăй валли питĕ майлă

шăтăк та тупнă, ун витĕр вăл, алăк умĕнчи контролёрсене курăнмасăрах, пăс хуранĕсен пӳлĕмне çӳреме пултарнă. Малтан вăл кăмрăк картишне пынă, унта вентиляцин сарлака трубине йăраланса кĕрсе, ун тăрăх кăмрăк шлакне тăкакан шăтăка аннă. Кун хыççăн тимĕр балка тăрăх кăмрăк хуракан шăтăк патне çитнĕ те, пĕр-икĕ кĕмĕркке антрацит хăйпатса ӳкерсе, пăс хуранĕсен пӳлĕмне сиксе тухнă. Хăйĕн çак вăрттăн çулне Василĕк никама та пĕлтермен, пиччĕшĕнчен те пулин пытарнă. Уншăн никам кĕтмен çĕртен ялт сиксе тухни, контролёрсен умĕнче çăп-çăмăл çех шăвăнса иртнĕ пек пулса, кочегарсене тĕлĕнтерни питĕ те кăмăла килнĕ. (*Н. Остр.*)

**148-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр. Мĕншĕн чарăну паллисем лартнине ăнлантарăр.

1. Кам та пулин шанмасран е вăрçасран хăраса. пĕр ĕç çинчен калам-ха хамăр ялта пулнине. (*К. Ив.*) 2. Салтак, сиксе тăрса, ун кун чупкалать. (*Чалд.*) 3. Эпĕ салтаксем мĕн хăтланнине татя кăшт пăхса тăтăм та, хама çавăрса ан илччĕр тесе, бараксем çуммипе, пĕшкĕнсе, килелле утрăм. (*Чалд.*) 4. Вăл шинельне алăк патĕнчи пăта çине çакрĕ, кутамккине хывса, сĕтел çине хучĕ те, амăшĕпе шăллĕне вăратмасăрах, сĕтел пуçĕнчи каска пуканĕ çине ларчĕ. (*Агак.*) 5. Çук-ха, çук, иртмен ман ĕмĕр; мухтанмасăр каласан, хам ĕçре эпĕ, тăвансемĕр, хама майлă партизан. (*Ĕçх.*) 6. Сасартăк, пĕр харăс тăрса, эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе васкарăмăр аслă вăрçа. (*Алка.*) 7. Эх, пырса-кĕрем-и эпĕ Мускава, улма чăпар утăма вылятса! (*И. Ив.*)

**149-мĕш упражнени.**

Çак текста çырса илĕр. Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартăр.

1. Пăшал пулсан эпĕ те забастовщиксене пулăшаттăм. (*Чалд.*) 2. Фёдор вăл ку çыхха ăçтан йăтса тухнине пĕлсе унпа пĕрле утрĕ. (*Фурм.*) 3. Унтри вунпĕр çула çитсен унăн амăшĕ вилсе каять. (*Элк.*) 4. Красноармеец ăна хуçи патне йăтса çитерчĕ те тимĕр кровать çине хучĕ унтан пĕр вырăнта кăшт вăтаннă пек пулса турткаланса тăна хыççăн алăка хăлăпĕнчен тытса уçса пĕр шарламасăр тухса кайрĕ. (*Фурм.*) 5. Пĕр минут вăл чĕнмесĕр кусне хупса пусне шăлкаласа ларчĕ те каллех калама пуçларĕ. (*М. Горьк.*) 6. Таван çĕршывшăн вилесси чи чаплă чыс. 7. Сулханлатнă сăн-питне пĕрĕнтере темĕскер каласшăн пек хускалакан тăсăк тути çинчи сарă мăйăхĕсене сиккелентерсе шăппăн пăхса юлать вăл тухса каякан Унтрин кутамкаллă çурăмне. (*Элк.*) 8. Ача та кулма чаранса савăнăçлăн тĕлĕнсе кетмен çĕртен тата ытларах тĕлĕнмелли япаласем сиксе тухасса кĕтнĕ пек Мегелица çине пăхма тытăнчĕ. (*А. Фад.*) 9. Унтри усламçăсем патне çăкăр булка леçсе пĕтернĕ хыççăн пĕр самантлăха магазин умне тухса тăрать. (*Элк.*)

10. Ак çамрăк пуçа хураççĕ тăсса çири тумтирне илеççĕ хывса пилеш хулăсем суйласа илсе пуçлаççĕ ăна касса ислетме. (*Элк.*) 11. Дневальнăй хăй тĕллĕн вăрçса илчĕ те сивĕ пирки тĕршĕнкелесе çĕтĕк шинелĕпе чĕркенкелесе уçланкăвалла утса тухрĕ. (*А. Фад.*) 12. Ирхине хĕвел тухса сарăлсан Февралĕв мана районри Совет комитетне илсе кайрĕ. (*Элк.*)

II. Андрий пăс хуранĕсен пÿлĕмĕнче питĕрĕнсе ларнипе пĕлсен тата ăна вĕлерме хатĕрленеççĕ тенине илтсен Василĕк тем тĕрлĕ сехĕрленсе ÿкрĕ. Ача хытса кайса легионерсем пăс хуранĕсен пÿлĕмне кĕме тăрăшнине пăхса тăрать.

Лешсен ĕçĕ тухмарĕ ача чикĕсĕр савăнса кайрĕ. Вăл рабочисен хушшинче ăшаланса çÿрет. Хăй паллакан кочегарсене курсанах вĕсем çине куççулĕпе пăхать.

Кочегарсем салху пăхса ăна хирĕç нимĕн те чĕнмеççĕ Вĕсенчен пĕри çех ăна алран тытрĕ те аяккалла илсе кайрĕ

Василĕк унтан пăрăнса кайрĕ. Куççуль юхтарса каллех вăл легионерсем мĕн тунине пăхма чупрĕ.

Пăс хуранĕсен пÿлĕмĕнче мĕн пулса иртнине завод картишне хупăнса юлнă пур рабочисем те сăнаса тăнă. Хĕç-пăшаллă легионерсем çĕнтерме пултарайман пĕр-пĕччен этемĕн паттăрлăхĕ пурин чĕрине те пăхăнтарчĕ. Йывăр ĕçпе асаплантарса тинкине кăларнă салху этемсем пĕр-пĕччен çын çав тери хирĕçлеме пултарвине кура хăйсен пассивлăхĕшĕн хăйсене ÿпкев тивнине туйсах тăраççĕ. Завод улани вĕсене çакăн çинчен пĕр самантлăха та мантармасть. Халĕ ĕнтĕ Птахăна мĕн пуласси пурне те пăшăрхантарать ăна уççăнах мухтаса калаçаççĕ. (*Н. Остр.*)

III. Çурхи кун хăйĕн пĕтĕм çамрăк хăвачĕпе хускалнă ĕнтĕ кĕрлет шавлать илĕртет. Çуллахи вăхăтра симĕс курăк çине пăрахса янă пурçăн хăю пек кăна курăнакан Энĕш шывĕ халĕ пĕтĕмпех улшăннă. Вăл тулхăра-тулхăра çăра кăпăк сирпĕтсе сăмсах çинелле сикет. Хĕрлĕ тăм ăшĕнчен авалхи шурă чулсене хире-хире кăларса çĕкле-çĕкле ывăтать. Выранĕ-выранĕпе вăл ĕнтĕ хăйĕн сулахай сĕвек çыранĕнчен те тухса кайнă. Улăх тăрăх ейÿвĕ тухнă шыв хĕвел питĕнче шăраннă ылттăн пек çуталса выртать. Пĕр тĕлте вăл авă районалла каякан дамба урлă та сикме тытăннă.

Анатри арман пĕви патĕнче калла-малла уткалакан çын мĕлки курăнать. Ку вăл Савук мучи армана сыхлать. Кăçал çуркунне шыв вăйлă пулассине сиссе Савук мучи арман пĕви çинчи пăрăссене шыв тапраниччен нумай малтан тачка вĕренсемпе кăкарса çирĕплеттерчĕ пĕве патне хурал пÿрчĕ умĕнчи чана илсе анса çактарчĕ. „Шыв питех килсе тапăнас пулсан халăха чан çапса пухмалла пулĕ“,—терĕ вăл.

Арман кавăсĕсене пĕтĕмпех уçса янă ĕнтĕ анчах мĕн тума пултарнă пулĕччĕ-ха шеремет Савук мучи шыв питех килсе тапăнас пулсан. Çакна вăл паллах хăй те лайăх ăнланать.

ҫапах та унӑн вата чунӗ армантах. Хӑй пӗве хӗрринче уткаласа ҫӳрени те ҫакӑ ҫурхи шухӑ чарусӑр шыва кӑштах лӑплантарнӑ пек туйӑнать ӑна. (*Агак.*)

## 79 §. Предложенири уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем.

Предложенири хӑш-пӗр кӗҫӗн членсене асӑрхаттармашкӑн калаканӗ вӗсене интонаципе палӑртма, предложенири ытти членсенчен паузӑпа уйӑрса калама пултарать.

Тӗслӗхсене танлаштарӑр:

*Совет Ҫарӗнчен килнӗ Иванов халӗ колхоз председателӗнче ӗҫлет.*

*Иванов, Совет Ҫарӗнчен килнӗскер, халӗ колхоз председателӗнче ӗҫлет.*

Сулахай енчи предложенире *Совет Ҫарӗнчен килнӗ* сӑмахсем предложенилле определени пулаҫҫӗ, эпир ку сӑмахсене интонаципе палӑртса, паузӑпа уйӑрса каламастпӑр. Сылтӑм енчи предложенире *Совет Ҫарӗнчен килнӗскер* сӑмахсене интонаципе палӑртса, паузӑпа уйӑрса калатпӑр. Ку сӑмахсем те *Иванов* сӑмаха ӑнлантарса параҫҫӗ, анчах уйрӑмлатса калакан кӗҫӗн членсем пулаҫҫӗ, е, кӗскен, у й р ӑ м т ӑ р а н к ӗ ҫ ӗ н ч л е н с е м.

**Предложенин интонаципе палӑртса, паузӑпа уйӑрса калакан кӗҫӗн членӗсене уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем теҫҫӗ.**

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем хӑйсен предложенири пӗлтерӗшӗ тӑрӑх предложенилле членсене тата хӑш-пӗр пӑхӑнуллӑ предложенисене питӗ ҫывӑх тӑраҫҫӗ, анчах кунта уйрӑмлӑх та пур.

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем ялан пекех хӑйсем умӗнче тӑракан сӑмаха ӑнлантарса параҫҫӗ. Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене, вӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан мӗнпур сӑмахсемпе пӗрле, предложенири ытти сӑмахсенчен запятойсемпе уйӑраҫҫӗ.

1. *Шухӑ Тӑвӑл хыпарҫиӗ, хура ҫиҫӗм евӗрскер, ярӑнса ҫӳрет.* (*М. Горьк.*) 2. *Паян, мартӑн 8-мӗшӗнче, пирӗн доклад пулать.*

## 80 §. Уйрӑмтӑран приложени.

Хӑш-пӗр уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем хӑйсем ӑнлантаракан сӑмахсемпе хисеп тӗлӗшӗнчен тата падеж тӗлӗшӗнчен килӗшсе тӑраҫҫӗ. Вӗсене чарӑну туса уйӑрса калаҫҫӗ.

1. *Пирӗн, вӗренекен ҫамрӑксен, наукӑна алла ҫавӑрса илмелле.* 2. *Вӑл, пулӑ тытма юратаканскер, кашни канмалли куна Атӑл леш енче ирттерет.*

3. *Манăн юлташ, пур ĕçре те* **хастарскер**, *вĕренӳре те малта пырать.* 4. *Кӳршĕн ывăлĕ,* **асли**, *институтра вĕренет.*

Ку предложенисенчи хулăн саспаллисемпе пичетленĕ сăмахсем хăйсем умĕнчи сăмахсен пĕлтерĕшне уçса параççĕ. Форма тĕлĕшĕнчен вĕсемпе пĕр хисепре, пĕр падежра килĕшсе тăраççĕ. Ун пек уйрăмтăран кĕçĕн членсене **уйрăмтăран приложени** теççĕ.

Уйрăмтăран приложенисем акă мĕнле пуплев пайĕсенчен тата акă мĕнле йĕркепе тĕл пулаççĕ.

а) Япала ячĕсенчен. *Пурмис, мăн* **сухал**, *çынна хĕрхенмест, Чакка кĕллине хăлхана чикмест.* (Элк.)

ă) Паллă ячĕсенчен, причастисенчен; вĕсем ун пек чух час-часах **-и,-скер** аффикссем йышăнаççĕ. 1) *Чухăнсем, вăтамсем,* **колхоза кĕрес текенсем**, *татах нумай-ха.* (М. Труб.) 2. *Çил,* **вăйлă та сивĕскер**, *çĕре часах типĕтрĕ.*

б) Приложени е союзпа çыхăнма пултарать. Е союз вырăнне **урăхла каласан** сăмахсен çаврăнăшĕ тăма пултарать. Пуринчен ытла ку йĕркепе сахалрах тĕл пулакан сăмаха ытларах тĕл пулакан сăмахпа ăнлантараççĕ. *Колхозсем чавкапуç, е клевер нумай акаççĕ.*

в) Пĕр-пĕр приложени кăтартакан япалана ытти япаласенчен уйăрса кăтартма тата çак сăмахсемпе усă кураççĕ: **пуринчен ытла, сăмахран, çав шутран, иксĕмĕр** т. ыт. те.

1. *Шкулти вĕренекенсем,* **пуринчен ытла** *кĕçĕн класри ачасем, ёлка пулассине хытă кĕтеççĕ* 2. *Чылай газсем,* **сăмахран** *кислород, сывлăшран йывăртарах.* 3. *Бригадăра ĕçлекен çамрăк хĕрарăмсем,* **çав шутра** *виçĕ комсомолка, премии илчĕç.* 4. *Эпир, аттепе* **иксĕмĕр**, *вăрман сукмакĕсем тăрăх сахал çӳремен.*

Приложенисем хăйсем ăнлантаракан сăмахсемпе хисеп тăрăх, падеж тăрăх килĕшсе тăраççĕ. Падежсенчен ят падежĕ ытларах тĕл пулать, анчах приложенисен пур тĕсĕсем те ят мар падежсенче те тĕл пулаççĕ.

1. *Петрова, вĕренӳ отличникне, Крыма каймалли путĕвкăпа премилерĕç.* 2. *Унпа, франтпа, калаçу пуçласа яма мана, çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ çынна, чылай йывăр пулчĕ.* (М. Горьк.).

Кунти примерсенче: *Петрова—отличникне* сăмахсем пĕрреллĕ хисепре тăву падежĕнче, *унпа—франтпа* сăмахсем пĕрреллĕ хисепре пĕрлелĕх падежĕнче, *мана—çынна* сăмахсем пĕрреллĕ хисепре пару падежĕнче килĕшсе тăраççĕ.

Уйрăмтăран приложени хăй ăнлантаракан сăмах хыççăн çеç мар, умĕн те тăма пултарать.

1. *Ывăннăскер, вăл часах çывăрса кайрĕ.* 2. *Килте те чылай выртса хăрнăскер, Чакка халь çине чухăнччĕ питех.* (Элк.)

## 81 §. Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем

Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем хӑйсен умӗнчи обстоятельствӑн пӗлтерӗшне уҫса параҫҫӗ, унпа пӗр йышши пӗлтерӗшлӗ, анчах ансӑртарах пӗлтерӗшлӗ сӑмах пулаҫҫӗ. Кун пек сӑмахсене эпир чарӑну туса уйӑрса калатпӑр.

Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем наречисенчен е япала ячӗсенчен пулаҫҫӗ.

1. *Ҫӑлте,* ***пӗлӗт айӗнче,*** *тӑри юрри илтӗнет.* (*К. Ив*)
2. *Матроссене кӗтнӗ кун, ирпеле, пӗтӗм Васильевски остров завочӗсенчи рабочисем тинӗс хӗррине тухса тӑчӗҫ.* (*Элк.*)
3. ***Ирхине ирех, пилӗк-ултӑ сехетре,*** *Фёдор алӑкне тахӑшӗ хыттӑн шаккарӗ.* (*Фурм.*)

## 82 §. *Пуҫне* хыҫҫӑмахлӑ уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем.

*Май уйӑхӗнчи ҫанталӑк, хӑш-пӗр кунсемсӗр* ***пуҫне,*** *пӗтӗмпех сивӗ тӑчӗ.*

Кун йышши уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем те хӑйсем умӗнче тӑракан сарлака ӑнлавлӑ члена ӑнлантарса параҫҫӗ, уншӑн исключени пулаҫҫӗ.

Асӑрхаттарни. *Пуҫне* хыҫҫӑмахлӑ сӑмах майлашӑвӗ яланах уйрӑмтӑран кӗҫӗн член пулмасть.
*Вӑрмана эпир сансӑр пуҫнех кайса килтӗмӗр.*

## 83 §. Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси

1. Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене запятойпа уйӑрса ҫыраҫҫӗ 1. *Ҫӗлӗкхи Россия,* ***халӑхсен тӗрми,*** *халӗ халӑхсен тӑванлӑ Союзӗ.* 2. *Вырӑссен паллӑ писателӗ,* ***Алексей Максимович Горький,*** *1868 ҫулта мартӑн 28-мӗшӗнче Горький хулинче столяр ҫемйинче ҫуралнӑ.* 3. *Ирхине,* ***шӑп тӑхӑр сехетре,*** *пирӗн уроксем пуҫланаҫҫӗ.* 4. *Виҫӗ ҫул каялла килте,* ***аннепе пӗчӗк шӑллӑмсӑр пуҫне,*** *икӗ аслӑ пиччем юлнӑччӗ.* (*Ис. М.*)

**150-мӗш упражнени.**

Ҫырса илӗр, уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене (предложенисене) аялтан туртӑр. Вӗсем хӑш члена (подлежащие е дополнение) ӑнлантарнине кӑтартӑр. Чарӑну палли лартнисене ӑнлантарӑр.

1. Пирӗн, ҫамрӑксен, наукӑна ҫӗнсе илмелле. 2. Вӗсене, ватӑсене, пирен хисеплес пулать. 3. Ачасене, апат ҫиекен пулнисене, маннӑпа рис кӗрпинчен пӑтӑ пӗҫерсе параҫҫӗ. 4. Эпӗ, пӗтӗмпех ывӑннӑскер, ӑнран кайнӑ пекех выртнӑ.

(*Гарш.*) 5. Кусем, Хаджи Мурата тытса чарма шутланăскерсем, аулра пуранакансем пулнă. (*Л. Толст.*) 6. Çемçе сывлăша кĕрхи шăршă, эрех шăрши майлăскер, саралнă. (*Л. Толст.*) 7. Чирлĕскер, вăл урайĕнче выртнă. (*Лерм.*) 8. Горький, тĕнчери паллă писатель, 1936 çулта вилнĕ. 9. Йывăр мана, старике, çавăн пек сăмахсене итлеме. (*М. Горьк.*) 10. Пирĕн класри вĕренекенсене, çав шутра виçĕ пионера, премии пачĕç. 11. Титок арăмĕ, çўллĕ те хыткавскер, пăрушне лаххантан шыв ĕçтерсе тарать. (*Шол.*) 12. Эсир, çамрăксем, манран лайăхрах пĕлетĕр пулмалла. (*Чалд.*) 13. Арманов, выртсанах çывăрса кайнăскер, пĕр-ик сехетрен алăк сассипе вăранчĕ. (*М. Труб.*)

**151-мĕш упражнени.**

Çырса илĕр, уйрăмтăран обстоятельствăсене аялтан туртăр. Вĕсем мĕнле сăмах ушкăнне кĕрекен сăмахсенчен пулнине кăтартăр.

1. Ял вĕçĕнче, Тукасра, пĕчĕкçеççĕ пўрт ларать. (*К. Ив.*) 2. Эпир вал çине, хăй тĕллĕнех пулнă тĕмеске çине, юпасем йăвă лартса çирĕплетнĕ вырăна кайрăмăр. (*Пушк.*) 3. Малта, катмар сăртсем хушшинче, аслати аватнă пек вăраммăн кĕмсĕртетнисем илтĕнме пуçларĕç. (*Элк.*) 4. Таçта аякра, сырма леш енче, йытă уласа вĕрет, вут çути йăлтăртатать. (*Шол.*) 5. Пахчара, хурăнсем тавраш ĕнче, нăрăсем сĕрленипе çĕçĕ хăйрани илтĕнет. (*М. Горьк.*) 6 Урамра, крыльцо умĕнче, красноармеецсем пухăнса тăнă. (*Фурм.*)

**152-мĕш упражнени.**

Чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

1. Василиса Егоровна пульăсем шăхăрнипе йăвашланнăскер пысăк шавлă çеçенхирелле пăхрĕ. Комендант суранланнипе вăйран кайнăскер юлашки вăйне пухрĕ. (*Пушк.*) 2. Казак çыру тытса тăраканскер лаша çинчен тешĕрĕлсе анчĕ. (*Пушк.*) 3. Сиганов çирĕм икĕ çулхи çамрăк кĕтеселле пăхнă. (*М. Горьк.*) 4. Эпир рабочисем çĕнтерегпĕр. (*М. Горьк.*) 5. Вăл Чапаев 1918 çулта паллă паттăр пулнă. (*Фурм.*) 6. Иван Кузьмич кун пек ыйтăва кĕтменскер пăтрашса кайнă, темтепĕр сўпĕлтетме тытăннă. (*Пушк.*) 7. Иван Кузьмич арăмĕ умĕнчех Пугачĕв чĕнĕвне çырăва пĕли-пĕлми казак çырнăскерне вуласа пачĕ. (*Пушк.*) 8. Манăн кўршĕ çамрăк казак хитре те яштака пўллĕскер пĕр курка эрех тултарса пачĕ анчах эпĕ ăна ĕçмерĕм. (*Пушк.*) 9. Пугачĕв хĕрлĕ сăхман тата пысăк çĕлĕк тăхăннăскер кĕтесре турăшсем айĕнче аллисене пилĕкне мăнкăмăллăн тытса ларать. (*Пушк.*) 10. Праски инкĕшĕ Праские курнипе çав самантлăха лавçă çинчен манса кайнă пек пулнăскер халĕ лаша патне пычĕ лашана васкаса тăварма тытăнчĕ. (*М. Труб.*) 11. Ку тунсăхлăха иртгерме пире Ильинпа иксĕмĕре пĕр-пĕрипе калаçса йăпанни пит те çăмăллатать. (*Элк.*) 12. Тĕпелте тăракан вăтам кăна арçын пĕчĕкрех çеç пит-куçлăскер пĕчĕк

шĕвĕр сухаллăскер ура ҫинче артистла вăрт анчах ҫавăнса илчĕ. (*Х. Ҫ.*) 13. Арманов чухăн ҫын ывăлĕ пулнăскер пĕтĕм чĕререн халăх хушшинчи ĕҫе парăнчĕ. (*Труб.*) 14. Кочегар ҫак йăра ачана кочегар ĕҫĕн искусствине питĕ хăвăрт ăнланса пыраканскере юратнă. (*Н. Остр.*)

153-мĕш упражнени.

Уйрăмтăран обстоятельствăсем кĕртсе лартса, текста ҫырса илĕр.

1. Садра (хăш вырăнта) кайăк йăва тунă. 2. Ҫуллахи каникулта (хăш кунсенче) пирĕн шкулти пионерсем лагере канма каяҫҫĕ. 3. Ял ҫывăхĕнче (хăш вырăнта) колхоз ферми вырнаҫса ларать. 4. Пӳртре (хăш вырăнта) Ленинпа Сталин портречĕсем ҫакăнса тăнă. 5. Урамра (хăш вырăнта) бригада хире кайма хатĕрленсе тăнă. 6. Ирхине (хăш вăхăтра) ачасем экскурсие тухса кайнă. 7. Паян (миҫе сехетре) эпир клубра спектакль лартатпăр.

154-мĕш упражнени.

Ҫак текста чăрăну паллисем лартса ҫырса илĕр. Уйрăмтăран кĕҫĕн членсене аялтан туртăр.

1. Ҫĕтĕк-ҫурăк тумлăскер Лĕнька хуҫалнă турат евĕрлĕн курăнна. (*М. Горьк.*) 2. Кунĕпе утса ывăннăскерсем эпир пурте хытă ҫывăрса кайнă. (*Элк.*) 3. Лере чикĕ леш енче урăх пурнăҫ урăх тĕнче. (*Уйăп.*) 4. Повозка хыҫĕнче виҫ-тăват утăмра юланутсем пыраҫҫĕ. (*Фурм.*) 5. Масар ҫинче чи чухăн кĕтесре ҫумăрпа тата ҫилпе юхăнса сапаланса пĕтнĕ ишĕлчĕк виллăприсем хушшинче вĕсенчен пĕрин ҫинче икĕ мĕскĕн хурăн шăтăкла евĕр мĕлке ӳкернĕ ҫĕрте пĕр ватăрах хĕрарăм ларать. (*М. Горьк.*) 6. Пĕр ирхине ирех мана темле питĕ те лайăх тĕлĕк курса выртаканскере анне хулпуҫҫирен лăскаса вăратрĕ. (*Агак.*) 7. Пĕрре август пуҫламăшĕнчи чĕрĕ те уҫă сывлăшлă каҫ ҫурҫĕр иртнĕ-иртменех Левинсон отрядне юланутлă эстафета персе ҫитнĕ. (*А. Фад.*) 8. Анне унăн кăмăлне лайăхах вĕренсе ҫитнĕскер яланах ку инкек кĕнекине ăҫта та пулин часах алă айне лекмелле мар вырăна хĕстерсе хума тăрăшатчĕ. (*Пушк.*) 9. СССР пролетариачĕ государство влаҫне тытса тăраканскер пачах ҫĕнĕ класс пулса тăчĕ. (*ВКП(б) ист.*)

**Темиҫе пăхăнуллă тата сыпăнуллă предложенирен тăракан хутлă предложени.**

Хутлă предложени хăйĕн составĕ тăрăх час-часах питĕ анлă пулать, пуринчен ытла кун йышши тĕслĕхсенче ҫакăн пек хутлă предложенисем тĕл пулаҫҫĕ:

1. Пăхăнуллă хутлă предложенири тĕп предложени ҫумĕнче темиҫе пăхăнуллă предложени пулма пултарать.

2. Пăхăнуллă хутлă предложенири тĕп предложени ҫумĕнче пăхăнуллă предложенисем те, пăхăнуллă предложенилле членсем те пулма пултараҫҫĕ.

3. Хутлă предложенире пăхăнуллă предложенисем те, пăхăнуллă предложенилле членсем те, сыпăнуллă предложенисем те пулма пултараççĕ.

## 84 §. Темиçе пăхăнуллă предложениллĕ хутлă предложени

Пăхăнуллă хутлă предложенири тĕп предложени çумĕнчи темиçе пăхăнуллă предложени виçĕ тĕслĕ çыхăнма пултарать:

1. Темиçе пăхăнуллă предложени, пĕр ыйтурах тăрса, тĕп предложенин пĕр членнех ăнлантараççĕ, пĕр пек пăхăнуллă çыхăнурах тăраççĕ. Вĕсене пĕр йышши пăхăнуллă предложенисем теççĕ:

*Анчах Врангель енче лайăх техника пулнă пулин те, Хĕрлĕ Çарăн танксем пулман пулин те, Хĕрлĕ Çар Врангеле Крым çурутравĕ çине хăваласа кĕртнĕ.* (*ВКП(б) ист.*)

Ку хутлă предложени пĕр тĕп предложенирен тата икĕ пĕр йышши пăхăнуллă предложенирен тăрать.

2. Темиçе пăхăнуллă предложени, тĕрлĕ ыйтура тăрса, тĕп предложение тĕрлĕ енчен ăнлантарать.

*Тырă аван пултăр тесе, эпир çĕре минерал çăнăхĕсемпе çĕнетрĕмĕр, çавăнпа тырă лайăх пулчĕ.*

Ку хутлă предложенире пĕр тĕп предложени—*эпир çĕре минерал çăнăхĕсемпе çĕнетрĕмĕр*. Çак тĕп предложение *тырă аван пултăр тесе* пăхăнуллă предложени тĕллев енчен ăнлантарать, иккĕмĕш пăхăнуллă предложени—*çавăнпа тырă лайăх пулчĕ*—тĕп предложени кăтартакан ĕçĕн следствийĕ пулать.

3. Пăхăнуллă хутлă предложенири пăхăнуллă хутлă предложенисем умлă-хыçлă çыхăнма пултараççĕ: пĕрремĕш пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе, иккĕмĕш пăхăнуллă предложени—пĕрремĕшпе, виççĕмĕш пăхăнуллă предложени—иккĕмĕшпе т. ыт. те.

*Экскурсие каяс тесе, ирех тăтăмăр пулин те, эпир улăха çитиччен хĕвел çӳле улăхнă.*

Кунта тĕп предложени—*хĕвел çӳле улăхнă*, ăна хирĕçӳллĕ йĕркепе *ирех тăтăмăр пулин те* пăхăнуллă предложени ăнлантарать, çак пăхăнуллă предложенири ĕçĕн тĕллевне кăтартса, ăна тепĕр пăхăнуллă предложени—*экскурсие каяс тесе* ăнлантарать. Кунсăр пуçне тата ку предложенире *эпир улăха çитиччен* предложенилле член пур, вăл тĕп предложенипе çыхăнать, тĕп предложенири ĕçĕн тапхăрне кăтартать.

## 85 §. Пăхăнуллă хутла предложенипе пăхăнуллă предложенилле членлă предложени.

Пăхăнуллă хутлă предложенире пăхăнуллă предложени те, пăхăнуллă предложенилле член та пур пулсан, пуринчен ытла çакăн пек тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ:

1. Пăхăнуллă предложени те, пăхăнуллă предложенилле член та, пĕр-пĕринпе çыхăнмасăр, кашни хăй тĕллĕн тĕп предложение ăнлантарать.

*Хĕпĕртеççĕ çăлтăрсем уйăх тухнă чух, çăлтăра вылямa лайăхрах тесе. (Лерм.)*

2. Пăхăнуллă предложени, предложенилле члена ăнлантарса, унăн составне кĕрет.

*Тырпул аванрах тăвас тесен, агротехникăна вĕренмеллине кашни колхозникăн пĕлмелле.*

3. Предложенилле член, пăхăнуллă предложение ăнлантарса, унăн составне кĕрет.

*Аслă шкулта вĕреннĕ чух отличник пулас тесе, эпĕ вăтам шкултах тăрăшса вĕрентĕм.*

## 86 §. Темиçе пăхăнуллă тата сыпăнуллă предложенирен тăракан хутлă предложени.

Хутлă предложенире час-часах пăхăнуллă предложенисем те, сыпăнуллă предложенисем те пулма пултараççĕ.

Сăмахран:

*Вăхăтлăха ăнăçсăрлăхсем пулчĕç пулин те* (1), *пирĕн çарпа пирĕн флот пĕтĕм фронт тăршшĕпех тăшманăн атакисене паттăррăн сире-сире яраççĕ, тăшмана йывăр çухатусем кӳреççĕ,* (2) *пирĕн çĕршыв вара* (4),—*пирĕн пĕтĕм çĕршыв,—нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хамăрăн çарпа тата хамăрăн флотпа пĕрле пурнăçа кĕртес тесе* (3) *пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса организациленчĕ* (4).

Ку хутлă предложени икĕ сыпăнуллă предложенирен тăрать (2, 4), вĕсенчен кашнин пĕрер пăхăнуллă предложени пур (1,3).

Çакă предложенин схеми:



Хăш-пĕр чухне сыпăнулла предложенире пăхăнулла предложени те, сыпăнулла предложени те, пăхăнулла предложенилле член та пулма пултарать. Вĕсем тĕрлĕ йĕркепе майлашса тăма пултараççĕ. Акă пĕр тĕслĕх:

*Анчах тăшман жертвăсем умĕнче чарăнса тăмасть* (1), *вăл хăй салтакĕсен юнне нимĕн чухлĕ те шеллемест* (2), *стройран тухнисем вырăнне вăл çĕнĕ те çĕнĕ отрядсем ярса тăрать* (3), *хĕл пуçланиччен Ленинградпа Мускава туртса илес тесе* (4), *пĕтĕм вăйне пухса*(5) *çапăçать вăл* (6), *мĕншĕн тесен хĕл ăна лайăххине нимĕн те парас çуккине* (7) *вăл пĕлет* (8).

Ку хутлă предложенире тăвата сыпăнулла хутсăр предложени (1, 2, 3, 5), икĕ пăхăнулла предложени (4, 8), вĕсем иккĕш те улттăмĕш предложение ăнлантараççĕ, пĕри (4) тĕллеве кăтартса, тепри (8) пиркене кăтартса, икĕ предложенилле член (5, 7), вĕсенчен пĕри (5) мĕнлелĕхе кăтартать, тепри—(7)—дополнени пулать.




## 87 §. Темиçе пахăнулла тата сыпăнулла предложенирен таракан хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.

1. Хутлă предложение кĕрекен темиçе пĕр йышши пăхăнулла предложение пĕр-пĕринчен те, тĕп предложенирен те запятойпа уйăраççĕ.

*Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсен хĕçпăшалне пăрахма килĕшмеççĕ пулсан, вĕсем алла хĕçпăшал тытса пирĕн çĕршыва чуралантарма тăрăшаççĕ пулсан, Совет Çарĕ вĕсене пĕтерсе тăкать.* (*Ст.*)

2. Пӗр йышши пӑхӑнуллӑ предложенисем пӗр хут тӗл пулакан сыпӑнтаракан союзпа сыпӑннӑ пулсан, вӗсене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑрмаҫҫӗ.

*Паллах, нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене, вӗсем пирӗн ҫӗршыва чуралантарма тӑрӑшаҫҫӗ пулсан е тата пирӗн войскӑсем ҫавӑрса илнӗ чухне вӗсем хӗҫпӑшала пӑрахса тыткӑна парӑнма килӗшмеҫҫӗ пулсан, Совет Ҫарӗн вӗсене пӗтерсе тӑкма тивет.* (*Ст.*)

3. Предложенилле членсем кӗрекен сыпӑнуллӑ предложенисене, запятой кӗрекен анлӑ пӗр йышши пӑхӑнуллӑ предложенисене ытти предложенисенчен точкӑпа запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

*Чиперуйран иртсессӗн,*
*Пирӗн вӑрман пит чипер:*
*Йӑвӑ ӳснӗ йывӑҫсем,*
*Питӗ вӑрӑм чӑрӑшсем;*
*Пӑхсан, ҫӗлӗк ӳкмелле;*
*Кассан, часах ӳкмелле.* (*М. Фёд.*)

4. Пӑхӑнуллӑ предложени, предложенилле члена ӑнлантарса, унӑн составне кӗрсен е предложенилле член, пӑхӑнуллӑ предложение ӑнлантарса унӑн составне кӗрсен, вӗсене пӗр-пӗринчен запятойпа уйӑрмаҫҫӗ.

1. *Тырпул авантарах тӑвас тесен, агротехникӑна вӗренмеллине кашни колхозникӑн пӗлмелле.* 2. *Вузра вӗреннӗ чух отличник пулас тесе, эпӗ вӑтам шкултах тӑрӑшса вӗрентӗм.*

5. Пиркене е тӗллеве кӑтартакан пӑхӑнуллӑ предложени условие е хирӗҫлеве кӑтартакан пӑхӑнуллӑ предложенипе умлӑ-хыҫлӑ ҫыхӑнсан, вӗсене запятойпа уйӑраҫҫӗ. Ытти пӗлтерӗшлӗ пӑхӑнуллӑ предложенисем умлӑ-хыҫлӑ ҫыхӑнманпа пӗрех, ҫыхӑнсан та, вӗсене запятойпа уйӑрмаҫҫӗ.

*Спектакль курас тесе, театра вӑхӑтра ҫитрӗмӗр пулин те спектакль курма пулмарӗ, мӗншӗн тесен билетсене эпир ҫитиччен сутса пӗтернӗ.*

**155-мӗш упражнени.**

Текста вуласа тухӑр. Хутлӑ предложенисем мӗнле предложенисенчен, предложенилле членсенчен тӑнине, хӑш предложени хӑшне ӑнлантарнине, чӑрӑну паллисем мӗншӗн лартнине ӑнлантарӑр.

1. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ, нимӗҫсем урӑхла шутланӑ пулин те, пирӗн ҫар вӑйлӑрах пулчӗ, нимӗҫ захватчикӗсен каппайчӑк рекламисем тӑрӑх урӑхла шутламалла пулнӑ пулин те, нимӗҫ ҫарӗ вӑйсӑртарах пулчӗ. 2. Килкартинче праҫник кунӗ ялтӑртататъ, пӳрт крыльцисене, хапхисене ҫамрӑк хурӑнсемпе илемлетнӗ; кашни тумба ҫумнех каснӑ чӗрӗ вӗрене, пилеш

тураттисем çыхса тухнă; пĕтĕм урам, çамрăкланса кайнă пек, хаваслăн симĕсленвĕ. (*М. Горьк.*) 3. Çав ĕçе курсанах, хай Иван ĕмпӳ çиллипе çилленчĕ, урипе тапрĕ, хура куçхаршисем пĕрĕнсе тăчĕç; çав сатур хуçана тытма хушрĕ вăл, паттăра хăй патне çавăтса пыма. (*Лерм.*) 4. Çакăнсăр пуçне тата, революци—обстановка килĕшӳллĕ мар пулса кайсан, революци чакса пырать пулсан, большевиксем йĕркеллĕн отступлени тума пĕлнине, большевиксем кадрсене упраса хăварас, вăйсене пухас тесе, тата, çĕнĕ обстановкăна кура çĕнĕлле йĕркеленсе тăшман çине çĕнĕрен наступленине каяс тесе, тĕрĕс, паникăçăр тата тĕркĕшмесĕр отступлени тума та вĕренсе çитнине кăтартса панă. (*ВКП(б) ист.*)

**156-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр, кирлĕ çĕре чарăну паллисем лартăр

1. Аслă кинĕ мĕн ятли пире халĕ кирлĕ мар хăйне кĕвĕллĕ арăмччĕ тӳрриперех каласан хитрех те мар мухтама начар та мар хурлама. (*К. Ив.*) 2. Совет Çарĕн чаçĕсен ирĕксĕрех каялла чакмалла пулсан чугун çулсем çинчи мĕнпур çӳремелли состава хамăр паталла илсе килмелле тăшман аллине пĕр паровоз та пĕр вагон та хăвармалла мар противник аллине пĕр килограмм тырă та пĕр литр горючи те хăвармалла мар. (*Ст.*) 3. Парти вăл хăйĕн партиллĕ ансăр хуппи ăшне хупланса ларать пулсан массăсенчен уйрăлса каять пулсан вăл бюрократла тутăхпа витĕнсе ларсан вăл пĕтсе ларать. (*ВКП(б) ист.*) 4. Крепостнăй правăна пăрахăçа кăларнă пулин те хресченсене пĕчĕк айăпшăнах хырçă тӳлеменшĕн розгăпа хĕненĕ. (*ВКП(б) ист.*) 5. Ыр вилĕмпе вилсессĕн кушак çури мар тесе хуллен-хуллен ерипе авалхи çынсен йăлипе тирпейлесе пытарĕç. (*М. Фĕд.*)

**157-мĕш упражнени.**

Текста çырса илĕр, кирлĕ çĕре чарăну паллисем лартăр, мĕншĕн чарăну паллисем лартмаллине ăнлантарăр.

Халăх хушшинче мĕн чухлĕ талант пĕтмен пулĕ çавăн пек? Шухăшласан çӳç-пуç вирелле тăрса каять... Пирĕн халĕ ĕнтĕ çĕнĕрен çуралаканнисене çитĕнтернипе пĕрлех çав вилсех пĕтейменнисене те тепĕр хут чĕрте-чĕрте тăратмалла. „Чĕртме пулĕ-ши Нимĕç Иванне“,—тетĕп. Юрă çаврăмĕн сăмаххисене астăвать пулсан çеммисене те пурне те манса пĕтме кирлĕ мар вăл. „Мĕнле çемĕсем каланă-ши эсĕ?“—тесе ыйтсассăн Нимĕç Иванĕ çине тăрсах астумана печĕ тем тусассăн та каласшăн мар пулчĕ. Ку мана пăртак тĕлĕнтерчĕ мĕншĕн тесессĕн хам шухăшăмпа çын пурпĕр пĕтĕмпех манса кайма кирлĕ мар хăшне те пулсан вуннăран пĕрне те пулин астумаллах. Урăх нимĕн те мар Нимĕç Иванĕ ман умра юри кăна хăтланать хытса ларнă пек пулнă тăнне-пуçне юри хускатасшăн мар çеç. Анчах та эпĕ тӳрех каялла чакакан

йышши мар. Майӗпе тавраран пырса унтан та кунтан та тӗккелесе апӑратса ҫитерн ӗ хыҫҫӑн чӗлхе-ҫӑварӑмпа апла та капла та ҫавӑркалама тӑрӑшнӑ хыҫҫӑн старике ҫапах та хӑй позицийӗнчен кӑшт та пулин чакартӑм-чакартӑмах вӑл пӗр пит авалхи ҫемӗ астуса илсе юрланӑ-юрламан каласа пачӗ-пачех. Эпӗ хӗпӗртенипе ухмахла транках сиксе илтӗм. Капла ҫынна хӑратса пӑрахма та пулать вӗт. Нимӗҫ Иванӗ эпӗ сиксе илнинчен хӑрама мар, пушшӗ кӑна хӑпартланса кайрӗ тепӗр хут каласа пама ыйтсассӑн унӑн сасси тата уҫҫӑнтарах янӑма тытӑнчӗ виҫҫӗмӗш хутӗнче вара аванах пит аванах пулса тухрӗ. (*Х. Ҫ.*)

## 88 §. Урӑх ҫын сӑмахлӑ предложенисем.

Урӑх ҫын сӑмахӗсене икӗ тӗслӗ калама пулать:

а) Калакан сӑпат ячӗпе, унӑн сӑмахӗсене пӗр улӑштармасӑр, тӳррӗн:

1. *Бригадир мана*: *„****Ыран эсӗ утӑ ҫулма каятӑн****“,—терӗ*. 2. *„****Вырӑнсем йышӑнӑр****“,—терӗ председатель.*

ӑ) Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсен формине улӑштарса:

1. *Бригадир мана ыран эпӗ утӑ ҫулма каясси ҫинчен пӗлтерчӗ*. 2. *Председатель вырӑнсем йышӑнма хушрӗ.*

**Урӑх ҫын сӑмахӗсене пӗр улӑштармасӑр каланине тӳррӗн каланӑ сӑмахсем теҫҫӗ. Урӑх ҫын сӑмахӗсене улӑштарнӑ формӑпа каланине улӑштарса каланӑ сӑмахсем теҫҫӗ.**

Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсене—кам каланине кӑтартакан сӑмахсене автор сӑмахӗсем теҫҫӗ, сӑмахран: 1) *Бригадир мана... терӗ,* 2) *терӗ председатель.*

Урӑх ҫын каланӑ сӑмах предложенире тӗрлӗ вырӑнта пулма пултарать.

1) Урӑх ҫын каланӑ сӑмах автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн пулма пултарать.

*Хӑйӗн пӗчӗк чӗлхипе инкӗшне вӑл йӑпатать*: *„****Ан йӗр, инкем, ан йӗрсем, тутӑрупа шӑл куҫна!****“ (К. Ив.)*

2) Урӑх ҫын каланӑ сӑмах автор сӑмахӗ умӗн пулма пултарать.

*„****Андрюша****“—таҫта инҫех те мар кӑшкӑрать Василёк.* (*Н. Остр.*)

3) Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем варринче автор сӑмахӗсем пулма пултараҫҫӗ.

*„Ну, ну, вӗрен, ывӑлӑм,—****савӑнса кулса ячӗ Скляров****,—усаллӑ пулӗ“.* (*М. Горьк.*)

4) Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем автор сӑмахӗсен варринче пулма пултараҫҫӗ.

*Сасартӑк*: *„****Вӑрҫӑ!****“—тени илтӗнет.* (*Элк.*)

## 89 §. Урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.

1. а) Автор сăмахĕсем хыççăн, урăх çын каланă сăмахсем умĕн двоеточи лартаççĕ.

ă) Урăх çын каланă сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

б) Урăх çын каланă сăмахсем умĕн те, хыççăн та кавычкăсем лартаççĕ.

*Савельич, пит те кая юлса, çине-çинех мана инçетрен кăшкăрать: „Ерипентерех, сударь, тархасшăн хуллентерех кай-ха“.* (*Пушк.*)

*Вăрман шавне хуплас пек пырать Сетнер юрласа: „Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман, мĕншĕн хытă шавлатăн? Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса, мĕскĕн чуна хăрататăн?“*

2. Урăх çын каланă сăмахсем калуллă пулсан тата вăл автор сăмахĕсем умĕнче тăрать пулсан, урăх çын каланă сăмахсем хыççăн запятойпа тире лартаççĕ:

*„Сăкăр-тăвар хире-хирĕç“,—терĕ вăл, куçне хĕссе.* (*Пушк.*)

Урăх çын каланă сăмахсем ыйтуллă е кăшкăруллă пулсан, запятой вырăнне автор сăмахĕсем умĕнчи урăх çын каланă сăмахсем хыççăн е ыйту палли, е кăшкăру палли лартаççĕ:

*„Гришуха ăçта вара?“—çул майăн ыйтрĕ ашшĕ.*

*„Каялла, çыран патне!“—кăшкăрчĕ вăл.*

3. Автор сăмахĕсем урăх çын каланă сăмахсем варринче пулсан, чарăну паллисем лартасси виçĕ тĕслĕ пулать.

а) Урăх çын каланă сăмахсен малтанхи татăкĕ хыççăн нимĕнле паллă та лартмалла мар пулнă пулсан, е запятой, е точкăпа запятой, е двоеточи лартмалла пулнă пулсан, автор сăмахне икĕ енчен те запятойпа тире лартса уйăраççĕ:

*„Паян,—терĕ васкаса колхоз председателĕ,—пирĕн пата агитбригада килет“.*

(Автор сăмахĕсĕр çапла пулнă пулĕччĕ: *Паян пирĕн пата агитбригада килет*).

*„Чарăн, Василёк,—кăшкăрчĕ вăл,—текех чупма пултараймастăп!“* (*Н. Остр.*)

(Автор сăмахĕсĕр çапла пулнă пулĕччĕ: *Чарăн, Василёк, текех чупма пултараймастăп!*“)

*„Халĕ ĕнтĕ ĕненетĕп,—тесе илчĕ вăл,—эсĕ чăн-чăн стрелок, Иван!“* (*Чалд.*)

(Автор сăмахĕсĕр çапла пулнă пулĕччĕ: *Халĕ ĕнтĕ ĕненетĕп: эсĕ чăн-чăн стрелок, Иван!*)

ă) Урăх çын каланă сăмахсен малтанхи татăкĕ хыççăн точка лартмалла пулнă пулсан, автор сăмахĕ умĕн запятойпа тире, хыççăн точкăпа тире лартаççĕ; урăх çын сăмахĕн иккĕмĕш пайне пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ:

*„Эпӗ Швабрина вӗрентӗп,—терӗ хаяррӑн Пугачёв.— Ман патра халӑхран мӗнле иртӗнессине, мӑшкӑллассине вӑл чухлӗ“.* (*Пушк.*)

(Автор сӑмахӗсӗр ҫапла пулнӑ пулӗччӗ: *Эпӗ Швабрина вӗрентӗп. Ман патра халӑхран мӗнле иртӗнессине, мӑшкӑллассине вӑл чухлӗ.*)

б) Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсен малтанхи татӑкӗ хыҫҫӑн ыйту е кӑшкӑру палли лартмалла пулнӑ пулсан, автор сӑмахӗ умӗн ҫав паллӑсемпе тире лартаҫҫӗ. Автор сӑмахӗ хыҫҫӑн точка тата тире лартаҫҫӗ.

*„Эсӗ мӗн ухмаха ертӗн-им, Андрий!—чупса пычӗҫ кочегарсем Птаха патне.—Е эсӗ пире пурне те ӗҫрен кӑларса пӑрахтарасшӑн-и“.* (*Н. Остр.*)

(Автор сӑмахӗсӗр ҫапла пулнӑ пулӗччӗ: *Эсӗ мӗн ухмаха ертӗн-им, Андрий! Е эсӗ пире пурне те ӗҫрен кӑларса пӑрахтарасшӑн и?*)

*„Мӗн ҫинчен пит пуҫа чиксех шухӑхлатӑн?—тесе ыйтрӑм эпӗ, Сечене юнашар пырса ларса.—Килтен хыпар илмерӗн пулӗ вӗт?“* (*Ис. М.*)

(Автор сӑмахӗсӗр ҫапла пулнӑ пулӗччӗ: *Мӗн ҫинчен пит пуҫа чиксех шухӑшлатӑн? Килтен хыпар илмерӗн пулӗ вӗт?*)

4. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем автор сӑмахӗсем варринче пулсан, вӗсен умӗн двоеточи, хыҫҫӑн интонацирен килекен чарӑну палли: запятой, е кӑшкӑру палли, е ыйту палли тата тире лартаҫҫӗ. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ, урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем умӗн те, хыҫҫӑн та кавычкӑсем лартаҫҫӗ.

*Ун хыҫҫӑнах: „Эпӗ вӑл, Ваҫка!“—тесе хаваслӑн кӑшкӑрни Птахӑна пӑшалне персе яма чарчӗ.*

Урӑх ҫын каланӑ сӑмахлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартассине схема туса кӑтартни.

1. ______________________ : „А__________________. е! е?“
(автор сӑмахӗсем) (урӑх ҫын сӑмахӗсем)

2. „________________, е! е?“ ______________________.

3. „__________,е! е?“ ______________,__ а ________. е! е?“

4. ____________: „А____________, е! е?“ ______________.

Кунта автор сӑмахӗсене пӗр йӗрпе, урӑх ҫын сӑмахсене икӗ йӗрпе кӑтартнӑ. Урӑх ҫын сӑмахӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырассине пысӑк А-па, пӗчӗкпе ҫырассине пӗчӗк а-па кӑтартнӑ.

5. Икӗ е темиҫе ҫын калаҫнине (диалога) ҫырса панӑ чухне кашни калаҫӑва ҫӗнӗ йӗркерен пуҫласа ҫыраҫҫӗ, кашни калаҫу умӗн тире (—) лартаҫҫӗ, кавычка лартмаҫҫӗ.

Тĕслĕх:

*Андрийăн чĕри хăвăрттăн тапма пуçларĕ:*
*— Ăçтан кĕтĕн эсĕ кунта?*
*— Кăмрăк карташĕнчен.*
*— Унта кĕмелли вырăн çук-çке...*
*— Эпĕ труба витĕр. Сарлака вăл! Эсĕ те тухма пултаратăн. Айта, Андрюша, часрах! Темĕн чухлĕн килсе тулнă вĕсем! Вĕлересшĕн, тет, сана! Остап пичче каларĕ.*
*Василĕк Андрие шăтăк патнех сĕтĕрет.*
*— Хăпар, эпĕ сан хыçăнтан!* (*Н. Остр.*)

Автор хăй текстне кĕртекен урăх çын сăмахĕсене е предложенисене кавычкăсемпе палăртаççĕ:

*Вăранчĕ кăмăлăм хăватлăн,*
*Сĕкленчĕ тунсăхлă чĕре...*
*„Тăван çĕрте мĕн вăл çухатнă,*
*Мĕскер шырать вăл инçетре“...* (*Ĕçх.*)

Кавычкăсемпе палăртнă предложенисене Ĕçхĕл поэт Лермонтов çырнă „Парус“ сăвăран илет, тинĕсре шурă парус курнă пирки аса илет.

Хăй пĕлтерĕшпе илмен сăмахсене, çавăн пекех иронилле сăмахсене те кавычкăсемпе палăртаççĕ:

1. *Помещиксем хресченсене „ирĕке кăларнă“ чухне, унччен хресченсем усă курнă çĕрĕн чылай пайне туртса илсе, касса илсе, вĕсене çаратса хăварнă.* (*ВКП(б) ист.*)

2. *„Хăярсем“ тĕл ӳкрĕç питĕ:*
*Шăп çавра сĕтел çине.* (*Ĕçх.*)

3. *Нумайччен Орлов ĕçлерĕ,*
*„Хăналарĕ“ нимĕçе.*
*Вăл пĕрре те шеллемерĕ*
*Ырă, сиплĕ „çимĕçе“.* (*Ĕçх.*)

138-мĕш упражнени.

Çырса илĕр. Автор сăмахĕсене аялтан туртăр. Чăрăну паллисем лартнине ăнлантарса парăр.

1. „Ыран ирпе уй-хирелле уçăлма каяр-и?—терĕ Анна Сергеевна Базарова.—Эпĕ сирĕнтен уйри ӳсен-тăрансен латинла ячĕсене тата вĕсен свойствине ыйтса пĕлесшĕн“. (*Тург.*) 2. „Ну, матушка,—терĕ ăна хирĕç Иван Кузьмич,—хамăр крепоçа шанатăн пулсан, юлах“. 3. „Ан та калаçăр вырăнсăр,—терĕ комендант арăмĕ.—Ăçта вара вăл пуля вĕçсе кĕрейми крепость?“ 4. „Ну, шăллăмсем,—терĕ Пугачёв,—çыварас умĕн юрласа илер-ха пĕр кана эпĕ юратнă юрра“. 5. „Юрĕ,—терĕ Пугачёв,—халĕ ĕнтĕ сирĕн хулари лару-тăру мĕнлине

каласа пар". (*Пушк.*) 6. Казбич, чӑтайманнипе, ӑна чарнӑ: „Кай кунтан, айван ача! Санран пулать-и ман лашапа ҫӳрес-си?" (*Лерм.*) 7. „Ҫапла,—ответленӗ Казбич чӗнмесӗр, тӑнӑ хыҫҫӑн,—Кабардинипе те ун пек лаша тупаймӑн". (*Лерм.*) 8. Атте сасартӑк анне енне ҫавӑрӑнчӗ те: „Авдотья Васильевна, миҫе ҫултаччӗ-ха ҫав пирӗн Петруша?"—терӗ. (*Пушк.*) 9. Эпӗ, тӳссе тӑрайманнипе: „Мӗншӗн уттармастӑн-ха ара эсӗ?"—терӗм хамӑр ямшӑка. (*Пушк.*) 10. „Апат тахҫанах антарнӑ, сана чӗне-чӗне те кӗтсе илмелле мар",—терӗ Василиса Егоровна упӑшкине. (*Пушк.*) 11. „Мӗнле ҫын вара вӑл Пугачёв?"—ыйтнӑ комендант арӑмӗ. (*Пушк.*)

**159-мӗш упражнени.**

Ҫырса илӗр. Кирлӗ чарӑну паллисене лартӑр.

I. 1. Мӗн калаҫаҫҫӗ Оренбургра ман ҫинчен тесе ыйтрӗ Пугачёв кӑшт тӑхтасан.

Сана ҫӗнтерме йывӑртарах теҫҫӗ.

Ҫапла терӗ вӑл савӑнӑҫлӑн. (*Пушк.*)

2. Ӗҫрен хӑрас мар тесен тет М. Горький материала лайӑх тӗпчесе вӗренмелле. 3. Сывӑ пулччӑр пӗтӗм тӗнчери ӗҫлекен ҫынсем кӑшкӑрчӗ Павел. (*М. Горьк.*) 4. Сире пирӗн хула мӗнле пек туйӑнчӗ сӑмах хушрӗ Манилова. Питӗ аван хула ҫав тери илемлӗ хула ответленӗ Чичиков. (*Гоголь.*) 5. Мӗн тӑвас килет тӑвӑр ответлерӗ салхуллӑн Дубровский эпӗ ӗнтӗ текех кунта хуҫа мар. (*Пушк.*). 6. Пулемётсем пурте ӗҫлесҫӗ-и тесе ыйтнӑ Чапаев сиктерсе пынӑ ҫӗртенех. (*Фурм.*) 7. Пӗри те пулсан пӑхмасть-ши тесе вӑл чӳречерен пӑхкаласа илет. (*Х. Ҫ.*) 8. Хуралҫӑ Хура тинӗс казакӗ пулнӑскер шӑнкӑрав сассине илтсенех ыйхӑ тӗлӗшпе кам килет тесе кӑшкӑрчӗ. (*Лерм.*) 9. Ну култаратӑн та хуҫа терӗ юлашкинчен Метелица урине йӗнер пускӑчӗ ҫине пусса. (*А. Фад.*)

II. 1. Манпа тӗлсӗр тӗл пулнишӗн эпе курап вӑл савӑнмасть Елиххан мучи тет нишлӗн пултӑр тет халь ырӑ каҫ. 2. Чим-ха тетӗп ҫитсе кур-ха ху ҫуралнӑ кӗтессе. Сӑрасем те тетӑп пур халь ӗҫкӗ-ҫикӗ ял-ял урла тӑкӑнать теп кӗрлесе (*Ӗҫх.*) 3. Суятӑн Суятӑн хаяррӑн кӑшкӑрса пӑрахрӗ Ульяна икӗ чышкине те ҫӳлелле ҫӗклесе. Ку манӑн пурнӑҫ вӗҫӗ мар пуҫламӑшӗ кӑна. (*Тукт.*) 4 Отряд пли тени вӑрманта янӑраса кайрӗ. (*Чалд.*) 5. Ну Михаля пичче ӗҫ тухрӗ. Мучар лекрӗ вӗт тапӑ айне терӗ Арманов Михаляна алӑ парса. (*Труб.*) 6. Паянах колхоза ӗҫлеме каятӑп. Арӑмпа ачам-пӑчампа пурте ӗҫе тухасчӗ ӗҫлес килет терӗ хӑй ӑшӗнче Михаля. (*Труб.*) 7. Якур Мучи вара ларать те хӑй чӗлӗмне кӑшт тӳрлетсе хӑлатсенчен те вӑйлӑрах тет вӗҫеҫҫӗ ӑмӑрткайӑксем. (*Ӗҫх.*) 8. Ну юлташсем халӗ ӗнтӗ эпир красноармеецсем мар партизансем пулатпӑр. Малашне эпир тӑшманпа партизансен меслечӗпе кӗрешетпӗр терӗ Усов хайӗн отрядне. (*Чалд.*)

**160-мӗш упражнени.**

Çак текста чарăну паллисем лартса çырса илӗр.

## ТĂШМАН САМОЛЁТНЕ ПЕРСЕ АНТАРНИ.

Сывлăш Иккӗмӗш номерлӗ тӗллев Германи бомбардировщикӗсем илтӗнчӗ разведчик-красноармеец Фоменко сасси.

Пирӗн батарея маскировка туса вырнаçнă. Вăл ăçтине курма çук. Разведчик асăрхаттарнă хыççăн çийенчех хӗрӳллӗ ӗç пуçланчӗ.

Ирхи тӗтрелӗхре тăшмансен икӗ бомбардировщикӗн силуэчӗсем кăшт кăна палăраççӗ.

Кӗçӗн лейтенант Шкодаревич команда парать.

Расчётсене хăвăрт та тӗрӗс тăваççӗ. Вӗреннӗ вăхăт ахаль иртмен. Н-ски зенитнăй чаçре батарея ахальтен мар ӗнтӗ чи лайăх батарея шутланать.

Тӗллеве тупнă пӗлтерет кӗçӗн сержант дальномерщик Казмин мӗнле çӳллӗшрине палăртнă, пур расчётсене те тупнă.

Противник самолёчӗсен группи çине, малта пыракан самолёт çине тӗллӗр.

Орудисен командирӗсем кӗçӗн сержантсем Павленкопа Семёнов старшина Арсеньев красноармеец Осипчик тата приборнăй отделенин командирӗ сержант Соловьёв çиçӗм пек хăвăрт ӗçлеççӗ.

Пенӗ сасăсем илтӗнчӗç. Кӗрӗслетнӗ сасă пӗрин хыççăн тепри янăрарӗ. Сывлăшра тăшман самолёчӗпе юнашар тӗтӗм тухни курăнчӗ.

Самолёт çунать хаваслăн илтӗнчӗ Фоменко сасси.

Темиçе секунд кăна иртет телефон янăраса кайрӗ. Кӗçӗн сержант батарейăран аяккарах вырнаçнă сăнав пунктӗнчен доклад парать:

Сăнав пункчӗн районӗнче тăшманăн çулăм хыпса илнӗ самолёчӗ. Ӳкнӗ вырăнта тӗтӗм мăкăрланни курăнать.

(*„Известия“ хаçатран.*)

**161-мӗш упражнени.**

*Диалогсене чарăну паллисем тӗрӗс лартса çырса илӗр.*

1. Ăçта-ха пирӗн çул кăтартаканӗ тесе ыйтрăм эпӗ Савельичран. Кунта ваше благородие терӗ сентӗре çинчен пӗр сасă. Шăнтăн им, тăванăм? Шăнмасăр. (*Пушк.*)

2. Миçе çулта эсир, юлташ? Вунçичче кайнă. Кунтисем-и эсир? Кунтисем, эпӗ виçӗмкун çеç çапăçу вăхăтӗнче çара хутшăнтăм. Сирӗн аçăр кам? Машинист помощникӗ. (*Н. Остр.*)

3. О Егор Белобилетов сиксе тăчӗ военком хӗлле доприэывниксене çар ӗçне вӗрентнӗ чух отличник пулнă Белобилетов юлташа курсан. Эпӗ командир юлташ. Мӗнле унăн сывлăхӗ ыйтрӗ военком тухтăртан. Чӗри мотор пек ӳпкисем вӗркӗч пек... Пурте çителӗклӗ пулчӗ ответ. Апла пулсан юрăхлă пăчăртарӗ военком Якурăн темиçе çул Совет Çарӗшӗн

ҫуннӑ хастар ҫамрӑкӑн аллине. Кӗтнӗ кун тинех ҫитрӗ тем пек хӗпӗртерӗ тем пек савӑнчӗ Якур ҫӑлтӑр пек йӑлкӑшса ҫунса ҫиҫсе. (*Долг.*)

## 90 §. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсенчен улӑштарса каланӑ сӑмахсем туни.

Час-часах пӗр-пӗр ҫыхӑнуллӑ текст содержанине каласа панӑ чухне урӑх ҫын каланӑ сӑмахсене улӑштарса калани кирлӗ пулать. Урӑх ҫын каланине ҫапла улӑштарса калаҫҫӗ.

1. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем калуллӑ е ыйтуллӑ пулсан, вӗсене улӑштарса каланӑ сӑмахсем хыҫсӑмахлӑ предложенилле дополнени пулаҫҫӗ.

| Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем: | Улӑштарса каланӑ сӑмахсем: |
|---|---|
| 1. ***Поезд килчӗ,*** *— пӗлтерчӗҫ мана.* | *Мана поезд килни ҫинчен пӗлтерчӗҫ.* |
| 2. ***Каялла хӑҫан таврӑнӑпӑр?*** *— ыйтрӗ Серёжа.* | *Серёжа манран эпир каялла хӑҫан таврӑнасси ҫинчен ыйтрӗ.* |

3. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем хушу наклонени форминче пулсан, вӗсене улӑштарса каланӑ сӑмахсем -ма,-ме аффикслӑ деепричастипе пулнӑ предложенилле членсенчен пулаҫҫӗ. Ун пек чухне улӑштарса каланӑ сӑмахсенчен автор сӑмахӗнчи *терӗ* сказуемӑй вырӑнне *хушрӗ, сӗнчӗ, пӗлтерчӗ* т. ыт. сӑмахсем те пулма пултараҫҫӗ; урӑх ҫын каланӑ сӑмахсен местоименирен пулнӑ подлежащийӗ кирлӗ ят мар падеж формине (пар. п.) йышӑнать те, предложенире обращени пулсан, вӑл та кирлӗ ят мар падеж (пар. п.) формине йышӑнать.

| Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем: | Улӑштарса каланӑ сӑмахсем: |
|---|---|
| 1. *Иван, апат ҫиме лар,* — терӗ атте. | *Атте Ивана апат ҫиме ларма хушрӗ.* |
| 2. *Шкула пурте вӑхӑтра килӗр,*—терӗ учитель. | *Учитель шкула пурне те вӑхӑтра пыма хушрӗ.* |
| 3. Эпӗ ҫулҫӳрекене: „*Хулана вӑрман хӗррипе тӳрех кай*",—терӗм. | *Эпӗ ҫулҫӳрекене хулана вӑрман хӗррипе тӳрех кайма сӗнтӗм.* |

Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсенчен яланах улӑштарса каланӑ сӑмахсем тума май ҫук.

Обращени, вводнӑй сӑмах, междомети, кӑмӑл хусканӑвӗсене кӑтартакан ытти хӑш-пӗр сӑмахсем (татӑксем) кӗрекен предложенисенчен урӑх ҫын каланӑ сӑмахсенчен улӑштарса каланӑ сӑмахсем пулмаҫҫӗ.

1. *Ну, ярăр халех!—тет вăл кăшкăрса.* (*Элк.*) 2. *Куштан Алапит сикме те хăрать: „Эй, чарăн, Чакка!“—тесе кăшкăрать.* (*Элк.*) 3. *Чăваш ĕç çынни те, часах вăй илсе: „Этемçке мĕн эпĕ те!“—терĕ хăйне.* (*Элк.*)

Ытти предложенисем пекех урăх çын каланă сăмахсем предложенилле определени, дополнени пулакан членсене, условие, тĕллеве, хирĕçлеве кăтартакан пахăнуллă предложени составне кĕме пултараççĕ. Ун пек чухне урăх çын каланă сăмахсем хăйсен формине улăштармаççĕ, интонацине çеç улăштараççĕ.

1. *Ревкома арестленĕ тенĕ хыпар пурин чĕри çине те йывăррăн пусрĕ.* (*Н. Остр.*) 2. *Звонок пулчĕ тенине илтсенех, вĕренекенсем классене васкаса утрĕç.* 3. *Юлташ чăваш хорĕ пулать паян тесессĕн, чĕрем кĕрт сиксе кайрĕ.* (*Ив. М.*) 4. *Бригадир сана ударниксен шутне кĕртрĕмĕр терĕ пулсан та, эпĕ ăна тÿрех ĕненмерĕм.* 5. *Вăл манăн хулана каймалла тесе тухса утрĕ.*

## 91 §. Улăштарса каланă сăмахсене чарăну паллисемпе уйăрасси.

1. Улăштарса каланă сăмахсене, предложенилле дополненисем пекех, предложенин ытти членĕсенчен запятойпа уйăрмаççĕ.

1. *Атте мана хулана вĕренме кайма хушрĕ.* 2. *Серёжа каялла хăçан таврăнасси çинчен манран ыйтрĕ.*

2. Урăх çын каланă сăмахсем предложенилле член составне кĕрсен, вĕсене запятойпа уйăрмаççĕ.

*Привал пĕтрĕ тенĕ хыççăн, хуркайăксем пек карталанса, каллех урпана сырса илчĕç.* (*Долг.*)

3. Урăх çын каланă сăмахсем *тесе*, *тесен*, *пулсан*, *пулин те* союзлă сăмахсемпе çыхăннă чухне вĕсене сказуемăй умĕнче тăнă чух запятойпа уйăрмаççĕ, ытти вырăнта уйăраççĕ.

1. *Вăл килтен эпĕ вĕренме каятăп тесе кайрĕ.* 2. *Бригадир, çумăр килет тесенех, çĕмелсем тума хушрĕ.*

**162-мĕш упражнени.**

Урăх çын каланă сăмахсенчен улăштарса каланă сăмахсем тăвăр.

1. „Çук, эпĕ икĕ тенкĕрен ытла пама пултараймастăп“,—тенĕ Чичиков. (*Гог.*) 2. „Килĕрсене кайăр,—тенĕ вĕсене Дубровский,—эсир кирлĕ мар“. 3. „Фабричнăйне турт“,—сĕнчĕ Тарас. (*Агак.*) 4. „Эпĕ паян вулăсра пултăм,—терĕ Микиш ятлă çамрăкĕ. (*Агак.*) 5. „Ыран эсĕ мĕн тăватăн?—ыйтрĕ Тарас Микишрен, калаçусем пĕтсен. (*Агак.*) 6. „Ăнашкал ĕçпе пурăнма пултараймастăп эпĕ!“ —терĕм те алă патăм. (*Ис. М.*) 7. „Эсир пĕлместĕр,—терĕ вăл малалла,—ĕлĕкхи самана мĕн тĕслĕ пулнине... Вăл юн тĕслĕ пулнă“. (*Долг.*)

**163-мӗш упражнени.**

Ҫак текста кирлӗ ҫӗрте чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.

Ҫав вӑхӑтра Ванюшка штаб ҫӗр пӳртне чупса ҫитсе сӗтел хушшинче картӑ ҫине пӑхса ларакан отряд командирӗ умӗнче хашкаса тӑчӗ. Коля пичче командир юлташ сӑмах калама ирӗк парӑр Мӗнле сӑмах тӗлӗнсе пӑхрӗ ун ҫине лешӗ Кала Эсир халь операцие каятӑр вӗт Ҫапла тейӗпӗр Мӗн вара Эпӗ те пырасшӑн сирӗнпе Эсӗ тата ытларах тӗлӗнчӗ командир Мӗн тума Ванюшка самантлӑха тытӑнса тӑчӗ командира хирӗҫ калама ниепле те тӑруках сӑмах тупаймарӗ Епле Мӗн тума Ҫаплах Мӗн тума пырасшӑн эсӗ Хӑвӑрах пӗлетӗр вӗт Ванюшка пӑлханнипе тарласах кайрӗ Эпӗ нимӗҫсене таварма тивӗҫ А-а тӑсса илчӗ командир Паллах тавармаллах Тӗрӗс шухӑш Анчах ку операцие илсе каймастӑп сана Мӗншӗн командир юлташ А вӑл ман ӗҫ ачам Ҫапах та Мӗн пултараймастӑп тетӗр-и Командир хӑйӗнне хӑй пӗлет Унтан нихӑҫан та мӗншӗн апла тӑватӑн тесе ыйтмаҫҫӗ Ҫавна пӗлетӗн-и Ванюшкӑн чунӗ кӳтсе килчӗ, нимӗн тума аптӑранипе вӑл макӑрса ярас патнех ҫитрӗ Анчах ҫав вӑхӑтра ҫӗр пӳрте хӗр-комиссар кӗчӗ те Ванюшка шӑпӑрт пулчӗ Пӗтӗмпех хатӗр Николай Васильч терӗ хӗр-комиссар пурне те тӗрӗслесе тухрӑм Тепӗр пилӗк минутран хускалатпӑр алливчи сехечӗ ҫине пӑхса илчӗ командир Унтан пуҫне халь те смирно командӑпа тӑракан Ванюшка еннелле ҫаварса ҫапла ачам май килмест кайса ҫывӑрах терӗ Мӗн пулнӑ вара тӗлӗнерех ыйтрӗ хӗр-комиссар тӗксӗм лампа ҫутинче тӑракан Ванюшкӑна халь тин палласа илсе Ҫапӑҫасшӑн пирӗн агитатор Тӑвансемшӗн таварас килет тет Пӗлетӗп Анчах та ан пӑшӑрхан эсӗ ывӑлӑм Командир сасси тӑруках йӑвашланса кайрӗ Часах таварӑпӑр акӑ эпир санӑн тӑванусемшӗн. (*Агак.*)

## ЧАРӐНУ ПАЛЛИСЕМ ЛАРТМА ХӐНӐХМАЛЛИ УПРАЖНЕНИСЕМ.

### 1. Пӗр йышши членлӑ предложенисем.

**164-мӗш упражнени.**

Текста ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

1. Батальон малтан малалла чупать. Ӗнтӗ нимӗҫсен окопӗ те инҫех мар. Тата тепӗр икӗ хут тӑрса чупсан вӗсен окопне ҫитсе перӗнмелле. Анчах та ку вӑхӑтра нимӗҫсем ҫывхаракан ырӑнсене пӗтӗм вӑя хурсах ҫулма пикенеҫҫӗ. Унта та кунта пулемӗт тӑкӑртатать. Пӑшал сасси ҫӗмӗрет. Вӗсем пӗтӗмпех ҫурӑлакан пулькӑсемпе (дум-думпа) переҫҫӗ-мӗн. Вӑл пулькӑсем ӑҫта лекнӗ унта ҫурӑлса йӑлтлатаҫҫӗ. Ҫывӑхра перекен пӑшал-пулемӗтсем шатӑртатнипе пулькӑсем шӑхӑрнипе вӗсем шартлатса ҫурӑлнипе команда сасси те илтӗнмест. Пирӗн

енчен унтан та кунтан хаяррӑн мӗкӗрсе ахлатнисем илтӗнме пуҫлаҫҫӗ. Вӑл кӑшкӑрусем тискер кайӑк аллине лекнӗ этем чун тухиччен пулӑшу тилмӗрсе кӑшкӑрнипе пӗрех туйӑнаҫҫӗ.

Татах икӗ хутчен ҫӗкленсе чупсан эпӗ малалла чупма хӑяймарӑм. Таттисӗр вӗҫекен пиншер пулька шӑхӑрни пӗр шавлӑха пӗтӗҫсе вайлӑ тӑвӑл кашланӑ пек туйӑнать. Пӗр саманта тӑрсанах ик-виҫ пулька харӑс тивмелле. Хӗрсе кайнипе хама-хам пӗлмесӗр выртнӑ ҫӗртенех нимӗҫсем енне 6—7 хут персе ятӑм. Каллех чарӑнтӑм. Итлетӗп ахӑрса кайнӑ вӑрҫӑ сассине. Икӗ енче те йынӑшни ахлатни хаяррӑн кӑшкӑрни. Тин ҫеҫ аманса ӳкнисем хыттӑн мӗкӗрсе чуна-чӗрене ҫураҫҫӗ. Йывӑр суранланнисем ерипен йынӑшаҫҫӗ. Пӗр вӗҫсӗр шатӑртатса тӑракан пӑшал-пулемёт сасси ҫӗр-пин пулька пӗр харӑссӑн вӗҫсе шӑхӑрни дум-думсем шартлатса ҫурӑлни ҫаксем пурте пӗр хӑрушӑ шавлӑха пӗрлешсе аманнисем кӑшкӑрашнине хупласа лартма тӑрӑшаҫҫӗ.

Чылайччен выртатӑп хӑрушӑ вӑрҫӑ сассине тӑнласа команда сассине итлесе. (*Элк.*)

II. ...Ял хуҫалӑхне реконструкциленин тата ӑна тракторсемпе ял хуҫалӑх машинисем вӑйлӑн парса тӑнин ырлӑхӗсем куҫ умӗнчех пулнӑ.

Промышленноҫа тата ял хуҫалӑхне реконструкцилесе ҫитерни халӑх хуҫалӑхне чи малта тӑракан техникӑпа тулӑх пуянлатнӑ. Промышленноҫпа ял хуҫалӑхӗ транспорт тата ҫар питӗ нумай ҫӗнӗ техника ҫӗнӗ машинӑсемпе станоксем тракторсемпе ял хуҫалӑх машинисем паровозсемпе пароходсем артиллерипе танксем самолётсемпе тинӗс-ҫар карапӗсем туяннӑ. Ҫакӑ пӗтӗм техникӑна йӗнерлеме пултаракан тата унран мӗн илме май пуррине пӗтӗмпех илме пултаракан вуншар тата ҫӗршер пин вӗрентсе хатӗрленӗ кадрсене ӗҫе тӑратни кирлӗ пулнӑ...

Пирӗн работниксен тимлӗхне вӗсем техника енне ытлашши ҫаврӑнса ӳкнинчен кадрсене ҫителӗклӗ хак паманнинчен техникӑпа усӑ курма пӗлесси енне техникӑна вӗренсе алла илесси енне техникӑна йӗнерлеме тата унран вӑл пама пултарнӑ эффекта пӗтӗмпех илме пултаракан нумай йышлӑ кадрсем пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫлессине пур майсемпе те вӑйлатасси енне ҫаврӑрма кирлӗ пулнӑ. (*ВКП(б) ист.*)

### II. Предложенилле членлӑ предложенисем.

**165-мӗш упражнени.**

**Чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.**

### УНТРИН КИЛТИ ПУРНӐҪӖ.

Чӑпта хуҫисем чухӑнсене хытӑ улталанӑ. Ӗҫлеме тытнӑ чух кашни ҫӗр чӑпташӑн пилӗкшер тенкӗ тӳлеме пулнӑ. Ӗҫлесе пӗтерсен тӗрлӗ сӑлтавпа чӑкӑлташса час-часах тӑваттӑ ҫурӑ е тӑватӑ тенкӗ ҫеҫ тӳленӗ.

Ылханнă вăрçнă Унтри ашшĕ Александр чăпта хуçисене хăйне улталанăшăн. Анчах кăшт вăхăт иртсенех ĕнсине хыçа-хыçа каллех çав ултавçăсем патнех кайма лекнĕ унăн мĕншĕн тесен унăн ят çĕрĕ çинче туса илнĕ тырри нихăçан та çулталăка çитмен. Аптăранă Александр кашни çуркуннех михĕ йăтнă та пуянсене пуççапма тухса кайнă. Çулленех вун-вун пилĕк пăт тырă кивçен илнĕ. Ку кивçеншĕн вара чăпта çапса панă е çĕнĕ тырă пулсан тыррăнах тӳпемилесе каялла тавăрнă. Çийĕнчен тата кăмăла хирĕç кăмăл тесе „кивçен" панă кулака пĕр укçасăрах пĕтĕм çемйипе виç-тăват кун тырă вырса е авăн çапса панă.

Чăпта ĕçне Унтри çичĕ çултах хутшăннă ашшĕ-амăшне пулăшнă хĕлĕн-çăвĕн ирхи кăвак çутăла пуçласа çĕрле пуличченех курăс чĕлне е „йĕп ачи" пулса ĕçленĕ хĕлле пӳртре çулла сарайĕнче.

Пӳртре ĕçленĕ чухне пĕтĕм пӳрт ăшчикĕ курăс прахĕпе тулса ларнă. Прах пыр шăтăкне питĕрнĕ куççене каснă. Унтри амăшĕ ахаль те йăваш куçлăскер чăпта ĕçĕнчех суккăрланса курми пулнă. Ашшĕ те куççăр пулас патнех çитнĕ.

Чăпта ĕçĕ айне путнипех Унтрин шкулта вĕренме те май пулман. Виçĕ хутчен вăл ют ялти куккăшĕпе мăнаккăшсем патне тарса шкула çӳреме тытăннă анчах виççĕшĕнче те ăна ашшĕ пырса ятла-ятлах каялла илсе таврăннă та каллех чăпта çапнă çĕре тăратнă. Çапла вара темĕн пек вĕренесчĕ тесе çуннă çĕртенех вăл нимĕн вĕренеймесĕр юлнă.

Унтри вунпĕр çула çитсен унăн амăшĕ вилсе каять. Ашшĕ иккĕмĕш хут авланать. Çакăн хыççăн Унтри пурнăçĕ пушшех те йывăрланать. Тăван мар амăшĕ ăна йытă вырăнне çеç шутлать. Унтри çийĕнче çĕтĕк кĕпе-йĕм хырăмĕ яланах выçă.

Çак çулсенчех Унтрин пиччĕшĕ Ехрем те ӳссе çитсе авланать. Вăл авланнă хыççăн Унтри ашшĕн уйăрălса тухмалла пулать. Александр пĕтĕм вăйне хурса пĕр пĕчĕк çеç çурт лартать. Унтрисен чухăн çемйишĕн ку пушшех те йывăра ӳкет. Çемйи Контрет хуçана пысăк парăма кĕрет. Пĕр тапхăра вăл унăн тарçи вырăннех пулса тăрать.

Пурнăç йывăррине тӳсеймесĕр Унтри килтен тухса кайма шут тытать... (*Элк.*)

## III. Хутлă предложенисем.

**166-мĕш упражнени.**

Чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

## МЕТЕЛИЦА ТĂШМАН АЛЛИНЕ ЛЕКНИ.

Çур сехетрен Метелица сала патнех çитнĕ. Сукмак сылтăмалла çаврăнчĕ анчах Метелица çулнă улăхпала хресченсен пахчисем патне çитичченех утрĕ.

Сала ĕнтĕ сывăрать çугăсем сÿннĕ çăлтăрсен çутипе пĕчĕк пÿртсен улăм витнĕ ăшă тăррисем çеç курăнаççĕ.

Метелица икĕ тăкăрлăкран иртсе виççĕмĕшнелле пăрăнчĕ. Йытăсем хăйсем хăраса ÿкнĕ пек йăвашщăн хăрлатакан сассисемпе ăна вĕрсе ăсатрĕç. Анчах вĕсен сассипе урама тухса викам та Метелицăна чĕнсе илекен-тăвакан пулмарĕ.

Метелица чиркÿ таврашĕнче çаврăнкаласа тата темиçе тăкăрлăкран иртсе кайрĕ юлашкинчен вара пуп сачĕн сăрланă хÿми çине пырса тухрĕ Метелица малтан шалалла вара ун-талла-кунталла пăхрĕ те лайăх тăрса итлерĕ. Унтан хăрамалли нимĕн те курăнманнипе хÿме урлă пĕр сасă кăлармасăр хăвăрттăн кăна сиксе каçрĕ.

Йăвă та çăра туратлă садра çулçăсем тăкăннă ĕнтĕ. Метелица сывламасăр тенĕ пекех шалалла шăвăнса пычĕ. Сасартăк вăл уçă хушша тухрĕ те хăйĕнчен сулахайра çутă чÿречене курах кайрĕ. Чÿречи уçă пулнă-мĕн. Шалта çынсем лараççĕ. Тикĕс те çемçе çутă садри тăкăннă çулçăсем çине ярăм-ярăм ÿксе çутатса тăнă. Ку вырăнти улмуççисем тĕлĕн-мелле илемлĕ ылттăн тĕслĕ курăнаççĕ...

Пÿртре çынсем картла выляна. Сылтăм енче пĕчĕкрех вата пуп çулласа якатнă пек яка çÿçĕсемпе çуталса ларать вăл картсене вĕт пÿрнисемпе ним сасăсăр сиктеркелесе хăйĕн пĕчĕк хыткан аллисене сĕтел çинче питĕ çыпăçуллăн вылят-каласа çеç ларать. Пĕр самăр та чипер офицер çăварне чĕлĕм хыпнăскер Метелица еннелле пăхса ларать. Метелица ăна эскадрон начальникĕ тесе шутлана. Сулахай енче погонсăр бурка (казаксен хулпуççи çине çакса тăхăнакан плащ) хул-пуççирен çакса янăскер вăрăм çăмлă хура çĕлĕк тăхăннă офицер ларать. Вăл карт пăрахнă хыççăн кашнинчех буркине тÿрлетсе пĕркенет.

Метелица пĕшкĕнсе хăяккăн чакса чÿрече патĕнчен кайма тытăнчĕ. Анчах аллейăна пăрăнсанах сасартăк казак шинельне хăрах хулпуççийĕнчен çакса янă çынна тапах пырса перĕнчĕ ун хыçĕнчен тата икĕ çын курăнчĕç.

Хайĕн Метелицăна перĕннипе кăшт çеç хывăнса ÿкеймен шинельне тÿрлетсе мĕн тăватăн эсĕ кунта тесе тĕлĕнсе ыйтрĕ çавă çын.

Метелица аяккала ялт сиксе ÿкрĕ те йывăç тĕмисем ăш-нелле вăркăнчĕ.

Стой Тытăр ăна Тытăр Кунталла. Эй тесе кăшкăрса ячĕç темиçе сасă, хыçалта хыттăн та кĕскен илтĕнекен пăшал сассисем шатăртатма пуçларĕç.

Метелица тĕмсем ăшĕнче çыхлана-çыхлана картусне те унтах çухатса хăварса çулсăрах тухса тарма тăрăшрĕ. Анчах таçта унтан малта йынăшни ÿленĕ сасăсем илтĕнчĕç урамри йытăсем те хаяррăн вĕрме тытăнчĕç. Акă вăл тытăр тесе кăшкăрса ячĕ пĕри Метелица патнелле аллисене тăсса вăр-

кӑнса пырса. Пӗр пульли хӑлха патӗнченех шӑхӑрса иртсе кайрӗ.

Метелица та персе ячӗ. Ун ҫинелле чупса пыракан ҫынӗ такӑнчӗ те ӳкрӗ.

Суян тытаймастӑн тесе питӗ чаплӑн каласа ячӗ Метелица. Вӑл чӑнах та чи юлашки минутченех хӑйне пӗтӗрсе ӳкерессе ӗненмен.

Анчах такам пӗри йывӑр та пысӑк пӳ-силлӗ ҫын ӑна хыҫалтан пырса пусарчӗ те хӑйӗн айне лутӑркаса чикрӗ. Метелица аллине вӗҫертме тӑчӗ анчах пуҫран питӗ те вӑйлӑн ҫапни ӑна анратса пӑрахрӗ...

Ун хыҫҫӑн ӑна ним чарӑнми хӗнерӗҫ. Ҫавӑнпа ӑна ӑнран кайнӑскерне кайран та ҫине те ҫине татах ҫапнӑ пек туйӑнса тӑчӗ... *(А. Фад.)*

## IV. Пур правилӑсемпе те.

**167-мӗш упражнени.**

Предложенисене разбор тӑвӑр. Чарӑну паллисене ӑнлантарса парӑр.

СССР ӗҫ ҫыннийӗсем—рабочисем, хресченсем, интеллигенци—социализм строительствин ҫулӗсенче тӗпренех улшӑнчӗҫ.

Рабочи класс, капитализм вӑхӑтӗнче пулнӑ пек, эксплуатаци тӳсекен, производство средствисемсӗр тӑратса хӑварнӑ класс пулма чарӑнчӗ. Вӑл капитализма пӗтернӗ, капиталистсенчен производство средствисене туртса илнӗ, вӗсене обществӑллӑ харпӑрлӑх туса хунӑ. Вӑл ӗнтӗ, пролетариат сӑмаха хӑйӗн кивӗ пӗлтерӗшӗпе каласан, пролетариат пулма чарӑнчӗ. СССР пролетариачӗ, государство влаҫне тытса тӑраканскер, пачах ҫӗнӗ класс пулса тӑчӗ. Вӑл эксплуатацирен хӑтӑлнӑ класс, капиталистла хуҫалӑх системине пӗтернӗ тата производство средствисен социализмлӑ харпӑрлӑхне туса хунӑ рабочи класс пулса тӑчӗ, урӑхла каласан, этемлӗх историйӗ халиччен пӗлмен рабочи класс пулса тӑчӗ.

ССР Союзӗнчи хресченсен положенийӗсенче те унтан сахал мар пысӑк улшӑнусем пулнӑ. Ӗлӗкхи вӑхӑтра ҫирӗм миллион ытла уйрӑм хресченсен сапаланчӑк хуҫалӑхӗсем, ваккисем те тата вӑтаммисем те хӑйсен ят ҫӗрӗсем ҫинче пӗчченшерӗн чакаланнӑ. Вӗсем кая юлнӑ техникӑпа усӑ курнӑ; вӗсене помещиксем, кулаксем, купецсем, спекулянтсем, ростовщиксем тата ыттисем те эксплуатацилепӗ. Халӗ ССР Союзӗнче пачах ҫӗнӗ хресченсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ: текех ӗнтӗ хресченсене эксплуатацилеме пултаракан помещиксемпе кулаксем, купецсемпе ростовщиксем ҫук. Хресчен хуҫалӑхӗн питӗ пысӑк нумайрахӑшӗ колхозсене кӗнӗ, ҫав колхозсен никӗсӗнче производство средствисен уйрӑм харпӑрлӑхӗ мар, коллективлӑ ӗҫ никӗсӗ ҫинче ӳссе ҫитӗннӗ коллективлӑ харпӑрлӑх тӑрать. Ҫакӑ вӑл—кирек мӗнле эксплуатацирен те

хăтарнă хресченсен çĕнĕ сăнарĕ. Çакăн пек хресченсене те халиччен этемлĕх историйĕ пĕлмен-ха.

СССР интеллигенцийĕ те улшăнчĕ. Хăйсен массипе вăл пачах çĕнĕ интеллигенци пулса тăчĕ. Хăйĕн нумайрах пайĕпе вăл рабочисемпе хресченсен хушшинчен тухнă. Вăл, кивĕ интеллигенци пек, капитализмшăн мар, социализмшăн ĕçлет. Интеллигенци социализмлă обществăн пĕртан правуллă членĕ пулса тăчĕ. Çакă интеллигенци рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле çĕнĕ, социализмлă общество тăвать. Çакă вăл— халăхшăн ĕçлекен тата кирек мĕнле эксплуатациррен те хăтарнă çĕнĕ интеллигенцин сăнарĕ. Çакăн пек интеллигенцине халиччен этемлĕх историйĕ пĕлмен-ха.

Çапла вара, ССР Союзĕнчи ĕç çыннисен хушшинчи класлă чикĕсем пĕтсе пыраççĕ, кивĕ класлă уйрăмлăх çухалса пырать. Рабочисемпе хресченсен тата интеллигенци хушшинчи экономикăлла тата политикăлла хирĕçӳсем чакса, пĕтсе пыраççĕ. Обществăн моральнă-политикăлла пĕрлĕхĕн никĕсĕ пулса тăчĕ. (*ВКП(б) ист.*)

**168-мĕш упражнени.**

Предложенисене разбор тăвăр. Чарăну паллисене ăнлантарăр.

## *Н. А. ОСТРОВСКИН* „ТАВĂЛПА ÇУРАЛНИСЕМ“ ПРОИЗВЕДЕНИРЕН.

Юнашар машина пӳлĕмĕнчен хурансен пӳлĕмне кĕçĕн механик пан Струмилин чупса кĕчĕ.

— Эсир мĕншĕн смена улшăнма гудок памастăр?—кăшкăра пуçларĕ вăл мĕнпур вăйĕпе.

— Ăçта Птаха? Парăр гудок!

Хăйне никам та итлеменнине кура, механик гудок клапанне уçмалли канат вĕçĕнчи унка хăй ярса тытрĕ те аялалла туртрĕ.

Гудокăн хăватлă сассине илтсе, Андрий сасартăках хытса кайрĕ. Вăл пурне те манса кайнă. Ун куç умĕнче пĕр хапха патĕнче пуçланакан тĕрлешӳ çеç мĕкĕлтететчĕ, халĕ акă ун çумне тата гудок мĕкĕрни хутшăнчĕ.

Пур алăксенчен те завод картишне халăх кĕпĕрленсе тухрĕ. Рабочисенчен çурри—хĕрарăмсем.

Андрий хăвăрттăн урайне чупса анчĕ.

Струмилин аллинчен унка ячĕ. Мĕкĕрӳ чарăнчĕ. Механик Андрие тин курчĕ.

— Ăçта çапкаланса çӳрерĕн?

— Эпĕ чӳречерен пăхрăм.

— Э э-э, чӳречерен-и! Апла пулсан, ил расчёт. Сана ĕçлеме тара тытнă... Тытăнăр ĕçе!—тесе кăшкăрчĕ те Струмилин кочегарсем çине, хăй машина уйрăмне чупрĕ.

Андрий кăшт чĕнмесĕр тăчĕ. Ăна пĕр шухăш çавăрса илнĕ. Андрий иккĕленет, хăй шухăшне сирме тăрăшать. Анчах

лешӗ унӑн пӗтӗм ирӗкне ҫавӑрса илме ӗлкӗрнӗ те ӗнтӗ. Унӑн чӗри таҫтан ҫӳлтен сикес умӗнхи пек хытса ларчӗ. Тепӗр секундран вӑл алӑк патне ыткӑнчӗ, ӑна питӗрсе илчӗ, ҫӑраҫҫине кӗсйине чикрӗ. Унтан, хурансем патне пырса, унка ярса тытрӗ те ун ҫине ҫакӑнчӗ. Гудок каллех мӗкӗрсе ячӗ:

— Эсӗ мӗн ухмаха ертӗн-им, Андрий!—чупса пычӗҫ кочегарсем Птаха патне.—Е эсӗ пире пурне те ӗҫрен кӑларса пӑрахтарасшӑн-и?

Анчах Андрий вӗсен сӑмахне хӑлхана та чикмест, вӑл ҫаплах унка туртать.

— Пӑрах, Андрюша! Хӑваласа кӑлараҫҫӗ вӗт пурне те,— ӳкӗтлет Дмитрусь.

Андрий кӑмрӑк ватмалли йывӑр лома икӗ аллипе те ҫавӑрса тытрӗ те, куҫӗсене йӑлтӑртаттарса, кӑмрӑк тусанӗпе хуралса пӗтнӗскер, юлташӗсене кӑшкӑра пуҫларӗ.

— Чупӑр запас алӑк витӗр! Ачасем, ыррӑн ыйтатӑп, тухса вӗҫӗр халех! Эпӗ кӑшкӑртма пуҫлатӑп, халӑха ура ҫине тӑратма... Ан тив, мана хама ҫеҫ асаплантарччӑр... Вӗҫтерӗр, ачсемӗр, атту ломпа ҫапатӑп! Хӑвӑртрах!

Вӑл лома сулса ячӗ. Кочегарсем ушкӑнӗпех запас алӑк енне сирпӗнчӗҫ.

Андрий алӑка тимӗр ҫекӗлпе ҫаклатрӗ, алӑк хӑлӑпӗ айне ломне чиксе хучӗ, вара каллех унка ярса тытрӗ. Гудок, хӑрушӑ инкек йыхравҫи, сывлӑша чӗтретсе, пӗрре хӑпарса, тепре лӑпланса, ҫӗнӗрен мӗкӗре пуҫларӗ Вӑл хулари пӗтӗм халӑха урамаваскатса кӑларчӗ.

**169-мӗш упражнени.**

Текста чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.

Пӑс хуранӗсен пӳлӗмӗн алӑкне охранниксем ҫӗмӗрме пуҫларӗҫ. Анчах тимӗр тыттарнӑ ҫирӗп алӑк вӗсен приклачӗсем айӗнче кӑшт-кӑшт чӗтресе ҫеҫ илет.

Чикмек илсе килӗр Марш чӳречесем патне кӑшкӑрать капрал охранӑна.

Андрий хӑрушлӑх ҫинчен чӳрече патӗнче пӑшал кӗрлесе кайсан тата хӑйӗн хӑлхи патӗнчен пуля шӑхӑрса иртсе кайсан тин пӗлчӗ. Вӑл ирӗксӗрех унка аллинчен вӗҫертрӗ. Мӗкӗрӳ чарӑнчӗ. Тепре periччен хӑтӑлас тесе Андрий кӑмрӑк шӑтӑкӗ патне чупрӗ.

Карабин тытнӑ аллине малалла тӑсса чӳрече витӗр легионер хӗсӗнкелесе кӗрет. Чӳрече ансӑр легионер унта аранаран хӑрах хулпуҫҫипе хӗсӗнсе кӗчӗ. Хыҫалтан ӑна тӗртеҫҫӗ. Андрий пӗр катӑк антрацит ярса тытрӗ те вилессе пӑхмасӑрах шӑтӑкран сиксе тухрӗ. Кӑмрӑка пӗтӗм вӑйпа чӳрече ҫинелле тӗллесе сулса ячӗ легионера питӗнчен тивретрӗ. Лешӗ йынӑшса ячӗ. Пичӗ пӗр самантрах юнпа хӗрелчӗ. Вӑл карабина аллинчен вӗҫертрӗ те хӑйне аялтан тытса тӑракан охранниксен аллисем ҫине ӳкрӗ. Карабин пӑс хуранӗсен

пӳлӗмӗн цемент урайӗ ҫине ӳксе чанклатрӗ. Каллех пӑшал кӗрлесе кайрӗ. Андрий савӑннипе каҫсах кайрӗ. Вӑл чӳречене ҫӗркӑмрӑкӗпе персе тӗрлеттерме тытӑнчӗ.

Тул енче тискеррӗн ятлаҫни илтӗнчӗ. Ҫынсем васкаса чикмек ҫинчен ҫӗре шуса анма пуҫларӗҫ.

Андрий хӑйне хӑй пӗлми хаярланса ҫитрӗ. Вӑл пиҫиххине салтрӗ те унпала унка регулятортан ҫыхса лартрӗ. Гудок ҫӗнӗрен уласа ячӗ. Анчах халӗ ӗнтӗ татӑкӑн-татӑкӑн мар мӗншӗн тесен Птаха ӑна пиҫиххипе карӑнтарсах ҫыхса хунӑ.

Халӗ ӗнтӗ Андрийӗн аллисем ирӗк. Систермесӗр ан кӗччӗр тесе вӑл чӳречерен вӗҫӗмсӗрех кӑмрӑк сирпӗтет.

Кӗрешӳре хӗрсе кайнипе Птаха хурансен пӳлӗмӗнче тата икӗ чӳрече пуррине пачах манса кайнӑ. Икӗ чӳречин те кантӑкӗсем сирпӗнсе тухса стенаран штукатурка хӑйпӑнса аннӑ хыҫҫӑн тин Андрий виҫӗ чӳречене хирӗҫ кӗрешме хӑйӗн алли ҫитес ҫуккине салхуллӑн туйса илчӗ. Пульӑсем ӑна каллех кӑмрӑк шӑтӑкне хӑваласа кӗртрӗҫ. Пӗр чӳречере карабин кӗпҫи курӑнса кайрӗ.

Андрий унталла пӗтӗм ҫиллине пухса чул катӑкӗ вӑркӑнтарчӗ анчах тепӗр чӳречерен пӑшал кӗрӗслетни ӑна каялла сиктерсе ӳкерчӗ. Ну халӗ ӗнтӗ пӗтес вӑхӑт ҫитрӗ терӗ те Андрий кӑштах йӗрсе ямарӗ. Унӑн кӑмӑлӗ сӳне пуҫларӗ вӑйӗ пӗтсе ҫитрӗ.

Вӑл ывӑннипе ҫан-ҫурӑмӗ сасартӑках йывӑрланнине туйса илчӗ. Текех хирӗҫ тӑрас шухӑша пӑрахса вӑл шӑтӑк кӗтессине ларчӗ. Темскер ӑна айккинчен хытӑ тӗртрӗ. Птаха ирӗксӗрех хӑй пырса тӑрӑннӑ япалана ярса тытрӗ. Ку насос пырши вӗҫӗ мӗн унпа кочегарсем кӑмрӑка йӗпетес ӗҫре усӑ куратчӗҫ.

Ывӑннӑ пуҫра тем ялтӑртатса илчӗ. Э-э, эсир мана тытрӑмӑр терӗр-и сволочьсем пан чунӗсем курӑпӑр халех гудок урса кӑшкӑрнӑ хушӑра ӑна никам илтес ҫук пулин те хыттӑнах кӑшкӑрса ячӗ Андрий.

Вӑл шлангсене шыв ямалли урапасене хӑвӑрттӑн ҫавӑра пуҫларӗ. Хӑлхана ҫурас пек шӑхӑрса брандспойтран пӑс персе тухрӗ. Пӑс хыҫҫӑнах вӗри шыв тапса тухрӗ кӑмрӑк шӑтӑкӗ пӑспа тулчӗ. Андрие сывлама сывлӑш пӗтрӗ. Чӗтрекен аллипе вӑл брандспойта ярса тытрӗ те аллисене пӗҫерттерсе вӗри шыв пӗрӗхнине пӑхмасӑрах вӗри шыва пӳлӗм ӑшнелле ҫавӑрчӗ.

Малалла вӑл вилесси ҫинчен шухӑшласа тӑмасӑрах чӳречесене вӗри шывпа чашлаттарма тытӑнчӗ. Чӳречесен леш енче тӑраканнисем йынӑшса янине илтсен Андрий тискер этем пек ташлама тытӑнчӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑл хурансем хушшинче брандспойта ҫеҫ ҫавӑркаласа ларать пуҫне кӑлармасӑрах чӳречесене вӗри шывпа пӗрӗхтерет.

Чӗри кӑкӑрӗнчен сиксе тухас пек тапать. Пӳлӗм пӗтӗмпех пӑспа тулса ларчӗ. Урайӗнче вӗри шыв шарласа юхать.

Андрий унтан тӑрса хуран ларакан никӗс ҫине хӑпарса тӑрать. Сывлӑш сывлама ҫук пӑчӑ. Алсене пӗҫерет. Анчах ниепле май тупса ҫӑлӑнса тухма ҫукки ӑна хирӗҫ тӑмах хушать.

Хула ҫинче гудок сасси улать. (*Н. Остр.*)

**170-мӗш упражнени.**

Текста чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр.

Вунтӑваттӑмӗш ҫул. Июль кунӗсем. Ыраш вырма тухаҫҫӗ. Ҫивӗч ҫурлапа каснӑ ыраш пайӑркисем хулпуҫҫи урлӑ вӗлтлетсе ӳксе кӗлте пулса выртаҫҫӗ. Тырӑ выракан ҫемье калаҫса тӑма таваскать. Апат ҫинӗ чух ҫеҫ хӑмӑл ҫине апат чашӑкӗ тавра ларнӑ ҫемье хуллен мӑкӑртатни илтӗнет.

Акӑ ҫамрӑк мӑшӑр упӑшкипе арӑмӗ. Вӗсем юнашар вырса пынӑ хушӑра та ҫителӗклӗн калаҫса савӑнма ерҫеймеҫҫӗ. Хутран-ситрен ҫеҫ кӗлте ҫыхнӑ чух кӑшт хире-хирӗҫ пӑхса йӑлкӑшаҫҫӗ те каллех вырма пикенеҫҫӗ. Телейсӗр мӑшӑр. Епле ыран виҫминех хӑйсене виҫ-тӑват ҫуллӑха е ӗмӗрлӗхех уйӑрса каясса сисмеҫҫӗ вӗсем. Часрах уй ӗҫӗсене пӗтерес калаҫасси-савӑнасси кайран та пулӗ теҫҫӗ вӗсем. Пурте малалла ӗмӗтленеҫҫӗ лайӑха кӗтеҫҫӗ.

Ик-виҫӗ кун иртет. Ыраш пуссинче кутамас ҫӗмелсем йӑванаҫҫӗ.

Сасартӑк Вӑрҫӑ тени илтӗнет. Ку усал хыпар пӗр харӑсах миллион ҫӑвартан тухнӑ пек илтӗнсе пӗр самантрах пӗтӗм ялсенче уйри ҫӗмелсем хушшинче улӑхсенче вӑрмансенче хаяррӑн янӑраса каять.

Вӑрҫӑ пуҫланнине пӗлтерсенех пур пек ватӑ салтаксене пӗтӗмпех харпӑр уезд хулисене хуса кайрӗҫ.

Мӑн ҫулсем тӑрӑх станцисем енне пристаньсем енне кунран кун эрнерен эрне ҫӗршерӗн-пиншерӗн ушкӑнпа ват салтаксем иртеҫҫӗ. Вайпитти арҫынсем патша приказӗ тӑрӑх уй ӗҫӗсене пӑрахса ачи-пӑчисене хӑварса вӑрҫӑ вутӗнче ҫунма тухса каяҫҫӗ. Ял хушши пушанать куҫҫуль тӑканать. Халӑх куҫҫулӗпе пӗрлех ҫанталӑк та йӗрӗхет кашни кун ҫумӑр тӑкма тытӑнать. (*Элк.*)

**171-мӗш упражнени.**

Чарӑну паллисем лартса текста ҫырса илӗр.

Тӑван халӑх савнӑ халӑх
Чаплӑ кунсенче ялан
Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнмалӑх
Чӗререн сана салам

Ӑмӑрткайӑк тӑван халӑх
Вӑрҫӑри ачусенчен
Йышӑн эс чун-хавраллӑ
Ҫырӑва Дон хӗрринчен

Дон пек ҫутӑ Атӑл евӗр
Сарлака кӑмӑлпалан
Ҫырнӑ сӑмахсем кӗрлеччӗр
Сарӑлтӑр хӗрӳ салам

Ял-ял урлӑ хир-хир урлӑ
Янтӑратӑр ян та ян
Салама итлетӗр улӑх
Аслӑ хир хура вӑрман

Эх тӑван ҫӗршыв аннемӗр
Шан пире ӗнен пире
Аслӑ Атӑлан илемӗ
Сывӑ пулӗ ӗмӗрех

Чӗр юна тумлам-тумламӑн
Хӗрхенмесӗр тӑкрӑмӑр
Тӑкӑпӑр анчах та хамӑр
Ҫӗршыва хӑтарӑпӑр

Халӑхӑмӑр савнӑ халӑх
Ҫӗртмӗпӗр чӑваш ятне
Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнмалӑх
Ҫӗклӗпӗр ун мухтавне

Пӑшала татах та хыттӑн
Тытӑпӑр эпир алла
Сталиншӑн тӑван ҫӗршывшӑн
Утӑпӑр малтан мала. (*Ухсай.*)

**172-мӗш упражнени.**

Текста чарӑну паллисем лартса ҫырса илӗр. Пӗрремӗш абзацри предложенисене разбор тӑвӑр.

Ҫумӑр ҫунипе кӗркуннехи ҫӗр тӗттӗм. Уйӑх мар ҫӑлтӑр та курӑнмасть. Ҫавӑн пирки отряд ӑҫталла чакнине Щетинкин хӑй те партизансем те чухласа илеймеҫҫӗ. Юлашкинчен аташса ҫын кӗрсе тухайми лачака ункине кӗрсе кайнӑ. Лачака йӗри-тавра хӗрӗх ҫухрӑм. Шӑп вӑта ҫӗрӗнче утрав. Утравӑн урлӑшӗ ултӑ ҫухрӑм тӑрӑшшӗ тӑхӑр ҫухрӑм.

Ҫав лачака ункинчен ӗнтӗ Абакан ятлӑ пысӑк пулӑллӑ ыткӑнса юхакан сулхӑн шавлӑ ҫырма пуҫланса каять Абакан тӑрӑх ҫулла пӗчӗкрех пароходсем те ҫӳреҫҫӗ. Абакан шывӗ Минусинск хулинчен кӑшт аяларах Енисей шывне пырса хутшӑнать.

Ҫав лачака ункине кӗрсен унтан тухма пит кансӗр. Икӗ вырӑнта ҫеҫ сукмаксем пур. Вӑл сукмаксене хӑш-пӗр ҫынсем ҫеҫ пӗлеҫҫӗ.

Тул ҫутӑлма пуҫласан тин Щетинкин хӑйӗн отрячӗпе йӑнӑш ҫулпа кӗрсе кайнине чухласа илчӗ.

Стой Чарăнăр юлташсем. Эпир йăнăш çулпа кĕрсе кайнă. Кам чухлать хăш вырăнта эпир терĕ вăл тимĕр-кăвак йăрне чарса.

Щетинкин юлташ эпĕ ку лачака ункинчен тухма сукмак пĕлетĕп. Анчах халĕ хăш вырăнта иккене кăшт маннă. Чухласа илейместĕп. Эсир мана шанатăр пулсан эпĕ малтан разведкăна кайса килем вара пĕтĕм отрядпа тухăпăр терĕ партизан Макар.

Щетинкин Макар çине хăйĕн тăван шăлнĕ çине пăхнă пек пăхса илчĕ. Разведкăна Макар эсир Фроловпа иксĕр каятăр Отряда кăлармалли çула тĕплĕн пĕлмесĕр ан таврăнăр начальникле хушса каларĕ Щетинкин. (*Чалд.*)

**173-мĕш упражнени.**

Чарăну паллисем лартса текста çырса илĕр.

## ТĂВАН КИЛЕ.

Эп сахал мар тĕнче тăрăх çӳрерĕм
Темчул та ата çĕтрĕм пулмалла
Тăван киле ак вăрăм çулăм-йĕрĕм
Мана илсе çитерчĕ каялла

Кĕтмен çĕртен эп таврăнтăм сасартăк
Çапах пĕлетĕп вăхăтсăр килмен
Эп походра яшлăхăма хăвартăм
Эп пилĕк çул вутран тухма пĕлмен

Халь хурапа шурра çапла чылаях
Курса-тӳссе иртгернĕ хыççăн эп
Атте çуртне чи çирĕп те чи лайăх
Салтак сулмаклă уттипе кĕреп

Чӳречесем çинче чечек таврашĕ
Ним улшăнман эп кайнăран вара
Çав кушаках мăрăлтатать йăвашшăн
Çав сĕтелех çав вырăнтах ларать

Çав сăнсемех кăшт сарăхăшса ларнă
Стена çинчен кӳреç пӳрт илемне
Çав фикусах тураттине кăнтарнă
Тем ыйтнă евĕр чӳрече енне

Йăлт çав-çавах пек ĕнтĕ лăпкă ырă
Анчах та пур-çке пуш кĕтес пӳртре
Апатланма ларсассăн та пĕр вырăн
Хуçасăрах юлать кĕрекере

Атте-çке вăрçăран таврăнаймарĕ
Вăл Ленинградшăн вилчĕ çапăçса
Аттешĕн те ман хамшăн та хастаррăн
Еçлес пулать халь çанă тавăрса.

*И. Пиняев.* (*Н. Евстафьев* куçарнă.)

174-мӗш упражнени.

Чарӑву паллисене ӑнлантарса парӑр.

Юлташ красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкӑсем! Нимӗҫ захватчикӗсен вӑрӑ-хурахла кӗтӗвӗсене пӗтерсе тӑкма пултаракан вӑй тесе шутласа сирӗн ҫине пӗтӗм тӗнче пӑхса тӑрать. Нимӗҫ захватчикӗсен пусмӑрӗ айне кӗрсе ӳкнӗ Европӑри халӑхсем, ирӗке кӑларакансем тесе шутласа, сирӗн ҫине пӑхса тӑраҫҫӗ. Халӑхсене ирӗке кӑларас аслӑ мисси сирӗнте. Ҫав миссие пурнӑҫа кӗртме тивӗҫлӗ пулӑр! Эсир туса пыракан вӑрҫӑ ирӗклӗхшӗн пыракан вӑрҫӑ, тӗрӗслӗхлӗ вӑрҫӑ пулса тӑрать. Ҫак вӑрҫӑра сире пирӗн ӗлӗкхи аслӑ тӑвансен— Александр Невскин, Дмитрий Донскойӑн, Кузьма Мининӑн, Дмитрий Пожарскин, Александр Суворовӑн, Михаил Кутузовӑн паттӑр сӑнарӗсем хавхалантарса пыччӑр! Сире аслӑ Ленинӑн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ ҫул кӑтартса пытӑр!

Нимӗҫ захватчикӗсене пӗтӗмпех ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн!

Нимӗҫ оккупанчӗсене—вилӗм!

Пирӗн мухтавлӑ тӑван ҫӗршыв, унӑн ирӗклӗхӗ, унӑн никама пӑхӑнманлӑхӗ сывӑ пултӑр.

Ленин ялавӗ айӗнче тӑрса,—малалла, ҫӗнтерӳсем патнелле!

*(И. Сталин.)*

*Приложени.*

# ЧАРӐНУ ПАЛЛИ ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ПУÇТАРНӐ ПРАВИЛӐСЕМ.

## I. Точка.

Точкӑна калуллӑ предложенисем вӗçӗнче тата сасса вӑйлатмасӑр калакан хушуллӑ предложенисем вӗçӗнче лартаççӗ.

*Çав каçах эпӗ Чӗмпӗре çитрӗм. Унта Савельича мана валли тӗрлӗрен япаласем илме хушса янӑччӗ. Трактире кӗтӗмӗр. Савельич ирех лавкасем тӑрӑх тухса кайрӗ. (Пушк.)*

*Саланӑр. Ёç хыççӑн шыва кӗрер.*

## II. Ыйту палли.

Ыйту паллине ыйтуллӑ предложени вӗçӗнче лартаççӗ.

1. *„Чӑнахах та, пӳрт-çурт инçех маррине ӑçтан шухӑшласа кӑлартӑн-ха эсӗ?" —тесе хутӑм эпӗ. (Пушк.)*

2. *Шӑнтӑн-и-мӗн, тӑванӑм? (Пушк.)*

Асӑрхаттарни. Хутлӑ предложенири пӑхӑнуллӑ предложени ыйтуллӑ пулсан та, предложени, пӗтӗмӗшпе илсен, ыйтуллӑ мар, çавӑнпа ун пек чухне ыйту палли лартмаççӗ.

*1. Ӑçта пӑхатӑн, унта çӗнӗ çуртсем, çӗнӗ фабрикӑсемпе заводсем. 2. Эсӗ ӑçта ӗçлетӗн, эпӗ пӗлместӗп.*

## III. Кӑшкӑру палли.

Кӑшкӑру паллине çакӑн пек чухне лартаççӗ:

1. Кӑшкӑруллӑ предложени вӗçӗнче.

*Тӑвӑл! Час ак тӑвӑл çитсе çапӗ! (М. Горький.)*

2. Обращени, междомети хыççӑн тата предложени пуçламӑшӗнчи *çук* сӑмах хыççӑн, вӗсене хыттӑн тата пысӑк пауза туса калаççӗ пулсан.

*Сетнер, Сетнер! Тытрӗç-çке! (К. Ив.)*

*Ой! урана лекрӗ пулас! (Элк.)*

*Çывăхранах автомобиль вăшт! иртсе кайрĕ.*

*— Çук, çук! Хамăр чĕрĕ чух кун пек пулма пултараймасть!—персе ячĕ Раймонд. (Н. Остр.)*

## IV. Многоточи.

1. Многоточие калаканĕ кам та пулин, мĕн те пулин кансĕрленипе кăмăлĕ пăтраннипе шухăша каласа пĕтерменнине кăтартма е пĕр ĕç çинчен тепĕр ĕç çине куçнине кăтартма лартаççĕ.

*— Нумай пулать-и килни?*

*— Халĕ çеç станцирен... Ман юлташсем те унтах... Лашасем ятăм-ха. (Фурм.)*

*Хăйсем çапах: „Курман... илтмен... пĕлместпĕр...“— теççĕ. (Ив. Мучи.)*

*— Ну, вара...—терĕ те Василиса Егоровна, ăш вăрканипе чĕмсĕр пулса чарăнса тăчĕ. (Пушк.)*

2. Цитатăсенче—предложение йăлтах илменнине кăтартма.

... Ленин хăйĕн „Детская болезнь „левизны“ в коммунизме“ ятлă чаплă брошюринче çапла çырнă: „Большевиксем 1905 çулта „парламента“ бойкот туни революцилле пролетариата питех те хаклă политикăллă опытпа пуянлатрĕ, кĕрешĕвĕн легальнăй тата вăрттăн, парламентла тата парламент тулашĕнчи формисене çыхăнтарса пынă вăхăтра хăш чухне кĕрешĕвĕн парламентла формисене пăрахăç тума пĕлни усăллине тата пăрахăç тума пĕлни обязательно кирлине кăтартса пачĕ... Большевиксем 1906 çулти „думăна“ бойкот туни ĕнтĕ йăнăш пулнă, пысăк мар тата тӳрлетме çăмăлскер пулин те йăнăш пулнă... Уйрăм çынсем çинчен калама юранине—кирлĕ пек улшанусем кĕртсе—политика çинчен тата партисем çинчен те калама юрать. Кам йăнăшсем тумасть, çавă мар ăслă. Ун пек çынсем çук, пулма та пултараймаççĕ. Кам пысăках мар йăнăшсем тăвать тата вĕсене çăмăллăн та хăвăрт тӳрлетме пĕлет, çавă ăслă. (*Ленин, т. XXV, стр. 182—183; цитатăна ВКП(б) историнчен илнĕ*).

## V. Запятой.

Запятоя çакăн пек чухне лартаççĕ:

1. Пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен уйăрма. Пĕр хут тĕл пулакан тата, е, та, те союзсемпе çыхăнакан пĕр йышши членсене запятойпа уйăрмаççĕ.

*Çĕлĕксем, картузсем, коммунаркăсем васкавлăн вĕлкĕшсе кайрĕç. (Фурм.)*

*Пăшал сасси те, тупă сасси те илтĕнмест. (Элк.)*

*Пĕлĕт пĕрре кăвакарса, тепре хуралса килет.*

*Пĕр аллă çула çитнĕ çынна Пугачĕв çине-çинех е граф, е Тимофеич, е мучи тесе чĕнет.* (Пушк.) *Эпĕ тарма шут тытрăм, анчах пултараймарăм.* (Пушк.)

2. Обращенисене уйăрма (предложени пуçламăшĕнчи кăшкăруллă интонаципе калакан обращенисем кунта кĕмеççĕ).

*Пичче, пар мана пĕр кĕске пăшалне, эпĕ те Алĕшкăна пулăшам.* (Чалд.)

*Айта, ватă карчăкăм, каяр ĕнтĕ килелле.* (К. Ив.)
*Эсĕ мĕн ухмаха ертĕн-им, Андрий!* (Н. Остр.)

3. Вводнăй сăмахсемпе предложенисене уйăрма (скобкăсемпе тата тиресемпе уйăракан тĕслĕхсем кунта кĕмеççĕ).

*Ара, ăçта каятăн эсĕ капла, ывăлăм?* (Элк.)
*Эсир, ахăртнех, нимĕн те çимен пулас-ха?* (Н. Остр.)

4. Междометисене уйăрма (кăшкăруллă интонаципе калакан междометисем кунта кĕмеççĕ).

*Эй, аттеçĕм, аннеçĕм, мĕншĕн çирĕр хĕр пуçне, мĕншĕн патăр хĕрĕре çичĕ ютăн аллине?* (К. Ив.)
*Пурнăççем, ах, аван Аслă Силпи ялĕнче!* (К. Ив.)

5. Уйрăмтăран кĕçĕн членсене уйăрма.

*Вăл, Чапаев, 1918 çулта паллă герой пулнă.* (Фурм.)
*Таçта инçетре, сулахайра, пăшал пенĕ сасăсем илтĕннĕ.*
*Май уйăхĕнчи çанталăк, хăш-пĕр кунсемсĕр пуçне, пĕтĕмпех сивĕ тăчĕ.*

6. Предложенин пĕр-ик члене ытти членсенчен уйăрса тăракан кирек-мĕнле предложенилле обстоятельствăсене икĕ енчен те уйăрма (предложенилле обстоятельствăсем сказуемăй умĕнче тăнине кăтартакан тĕслĕхсем кунта кĕмеççĕ).

*Пĕр вăхăт вăл, куçне хупса, чĕнмесĕр тĕксĕм тутисене ĕмкелесе ларать, çавăнтах вара, сасартăк, такам пырса тĕртнĕ пек шарт сиксе, сасăпа шухăшла пуçлать.* (М. Горьк.)

*Ача, хыçалтан тĕртсе пынипе, алкум патнех çывăхарса çитрĕ, анчах хăпарма хăяймасть.* (А. Фад.) *Унтри пĕр ирхине, нÿхрепрен юр-варсем илсе пырса панă хыççăн, кухня алăкĕ патĕнче çĕрулми шуратса ларать.* (Элк.)

7. Предложени пуçламăшĕнче сан-сен, са-се, а-е аффикслă предложенилле обстоятельствăсене уйăрма.

*Ăн кĕрсе çитсен, куçа уçса пăхрăм.* (Чалд.)
*Польшăпа мир туса, Совет республики Врангеле пĕтерсе хума йышăннă.* (ВКП(б) ист.)
*Бригадирта аван ĕçленине кура, Данилов юлташа колхоз председательне суйларĕç.*

8. Предложени вĕçĕнчи сан-сен, са-се, а-е аффиксла предложенилле обстоятельствăсене уйăрма.

*Нумаййăн-и?—тесе ыйтрĕ Левинсон, ăна итлесе пĕтерсен.*

9. Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисене, вĕсем пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç пулнине е темиçе ĕç пĕр вăхăтра пулнине кăтартсан, пĕр-пĕринчен уйăрма.

*Лашасем вырăнтан тапранчĕç, шăнкăрав шăнкăртата пуçларĕ, кӳме вĕçтерчĕ. (Пушк.)*

10. Союзлă хутлă предложенири хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен уйăрма.

*Пугачёв аллине çĕклерĕ те, мана çийĕнчех салтса ячĕç. (Пушк.)*

*Вăл вăтăртан каярах пулĕ, анчах çамки пĕтĕмпех пĕркеленсе пĕтнĕ. (Фурм.)*

*Хыпăнса ӳкнĕ Олёся, унран мĕн те пулин тĕпчесе пĕлес тесе, тем пек тăрăшрĕ, анчах кăлăхах пулчĕ. (Н. Остр.)*

11. Союзлă е союз сăмахлă пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен уйăрма.

*Амăшне кӳрентерес мар тесе, Тарас пурне те хитрелетсе каласа пачĕ. (Агак.)*

*Реконструкци тумасăр, социализм пĕтĕм фронтпа наступлени туса пынине вĕçне çитерме май пулман, мĕншĕн тесен хулари тата ялти капиталистла элементсене хирĕç хамăрăн ĕçе тата харпăрлăха çĕнĕлле организацилени пе кăна мар, çĕнĕ техникăпа та хамăрăн техника маларахра пулнипе çапса тĕп тумалла пулнă. (ВКП(б) ист.)*

## VI. Точкăпа запятой.

Точкăпа запятоя çакăн пек чухне лартаççĕ:

1. Анлă пĕр йышши членсене, вĕсен ăшĕнче урăх запятойсем пулсан, пĕр-пĕринчен уйăрма.

*Вăл тĕттĕм çĕртех çывăрма вырнаçса, чылайччен ахлатса, ассăн сывласа выртрĕ; тинех вара харлаттара пуçларĕ. (Пушк.)*

2. Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисене, вĕсем чылай анлă пулсан, вĕсен ăшĕнче урăх запятойсем пулсан, пĕр-пĕринчен уйăрма.

*„Стой!" – тесе кăшкăрса ячĕç малтисем. Ку сасса партизансем цепь тăрăх пĕр-пĕрне каласа илтĕнтерчĕç; малтисем чарăннă пулин те, кайрисем малаллах тирĕнеççĕ. (А. Фад.)*

*Метелица сăрт тĕми çине хăпарчĕ: сулахай енче сопкăсен хура йăранĕ, калама çук пысăк тискер кайăк çурăм шăмми евĕрлĕ кукăрăлса, аванса ырать, шыв кĕрлет; пĕрик çухрăмра, шыв хĕрринчех пулмалла, кăвайт хунă; унтан ялти пĕр сиккеленмесĕр тăракан сарă тĕслĕ хăйă çутисем çула урлă речĕпех тăсăла-тăсăла кайнă. (А. Фад.)*

## VII. Двоеточи.

Двоеточие çакăн пек чухне лартаççĕ:

1. Пĕр йышши членсем умĕн пĕтĕмлетекен сăмах пулсан.

*Сĕтел хушшинче вĕсем тăваттăн лараççĕ: Фрол хăй, унăн арăмĕ, ывăлĕ Тимахви тата хĕрĕ, çитĕнсе çитнĕскер. (Шол.)*

Асăрхаттарни. Пĕтĕмлетÿ сăмахĕсем хыççăн предложени варринче тăракан пĕр йышши членсене икĕ енчен те тире лартса уйăрни те тĕл пулма пултарать.

*СССР ĕç çынниййĕсем—рабочисем, хресченсем, интелигенци— социализм строительствин çулĕсенче тĕпренех улшăнчĕç. (ВКП(б) ист.)*

Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисене уйăрма, иккĕмĕш предложениййĕ пĕрремĕшĕнчи шухăш пулать пулсан.

*Метелицăна сивĕ пула пуçларĕ: вăл тÿмисем тăтала-тăтала ÿкнĕ, ярханах çухаллă гимнастĕрки çинчен салтак фуфайки çеç тăхăннă. (А. Фад.)*

*Сасартăк пирĕн хыçра, çырмара, сасă шавлани илтĕнчĕ: такам çăлкуç патне аннă. (Т.)*

3. Урăх çын сăмахĕсене (е цитатăсене) кам каланине кăтартакан автор сăмахĕсем хыççăн.

*Куçĕсемпе шăтарас пек тĕллесе пăхса: „Садра ĕнер эсĕ мĕн турăн?"—тесе хăвăрттăн ыйтрĕ начальник.*

*Сталин юлташ çапла каланă: „Хăш сулăнчăка хирĕç кĕрешме пăрахнă, тата хăш сулăнчăка, çапла вара, государствăшăн хăрушлăх пулмалла таранах ÿссе кайма май панă, çав сулăнчăк тĕп хăрушлăх пулса тăрать". (Сталин, Ленинизм ыйтăвĕсем, 587 стр.).*

## VIII. Тире.

Тирене çакăн пек чухне лартаççĕ:

1. Подлежащипе ят падежĕнчи япала ятĕнчен, хисеп ятĕнчен, причастирен пулнă сказуемăй хушшине.

1. *Коммунистсен партийĕ—ĕç халăхĕн авангарчĕ.*
2. *Виç хут улттă—вунсаккăр.*
3. *Порт-Артур пĕтни—самодержави пĕтме пуçлани. (Лен.)*

I. Асăрхаттарни. Подлежащи ят падежĕнчи сăпатлă местоимени пулсан, тире лартмасăр та çыраççĕ.

*Хăй инженер, арăмĕ—врач.*

*Эпĕ 3-мĕш курсра вĕренекен студент.*

II. Асăрхаттарни. Подлежащипе ят сказуемăй хушшинче çыхăну местоимениййĕ *вăл* тăрать пулсан, тирене *вăл* сăмах хыççăн лартаççĕ.

*Техникӑна алла илнӗ ҫынсемсӗр техника вӑл—вилӗ япала. (ВКП(б) ист.)*

*Пирӗн ӗҫ вӑл—тӗрӗс ӗҫ, ҫӗнтерӳ пирӗн алӑра пулать. (И. Ст.)*

2. Пӗр йышши членсем хыҫҫӑн пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсем тӑраҫҫӗ пулсан, пӗр йышши членсемпе пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хушшине.

*Кӑнтӑрла та, ҫӗрле те, шартлама сивӗре те, вӗри шӑрӑхра та—яланах часовой границӑсене сыхлать.*

3. Союзсӑр хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисем хушшине, вӗсем пӗр ӗҫ хыҫҫӑн тепӗр ӗҫ хӑвӑрт пулнине е пысӑккӑн хирӗҫле пулнине кӑтартсан; е пӗрремӗшӗнчи шухӑш иккӗмӗшӗн условине е вӑхӑтне кӑтартсан.

*Дежурнӑй кнопкӑна пусрӗ—электричествӑллӑ звонок шӑнкӑртаттарса та ячӗ.*

*Тӗттӗм пулнӑ—ҫутӑ ҫутман-ха.*

*Тӑхӑр сехет ҫитрӗ—уроксем пуҫланчӗҫ.*

4. Следствие кӑтартакан пӑхӑнуллӑ предложенире союз пулмасан.

*Качча пачӗҫ ирӗксӗр—пулмарӗ-ҫке ырлӑха. (К. Ив.)*

5. Пахӑнуллӑ хутлӑ предложенире союзла сӑмах мӑшӑрлӑ местоимени е наречи пулмасан.

*Савнӑ хӗрӗр мӗн ыйтнӑ—ӑна пурте хатӗрччӗ. (К. Ив.)*

6. Диалогри калаҫусем умӗн.

Урӑх ҫын сӑмахӗсем варринчи е хыҫҫӑн тӑракан автор сӑмахӗсене уйӑрма.

*— Кам унта?—тесе кӑшкӑрчӗ часовой*

*— Хамӑрӑн, юлташ..*

*— Пропуск?..*

*— Затвор... (Фурм.)*

*„Пӗтӗмпех каялла панӑ пултӑр,—терӗ Чапаев, халӑх хумханма чарӑнсан,—мӗн пулнине пӗр ҫип хӑвармиччен каялла тавӑрса панӑ пултӑр“ (Фурм.)*

6. Вырӑна кӑтартакан сӑмахсем хушшинче, вӑхӑта, шута кӑтартакан цифрӑсем хушшинче.

*1942—1946 ҫулсенче эпӗ ялти пуҫламӑш шкулта вӗрентӗм.*

*Канаш—Шупашкар чугун ҫул линине 1939 ҫулта туса пӗтерне.*

## IX. Скобкӑсем.

Скобкӑсене ҫакӑн пек чухне лартаҫҫӗ:

Вводнӑй сӑмахсемпе вводнӑй предложенисене уйӑрма.

*Куратна, унта авӑ мӗн? (Ямшӑк пушшипеле хӗвелтухӑҫ еннелле кӑтартрӗ). (Пушк.)*

*Помещиксем кая юлнӑ хресчен хуҫалӑхӗнчен тӗрлӗ вӑрӑ-хурахла майсемпе (тара пани, штрафсем) юлашки сӗткенӗсене пӑчӑртаса кӑларса пынӑ. (ВКП(б) ист.)*

## X. Кавычкăсем.

Кавычкăсене çакăн пек чухне лартаççĕ:

1. Урăх çын каланă сăмахсене уйăрма.

*Кашăк илчĕ Тăхтаман,*
*Ларчĕ сĕтел хушшине:*
*„Яшка тутлă-çке паян“,—*
*Тесе мухтать яшкине.* (К. Ив.)

2. Хăйсен яланхи пĕлтерĕшĕпе çÿремен сăмахсене, е тăрăхласа каланине кăтартакан, е пурте усă курман, е автор усă курман сăмахсене уйăрма.

*Помещиксем хресченсене „ирĕке кăларнă чухне“, унччен хресченсем усă курнă çĕрĕн чылай пайне туртса илсе, касса илсе, вĕсене çаратса хăварнă. Çĕрĕн çак касса илнĕ пайне хресченсем „отрезкăсем“ теме тытăннă. Хресченсене, вĕсене „ирĕке кăларнăшăн“ помещиксем валли икĕ миллиард тенке яхăн выкуп тÿлеттернĕ.* (ВКП(б) ист.)

*Анне те пирĕн çав „ÿпке çĕрнĕ“ чирпе чирлесе вилчĕ.* (Чалд.)

# ТУПМАЛЛИ.


Стр.

**Предложени çинчен ăнлантарса пани.**

1 §. Предложени . . . 3
2 §. Калуллă, ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем . 6
3 §. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ . . . . . . . 8

**I. Хутсăр предложенин синтаксисĕ.**

4 §. Подлежащи мĕнле сăмахсенчен пулни . . . 13
5 §. Хутсăр сказуемăй . 15
6 §. Хутлă ят сказуемăй 17
7 §. Ят сказуемăйлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . . 18
8 §. Хутлă глагол сказуемăй . . . . . . . . . . 19

**Предложенин кĕçĕн членĕсем.**

9 §. Дополнени . . . . . 22
10 §. Ма-ме аффикслă деепричастисем дополнени пулни 25
11 §. Определени . . . 27
12 §. Приложени . . . . 29
13 §. Обстоятельствăсем . . 31
14 §. Вырăн обстоятельстви 33
15 §. Вăхăт обстоятельстви —
16 §. Пирке обстоятельстви 34
17 §. Тĕллев обстоятельстви —
18 §. Мĕнлелĕх обстоятельстви . . . . . 35
19 §. Сăмахсем предложенире мĕнле вырăнта тăни . . . 38

**Хутсăр предложени типĕсем.**

20 §. Тулли мар предложенисем . . . . . . . . . . . 40
21 §. Ят предложени . . 41
22 §. Подлежащиллĕ предложенисемпе подлежащисĕр предложенисем . . . . . . 42
23 §. Паллă мар сăпатлă предложенисем . . . . . . . 43

**Пĕр йышши членлă предложенисем.**

24 §. Пĕр йышши членсем . 45
25 §. Пĕр йышши членсене çыхăнтарса тăракан союзсем 49
26 §. Пĕр йышши членлă предложенисенче запятой лартасси . . . . . . . . . 50
27 §. Пĕр йышши тата пĕр йышши мар определенисем 54
28 §. Пĕр йышши членлă предложенисенчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ . . . . . . . . . 56
29 §. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пулсан, чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . . 57

**Предложенири çыхăнусăр сăмахсем.**

30 §. Çыхăнусăр сăмахсем çинчен кĕскен калани . . . 60
31 §. Обращени . . . . . . 61
32 §. Обращени кĕрекен предложенисенчи чарăну паллисем . . . . . . . . . 62
33 §. Вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисем . 63
34 §. Вводнăй сăмахсене, предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси . . 65
35 §. Междометисен предложенири вырăнĕ . . . . 66

36 §. Предложенири çыхăну-сăр сăмахсене аса илмелли упражненисем . . . . . . . . . 68

II. Хутлă предложенин синтаксисĕ.

37 §. Хутлă предложенисем çинчен пĕтĕмĕшле сведенисем 71

Сыпăнуллă хутлă предложенисем.

38 §. Союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . 73
39 §. Союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . 75
40 §. Союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . 77
41 §. Союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . .

Пăхăнуллă хутлă предложенисем.

42 §. Пăхăнуллă хутлă предложенисем мĕнле пулни тата вĕсен союзĕсем . . . . . . 81
43 §. Пăхăнуллă предложенисен тĕпĕсем . . . . . . . 82
44 §. Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложенисем . . —
45 §. Дополнени пулакан пăхăнуллă предложенисем . . 83
46 §. Определени пулакан пăхăнуллă предложенисем . 84
47 §. Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем . . . . . . —
48 §. Вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . . 85
49 § Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . . . —
50 §. Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . 86
51 §. Пăхăнуллă предложенисене причастиллĕ сăмах майлашăвĕсемпе ылмаштарни 87
52 §. Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем 89
53 §. Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . . . . . . . . . . . —
54 §. Условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . . 90
55 §. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . 91
56 §. Пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . 92
57 §. Ĕç хыççăн мĕн пулнине (следствие) пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем . . 93
58 §. Союзсемпе е союзла сăмахсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене запятойпа уйăрасси . . . . . . —
59 §. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисем . . . . 95
60 §. Союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . —

Предложенилле членсем.

61 §. Предложенилле членсем çинчен кĕскен калани . 100
62 § Предложенилле определенисем . . . . . . . . 103
63 §. Предложенилле подлежащи . . . . . . . . . 105
64 §. Предложенилле дополнени . . . . . . . . . . 106
65 §. Предложенилле сказуемăйсем . . . . . . . . . 107
66 §. Предложенилле подлежащи, е сказуемăй, е определени, е дополнени кĕрекен предложенисенче чарăну палли лартасси . . . . . . . . 108

Предложенилле обстоятельствăсем.

67 §. Предложенилле обстоятельствăсен пĕлтерешĕ, пулăвĕ 109
68 §. Деепричастиллĕ предложенилле обстоятельствăсем —
69 §. Хыççăмахлă предложенилле обстоятельствăсем . . . 110
70 §. Падеж аффикслă предложенилле обстоятельствăсем 111

Предложенилле обстоятельствăсен пĕлтерĕшĕсем.

71 §. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . . . . . . . . . . . . —

72 §. Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . . . . . . . . . . 113
73 §. Пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . . . . . . . . . . . . 114
74 §. Мĕнлелĕхе (ĕç мĕнле пулнине) пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . . 115
75 §. Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . . . . . . . . . . 116
76 §. Предложенилле обстоятельствăсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . 118
77 §. Темиçе предложенилле членлă предложени. . . . 120
78 §. Темиçе предложенилле членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . 121
79 §. Предложенири уйăмтăран кĕçĕн членсем . 125
80 §. Уйăмтăран приложени —
81 §. Уйăмтăран обстоятельствăсем . . . . . . 127
82 §. *Пуçне* хыççăмахлă уйăмтăран кĕçĕн членсем . . —
83 §. Уйăмтăран кĕçĕн членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . —
84 §. Темиçе пăхăнуллă предложенилле хутлă предложени . . . . . . . . . . 130
85 §. Пăхăнуллă хутлă предложенипе пăхăнуллă предложенилле членлă предложени 131
86 §. Темиçе пăхăнуллă тата сыпăнуллă предложенирен тăракан хутлă предложени . . —
87 §. Темиçе пăхăнуллă тата сыпăнуллă предложенирен тăракан хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . 132
88 §. Урăх çын сăмахлă предложенисем . . . . . . . 135
89 §. Урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . 136
90 §. Урăх çын каланă сăмахсенчен улăштарса каланă сăмахсем туни . . . . . . . 141
91 §. Улăштарса каланă сăмахсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . . . . . 142

**Чарăну паллисем лартма хăнăхмалли упражненисем** 143

**Чарăну палли лартасси çинчен пуçтарнă правилăсем (приложени)** . . . . . . . 155

Цена 3 р. 40 коп.

С. П. ГОРСКИЙ

ГРАММАТИКА
ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА
часть вторая
СИНТАКСИС

ДЛЯ VI—VII КЛАССОВ
СЕМИЛЕТНЕЙ
И СРЕДНЕЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары—1949